Д26
3.164-498

НИКОЛАЙ ДЕДУШКИН

# Пурнӑҫ илемӗпе хавхаланса

Национальная библиотека ЧР
4-031164

31164 мув

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

Зак. 1875.

кр
К 83.3(2)
Д26

НИКОЛАЙ ДЕДУШКИН

# Пурнăç илемĕпе хавхаланса...

кр

СТАТЬЯСЕМ
АСАИЛӲСЕМ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1988

ББҚ 83 Чув
Д 26

83.3(2=Чув)

ПРОВЕРЕНО
2010 27 МАР 2017

31164-чув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

**Дедушкин Н. С.**

Д 26 Пурнăç илемĕпе хавхаланса... Статьясем. Асаилӳсем.— Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви, 1988 ç. 159 с.

ISBN 5-7670-0045-X

Кĕнекене авторăн тĕрлĕ вăхăтра çырнă статйисемпе асаилĕвĕсем кĕнĕ. Вĕсенче вăл Таван çĕршывăн аслă вăрçипе вăрçă хыççăнхи чăваш литературине пăхса тухать, паллă чăваш писателĕсен — К. Иванов, Çеçпĕл Мишши, П. Хусанкай, Я. Ухсай, А. Алка, А. Қăлкан, В. Бараев, В. Урдаш тата ыттисен кунçулĕпе литературăри пултарулăхне тишкерет.

**ББҚ 83 Чув**

Д $\frac{4702650000 - 077}{М\ 136(03) - 88}$ 52 — 88

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1988 ç.

ISBN 5-7670-0045-X

## АСЛĂ ÇĔНТЕРЎ ÇУЛĔПЕ

Совет халăхĕ Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче фашистла Германие тĕппипех аркатса тăкнăранпа 40 çул ытла иртрĕ. Кашни çул эпир Аслă çĕнтерӳ кунне —майăн 9-мĕшне—пĕтĕм халăхăн чаплă уявĕ пек палăртса иртеретпĕр. Вăрçăра ирсĕр тăшмана хирĕç хăюллă та паттăр çапăçнă, Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн юн тăкнă е хăйсен пурнăçне те панă, тылра хастарлă ĕçленĕ çынсене эпир яланах чи ăшă туйăмпа, чун-чĕререн тав туса асăнатпăр. Вĕсен паттăр ĕçĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех халăх асĕнче пурăнĕç.

Çăмăл пулмарĕ тискер те вăйлă тăшмана çĕнтерме. Фашистла захватчиксем пирĕн çĕршыври 1710 хулана аркатса-ишĕлтерсе хăварчĕç, 70 пин ытла яла çунтарса ячĕç. Вăрçă 20 миллион совет çыннин пурнăçне татрĕ. Анчах совет халăхĕ нимĕнле йывăрлăхран та хăраса тăмарĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе вăл фашистла çĕлен-калтана хăватлăн çапса аркатрĕ, ĕмĕр сӳнми, нихçан манăçми чаплă паттăрлăх кăтартрĕ, пĕтĕм тĕнче халăхне хăрушă тăшманран хăтарса хăварчĕ. Хĕрĕх çул ĕнтĕ эпир мирлĕ тӳпе айĕнче пурăнатпăр!

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче пĕтĕм совет литературипе пĕрле чăваш литератури те хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупрĕ. Писательсем хаяр кĕрешӳсенче те, хĕрӳллĕ ĕçре те яланах халăхпа пĕрле пулчĕç, фронтра та, тылра та Коммунистсен партийĕ халăх умне лартнă задачăсене хастарлăн пурнăçласа пычĕç. Хаяр çапăçусенче писатель-фронтовиксем М. Данилов-Чалдун, В. Бараев, И. Думилин, Е. Еллиев, К. Кольцов, М. Ястран, А. Петтоки, Ф. Çитта т. ыт. те тăшманпа çапăçса пуçĕсене хучĕç.

Чăваш писателĕсенчен чылайăшĕ вăрçă вăхăтĕнче малтан ахаль салтак халлĕн çапăçнă, унтан командир е политработник пулнă, дивизи хаçачĕсенче, политпайсенче ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн çапăçнă çулсенче вĕсен хĕрӳллĕ сăмахĕ чăваш халăхне, унăн ывăлĕ-хĕрне

ирсĕр тăшмана хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме хавхалантарса пычĕ, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра татах та çирĕп пĕтĕçме пулăшрĕ.

«Тупăсем кĕрленĕ чух музăсем шарламаççĕ»,—тенĕ авал. Анчах Тăван çĕршывпа тăван халăх умне тухса тăнă йывăр кунсенче чăваш писателĕсен хăватлă сасси самантлăха та шăпланмарĕ. Вĕсем алла хĕçпăшал тытса тăшманпа çапăçнă хушăрах хĕрӳллĕ статьясемпе очерксем çырчĕç, сăвăсемпе юрăсем, поэмăсем хыврĕç, калавсемпе повеçсем пичетле-пичетле кăларчĕç. Вăрçă кунĕсене аса илсе, Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çапла çырнăччĕ: «...кашниех вăй-халпа пултарулăхăмăр çитнĕ таран пĕтĕм халăх ĕçне кӳлĕнме тăрăшрăмăр. Чăваш поэзийĕн пĕтĕм хĕçпăшалĕ, пĕтĕм жанрсем — поэма, лирикăллă монолог, халăх ячĕпе унăн ывăлĕ-хĕрĕ патне янă çырусем, салтаксен тупа туса çырнă явапĕсем, хăш чух васкасарах хайланă сăвă-юрăсем пулин те — пурте çĕнтерӳшĕн ĕçлерĕç».

Нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçма калама çук йывăр килчĕ. Пирĕн писательсем çапах совет халăхĕн пурнăçĕпе тан утрĕç, вăрçăри, тылри ĕç-пуç аталанăвне курмасăрасăрхамасăр, чун-чĕрепе туймасăр ирттермерĕç.

Писательсен фронтри ĕçĕ-хĕлĕ çинчен Чăваш халăх писателĕ Леонид Агаков вăрçă хыççăн акă мĕн каланăччĕ: «Кăшт кăна лăпкăрах самантсем пулсанах, вĕсем блиндажсенче, траншейăсенче ларнă çĕртех, пуç тăрринче пĕр вĕçĕм «юнкерссемпе» «мессершмитсем» кĕрленине, бомбăсемпе снарядсем çурăлнине пăхмасăр, чĕре тĕпĕнчен тухакан сăвăсемпе калавсем тĕрленĕ. Пĕр-пĕр лутăрканнă кăвак хут çине татăк-кĕсĕк кăранташпа... Калама та çук васкавлă, оперативлă ĕçлеме тивнĕ вĕсен!»

Фашизмпа çапăçнă çулсенче халăхăн патриотла çĕкленĕвĕ çинчен пирĕн поэтсен—Николай Шелепин, Çемен Элкерĕн, Петĕр Хусанкайăн, Ухсай Яккăвĕн, Александр Алган, Уйăп Мишшин, Аркадий Эсхелĕн, Стихван Шавлин, Александр Кăлканăн сассисем хăватлăн янăрарĕç. Вĕсен сăввисемпе поэмисенче хамăр çĕршыва, партипе халăха, аслă Ленина чун-чĕререн юратни, çав вăхăтрах çĕр çинче хĕн-хурпа вилĕм кăна акакан ирсĕр фашизма курайманни çав тери вăйлăн палăрса тăрать. Поэтсем сăвăлла памфлетсем, эпиграммăсем, такмаксем те сахал мар çырчĕç, вĕсенче нимĕç фашисчĕсене çивĕччĕн питлерĕç, сатирăн вĕри вучĕпе çунтарчĕç.

Хусанкайăн фронтри чăвашла та, вырăсла та çырнă агитациллĕ-чĕнӳллĕ сăввисем уйрăмах вăйлă палăрчĕç. Вĕсенче героикăлла хавхалану хăватлăн кĕрлесе тăрать

(«Хăюллăн малалла!», «Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чысшăн», «Фронтпа тыл пĕр пулсан — çĕнтереймĕ тăшман» т. ыт. те).

Поэт умĕнче яланах аслă çулпуç В. И. Ленин, унăн вилĕмсĕр ĕçĕ-хĕлĕ, çĕнтерӳллĕ ялавĕ:

Нева хаяррăн хумханать...
Ан ур, тăшман, ан аптăх:
Памастпăр ирĕк хулана
Нихçан та! Никама та!

Хăватлă броневик çинче
Çĕнтерĕве пилленĕн
Тăрать вăл хăйĕн хулинче —
Алне çĕкленĕ Ленин,

Тăрать çĕршывăн чунĕ пек:
Вăл бронза мар, вăл чĕрĕ;
Тăрать йăхрав пек, ĕмĕрех
Çав вырăнта вăл тăрĕ,—

тенĕ поэт Ленинград хăрушлăха кĕрсе ӳкнĕ вăхăтра, 1941 çулта, «Памастпăр ирĕк хулана» ятлă сăввинче.

Вăрçă çулĕсенче Ухсай Яккăвĕн пултарулăхĕ те çĕнĕ хăватпа çĕкленсе кайрĕ. 1943 çулта вăл «Вăрçă хирĕнче» ятлă сăвă кĕнеки пичетлесе кăларчĕ. Унта поэтăн окопсенче, блиндажсенче, походсенче çырнă балладисемпе лирикăллă çырăвĕсем, кĕрешĕве чĕнекен çулăмлă сăввисем кĕнĕ. Акă вăл «Мускав» сăвăра Тăван çĕршывăн столицине, ĕлĕк пусмăрта хĕн-асап курса пурăннă вак халăхсен ачисене тăванла вĕрентсе ӳстернĕшĕн, вĕсене Менделеев, Пушкин, Некрасов ĕçĕсемпе паллаштарнăшăн, нумай çынсене наукăпа культурăн паллă деятелĕсем пулма пулăшнăшăн тав тăвать. Гитлер пирĕн тĕп хулана тытса илесшĕн, пăхăнтарасшăн пулчĕ. Анчах вăл йăнăшрĕ: Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем Тăван çĕршва, Мускава хӳтĕлеме пĕр çын пек кар çĕкленчĕç.

Пурте, пĕтĕм çĕршывĕпе
Çĕклентĕмĕр хастарлăн,
вирлĕн.
Мускав тавралăхĕ, уй-хирĕ
Сăрланчĕç нимĕç юнĕпе.
Унта хăварчĕ Гитлер мурĕ
Салтакĕсен виллисене.
Тĕнче хитре Мускав вăйне
Курать те, курнă та, вăл
курĕ
Пиншер çултан та малашне,—

тесе вĕçлет поэт хăй сăввине.

Ухсай саввисенчи фронтовик тăшмана хирĕç алла пăшал тытса çапăçакан ахаль салтак кăна мар. Вăл пирĕн ума аслă çĕршыв хуçи пек, Тăван çĕршывпа халăх шăпи çинчен канăçсăр шухăшлакан, тăван çĕр илемне пĕтĕм чунчĕрипе туйса тăракан, мирлĕ пурнăçшăн кĕрешекен патриот пек тухса тăрать. Окопра ларать-и салтак, атакăна хатĕрленет-и е çапăçу хирĕнчен çĕнтерсе тухать — шухăшĕпе вăл яланах хăйĕн ачалăхĕ иртнĕ сарлака уй-хирлĕ, вăрманлă, улăх-çаранлă тăван тавралăхне курать.

Вăрçă пуçланиччченех Совет Çарĕнче пулнă Александр Алга чи малтанхи кунран тытăнсах нимĕç фашисчĕсемпе çапăçнă. Хăйне пăхса ӳстернĕ Тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратни поэт сăввисемпе поэмисенче вăйлăн палăрса тăрать.

Поэт-фронтовик сăввисенче çапăçу хирĕнчи совет салтакĕсен сӳнми патриотизмĕ çулăм пек ялкăшать. Унăн лирикăллă геройĕ вăрçăн вăрăм, тертлĕ çулĕ çинче çирĕпленсе вăй илнĕ.

Уйăп Мишши те хĕрӳллĕ сăвăсем нумай çырчĕ. 1943 çулта унăн «Малалла, хĕвеланăçнелле!» ятлă сăвă кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Çак кĕнекери сăвăсем чăн-чăн оратори пек хăватлăн янăраççĕ. Поэт совет салтакĕсене тăшмана сывлăш çавăрма памасăр хӳтерсе хăвалама, тискер те юнлă ĕçсемшĕн пĕр шикленмесĕр тавăрма йыхăрать.

Вăрçă çулĕсенче чăваш литературинче массăллă тата лирикăллă юрăсен пĕлтерĕшĕ пысăк пулчĕ. Çав вăхăтри поэт-юрăçăсем хушшинче Илья Тукташ пултарулăхĕ паллă вырăн йышăнать. Унăн кашни сăвви-юрринчех совет çыннин патриотла шухăш-туйăмĕ хăватлăн тапса тăни кăмăла хускатса илĕртет, чуна уçса ярать.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн пурĕ 16 поэма пичетленсе тухрĕ. Вĕсем хушшинче Хусанкайăн «Таня» ятлă лирикăллă-эпослă поэми вара чăваш литературинче уйрăмах пысăк вырăн йышăнчĕ. Поэт унта Мускаври вăтам шкулта вĕреннĕ Зоя Космодемьянская комсомолкăн тĕлĕнмелле паттăр ĕçне сăнласа кăтартать.

Фронтри геройсен сăнарĕсене кăтартакан сăвăллă пысăк произведенисенчен Ухсайăн «Н-ски дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне янă çырăвне» палăртса хăвармалла. Унта чăваш салтакĕсем, тăшманăн хаяр атакисене сире-сире ярса, митинг ирттереççĕ, фашизма пуçĕпе аркатса тăкиччченех Тăван çĕршывшăн çапăçма тупа туса, тăван халăхне çыру çыраççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕнче Совет çĕршывĕ ячĕпе паттăр ĕç тума хăйĕн ывăлĕ-хĕрне вăрçа ăсатнă амăшĕн

сăнарĕ те пур. Çак сăнар Уйăп Мишши çырнă «Салтак амăшĕ» поэмăра уйрăмах тарăн, витĕмлĕ, нумай енлĕ, вулаканăн чунĕ патне çитмелле пулса тухнă.

Вăрçă паттăрĕсем çинчен Эсхель, Элкер, Шавли поэтсем те пысăк поэмăсем çырчĕç. Акă, «Ăмăрткайăк» поэмăра А. Эсхель фашистсемпе çапăçса чапа тухнă Федот Орлов летчик пурнăçне ачалăхран пуçласах, утăм хыççăн утăм тенĕ пек, йĕрлесе тухать, герой паттăрлăхне кăтартса парать.

Чăваш ывăлĕ Иван Смирнов пулеметчик çинчен Элкер «Вăл вилĕмсĕр» ятлă поэма çырчĕ. Вилĕмле хăрушă çапăçура вăл пĕччен тăрса юлать, юлашки патрон, юлашки граната юлмиччен кĕрешет.

Шавли поэт хăйĕн произведенийĕсенче, тылри ĕç темине хускатрĕ. Фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрассишĕн халăх çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшнине вăл «Маттур Якур» ятлă сăвăллă повеçĕнче лайăх çырса кăтартнă.

Вăрçă çулĕсенче пирĕн писательсем публицистикăлла статьясемпе очерксем нумай çырчĕç. Вĕсенче фронтра çапăçса паттăра тухнă чăваш халăх ывăлĕсем çинчен калакан произведенисем паллă вырăн йышăнаççĕ.

Совет çĕршывне ылханлă вăрçă çулăмĕ хыпса илсен, ватă коммунист М. Данилов-Чалдун, çулĕсем чылай пулин те, икĕ çул фашистсен урнă йыттисемпе çапăçать. Фронтра чухне вăл «Кам айăплă?», «Красноармеец Самсонов», «Фельдшер Кочетков», «Политрук», «Вăрманта», «Лизавета Егоровна», «Антун çемйи» т. ыт. калавсемпе очерксем те чылай çырнă.

Вăрçă çулĕсенче Л. Агаковăн пултарулăхĕ вăйлăн çекленсе кайрĕ. Çирĕме яхăн калавпа новелла çырнă вăл. Вĕсенче писатель совет çыннисен — салтаксен, партизансен, херарăмсемпе ачасен паттăр ĕçĕсене сăнласа кăтартать. Унăн геройĕсем ахаль çынсемех, анчах Тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçшĕн хăйсен пĕтĕм чун-чĕре хăватне, вăй-халĕпе пултарулăхне параççĕ.

Л. Агаковăн «Юлташ пурнăçĕ», «Йăваш çын», «Катюша» калавĕсенче пирĕн ума хăюллă совет салтакĕсемпе командирĕсен сăнарĕсем тухса тăраççĕ. Пурте вĕсем пурнăç çине çутă та сарлака чунпа пăхаççĕ, фашистла оккупантсем тăван çĕре кӳнĕ йывăр суранa хăйсен суранĕ вырăнне шутлаççĕ.

Л. Агаков ачасем валли те сахал мар произведени çырчĕ. Вĕсенче автор пирĕн ачасен вăрçăри паттăрлăхне, вĕсем Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем пулса ӳснине сăнласа кăтартать.

Хаяр вăрçă çулĕсенче ача-пăча литератури ытти писательсем çырнă произведенисемпе те пуянланчĕ. Вĕсенче чăваш ачисем ĕçе юратни, сăпайлă пулни, колхоз ĕçне тимлĕ хутшăнни, оборона фончĕ валли укçа-тенкĕ пухни, фронтовиксен çемйисене пулăшни тĕп вырăн йышăнать. Акă вĕсенчен паллăраххисем: М. Трубинан «Нина», «Килйыш», Х. Уярăн «Куçукпа унăн тусĕсем», А. Эсхелĕн «Çĕр илемĕ» калавĕсем, С. Шавлин «Киев пионерĕ», «Маттур Якур» поэмисем, И. Максимов-Кошкинскин «Ачамăрсем» пьеси т. ыт. те.

Публицистикăллă статьясем, илемлĕ очерксемпе калавсем çырнă хушăрах пирĕн прозаикисем вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçа анлăн кăтартса паракан пысăк калăплă произведенисем те хăйларĕç. С. Аслан, сăмахран, «Аслати», Л. Агаков —«Партизан Мурат», «Вилĕмрен те вăйлăрах», Илпек Микулайĕ —«Ирена», И. Саламбек «Иксĕлми шанчăк» ятлă повеçсем çырчĕç. К. Турхан «Йăмраллă ял» романĕпе ĕçлеме тытăнчĕ. Хв. Уяр «Пăлхав» ятлă историллĕ романăн пĕрремĕш пайне вĕçлерĕ.

Фашистла Германи Совет çĕршывĕ çине вăрă-хурахла тапăннă хыççăнах, чи малтанхи уйăхсенче, пирĕн драматургсем фашизма питлекен пĕр актлă пьесăсем, драмăллă фельетонсемпе пĕчĕк сценăсем çырчĕç. 1942 çулта Н. Айзман «Лиза Короткова» ятлă пьесипе ĕçлет. Унта вăл колхозниксен вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçне тĕрлĕ енчен, тарăннăн, пысăк туйăмпа сăнласа парать. Пьесăри тĕп сăнар, çамрăк колхозница Лиза Короткова, вăрçа тухса кайнă упăшки вырăнне юлса, колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçлать. Вăл фронтовиксен арăмĕсене, аппăшĕсемпе йăмăкĕсене, ачисене хăй тавра пуçтарать, вĕсене ĕçре хавхалантарса пырать. Пьесăри геройсен характерĕсем ĕçпе кĕрешӳре аталанса пыраççĕ.

«Çĕрпе кăвак тӳпе» пьесăра А. Эсхель пирĕн республикăри колхоз ĕçченĕсен патриотла шухăш-туйăмне, фронтпа тыл хушшинчи çирĕп пĕрлĕхе кăтартса пама тăрăшнă.

Чăваш литературипе искусствисен паллă деятелĕсенчен пĕри И. Максимов-Кошкинский 1941—1945 çулсенче тăватă пьеса («Савнисем», «Сенкер двойка», «Ачамăрсем», «Телейлĕ çуркунне») çырчĕ. Хăйĕн кашни произведенийĕнчех драматург ырă чунлă, патриотла шухăш-туйăмлă совет çыннисене тĕп вырăна хурса сăнлать, унăн характерĕнчи чи лайăх енсем пурнăçри ĕçпе кĕрешӳре, конкретлă лару-тăрура аталанса çирĕпленнине кăтарса парать.

Чăваш драматургĕсем халăха вăрçă пынă çулсенчех патша самани вăхăтĕнче ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ геройсене

тата Октябрьти революципе граждан вăрçи геройĕсене сăнласа кăтартакан произведенисем те парнелерĕç. Вĕсенчен паллăраххи — Кăлканăн «Иван Кадыков» пьеси.

Çапла ĕнтĕ, Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн пынă аслă кĕрешӳре чăваш писателĕсен çулăмлă сăмахĕ, хĕрӳллĕн янăраса, тăван халăха хавхалантарса пычĕ.

Вăрçă çинчен çырнă произведенисем чăваш литературинче Аслă çĕнтерӳ хыççăнхи çулсенче те нумай пулчĕç. Совет халăхĕн вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхне халь ĕнтĕ писательсем кунçулăн çĕнĕ тапхăрĕн çӳллĕшĕнчен пăхса, анлăрах, масштаблăрах çырса кăтартни курăнать.

Чи малтанах П. Хусанкайăн «Аптраман тавраш» ятлă сăвăлла романĕ çинчен пĕр-ик сăмах калас килет. Романра Аптрамансен темиçе ăрури йăхне сăнласа кăтартнă. Вĕсем пурте куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ: килĕштерсе пурăнаççĕ, фронтра та, тылра та хастар кĕрешеççĕ, çĕнтереççĕ, савăнаççĕ. Ниçта та, нихçан та пуçа усса пурăнмалла мар, яланах хăюллă, хастар, хаваслă пулмалла. Çак чăн-чăн патриотла çемье пурнăçĕнчен халăхăн историлле паттăрлăхĕ, тăшмана парăнми çирĕплĕхĕ, тăнăç пурнăçшăн кĕрешни лайăх курăнать.

Вăрçăрипе тылри событисене, фронтовиксемпе ĕççыннисен çирĕп шухăш-кăмăлне, вĕсен чаплă ĕçĕсене А. Алга та вăрçă хыççăнхи çулсенче çырнă поэмăсемпе сăвăсенче, повеçсенче тĕплĕнрех сăнласа кăтартать («Çулăм витĕр çул выртать», «Полк ялавĕ», «Тупăпа сĕрме купăс», «Вăтăр çултан» поэмăсем, «Хĕçпе çурла» роман, «Ютра», «Лира», «Хурама та хурăн» повеçсем).

«Вăрçă хыççăн пурнăç мĕн тери улшăнса лайăхланнă пулсан та, хăрушă çапăçусен йĕрĕ халăх асĕнчен тухас çук»,—тет поэт «Вăтăр çултан» поэмăра. Фашизм ирсĕрлĕхĕ çинчен каласа, вăл вулакансене малашлăх çинчен шухăшлама чĕнет. «Пире вăрçă кирлĕ мар!», «Ан пултăр вăрçă нихăçан»— акă Алган иртнĕ вăрçă çинчен çырнă произведенийĕсен тĕп шухăшĕ.

Сталинградран пуçласа Болгари, Югослави таран вăрçă хирĕ урлă утса тухнă Илпек Микулайĕ фашистсен тискер ĕçĕсене нумай курнă. Хăйĕн «Вăрçăпа çĕнтерӳ» кĕнекинче вăл чăваш ачисен паттăрлăхĕ мĕнле ӳссе, çирĕпленсе пыни çинчен калать, вĕсем тăшмана аркатсан, каллех мирлĕ пурнăça мĕнле йĕркелеме тытăнасси çинчен шухăшланине кăтартать.

А. Артемьевăн «Ан авăн, шĕшкĕ», «Икĕ салтак», «Юратупа кураiманлăх», «Çул уçă» калавĕсенчи геройсем те çавăн пекех. Вĕсем вăрçă вут-çулăмĕнче темле йывăрлăх-

сене чăтса ирттерсен те, пуласлăха шанаççĕ, тăшмана çĕнтерес ĕмĕтпе çеç пурăнаççĕ.

Вăрçă хыççăн вăрçă çинчен, вăрçа хирĕç кĕрешекен вăйсем çинчен Л. Агаков калавсемпе повеçсем чылай çырчĕ. Вĕсенче вăл фашистсене хирĕç çамрăк ачасем хăюллăн кĕрешнине кăтартса пама тăрăшрĕ. Çав произведенисенче эпир тĕрлĕ халăх ачисем фронтра та, тылра та хастар пулнине, вĕсем туслă пурăннине куратпăр. Чăваш литературинче Л. Агаковăн «Шанчăк» романĕ паллă вырăн йышăнать. Унта вăл совет халăхĕн, уйрăмах интеллигенцин, вăрçă çулĕсенчи паттăр ĕçĕсене сăнласа кăтартать. Роман геройĕсем, вăрçă вăхăчĕ мĕнле йывăр пулсан та, пурнăç çине, пуласлăх çине çутă ĕмĕтпе, оптимистла пăхаççĕ.

Вăрçă хура-шурне пайтах тӳссе курнă В. Алендей вăрçă паттăрĕсем çинчен тăвату повесть, алла яхăн калав, очерк, «Салтак çулĕ» поэма, нумай сăвă çырчĕ. Вĕсенче совет салтакĕсемпе офицерĕсен çапăçури паттăрлăхĕпе пултарулăхĕ лайăх курăнать, фронтпа тыл пĕрлĕхĕ вăйлă палăрса тăрать.

Вăрçăра паттăр пулнă çынсем мирлĕ ĕçре те хăйсен хастарлăхне, чăтăмлăхне кăтартни çинчен В. Алендейĕн «Ушкăн-ушкăн пĕлĕт иртет», Л. Таллеровăн «Пĕчĕкçеç путене» повеçĕсенче, Ю. Сементерĕн «Ваçлей салтак» поэминче, Юхма Мишшин «Уйăх тулнă каç» пьесисенче лайăх куратпăр.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çинчен, фронтпа тыл çинчен çырнă произведенисем хушшинче самаях паллă вырăн йышăнаканнисене кăтартса хăварас килет. Вĕсем хальхи вăхăтра çамрăксен çарпа патриотизмне вăйлатма, çак ĕçе анлăрах туса пыма пулăшаççĕ. Акă, вĕсенчен хăшĕ-перисем: М. Кипекĕн «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ», В. Садайăн «Летчиксем», «Аттесемпе пĕрлех кăвакартăмăр», А. Афанасьевăн «Юманлăх çулçă тăкмарĕ» романĕсем, П. Афанасьевăн «Вучах», Н. Максимовăн «Çил-çумăр витĕр», В. Эльбин «Пулас кинсем», И. Лисаевăн «Вунпиллĕкре эпĕ, комбат...», М. Николаевăн «Телейлĕ-ши эсĕ, Надя?», А. Николаевăн «Полк анăçаллаваскать», «Салтак амăшĕ» повеçĕсем, В. Алакерĕн «Икĕ юлташ», П. Осиповăн «Тăван çĕршывра», Г. Харлампьевăн «Юрату вилĕмсĕр», Н. Терентьевăн «Куккук çаплах авăтать», «Çĕпĕр дивизийĕ», «Пушар лаши», В. Синичкинăн «Салтак амăшĕ», А. Васильевăн «Тавах, аннеçĕм...» пьесисем, В. Ржановăн «Своими глазами» ятлă асаилӳсен кĕнеки т. ыт. те.

Чăваш писателĕсем Тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлас темăпа чылай лайăх произведенисем çырчĕç. Анчах

эпир иртнĕ кунсене асăнсан, вăрçă хыççăнхи тĕнчери лару-тăру йывăрланнине те яланах асра тытмалла, империализмăн реакциллĕ вăйĕсем Совет Союзĕпе ытти социализмлă çĕршывсене хирĕç каварлă ĕçсем тума хатĕрленнине курмалла, вĕсене хирĕç мĕнпур вăя хурса кĕрешмелле, мир вăйĕсене куллен-кун çирĕплетмелле.

Юлашки вăхăтра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Çурçĕр Атлантика блокне кĕрекен тата ытти хăшпĕр çĕршывсенчи милитаристла ушкăнсем мире хирĕçле ĕçе вăйлатрĕç. Вĕсем Совет Союзне тата ытти социализмлă çĕршывсене çар вăйĕпе, уйрăмах ядерлă ракетăсемпе хăратма тăрăшаççĕ. Истори урокĕсене шута илмесĕр империализм идеологĕсем Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче Совет Союзĕ мĕн тери пысăк Çĕнтерӳ тунине пĕчĕклетсе кăтартасшăн, ун çинчен çамрăк ăрăва тĕрĕс мар ăнлантарса пама хăтланаççĕ. Анчах эпир яланах сыхă.

Пирĕнпе пĕрле пур халăх
Миршĕн кĕрешет хĕрсе.
Çут этемлĕхĕн ăс-хайлĕ
Ларас çук нихçан сӳнсе,—

тет Кăлкан «Хумханса итлерĕм» сăввинче.

Миршĕн пыракан кĕрешĕве чăваш писателĕсем тимлĕ хутшăнаççĕ: сăвă-юрăсем, очерксем, публицистикăллă статьясем çыраççĕ, рабочисемпе колхозниксем хушшинче час-часах пулаççĕ, вулакансемпе литература кунĕсемпе эрнисене ирттереççĕ. Юлашки вăхăтра çирĕп миршĕн кĕрешме чĕнекен сăвăсемпе поэмăсем чылай пичетленчĕç. Чи малтанах кунта Г. Орловăн «Ан пултăр вăрçă нихăçан», «Пулар-и шанчăклă салтак», В. Давыдов-Анатрин «Мире сыхлар пурте», «Миршĕн кĕрешер», Г. Ефимовăн «Берлинти Трептов-парка кĕрсен», В. Харитоновăн «Ан макăр», Ю. Айдашăн «Çурăлман бомбăсем çинчен», А. Маловăн «Лăпкă океан», А. Галкинăн «Миршĕн çирĕп ут» сăввисене, В. Ахунăн «Салтак хирĕ», М. Андреевăн «Рейхстаг умĕнче» поэмисене асăнса хăвармалла.

Иртнĕ çулсенче чăваш писателĕсем тĕнчери миршĕн сине тăрса, хастарлăн кĕрешме чĕнсе çырнă произведенисем «Пирĕн сасă», «Миршĕн сасăлатпăр», «Слово о мире» кĕнекисенче çапăнса тухрĕç. Вĕсен авторĕсем çав произведенисемшĕн тӳлемелли пĕтĕм гонорара Мир фондне пачĕç. Çакă та ĕнтĕ пирĕн литераторсем вăрçа хирĕç, халăхсем хушшинчи тăнăç пурнăçшăн пĕтĕм чун хавалĕпе тăрăшнине кăтартса парать. Çапла вара, чăваш çыравçисем мирпе тăнăç пурнăç хуралĕнче сыхă та паттăр тăраççĕ.

1985

## ШУРӐМПУҪ ҪӐЛТӐРӖ

*(К. В. Ивановӑн литературӑри сӑнарӗ ҫинчен)*

Чӑваш литературинче Константин Васильевич Иванова шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ, теҫҫӗ. Унӑн ҫурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ каярахри ӑрури писательсене паха произведенисем ҫырма хавхалантарнӑ, вӗсене пысӑк шухӑш-ӗмӗтсемпе пуянлатнӑ, вӗрентнӗ. Ҫавӑнпа унӑн поэзийӗ паян кун та пирӗншӗн ытарайми чаплӑ тӗслӗх пулса тӑрать. Ӑнсӑртран мар ӗнтӗ Чӑваш халӑх поэчӗ Я. Ухсай пирӗн ку чухнехи поэзие «Иванов вӑрманӗ» тесе хакларӗ.

Хӑйӗн ӑсталӑхӗпе К. Иванов революцичченхи чӑвш писателӗсем хушшинче чи малти вырӑнта тӑнӑ, вӗсен пултарулӑхне тискер самана вӑхӑтӗнче те аталанма пысӑк вӑй хушнӑ. Я. Ухсай тӗрӗс калать:

Поэт юман пулса шавланӑ
Асаплӑ чуллӑ ҫӗр ҫинче.
Қашни юппи пӗр юрӑ панӑ,
Юман шавланӑ пӗр-пӗччен.

Ҫапла пулнӑ вӑл патша саманинче. Халӗ, акӑ, пирӗн аслӑ, ирӗклӗ ҫӗршывра:

Йӗкелсенчен юман вӑрманӗ
Хӑпарчӗ пӗлӗтсем таран.
Ӗрчевлӗ вӑрлӑх акаканӗ
Қайсан та, ӗмӗчӗ кайман.
Қашларӗ Иванов вӑрманӗ,
Хитре вӑрман, сӗм-сӗм вӑрман,
Чӑваш поэзийӗн вӑрманӗ.

Чӑваш совет поэчӗсенчен нумайӑшӗ К. Ивановран ҫырма вӗреннӗ. Унӑн хӑватлӑ поэзине юратса пахаланӑ май вӗсем ӑна час-часах хӑйсен сӑвви-юррисенче асӑнаҫҫӗ. Акӑ, поэтӑн ҫывӑх юлташӗ пулнӑ Н. Шупуҫҫынни «К. В. Иванова асӑнса» сӑввинче:

«Юрӑсен юррине» ҫырнипе
Тапранчӗ сан ӗмӗрӳ,
Чӑвашшӑн хӗрсе пурӑннипе
Ҫунса пӗтрӗ сан чӗрӳ,—

тесе тивӗҫлӗ хак панӑ. Ҫавӑн пекех Чӑваш халӑх поэчӗ С. Элкер те «Нарспи» авторне» сӑввинче К. Иванова тӑван литературӑпа чӗлхене малалла аталантарасшӑн ырмиканми ӗҫленӗшӗн тав туса: «Чуралӑхри чӗлхене шанчӑк пама пурӑннӑ, тухас сӑвӑҫ-туссене ҫул кӑтартма пуҫӑннӑ»,—тенӗ.

Чӑваш халӑх поэчӗ П. Хусанкай «Нарспи» авторне халалласа статьясем те, сӑвӑсем те ҫырчӗ. Вӑл «Нарспи ҫӗршывӗнче» сӑвӑра К. Иванов пултарулӑхӗн ӳсӗмӗ 1905—1907

çулсенчи революципе тачă çыхăннине лайăх кăтартать. Унăн пархатарлă витĕмĕ Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă хыççăн та пысăк пулнине курать.

«Константин Иванов» сăвăра П. Хусанкай çапла калать:

Эс ман пĕрремĕш юрату,
Çĕр çуннă чух та эс манпахчĕ.
Сан халăх чысĕ пек яту
Тăхлан шăтарнă сумкăрахчĕ.

Поэт-воин çав сăвăрах «Нарспи» поэма фашистсене хирĕç çапăçнă чухне чăваш салтакĕсемпе пĕрле пулни çинчен те хумханса калать. П. Хусанкай хăй те, çав салтаксем пекех, хаяр тăшманпа хăюллăн çапăçнă.

Мухтавлă Атăл хулинче,
Брянск патĕнчи сĕм вăрманта
Салтаксене Нарспи çинчен
Вула-вула эп савăнтартăм,—

тет поэт кăштах канса илнĕ вăхăтсенче хăй чăваш салтакĕсене «Нарспи» поэмăна вуласа пани çинчен.

Шупашкарта, Атăл хĕрринче, К. В. Ивановăн палăкĕ ларать. «Чăваш хĕрĕсем кунта чи капăр чечексем лартса ӳстереççĕ, хамăр халăхăн илемлĕ юрри-сăввисене шăрантараççĕ»,—тенĕ Чăваш халăх поэчĕ А. Алга «Константин Иванов палăкĕ умĕнче» сăввинче. Унта вăл чун-чĕререн хавасланса çапла калать:

Поэт! Эс ăслă сăмахпа вăратнă
Тăван ĕçхалăхĕн ырă кăмăлне,
Пĕр уншăн уçă юрăсем шăратнă,
Çунат эс хушнă унăн вăй-халне.

К. Иванов — халăх поэчĕ. Каларăмăр ĕнтĕ, унăн чаплă поэзийĕ ытти чăваш поэчĕсене те ĕçре çунат хушса хавхалантарнă. «Тăван чĕлхен вăйĕпе илемне чи малтан мана «Нарспи» туйтарчĕ»,— тесе çырнă П. Хусанкай хăйĕн автобиографийĕнче. Пирĕн поэтсен, вулакансен шухăш-кăмăлне С. Шавли «Константин Ивановăн юлашки сăмахĕ» сăввинче, В. Давыдов-Анатри «Кĕçтенттин Иванов», А. Воробьев «Слакпуçĕнче» тата «Слак-шыв», Ю. Семенов «Нарспи» сăввисенче аван кăтартнă.

К. Иванов пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе çыхăннă произведенисем чăваш литературинче сахал мар, вĕсене пурне те пăхса тухма май та çук. Çапах та эпир пирĕн писательсен хăшпĕр пысăкрах произведенийĕсем пирки кĕскен те пулин хамăр шухăша каласа хăварасшăн.

К. Ивановăн пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне И. Максимов-Кошкинский «Тăвăл хыççăн тăвăл» драмăра уçăмлăн сăнласа кăтартнă. Драмăри ĕçсем 1906—1912 çулсенче пулса иртеççĕ. Çав тапхăрта Российăра пĕрремĕш революци çĕкленет, çав революцие тискеррĕн путарнă хура реакци алхасма пуçлать.

Çĕршывра пулса иртекен событисене Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекенсем те хутшăнаççĕ. К. Иванов ун чухне халăх пурнăçĕпе, политика ыйтăвĕсемпе ытларах интересленме тытăнать, юлташĕсемпе пĕрле демонстрацисене хутшăнать. «Отречемся от старого мира» тата хăй çырнă «Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем! Тапран эс вăрçма, выçă халăх!» юрăсене хавхаланса юрлать. Çаксем пурте ĕнтĕ поэтăн революциллĕ шухăшĕсем аталанса тата çирĕпленсе пынине кăтартаççĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пурнăç условийĕсем йывăр пулнă пулин те, К. Иванов унта ырми-канми ĕçлет: пуçламăш шкулсенче вĕрентмелли чăвашла кĕнекесем хатĕрлесе кăларма тăрăшать, вырăсларан чăвашла куçарать, сăвăсемпе балладăсем çырать, «Нарспи» поэмине вĕçлет, учитель ятне илме Чĕмпĕрти гимназире экстерн йĕркипе экзаменсем тытать, çуралнă çĕршывĕнче ялтан яла çӳресе халăх юррисемпе халап-юмахĕсене пухать. Поэт ял пуянĕсем, вĕсен шутĕнче хăйĕн тăван ашшĕ те, хуçаланнине,— вĕсем чухăнсене пусмăрласа пурăннине курать, анчах çав пусмăртан çăлăнса тухмалли çул-йĕре кăна кураймасть-ха вăл.

И. Максимов-Кошкинский хăйĕн драминче И. Я. Яковлев сăнарне те туллин уçса панă. Вăл —«чăвашсене çур ĕмĕр çутта туртнă» аслă педагог—К. Иванова литература ĕçĕнче нумай пулăшнă. Драмăра «Нарспи» поэма пирки акă мĕн калать вăл: «Ку пирĕн илемлĕ литература пуçланнине пĕлтерет. Çырса пĕтерсенех пичетлетпĕр те ялсене яратпăр. Хура пӳртсенче, улахсенче, хурал пӳрчĕсенче, пухусенче вулĕç малтанхи поэмине чăвашсем... Шур сухаллă старихсем, шăлсăр карчăксем, ачаллă арăмсем, çамрăксем итлесе ларĕç чипер Нарспи пурнăçĕ çинчен».

Драма вĕçĕнче эпир сывалайми йывăр чирлĕ поэта тăван ялĕнче куратпăр. Революци юхăмĕ каллех çĕкленет, ялта пуян Убик çурчĕ çунать, анчах пушар сӳнтерме пыракансем çук. «Ку çулăма никам та сӳнтереймĕ. Çĕнĕрен çĕкленет тăвăл!»—тет К. Иванов. Юлашкинчен вăл М. Горькин «Тăвăл йыхравçи» калавĕнчи сăмахсене аса илет: «Мăнаçлăн вĕçет хăюллă тăвăл йыхравçи çиçĕм хушшинче—хаяр ахăракан тинĕс çинче. Кăшкăрать... Çĕнтерӳ пророкĕ кăшкăрать: «Тата вăйлăрах кисрентĕр тăвăл!»

К. Иванова тĕрĕс те туллин сăнласа кăтартакан паха произведенисем хушшинче А. Артемьевăн «Хунавлах хăрнисем» романĕ пысăк вырăн йышăнать. Çак произведенин малтанхи пайĕнче («Тăвăл умĕн», 1968) вулакан чи малтанах Российăри пĕрремĕш революци тапхăрĕнчи событисене курать, ун чухне революциллĕ шухăшсем Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче мĕнле сарăлма пуçланине, шкулта вĕренекен ачасен политикăллă ăстăнĕ, шухăшĕсем çирĕпленсе пынипе паллашать. Уйрăмах кунта пулас чаплă писательсемпе композиторсен — К. Иванов, Ф. Павлов, Н. Васильев-Шупуççынни, П. Пазухин, И. Тăхти тата ыттисен сăнарĕсем витĕмлĕ те асра юлмалла пулнине палăртса хăвармалла.

Романăн тĕп геройне — Константин Иванова эпир Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче те, хулапа ялта та, юлташĕсемпе хресченсем хушшинче те куратпăр. Вăл ырă кăмăллă, сăпайлă та ĕçчен çын. Писатель К. Иванов мĕнле вĕреннине, вырăс поэчĕсен произведенийĕсене куçарнине, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнчи хĕрсен училищинче чистописанипе рисовани вĕрентнине, Сызрань уесĕнче çĕр виçсе çÿренине, тăван ялĕнче темĕнле ĕçре те пулнине кăтартма тăрăшать. «Да-а, ылтăн алăллă этем!—тет Пазухин тусĕшĕн савăнса.— Çав алăпа вăл тырă вырма та, утă çулма та, картинăсем ÿкерме, каскалама та, сĕрме купăс калама та пултарать. Çав алăпа вăл тĕнчери халиччен никам курман япала — йывăçран каскаласа пичетлемелли машинка туна. Пулать-çке çавнашкал ăста этем!»

Пысăк ĕмĕтпе пурăннă пултаруллă поэт-гуманист. Тăван халăха, унăн историне, поэтикăллă пултарулăхне çав тери юратнăскер, вăл хăйĕн юлташĕсене те халăх сăмахлăхне, сăвви-юррисене çине тăрса пухма чĕнсе хавхалантарнă.

Поэт Иван Яковлевича калама çук хисепленине, ăна чун-чĕререн юратнине А. Артемьев тĕрлĕрен тĕслĕхсемпе детальсем урлă ĕненмелле те уçăмлăн кăтартса парать. Вăл Яковлева аслă çын, чăваш историйĕнче ĕмĕрлĕх юлмалли çын, пирĕн культурăн ĕмпиччи тет. П. Пазухинпа калаçнă чухне К. Иванов И. Яковлев пирки çапла калать: «Ан тив, вăл мана, ытти вăтăр ултă ачапа пĕрле, шкултан кăларса янă пултăр. Анчах вăлах мана каялла чĕнсе илчĕ, шкулта ĕç пачĕ, турă кĕнекисемпе пĕрлех Лермонтова куçарттарчĕ. «Нарспие» ытти поэтсен произведенийĕсемпе пĕрле пичетлесе кăларчĕ. Ăна пула мĕн чухлĕ тĕттĕм чăваш ялĕсенче шкул уçăлчĕ, мĕн чухлĕ чăваш ачи алла хут-кăранташ тытрĕ!..»

К. Иванов «Нарспи» поэмана çырса пĕтернине роман авторĕ чи савăнăçлă хыпар вырăнне илсе кăтартать. Чăнах та, И. Я. Яковлев хушнипе вĕренекенсене пухнă класра сăвăç янăравлă сасăпа хăйĕн поэмине вуласа пани çав произведенире асран кайми çутă йĕр хăварать.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать,—

тесен вара сăвăçа ним чĕнмесĕр, тĕлĕннипе шак хытса итлесе ларнă шкул ачисем сиксе тăраççĕ те, хаваслăн кăшкăрашса, поэт патне ыткăнаççĕ, пур енчен те çавăрса илсе «урра» çĕклеме пуçлаççĕ. «Çакна курса тăракан Иван Яковлевич тӳсеймерĕ, шурă тутăр кăларса, шывланнă куçĕсене шăлма тытăнчĕ»,— тет писатель.

Кун пек чуна пырса тивекен, кăмăла хускатса хумхантаракан вырăнсем романра татах та пур. Çапах та, роман çапăнса тухсан, Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă çынсем кунти хăшпĕр çитменлĕхсене, пуринчен ытла историллĕ фактсене пăтраштарнă вырăнсене, асăрхарĕç. Сăмахран, П. Золотов çавсем çинчен хăйĕн «Шурăмпуç шанчăкĕсем» ятлă статйинче тĕплĕн каласа хăварнăччĕ («Коммунизм ялавĕ», 1972, октябрь, 13). Çавăнпа та ку статьяра эпир асăрхаттарнă уйрăм çитменлĕхсем çинчен тепĕр хут сăмах тапратасшăн мар.

К. Иванов халăхăн çутă шухăш-ĕмĕчĕсемпе, пуласлăхĕпе хавхаланса пурăннă, вĕсем пурнăçа кĕччĕр тесе чунне парса тăрăшнă. Чăваш литература классикĕн поэзийĕ— хăйĕн ăшчикĕпе те, формипе те пĕтĕмпех тăван халăх поэзийĕ. Ун пирки тĕрĕс каланă пирĕн паллă критик-тĕпчевçĕ В. Долгов: «Иванов поэзийĕ—вăл этем ирĕкне пусмăрланине хирĕç кĕрешме чĕнекен, çынсене ирĕке тухса савăнăçне тупасси çинчен ĕмĕтлентерекен, этем çинчен хунă мухтав юррипе янăракан поэзи... Иванов—поэт-гражданин, художник-реалист пулнă»,—тенĕ вăл «Чăваш халăх поэчĕ К. В. Иванов» кĕнекинче.

Çапах та К. Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнă произведенисенче поэтăн кунçулне пур енчен те çутатса панă теме çук-ха. Мĕн пуррине халлĕхе пуçламăшĕ çеç теме пулать. Шансах тăрăпăр: вăхăт çитĕ, юратнă поэтăмăр çинчен чăннипех те илемлĕ, тарăн шухăшлă произведенисем нумай пулĕç.

*1980*

## ТУСЛĂХ ТЫМАРĔСЕМ ПАРКА

Чăваш совет поэзийĕн никĕсне хывнă, чăваш комсомолне йĕркелекенĕсенчен пĕри пулнă Çеçпĕл Мишшин пурнăç çулĕ кĕске те йăлтăр çутă пулнă. Вăл 1899 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Касаккасси (хальхи Çеçпĕл) ялĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. 1922 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче, çирĕм виççе те çитмесĕр, Чернигов облаçĕнчи Старогородка ялĕнче вилнĕ. 1954 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче поэт ӳтне Остер хулинчи тĕп парка куçарнă, унта лартнă пысăк палăк çине «Чăваш чĕлхи» сăввинчен илнĕ йĕркесене чăваш, вырăс тата украин чĕлхисемпе ылтăн саспаллисемпе çырса хунă:

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ—
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!

Чăваш халăх поэчĕ, К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР Патшалăх премийĕпе Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премийĕн лауреачĕ Петĕр Хусанкай каланă пекех, аслă поэтăмăра чăваш çĕрĕ çуратнă, хăйне вара ăна пархатарлăн астуса пурăнакан, вăл чун ăшшипе эпеклесе юратнă украин çĕрĕ ĕмĕрлĕхе хăй ытамне илнĕ.

Çеçпĕлĕн çывăх тусĕ, хăй халлĕн сăвă çырма вĕреннĕ украин поэчĕ, Кашкăр Сăрчĕ ялĕнче чухăнсен комитечĕн председателĕ пулнă Федор Пакрышень чăваш поэчĕпе Крымри санаторире паллашнă. Çеçпĕлĕн чĕри тапма пăрахсан, ун вилтăпри çинчи палăк çине ăна асăнса тăватă йĕркеллĕ эпитафи çырнă:

Оця едина могила
Великого поэта сховала.
З ним богато пiсень новых
Буденна Земля потеряла.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче, фашистсем Остер хулине пырса кĕнĕ тĕле, палăк çинчи çав сăмахсене çырнă плита çухалнă та совет çарĕсем Украинăна ирĕке кăларсан каллех хăй вырăнĕнче тупăннă.

Иртнĕ вăрçăн вут-çулăмлă çулĕсенче чăваш салтакĕсемпе офицерĕсем Остер хули патĕнчен асар-писеррĕн çапăçса иртнĕ чухне хăйсен юратнă поэчĕн масарĕ умĕнче чарăнса тăнă, нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçма, тăшмана хаяррăн тавăрма тупа тунă. Акă мĕнле аса


31164-еgв
Республиканская БИБЛИОТЕКА им. Горького

йлсе çырнă, сăмахран, 1941 çулхи июль кунĕсенче чăваш салтакĕ П. Матвеев: «Çул çине тапранас умĕн татах тепре Çеçпĕл Мишши масарĕ çине кайрăмăр... Эпир ун çине хир чечекĕсен çыххине хутăмăр та колхозниксемпе сывпуллашса малалла кайма тухрăмăр. Машина пире фронт еннелле ыткăнтарса пырать. Тăпру çăмăл пултăр, асран тухми тăван Çеçпĕлĕмĕр!»

1943 çулхи асар-писер вăйлă çапăçусем пынă вăхăтра кунта салтак шинелĕ тăхăннă Петĕр Хусанкай поэт та пулнă. Акă мĕнле çырнă вăл çавăн чух «Поэт тăпри çинче» ятлă сăввинче:

Каçар мана: вучах чĕртсе
Асăнаймастăп пылпала.
Пистолетран виç хут персе
Сыпуллашатăп санпала.

Мерттес Шевченко Амăшне!
Вăл кăкăр пачĕ Çеçпĕле.
Тупа: ун ирĕк канăçне
Эп сыхлăп, сыхлăп хĕçпеле!

1959 çулта Украинăра пăлхар литературипе культури кунĕсем пынă чухне пăлхар писателĕ Ангел Тодоровпа украин писателе Юрий Збанацкий Чăваш писателĕсен Союзне çакăн пек телеграмма янă:

«Сирĕн тĕлĕнмелле ырă халăхăрпа унăн хӳхĕм культурине тăванла юратнине палăртса, эпир паян Чăваш çĕршывĕн çулăмлă поэчĕ Çеçпĕл Мишши тăпри çинче пултăмăр, унăн палăкĕ умне чечек çыххисем хутăмăр... Эпир сирĕн аслă поэтăра чун-чĕререн юрататпăр, унăн чаплă пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе хамăр халăхсене май килнĕ таран тĕплĕрех паллаштарассишĕн тăрăшатпăр. Эпир Çеçпĕл вырăнĕсенче пĕрле çӳрени, пирĕншĕн Чăваш, Пăлхар, Украина çĕршывĕсенчи тăванла халăхсем хушшинчи туслăха малалла çирĕплетес ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать».

Çеçпĕл Мишши Украинăна, унăн халăхĕпе пуян литературине ытараймасăр юратнă. Чернигов çывăхĕнчи Киреево ялне пырсан, 1922 çулхи мартăн 3-мĕшĕнче вăл кун кĕнекинче чун-чĕререн килнĕ сăмахсене çырса хурать: «Украина. Мĕн пĕчĕкренпех эпĕ сан çинчен шухăшланă, сана çав тери курасшăн, сан çыннусемпе калаçасшăн пулнă. Акă тĕл пултăмăр та халĕ...»

Хăçан тата мĕнле пырса лекнĕ-ха Çеçпĕл Мишши Украинăна? Темле тĕлĕнмелле туйăнать пек халĕ çав ыйтăва хускатма, çапах та хускатмах тивет, мĕншĕн тесен хăшпĕр авторсем поэт пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çаплах-ха

тĕрĕс мар хыпарсем пĕлтереççĕ. 1979 çулта 9-мĕш класс валли кăларнă чăваш литератури учебникĕнче те ав Çеçпĕл Чулхулана сывалма кайнă та унтан ăна Крыма янă тесе çырнă. 1979 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче «Советская Чувашия» хаçатра тухнă «Интернационала радуга живая» статьяра тата А. Емельянов: «Çеçпĕл Украинăна выçăпа асапланакан чăваш халăхĕ валли тырă пуçтарса ярса парассине йĕркелеме кайнă»,—тесе çырнă.

Çеçпĕл А. П. Червякова патне янă çырусенчен, юлташĕсен асаилĕвĕсенчен, поэт хăй сăмахĕсемпе пĕлтернинчен, çавăн пекех архивсенчи документсенчен те вăл Чулхулара ытти чирлĕ юлташĕсемпе пĕрле 1921 çулхи май уйăхĕнче Шупашкартан Крыма кайнă май кăна санитари поездне кĕтме чарăнса тăнă. Облĕçтăвком председателĕн заместителĕ пулнă С. А. Коричев та Чăваш кĕнеке издательстви 1969 çулта кăларнă «Малтанхи утăмсем» кĕнекинче: «Çав çулхи (1921 ç.— *Н. Д.*) май уйăхĕнче парти обкомĕ мана тата Кузьмина Крымăн кăнтăр çыранне сывалма ячĕ»,— тесе пĕлтерет.

Çапла вара поэта йывăр чир Крымри «Таласса» санаторие илсе çитернĕ. Кунта вăл украин поэчĕ Ф. Пакрышеньпе (1896—1936), комсомолта ĕçленĕ К. Турганпа паллашса туслашнă. Вĕсен чунтан килнĕ туслăхĕ çинчен паллă украин писателĕ Ю. Збанацкий çырнă «Çеçпĕл» романпа чăваш писателĕ П. Чичканов çырнă «Кăвар чĕре» роман-хроникăра нумай ăшă сăмах каланă. «Эпир Мишшипе пĕрле фонтансем патĕнчи аллейăсем тăрăх каççерен час-часах уçăлса çӳреттĕмĕр,— тенĕ Ф. Пакрышень хăйĕн асаилĕвĕнче.— Вăл мана сăвăсем тĕрĕс çырма вĕрентрĕ».

Унтан çапла аса илет: «Хаçатсенче çырнинчен 1921 çулхи июнь вĕçĕнче пĕтĕм Атăл тăрăхĕнче типĕ уяр çанталăка пула выçлăх ахăрашса кайни паллă пулчĕ. Çакă Мишшине шутсăр кулянтарчĕ... Кĕçех санаторире чирлĕ çынсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта выçлăх пирки йăлтах ăнлантарчĕç, чирлĕ çынсене, выçăпа асапланакансене пулăшма тивĕ пирки, çăкăр кунне икĕ кĕренке вырăнне кĕренке çурă кăна парасси çинчен каласа хучĕç. Чирлисем пурте кунпа килĕшрĕç».

Çеçпĕл выçлăха пурпĕр çĕнтересse пĕлнĕ, шанса тăнă. Унăн чĕринче хурçă шанчăк тапса тăнă, çакă ăна йывăр чире çĕнтерме пулăшнă, унра пуласлăха, коммунизм çĕнтерессе ĕненсе тăрас шухăш-туйăма çирĕплетнĕ. Çакна вăл Крымра тата Киевра çырнă «Чăваш! Чăваш!», «Çĕн Кун аки», «Тинĕсе», «Инçе çинçе уйра уяр», «Катаран каç килсен» тата ытти сăвăсем те яр-уççăн çирĕплетсе пăраççĕ.

Çав сăвăсенче поэта çĕнĕ самана, Октябрьте хăват илсе çĕкленнĕ халăхăн ĕçĕпе кĕрешĕвĕ хĕрӳ çунат хушса хавхалантарни витĕр палăрса тăнă, поэтăн общество пурнăçĕнчи вырăнне кăтартса панă, халăхсен туслăхне мухтанă. Çав хĕн-тертлĕ йывăр çулсенче те вăл çĕнĕ самана çыннин çутă пуласлăхне тĕп-тĕрĕс туйнă, чун-чĕререн хавхаланса çырнă:

Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ,
Хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе
Кунçул уйне тухса, хĕвеллĕ тумтир тумланĕ,
Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн;
Умне, çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе,
Интернационал кĕперĕ анĕ.

Аслă поэт литература ĕçченĕсене яланах халăхпа пĕрле пулма, унпа тан утма, халăх интересĕсемпе пурăнма, пĕрле хавхаланса ĕçлеме тата кĕрешме чĕннĕ. «Тинĕсе» сăввинче вăл çĕнĕ самана поэчĕн витĕмлĕ те асра юлакан чĕрĕ сăнарне кăтартса панă:

Тинĕс, тинĕс, эс хаяррăн,
Сăвăçăн юнне-чунне
Вăйлă хумлă юрăпа,
Кĕрешме чĕнен саспа
Нишлĕлĕхсенчен тасат.
Вăйлă паттăрлăх, хăват
Вырнаçтар ун чĕрине.
Чунĕ ун хăюллă пултăр,
Тинĕс вăйĕпеле тултăр.
Савтăр паттăрлăх вăйне;
Çĕн куна, çĕн тĕнчене
Юратса çĕн юрă хутăр,
Кĕрешӳ ĕçне-вăйне
Хăй чĕрин хĕвелĕ тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан,—ташлатăр, култăр...

Крымра сывалнă хыççăн, 1921 çулхи августăн 14-мĕшĕнче, поэт кунта паллашса çывăхланнă тусĕсемпе пĕрле Евпаторие каять. «Кун умĕн кăшт маларах хамăр ушкăнри пилĕк çын пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр,— аса илсе çырнă Ф. Пакрышень.— Мана панă сăнӳкерчĕк хыçне Мишши: «Революцин хурçă карапĕ çинче халсăр чунлисем ан пулччăр. Хăюллă та хастар çынсем çеç Октябрь тăвăлĕнче çуралнă Çĕнĕ Куна тивĕçлĕ. М. Кузьмин» тесе çырса хучĕ.

Акă ĕнтĕ Çеçпĕл Харькова пырса çитет, тусĕсенчен уйрăлса, Киева çул тытать. Кунта вăл художество училищине вĕренме кĕрет, анчах вăрах хушă вĕренме май килмест, вăхăтлăха çар службинчен хăтарнă срок тухнă пирки

Хĕрлĕ Çара илеççĕ. Анчах вăл кунта каллех чирлесе каять те, ăна çар службинчен пачах хăтараççĕ.

Киевра пулни, авалхи хулапа, унăн историйĕпе, архитектурипе хăй куçĕпе курса паллашни поэта украин культурипе, пуринчен ытла литературипе, пушшех те ытларах интереслентерме пуçлать. Ф. Пакрышень аса илнĕ тăрăх, Çеçпĕл Мишши Т. Шевченко поэзине питĕ юратнă. Ку чăнах та çапла пулнине эпир унăн сăввисен ярăмĕнче украин поэчĕн витĕмĕ уççăн сисĕннинчен те питĕ аван туятпăр. Кăнтăра сывалма кайичченех вăл, Шевченкăн «Халал» сăввинчи поэтикăлла сăнарсемпе хавхаланса, «Эпĕ вилсен» сăввине çырнă, унта чăваш халăх культурипе искусствин пуласлăхĕ çинчен хумханса каланă, хăй тăван халăхĕн пултарулăх хăватне çирĕппĕн шанса тăнине кăтартса панă:

...Вăхăт çитĕ—чăваш çĕрĕн
Кăмăллă чĕлхи

Чаплă пулĕ,—вăлах пулĕ
Çамрăк чун пахи.

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-юрăсем,
Пулĕç аслă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем.

Савнă çĕршывăмăн пулĕç
Чаплă сăвăçсем,
Чаплă та илемлĕ çырĕç
Ун чухне вĕсем.

Çеçпĕлĕн «Çĕн Кун аки» ятлă программăллă сăвви те П. Тычинăн çĕре çивĕччĕн касса сухалакан акапуç тимĕрри сăнарĕпе çĕнĕ самана килсе çитнине пĕлтерекен «Акапуç» сăвви (1919) витĕмĕпе çуралнă. Тычинăнни пекех, Çеçпĕлĕн Çĕнĕ Кунĕ те çуркуннепе акăш-макăш улшăнса капăрланнă, «кăвак çутăран шăратнă акапуçĕ» хăйĕн хĕпхĕрлĕ тимĕррипе «касса-касса уй урлă кас тунă» романтикăллă сăнарсемпе куç умне тухса тăрать. Акапуç кунта—кивĕ тĕнче арканнин ытарлă сăнарĕ кăна мар, малашнехи тăнăç пурнăçăн, пулас социаллă-экономикăллă улшăнусен никĕсне хатĕрлекен ирĕклĕ ĕçĕн символĕ те.

Кунта Çеçпĕл хăй çар службинче тăнă вăхăтра Ф. Пакрышень патне Киевран янă çырăвăн пĕр сыпăкне илсе кăтартни те вырăнлă-тăр. «Акă халех ĕнтĕ çывăх вăхăтри демобилизаци кунĕсем килсе çитнĕн туйăнаççĕ. Халех акă хама санпа пĕрле пек куратăп. Каллех кĕнекесем, каллех искусство, Шевченко, Украина, Гоголь çинчен калаçатпăр пек.

Сивӗ хӗл кунӗсем иртрӗҫ. Вӑрмансен шӑв-шавӗпе, улӑхсемпе уй-хирсен ешӗл тумӗпе, анлӑ Украина ҫӗрӗ-шывӗн тӗпсӗр тарӑн сенкер тӳпипе пӗрле пурнӑҫ вӑйӗ хӑватлӑн тапса тӑракан, сим-сиплӗ те йӑмӑх ҫутӑ ҫуркунне килсе ҫитӗ. Йывӑр ӗҫсем тунӑ хыҫҫӑн иксӗмӗр санпа калама ҫук ырӑ та тӑнӑҫ каҫ уя, вӑрмана кайса ҫӳрӗпӗр. Мӗн тери, мӗн тери аван пулӗ иксӗмӗре... Эпир пӗрле, эпир тӑвансем, эпир пӗр-пӗрне пурнӑҫӑн пӑтранчӑк аварӗнче шыраса тупнӑ. Аван-ҫке, аван, иҫмасса!»

Поэт 1921 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче Киевра ҫырнӑ пӗр чаплӑ сӑввине «Хурҫӑ шанчӑк» тесе ят панӑ. Вӑхӑчӗ питӗ йывӑр пулнӑ, «ҫарамас та, ҫарран та эпӗ, сирӗн пекех выҫӑ пурӑнатӑп»,— ҫырса пӗлтернӗ вӑл Шупашкарти тусне. Хӑй те выҫӑ та чирлӗ поэт, выҫлӑхӑн хӑрушӑ картинисене Киев урамӗсенче те курнӑ. Украин тусӗсем хута кӗрсе пулӑшнипеле вӑл ҫавнашкал йывӑр условисенче те хӑй чӑваш халӑхне хӗрӳллӗн юратнине, ҫуралнӑ ҫӗршывӗн ҫутӑ пуласлӑхне ҫирӗп шанса тӑнине витӗмлӗ кӑтартса панӑ, малалла кайма чӑрмантаракансене, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас ӗҫри йывӑрлӑхсенчен хӑраса ӳксе суя сӑмах саракансене хаяр ҫилӗпе курайман тапӑннӑ:

Ыран-и, паян-и... тӗреклӗн
Вутланӗ ҫӗршывӑм чӗри.
Кӑварлӑ чечеклӗн чечеклӗ
Ҫӗре ҫӗн хӗвелӗн юрри.

Ҫӗршывӑм хӗвеллӗн ҫуталӗ,—
Тапранӗ Кӑвар-кайӑкла.
Кам хирӗҫ калаҫӗ,—улталӗ,
Кам:—мар, тет, ун чунӗ—чӑлах.

Ф. Пакрышень чӗнсе янипе Ҫеҫпӗл 1922 ҫулхи март пуҫламӑшӗнче Киевран ҫуран Чернигов тӑрӑхӗнчи Кашкӑр Сӑрчӗ ялне пырса ҫитет.

Ҫеҫпӗл Украинӑра ӗҫлесе пурӑннӑ вӑхӑт ҫинчен Ф. Пакрышень асаилӗвӗсенче самай тӗплӗ ҫырса кӑтартнӑ. Вӗсем «Советская Чувашия» хаҫатӑн 1979 ҫулхи сентябрӗн 16-мӗшӗпе 18-мӗшӗнче тухнӑ номерӗсенче «Я есть гражданин республики» ятпа пуҫласа пичетленчӗҫ. Поэтӑн ҫав тапхӑрти пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен В. Станъялӑн «Остерские встречи», Н. Ивановӑн «Трудные годы», М. Ижевӑн «По памятным местам Украины» статйисенче те («Советская Чувашия» хаҫатӑн 1979 ҫулхи июлӗн 29-мӗшӗпе августӑн 12-мӗшӗнче тата 1969 ҫулхи октябрӗн 29-мӗшӗнче тухнӑ номерӗсем) аван ҫутатса панӑ. Ҫавӑн ҫинченех 1969 ҫулхи ноябрӗн 16-мӗшӗнче «Правда Украины»

хаçатра Ю. Збанацкий писатель «Он наводил страницы дружбы» ятлă пысак статья пичетлесе кăларнă. «Хăйĕн кĕске, анчах тĕлĕнмелле çутă пурнăçĕн юлашки çулĕсене вăл Украинăра пурăнса ирттернĕ,— тенĕ вăл.— Чи малтанах чир ăна Евпаторие, çамрăк Совет çĕршывĕ уçнă пĕрремĕш санаторие, илсе пынă. Унтан — Киеври художество училищинче вĕренни тата — каллех Киевра — çар службинче тăни. Юлашкинчен вара — Чернигов çĕрĕнчи Остер. Чăваш поэчĕ кунта шанчăклă туссем тупать. Кунтах вăл, вилмеллех чирлĕскер, юлашки сăввисене çырать, выçăпа асапланакан Атăл тăрăхĕ валли тырă пуçтарса ăсатас тесе канăç курмасăр кĕрешет».

Çапла, Чернигов çĕрĕнче поэт чăннипех те питĕ лайăх туссем тупнă. Ф. Пакрышень çырнă тăрăх, Çеçпĕле «унăн ăсĕпе пролетарилле таса чунĕшĕн, тӳрĕ кăмăллă, принциплă, оперативлă пулнăшăн» пурте юратнă. Остер уесĕн çĕрĕç пайне ĕçе вырнаçсан, вăл уесри ялсенче Совет влаçне çирĕплетессишĕн, Атăл тăрăхĕнчи тата тăван Чăваш çĕршывĕнчи выçăпа асапланакан халăх валли тырă ăсатассине йĕркелессишĕн, выçлăхран таракансене апатçимĕçпе пулăшса, вĕсене ĕçе вырнаçтарассишĕн ырмиканми тăрăшнă.

Канăç курми ĕçленĕ хушăрах Çеçпĕл Мишши çырма та вăхăт тупнă, украин литератури классикĕсене вуланă, Т. Шевченко произведенийĕсене чăвашла куçарнă. Паллă украин поэчĕ Павло Тычина сăмахĕсемпе килĕшмесĕр тăма çук. «Пирĕн украин халăхĕ çыхăнман пĕр халăх та çук пулĕ. Сăмахран, чăвашсемпе пире çулăмлă чăваш поэчĕпе кĕрешӳçĕ Çеçпĕл Мишшин революцилле ĕçĕ-хĕлĕ çывăх тăванлаштарать. Вăл Октябрь хыççăнхи çулсенче украин халăхĕн телейĕпе ирĕклĕхĕшĕн çапăçнă...»

Çеçпĕл чăвашпа украин халăхĕсем хушшинчи туслăх кĕперне чи малтан хываканĕсенчен пĕри пулнă. «Хăй чунĕпе çулăмлă чĕрин пĕр пайне вăл Украинăна панă»,—тесе çырнă ун пирки «Çеçпĕл» роман авторĕ Ю. Збанацкий. Украинăра чăваш поэтне ĕмĕр асăнса пурăнма, чăваш литературипе Çеçпĕл поэзине тишкерес тата пропагандăлас енĕпе пайтах тунă. Çав ĕçе чылай украин писателĕсем хастарлăн хутшăннă, хутшăнаççĕ те.

Остер хулинче Çеçпĕл Мишши урамĕ, ун ячĕпе хисепленекен клуб, библиотека, вăтам шкул пур. Вырăнти краеведени музейĕнче ун пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен ятарласа стендсем йĕркеленĕ. Çеçпел кунĕсенче кунта кашни çулах украинпа чăваш писателĕсем, пирĕн республикăри пионерсемпе шкул ачисем килсе каяççĕ, вĕсемпе

пĕрле кашнинчех Çеçпĕл талантне чунтан хисеплекен Ю. Збанацкий, Б. Степанюк, О. Ющенко, С. Репьях т. ыт. украин писателĕсем те пулаççĕ.

Асăннă тусăмăрсем пуçарнипе тата тӳреммĕн хутшăннипе Çеçпĕл Мишшипе ытти чăваш писателĕсен произведенийĕсене украинла куçарас тĕлĕшпе чăннипех те пысăк ĕç тăваççĕ. 1952 çулта, сăмахран, Çеçпĕлĕн «Хурçă шанчăк» сăвă кĕнекине украинла кăларнă, унти сăвăсене П. Тычина, М. Бажан, М. Рыльский, А. Малышко, О. Гончар тата ытти пĕтĕм çĕршыв пĕлекен паллă поэтсем куçарнă. 1969 çулта Çеçпĕлĕн суйласа илнĕ произведенийĕсен кĕнеки «Çĕн Кун аки» ятпа украинла тухнă, ăна «Çеçпĕл Украинăпа калаçни» поэма авторĕ Б. Степанюк поэт хатĕрленĕ, умсăмахне Лариса Кураколова литературовед çырнă. Çавăн пекех чăваш литератури классикĕ К. Ивановăн «Нарспи» поэми, П. Хусанкайăн «Салам, Украина» сăвă кĕнеки, Л. Агаковăн «Салтак ачисем», А. Талвирăн «Пăва çулĕ çинче» повеçĕсем, Г. Харлампьевăн ачасем валли çырнă «Пĕчĕк юмахсем», «Чăваш писателĕсен калавĕсем», «Чăваш халăх юмахĕсем» кĕнекесем, Юхма Мишшин уйрăм калавĕсем, А. Галкин, Г. Ефимов, Ю. Сементер, П. Афанасьев, Г. Орлов тата ытти чăваш поэчĕсен хăшпĕр сăввисем те украинла çапăнса тухнă. 1980 çулта украинпа чăваш поэчĕсем Çеçпĕл çинчен çырнă сăвăсене пĕрле пухса «Венок Сеспелю» ятпа уйрăм кĕнеке туса кăларни те хăйне евĕр пысăк ĕç. Унăн умсăмахне Çеçпĕл премийĕн лауреачĕ Ю. Збанацкий çырнă, кĕнекине Б. Степанюк поэт пичете хатĕрленĕ.

Украин писателĕсен произведенийĕсене те чăвашла сахал куçарман. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисен ячĕсене çеç асăнатăп: «Украин калавĕсем», «Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле», М. Коцюбинскин «Фата моргана», М. Стельмахăн «Чăнлăхпа ултав», О. Гончарăн «Ялавçăсем» романĕсем, Ю. Збанацкин «Кăйкăр вăрманĕн вăрттăнлăхĕ» повеçĕпе нумай калавĕсем, Т. Шевченко, П. Тычина, М. Бажан, М. Рыльский, Б. Степанюк, С. Репьях, О. Ющенко тата ытти поэтсен поэмисемпе сăввисем. Виççĕмĕш хут ĕнтĕ уйрăм кĕнекепе тухрĕ Т. Шевченко «Кобзарĕ». Унăн «Назар Стодоля» пьеси темиçе çул умлă-хыçлă К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи драма театрĕн сцени çинчен анмарĕ. Çав театртах чăваш куракансем И. Франкон «Вăрланă телей», А. Корнейчукăн «Платон Кречет», В. Собкон «Уçă çил», А. Коломицăн «Тискер Ангел» тата ытти пьесăсем тăрăх лартса пана спектакльсене юратсахапăлласа пăхрĕç.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче украинпа чăваш литератури-пе искусстви ĕçченĕсем тăтăшах пĕр-пĕрин съезчĕсенче пулма тытăнчĕç, пĕр-пĕрин патĕнче литературăпа искусство кунĕсем ирттереççĕ, хаçатсемпе журналсенче Украинăпа Чăваш республикин экономикипе культура аталанăвĕн çитĕнĕвĕсемпе паллаштаракан интереслĕ статьясемпе очерксем пичетленеççĕ.

Чăвашпа украин литературисен çыхăнăвĕсене аталантарас енĕпе юлашки çулсенче паллă украин писателĕ, Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ Совет Союзĕн Геройĕ Юрий Олиферович Збанацкий уйрăмах питĕ нумай тăрăшрĕ. Чылай романсен, повеçсемпе калавсен авторне — Чăваш республикинче ăна илемлĕ произведенийĕсемпе пĕрлех вăл писательсен съезчĕсене, творчество каçĕсене активлăн хутшăннинчен те, предприятисенчи, колхозсемпе совхозсенчи, шкулсемпе аслă шкулсенчи вулакансемпе час-часах тĕл пулнинчен те аван пĕлеççĕ.

Ю. Збанацкий пултарулăхĕнче Çеçпĕлĕн обществăпа политика тата литература ĕçне тĕпчесси тата пропагандăласси пысăк вырăн йышăнать. Вăл Тăван çĕршывăн аслă вăрçичченех чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пысăк произведени çырас пирки ĕмĕтленсе шухăшланă. «Çеçпĕл» роман авторĕ хăй те ача чухне хресчен митингĕсенче украин çыннисене Атăл тăрăхĕнчи выçăпа аптракан халăха пулăшма чĕнниие пĕрре мар илтнĕ. Чăваш поэчĕн пурнăçĕпе ĕçĕсене тарăннăн тĕпчесе тишкернĕ май вара 1961 çулта Ю. Збанацкий ун çинчен роман çырса пĕтернĕ, ăна А. Алга 1963 çулта чăвашла куçарса пичетлерĕ. 1982 çулта çак паха произведени иккĕмĕш хут чăвашла çапăнса тухрĕ.

«Çеçпĕл» романра поэт-коммунистăн пуян та илемлĕ чун-чĕрипе шухăш-кăмăлне тарăннăн та хумханмалла сăнласа кăтартнă. Автор унта чăваш поэчĕ, Аслă Октябре çав тери савăнса кĕтсе илни, çамрăк Совет республикине çирĕплетес ĕçе хастарлăн хутшăнни çинчен пысăк хавхаланупа çырать. Романра Çеçпĕл Мишши 1919 çулхи январь уйăхĕнче Мускава пропагандистсен курсне вĕренме кайнине, унта В. И. Ленина курнине тата ун сăмахне чуна хывса итленине асра юлмалла кăтартса панă. Аслă çулпуçăмăрăн сăнарĕ поэт асне ĕмĕр манайми тарăн кĕрсе юлнă.

Кĕнекере 1920 çулхи июнь уйăхĕнче Хусанта РКСМ чăваш секцийĕсен, ячейкисемпе чăваш çамрăкĕсен активисчĕсен Пĕтĕм Российăри I съездне пухас тата ăна ирт-

терес ĕçе Çеçпĕл Мишши мĕн тери хавхаланса хутшăннине питĕ витĕмлĕ сăнласа панă. «Канаш» хаçатăн çав çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче тухнă «Сăвă çырассипе ударени правилисем» ятлă программăллă статйинче поэт чăваш совет поэзине малалла аталантармалли çул-йĕр пирки хăюллă сăмах тапратнă. «Революци пурнăçа пур енчен те çĕнĕ сывлăш, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртрĕ,— тесе çырнă вăл унта.— Пур çĕрте те чĕрĕлĕх. Чăваш кунçулне çутатмашкăн, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртмешкĕн чăваш поэзийĕ чĕрĕле пуçларĕ... Ку ĕç пирĕн Чăваш çĕршывĕшĕн—çĕнĕ ĕç. Çул шырас пулать. Тĕрĕс çул тупас пулать...»

1920 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Совет правительствин В. И. Ленинпа М. И. Калинин алă пуснă декречĕпе Чăваш автономи облаçне туса хунă. Çавăн хыççăн кĕçех Çеçпĕл Шупашкара килет, малтанах комсомол область комитетĕнче, унтан революци трибуналĕн председателĕнче тата облаçри юстици пайĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. Кирек хăçан та вăл тӳрĕ те таса чунлă, çирĕп те хастар кăмăллă, Совет влаçĕн тăшманĕсемпе ялан ним шиксĕррĕн те хăюллăн кĕрешет, пур çĕрте те, кирек хăш ĕçре те хăй ĕçсынни массисен интересĕсене пĕтĕм чун хавалĕпе парăннине кăтартса парать. Шăпах çапла куратпăр та эпир ăна Ю. Збанацкий романĕнче.

Писатель Çеçпĕлĕн «Çĕн Кун аки», «Хурçă шанчăк», «Тинĕсе», çавăн пекех вăл çĕнĕ пурнăç çине, Октябрь хăватлă çунат панă халăхăн ĕçĕпе кĕрешĕвĕ çине мĕнле пăхнине кăтартакан ытти сăввисем мĕнле çуралнине те ĕненмелле сăнлать, поэт пултарулăхĕн обществăри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ пирки шухăша каять, халăхсен туслăхне мухтав юрри шăрататать.

Киеври А. Довженко ячĕпе хисепленекен илемлĕ фильмсен киностудийĕ Ю. Збанацкий сценарийĕ тăрăх 1970 çулта Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе паттăр ĕçĕ-хĕлĕ çинчен илемлĕ фильм туса кăларнăшăн эпир тивĕçлипех савăнатпăр. Çавăн чухне пирĕн республикăна Киеври кинематографистсемпе артистсен пысăк ушкăнĕ килнĕччĕ. Вĕсемпе пĕрле киносценарист та пулчĕ, вăл поэтăн ватă амăшĕпе Агафия Николаевнăпа та килĕнче курса калаçрĕ. Çеçпĕл çуралса ӳснĕ Касаккасси çыннисем украин тусне тулли кăмăлпа хавасланса кĕтсе илчĕç. Клубра та колхозниксен килĕсенче те сехечĕ-сехечĕпе чунтан килнĕ ăшă калаçусем пычĕç.

Украина ССРĕпе Чăваш АССРĕн литературăпа искусство деятелĕсем хушшинчи творчествăлла çыхăнусене аталантарас енĕпе нумай енлĕ те ăнăçлă ĕçленĕшĕн, «Çеç-

пел» романпа илемлӗ фильм сценарийӗшӗн КПСС Чӑваш обком бюровӗн, Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗпе Министрсен Совечӗн 1971 çулхи январь уйӑхӗнчи постановленийӗпе Ю. О. Збанацкие Чӑваш АССР Ӗç Мухтавӗпе Паттӑрлӑхӑн Хисеп Кӗнекине кӗртнӗ.

Юлашки çулсенче вӑл чӑваш писателӗсемпе Чернигов писателӗсен, кунти Ивановка ялӗнчи сакӑр çул вӗренмелли шкул ачисемпе Канаш районӗнчи Çеçпӗл ялӗнчи ватам шкулта вӗренекенсен туслӑ çыхӑнӑвӗсене йӗркелесе яма нумай вӑй хучӗ. Украина тата чӑваш писателӗсемпе пӗрле эпӗ хам та Ивановка шкулӗнче пӗрре мар пулнӑ, халӗ те кунти «Пролисок» (Çеçпӗл) литература кружокӗпе çыхӑну тытатӑп. Калас пулать, çак шкулта Чӑваш республикин экономикипе культура çитӗнӗвӗсене тӑрӑшса пропагандӑлаççӗ. Кружок членӗсем чӑваш писателӗсен чылай произведенийӗсене аван пӗлеççӗ. Вӗсем кунта ятарласах СССРти халӑхсен туслӑхӗн кабинетне йӗркеленӗ, унта чӑваш писателӗсемпе ученӑйсен нумай кӗнекине курма пулать. Шкулта кашни çул ирттерекен илемлӗ литература каçӗсенче Çеçпӗл Мишшипе ытти чӑваш поэчӗсен сӑввисем украин чӗлхипе çепӗççӗн юхса янӑраççӗ.

Чӑвашпа украина писателӗсен литература çыхӑнӑвӗсене аталантарас тӗлӗшпе Чернигов облаçӗнчи писательсен организацийӗ ӑна ертсе пыракан Станислав Репьях поэтпа пӗрле çине тӑрса ӗçлет. С. Репьях чӑваш поэчӗсен чылай сӑввисене украинла куçарса «Днипро», «Витчизна», «Жовтень», «Донбасс» журналсенче тата уйрӑм кӗнекесенче çапса кӑларчӗ. Облаçри «Деснянска правда» хаçатра Чернигов писателӗсем Чӑваш республики, Çеçпӗл Мишшипе хальхи чӑваш çыравçисем пирки час-часах очерксемпе статьясем пичетлеççӗ. 1977 султан пуçласа Чернигов облаçӗнче кашни çул чӑваш литератури, Чӑваш республикинче украин литератури кунӗсем ирттересси йӑлана кӗнӗ. Çавӑн пек организацилле-творчествӑлла ӗç икӗ социализмлӑ культурӑна пӗр-пӗринпе çывӑхлатса пуянлатма сиплӗ витӗм кӳрсе тӑрать.

1982 çулхи декабрӗн 5-мӗшӗнче «Советская Чувашия» хаçатра С. Репьях чӑваш поэчӗ Ю. Сементер патне янӑ çыру пичетленсе тухрӗ. Унта çапла çырнӑ: «Константин Ивановӑн «Нарспийӗ», Петӗр Хусанкайӑн, Ухсай Яккӑвӗн, Стихван Шавлин, Василий Давыдов-Анатрин, Александр Кӑлканӑн тата вӗсемпе сан урлӑ паллашнӑ çамрӑк чӑваш поэчӗсен пысӑк ушкӑнӗн илемлӗ сӑввисем ман чунах кӗрсе вырнаçнӑ... Андриян Николаевпа Павел

Попович тĕнче уçлăхĕнче перле вĕçни çинчен шăпах эсĕ хӳхĕм сăвă çырни мана хытă савăнтарать. Эпĕ ăна украинла куçарса пичетлерĕм, нумай пулмасть пĕр ял клубĕнче украин хĕрĕ концертра хавхаланса вуласа панине илтрĕм те калама çук хĕпĕртерĕм». Украинпа чăваш литературипе искусствин творчествăлла çыхăнăвĕсене аталантарса пырас енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн С. Репьяха 1983 çулта Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне панă.

Малалла вăл хăйĕн çырăвĕнче Чернигов çĕрĕнче чăваш сăмахне пропагандăлакансен пысăк ушкăнĕ ĕçлени çинчен хыпарлать. Тĕпрен илсен, вĕсем çамрăк литераторсем — Александр Олейник, Яков Ковалец, Дмитрий Иванов, Анатолий Шкулипа, Владимир Сапон, Михаил Кушниренко. «Деснянска правда» хаçатра вĕсем Чăваш çĕршывĕ çинчен тата Çеçпĕл пултарулăхĕ пирки çырнă очерксемпе статьясем, хальхи чăваш литературинчен украинла куçарнă сăвăсемпе калавсем час-часах пичетленеççĕ.

Пирĕн критиксемпе литературоведсем те чăвашпа украин литературисен çыхăнăвĕсем çинчен чылай çырчĕç. Çав çулсем хушшинче В. Канюковăн «Чăвашпа украин халăхĕсен литература çыхăнăвĕсем», И. Кузнецовăн «Аслă кобзарь Тарас Шевченко Чăваш çĕрĕнче», П. Хусанкайăн «Павло Тычина», Ю. Сементерĕн «Туслăхăн аслă вăйĕ», «Пирĕн кобзарь», С. Шавлин «Туслăх кĕперĕ», Н. Ивановăн «Хавхалану» тата ытти очерксемпе статйисем те паллă вырăн йышăнаççĕ, çав çыхănусем çултанçул чечекленсе пынине витĕмлĕн кăтартса параççĕ.

Совет влаçĕн чи малтанхи тапхăрĕнчех Çеçпĕл Мишшинчен пуçланнă пирĕн туслăх ашкăрса аталанса, чăвашпа украин литературисен çыхăну формисем сарăлсах пыраççĕ. Пирĕн паллă поэтсем Павло Тычинăпа Петĕр Хусанкай акă 1933 çултанпах питĕ туслă пурăннă. Чăваш сăвăçи Тычина сăввисене, Тычина Хусанкайăнне тăван чĕлхисемпе куçарнă. Чăвашпа украин литературисен творчествăлла çыхăнăвĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн П. Тычинăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. П. Хусанкая хăй темиçе хутчен те пулса Украина çинчен илемлĕ сăвăсем шăрантарнă Донецк облаçĕнчи Артемовск районне кĕрекен Т. Шевченко колхозĕн хисеплĕ колхозникне суйланă.

Украина, унăн ĕçчен халăхĕ, литературипе искусствин талантлă çыннисем çинчен Петĕр Хусанкай сахал мар хавхаланулла сăвăсем шăрантарчĕ. Чăваш критикĕ тата

литературовечĕ В. Канюков чăваш литературипе украин литератури пĕр-пĕринпе туслăн хутшăнса аталанас ĕçре Хусанкай Çеçпĕл традицийĕсене тытса пырать тесе шухăшлатчĕ. «Поэт украин халăхĕшĕн, унăн культуришĕн тулли кăмăлпа хĕпĕртесе савăнать: унăн тĕпсĕр таран пуянлăхĕ çĕршыври халăхсен культурине чечеклентерес ĕçшĕн пархатарлăн çиçсе çутатать»,— тесе çырнăччĕ вăл.

Т. Шевченкăна пытарнă Канев хулине çитсе курнă хыççăн чăваш поэчĕ 1955 çулта «Тарас сăрчĕ çинче» ятлă пысăк статья пичетлесе кăларчĕ, унта çапла çырни пур: «Фашистсем иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче Шевченко палăкне вунçичĕ тĕлтен амантнă, поэтăн тăнлавĕпе хулпуççине те пуля шăтарнă. Анчах вăл пурăнать, пурăнĕ, ĕмĕр-ĕмĕр кĕрешĕ».

П. Хусанкай Т. Шевченко, П. Тычина тата хальхи украин поэчĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас енĕпе пайтах вăй хурса тăрăшрĕ. Т. Шевченко çырнисенчен вăл «Халал», «Гоголе», «Шухăшăмçăм шухăш», П. Тычинăн «Парти пирĕн çулпуç», «Пĕр килйышлă йышра», «Пăлхар халăхне», М. Рыльскин «Чăваш тĕрĕçисене», Б. Степанюкăн Çеçпĕл çинчен çырнă «Чăваш юрăçи» тата ытти чылай сăввисене хамăр чĕлхепе куçарнă.

Вăл П. Тычина таланчĕ хăйĕн пултарулăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен пĕрре мар çырнă, ахаль чухне те час-часах калатчĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче Украина çĕрне салтак аттипе утса тухнă П. Хусанкай аслă украин поэчĕн чĕнӳллĕ хаяр сассине ăша хывнă, вăл унта садсемпе музейсем вут-çулăмра çуннине курнă, çапах та çирĕп шаннă:

> Анчах пнхăçан вилес çук Украина,
> Юрри пĕтмĕ ун ĕмĕрте.

Хăйĕн украин тусĕ çинчен П. Хусанкай тулса тăкăнакан ăшă туйăмпа хавхаланса çырнă: «Павло Тычина мораль тĕлĕшпе чылайранпа маншăн искусствăпа пурнăçри авторитет пулса тăрать. Эпĕ тахçанах ун сăввисене чăвашла куçарасшăнччĕ, çак ĕçе кайрантан кайрана хăварса пынă май ялан хам тĕрĕс мар тунине туяттăмччĕ. Халĕ ак Тычинăпа ытти поэтсем Çеçпĕл сăввисене украинла куçарнă хыççăн, чăваш поэчĕсем Украина умĕнче пысăк парăма кĕчĕç. Эпир çине тăрсах аслă кобзарь юррисемпе украин совет поэчĕсен сăввисене чăвашла пичетлеме тивĕçлĕ. Вăй çитнĕ таран пуринчен малтан ман хамăн чи юратнă Павло Тычина сассине чăваш вулаканĕсем патне çитерес килет».

Статйисенче те, сăввисемпе сăмахĕсенче те П. Хусанкай П. Тычинăн «Пĕр килйышлă йышра» сăвви нумай нацилле пĕтĕм совет поэзийĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине пĕрре кăна мар асăннă. Миршĕн кĕрешекенсен Мускаври пулса иртнĕ Пĕтĕм Союзри Виççĕмĕш конференцийĕнче, 1951 çулхи ноябрь уйăхĕнче, вăл çавнах калană: «Пĕр килйышлă йыш туйăмĕ, Украина çĕрĕн паллă поэчĕ Павло Тычина тĕп-тĕрĕс палăртнă пек каласан, пирĕн социализмлă нацисен культурине витĕр витерсе тăрать... Пĕр килйышлă йыш туйăмĕ ахаль çыннăн, çĕр ĕçченĕн—пĕтĕм пурлăхпа ăс-хакăл пуянлăхне тăвакан чăн-чăн хуçан чун-чĕрине ăшăтмасăр пултараймасть».

Чăвашпа украин литературисем хушшинчи творчествăлла çыхăнусене сарса-çирĕплетсе пырасси çинчен П. Хусанкай «Тарас сăрчĕ çинче», «Пĕве татакан», «Пирĕн чĕресем Каневра», «Мĕльюн чĕре», «Поэт суранĕсем» статйисенче, нумай-нумай сăввисенче çырнă. М. Рыльские халаллана «Песня—Украине» ятлă вырăсла сăввинче вăл хăй Украинăна тăванла ăшă туйăмпа юратнине çак сăмахсемпе пĕлтерет:

Передай салам чувашский
Украине нашей братской.
Передай, что помню я
И привет ее и ласки.

М. Рыльский, П. Хусанкай сăввипе пĕрле чăваш тĕрĕçисен парнине илсен, украинпа чăваш халăхĕсен çывăх туслăхĕ çинчен «Чăваш тĕрĕçисене» ят панă сăвăлласа çырнă саламлă çыру ярать.

Друг друга мы поймем, свободные народы,
Хоть непривычен звук иноязычных слов...—

тет вăл унта чун-чĕререн хавхаланса.

Киев хулинче ĕçлесе пурăнакан чăваш художникĕ тата писателĕ П. Чичканов çинчен те ырă сăмах каламаллах. «Вăл,— тесе çырнă ун пирки П. Хусанкай,— Украинăпа Чăваш çĕршывĕсем хушшинче Çеçпĕл хывнă туслăх кĕперне çирĕплетме пулăшрĕ, халĕ те хастаррăн пулăшать». Украин чĕлхине лайăх пĕлнĕ май П. Чичканов хаçат-журналсенче чăвашпа украин халăхĕсен культура çыхăнăвĕсем çинчен сахал мар статья пичетлесе кăларчĕ. «Сирĕн Украинăри полпред»,— çапла каларĕç мана украин туссем унпа тĕл пулнă чух ăшшăн кулса.

Петр Чичканов Т. Шевченко, И. Котляревский, П. Тычина, П. Панч, В. Кучер тата ытти паллă украин писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас енĕпе сахал мар тимлерĕ. Çеçпĕл Мишши сăввисемпе чăваш писателĕсен калавĕсене украинла пичетлесе кăларма та нумай тăрăшрĕ. Вăл художник майĕпе чылай вăхăт Çеçпĕлĕн илемлĕ портречĕпе ĕçлерĕ, поэтăн Украинăри пурнăçĕпе ĕçĕхĕлĕ çинчен «Кăвар чĕре» роман-хроника çырса пичетлерĕ, «Çеçпĕл» кинофильма экран çине кăларас ĕçе те тимлесе хутшăнчĕ. Унăн обществăлла тата илемлĕ литературăри ĕçĕсене тивĕçлипе пахаласа, ăна икĕ хутчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă, 1969 çулта «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ» хисеплĕ ят панă.

Эпир чăваш писателĕсен нумай произведенийĕсенче украин çыннисен витĕмлĕ сăнарĕсене—Тăван çĕршыв патриочĕсене, халăхсен телейĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешес ĕçри шанчăклă туссене куратпăр. Хăшпĕр тĕслĕхсене çеç аса илĕпĕр.

С. Асланăн «Аслати» повеçĕнче, сăмахран, тĕрлĕ нацирен тухнă, Тăван çĕршыв чысĕпе ирĕклĕхĕшĕн пĕр пĕтĕм идейи пĕтĕçтернĕ совет çыннисем хушшинче Призантинпа Комков чăваш салтакĕсем, Оксанăпа унăн ашшĕ Станислав тата ытти украин партизанĕсем фашистла оккупантсене хирĕç паттăррăн çапăçнине, вĕсем ирсĕр сутăнчăксене пĕрешкел хаярран кураймасăр ним шелсĕр пĕтере-пĕтере тăкнине куратпăр.

С. Шавли Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче украин пионерĕ Коля Лещукăн фашистсем Киева оккупациленĕ тапхăрти паттăр ĕçĕсене сăнлакан «Киев пионерĕ» ятлă поэма çырчĕ. «Маттур Якур» поэминче вăл совет çыннисен тылри хастар ĕçне кăтартса парать. Поэмăри тĕп геройсем хушшинче автор чăвашпа украин ачисене — Якурпа Остапа—асра юлмалла витĕмлĕ сăнарлама пултарнă. Вĕсем чи çывăх тăвансем пек туслă пурăнаççĕ, ĕçре те, вăйăсенче те ялан пĕрле, хăйсен хастар ĕçĕпе мăнтисемпе танах фронта пулăшаççĕ.

И. Максимов-Кошкинскин «Сенкер двойка» пьесинче чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Орлов вăрçăри тусĕсемпе — Бутенкопа Милостивенко украинсемпе, Стрельцов вырăспа, Мухамедзянов тутарпа пĕрле фашистсене хирĕç чăн-чăн паттăррăн çапăçнине кăтартса панă.

К. Турхан «Йăмраллă ял» романĕнче Чăваш çĕршывне Винница патĕнчен эвакуаципе килнĕ украин хĕрарăмĕ

Анна Петренкăпа унăн хĕрĕ Людмила комсомолка вăрçă çулĕсенче чăваш колхозĕнче пуçаруллă ĕçленине пысăк асталăхпа сăнласа кăтартнă.

Икĕ халăх туслăхĕн теми Г. Красновăн «Кĕвĕçекене кĕве çиет», Юхма Мишшин «Асамлă хĕç», А. Артемьевăн «Ан авăн, шĕшкĕ» прозăлла произведенийĕсенче, Я. Ухсай, П. Афанасьев, Энтип Ваççи, Ю. Айдаш, М. Сениэль, Г. Ефимов, А. Галкин, Ю. Сементер, В. Давыдов-Анатри, Г. Орлов сăввисемпе поэмисенче, Н. Терентьев, Г. Харлампьев, А. Васильев тата ытти драматургсен пьесисенче те тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ.

Çавăн пекех украин писателĕсен произведенийĕсенче те чăваш çыннисен витĕмлĕ сăнарĕсене чылай курма пулать. Вĕсем чи малтанах Ю. Збанацкин «Çеçпĕл» романĕнчи, Б. Степанюкăн «Çеçпĕл Украинăпа калаçни» поэминчи, В. Ладогăн «Мишша «Кобзаре» вулать» сăввинчи тата ытти произведенисенчи Çеçпĕл Мишши сăнарĕ.

Б. Степанюк темиçе çул ĕнтĕ Çеçпĕл пурнăçĕпе ĕç-хĕлне тĕпчет, ун çинчен статьясемпе сăвăсем çырать. Унăн чылай сăввисемпе легендисем, çавăн пекех «Çеçпĕл Украинăпа калаçни» поэми те Чăваш кĕнеке издательстви 1982 çулта чăвашла кăларнă «Днепр саламĕ» кĕнекене кĕнĕ. Асăннă поэмăра çуралнă çĕршывĕ хăватлăн вăй илсе чечекленесси çинчен ĕмĕтленсе шухăшлакан кăвар чĕреллĕ, хăюллă та хастар Çеçпĕл Мишши сăнарĕ витĕмлĕн тухса тăрать. Поэт çав произведенирех Çеçпĕлпе украин поэчĕ Ф. Пакрышень хушшинчи хĕрӳллĕ туслăха та хумханмалла сăнласа кăтартнă.

Паллă украин писателĕ В. Канивец çырнă «Ульяновсем» историллĕ романăн уйрăм сыпăкĕсене А. Артемьев чăвашла куçарса пичетлерĕ. Çав паха произведенире Ульяновсен килйышĕн тусне, чăваш халăхĕн аслă просветительне И. Я. Яковлева чуна тытса илмелле ăшшăн сăнласа кăтартнă. Автор вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçассишĕн ырми-канми тăрăшнине çак йывăр ĕçре ăна халăх училищисен инспекторĕ, В. И. Ленин ашшĕ И. Н. Ульянов пур майпа та пулăшса пынине пурнăçра пулнă фактсемпе усă курса тарăннăн çутатса панă.

Çеçпĕл Мишшин чăвашпа украин литературисен çыхăнăвĕсене аталантарас ĕçри пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Унăн поэзийĕпе обществăлла ĕçĕ-хĕлĕ чăвашпа украин писателĕсем творчество енĕпе пĕр-пĕринпе туслăн ĕçлессин никĕсне хывнă, çав туслăх, литература ĕçченĕсен çĕнĕрен çĕнĕ ăрăвĕсене хавхалантарса, çултан-çул сарăлса та çирĕпленсе пырать. П. Хусанкай «Пирĕн Çеçпĕл Мишши»

сăввинче çырнă пекех, Çеçпĕл ялан пирĕнпе, ăна халăх нихăçан та манмасть:

Вăл чăваш чĕлхине юмахри Данко евĕр
Çунакан чĕрипе çутатса
Çул кăтартнă; вăл шаннă пĕр иккĕленмесĕр
Çĕн чăваш тĕнчене тухасса.
Вăл куран Интернационалăн кĕперĕ,
Пур йăхпа та пире тан туса,
Шухăшпа виçейми тӳпене халь çĕклерĕ
Пирĕн ирĕклĕ, харсăр ăса.

Çеçпĕл Мишши чи чухăн чăваш хресченĕсем хушшинчен тухса Совет влаçĕ вăхăтĕнче поэзи культурин çӳллĕ тӳпине çĕкленнĕ, чăвашпа украин халăхĕсем хушшинчи туслăх кĕперне хывнă. Унăн пархатарлă пурнăçĕпе хăватлă творчествине Октябрьти социализмлă аслă революци çунатлантарнă, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн ленинла наци политики пирĕн çĕршыври ĕççыннисене панă вĕçĕ-хĕррисĕр нумай ырлăхсен паха тĕслĕхĕ пулса тăрать.

*1986*

## ХАЛĂХĂН МУХТАВЛĂ ЫВĂЛĔ

*(Петĕр Хусанкай кунçулĕнчен)*

### 1. Самана салтакĕ эпĕ...

Петĕр Хусанкай (1907—1970) хăйĕн пурнăçне ырмиканми ĕçре, хĕрӳллĕ кĕрешӳре ирттерчĕ, тăван халăха асран тухми чаплă произведенисем парнелерĕ. Вăл яланах партипе халăх ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне парса ĕçлерĕ. Хăйĕн чи лайăх произведенийĕсенче талантлă поэт Тăван çĕршыв çинчен, Ленин партийĕ çинчен, халăхсен нихçан арканми туслăхĕ çинчен хавхаланса çырчĕ, вĕсенче вăл совет çыннисене коммунизмшăн кĕрешме чĕнчĕ. Хулара е ялта вулакансемпе тĕл пулсан, пĕтĕм чун хавалĕпе хĕпĕртесе, П. Хусанкай «Эп—Советлă Союз гражданинĕ!» сăввине вулама юрататчĕ. Унта çапла каланă:

Кам пулсан та — сухаçă, шахтер е салтак,
Украинец, чăваш, армянин-и—
Манăн чыс та, мухтав та—вăл ак çак:
Эп—Советлă Союз гражданинĕ!

П. Хусанкая эпĕ хĕрĕх пилĕк çула яхăн пĕлнĕ, чылай çулсем хушши туслă-юлташлă пулнă, пĕр-пĕрин патне çырусем те нумай çӳретнĕ. Çавăнпа хаклă тусăма аса илсен, ман ума кăвар чĕреллĕ поэт-коммунист, поэт-трибун, чăваш культурин ывăнма пĕлми ĕçченĕ, илемлĕ сăмах ăсти тухса тăрать.

Аллă çул ытла тăван литературăра ĕçлесе, поэт сăвăсемпе поэмăсен, юмахсемпе статьясен кĕнекисене чылай кăларчĕ. Унăн чи малтанхи «Ирĕк тимĕрçĕ» ятлă сăвви 1924 çулта «Сунтал» (халĕ «Ялав») журналта пичетленсе тухнă. Кунта çамрăк поэт ирĕклĕ саманана мухтать, уншăн çирĕп тăма, хастар ĕçлеме чĕнет:

Хытăрах янра,
Çĕнтерӳ юрри!
Пĕтĕм çĕр тавра
Пĕттĕр мул хурри!
Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Поэт çырнă сăвăсен пĕрремĕш кĕнеки 1928 çулта «Уяртсан» ятпа çапăнса тухнă. Кунта унăн малтанхи «Çирĕм улттă» ятлă паллă поэми те пур. Çав произведенире вăл революци ĕçне чун-чĕререн парăннă Баку комиссарĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе кĕрешӳри паттăрлăхĕ çинчен калать. Поэмăна вуласан, Совет влаçĕшĕн, Англи колонизаторĕсене тата вĕсен агенчĕсене—буржуалла националистсемпе эсерсене хирĕç кĕрешнĕ большевиксен сăнарĕсем асра юлаççĕ.

Çирĕммĕш çулсен вĕçĕпе вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче П. Хусанкайăн пултарулăхĕнче пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Поэт Тăван çĕршыв тăрăх нумай çӳрет, пур тĕлте те халăх пурнăçĕ улшăнса, çĕнелсе пынине курать. Ку ĕнтĕ, паллах, унăн пултарулăхĕнче çĕнĕ темăсем çуратать. 1930 çулта вăл «Паянхи поэма», 1932 çулта «Магнитту» поэма çырса пичетлет.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçин çулĕсенче П. Хусанкай фашизма хирĕç пăшалпа та, перопа та çапăçать. Çапăçусенчи паттăрлăхшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденпа, темиçе медальпе наградăланă, вăрçăрах вăл 1943 çулта Коммунистсен партине те кĕрет.

«Таня» поэмăна кашни шкул ачиех пĕлет. Ăна поэт 1942 çулхи апрель уйăхĕнче çырса пĕтернĕ, унтан хăех вырăсла та куçарнă. Поэмăра вырăс хĕрĕ Зоя Космодемьянская комсомолка фашистсене хирĕç паттăр кĕрешнине

пысăк ăсталăхпа кăтартса панă. Çак чаплă произведени вулакансене Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пурнăça шеллемесĕр кĕрешме чĕнет.

«Аптраман тавраш» сăвăлла романра автор пысăк йышлă пĕр чăваш йăхĕн—Аптрамансен—темиçе ĕмĕрти пурнăçĕпе паллаштарать. Çак ĕçре те, кĕрешӳре те хастар çемье пурнăçĕнче халăхăн паттăрлăхĕ, çирĕплĕхĕ сулăмлăн палăрса тăрать. Аптраман траврашĕ—чăваш ĕçхалăхĕ—нихăçан та, темле йывăрлăхра та пуç усманнине кăтартса парать. Совет Çарĕн ретĕнче çапăçакан чăваш каччине—Аптраман Энтрине, çирĕп кăмăллă Натали медсестрана, унăн çапăçура пуçне хунă мăшăрне Сумпай Петĕрне поэт питĕ ăста сăнласа кăтартнă. Тăван çĕршыва вĕсем пĕтĕм чун хавалĕпе юратаççĕ.

П. Хусанкай пултарулăхĕнче халăхсен туслăхĕ çинчен çырнă произведенисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. 1930 çулта çырнă «Малашлăх маршĕ» сăвăра вăл халăхсен хушшинчи туслăх пирки çакăн пек каланă:

Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и,
Мĕнпурĕ пĕр çăлтăр айне!
Пĕтĕм Союзăмăр—ударник,
Утать социализм патне.

1948—1958 çулсенче П. Хусанкай «Тăван çĕршыв» поэма çырса кăларчĕ. Унта вăл Совет çĕршывĕнчи халăхсем пĕрпĕринпе туслă ĕçлесе пурăннине пысăк туйăмпа çырса кăтартать. Ку поэма ачасен тавракурăмне ӳстерме пулăшать, ĕçре, вĕренӳре çĕнĕ çитĕнӳсем тума вĕрентет. Çавăн пекех поэтăн «Россия» поэми те, «Вăрман юрлать» кĕнеки те, «Эпир Российăра пурăнатпăр» сăвви те. Вĕсене хумханмасăр, чун-чĕре патне илмесĕр вулама çук.

П. Хусанкайăн Аслă Ленин, Коммунистсен партийĕ çинчен çырнă произведенийĕсем чăваш литературинче уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем: «Горкăри çурт», Аслă чĕре» поэмăсем, «Ленин пирĕнпе», «Мухтав Аслă Ленина», «Ленин çулĕпе», «Памастпăр ирĕк хулана» сăвăсем.

П. Хусанкайăн аслă Ленин, Коммунистсен партийĕ вăл совет культурин ялавне тивĕçлĕн тытса çӳрерĕ. Çуралнă çĕршывне таврăнсан, совет патриотизмĕпе интернационализм идейисене халалласа чылай сăвă çырчĕ («Йнçе вĕçев», «Румынири май», «Пăлхар ярăмĕ» т. ыт. те).

Чăваш халăх поэчĕ вырăс поэзийĕпе, тăванла совет тата тĕнче литературин чи лайăх произведенийĕсемпе чăваш вулаканне паллаштарас енĕпе те нумай ĕçлерĕ. Вăл А. Пушкинăн произведенийĕсене («Евгений Онегин», «Пол-

тава», «Палăк» т. ыт. те), А. Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедине, В. Маяковскин сăввисемпе поэмине («Владимир Ильич Ленин», «Пĕтĕм сасăпа» т. ыт. те), В. Шекспиран «Ромеопа Джульетта» трагедине, Т. Шевченко, Н. Тихонов, А. Прокофьев, пăлхар, поляк, румын, чех— пурĕ 38 вырăс поэчĕн, Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсен 53 поэчĕн, чикĕ леш енчи тĕрлĕ çĕршывсенчи 89 поэтăн 500 яхăн произведенине чăвашла е вырăсла куçарса пичетлерĕ. Поэт çырнă сăвăсем, поэмăсем, статьясем 57 тĕрлĕ чĕлхепе пичетленнĕ. Вырăсла унăн 26 кĕнеке тухнă.

Юлашки çулсенче вăл Шота Руставелин «Витязь в тигровой шкуре» произведенине тӳрех грузин чĕлхинчен куçарма хатĕрленетчĕ. Анчах тытăннă ĕçе туса пĕтерейменĕ, чылай вăхăт чирлĕ выртнă хыççăн 1970 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче вăл вилчĕ.

П. Хусанкай—партипе халăхăн мухтавлă ывăлĕ, обществăпа государство деятелĕ, çамрăк çыравçăсен юратнă тусĕ тата вĕрентекенĕ нихăçан та манăçа тухас çук. Вăл çырнă произведенисем халĕ те, малашне те коммунизм ĕçĕшĕн çĕнĕ çĕнтерӳсем тума халăха хавхалантарса тăрĕç.

## II. Чăваш элчи

Петĕр Хусанкай пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен тĕпчев ĕçĕсем, статьясем, асаилӳсем сахал мар ĕнтĕ çырнă. Вĕсенче кăвар чĕреллĕ поэт-коммунистăн, поэт-трибунăн, чăваш культурин ывăнма пĕлми ĕçченĕн, государствăпа обществăн активлă деятелĕн пурнăçне нумай енчен çутатса панă. Вăл пирĕнтен уйрăлса кайрĕ пулин те, унăн сăвви-юррисем, поэмисемпе очеркĕсем тата ытти ĕççĕсем халăх чĕринче ĕмĕрлĕхех юлчĕç. Совет Союзĕнчи тата чикĕ леш енчи ĕççыннисемшĕн те вăл самана юрăçи, мир йыхравçи пулчĕ.

Халăх поэчĕн пархатарлă ĕçĕ халăхсем хушшинчи туслăха, нумай нациллĕ литературăсем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетес, анлăлатас тĕллевпе çирĕп çыхăннă. Çав тĕллеве пурнăçлас тесе, вăл нумай ĕçлерĕ. П. Хусанкай çырăвĕсене, ун çинчен çырнă асаилӳсене вуласан, çакăн пек ыйту сиксе тухать: хамăр Тăван çĕршывăн хăш кĕтесне тата мĕнле кăна урăх çĕршыва çитсе курмарĕ-ши Петр Петрович хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшĕнче?

Вăл пĕрремĕш пилĕкçуллăх тапхăрĕсенчех çул çӳреме юратнă. Хĕвеллĕ кăнтăрти, Урал таврашĕнчи, Кавказри

тата ытти çĕрсенчи малтанхи стройкăсенче, çĕнелекен ялсемпе хуласенче пулса, унти халăхсене чăваш литературипе, хăйĕн сăвви-юррисемпе паллаштарнă. Поэт курса çеç çӳремен. Тăван çĕршыв тăрăх çӳрени ăна тата та тăрăшса ĕçлеме хавхалантарнă. Çул çӳренĕ чух е киле таврăнсан, поэт курни-илтни, хăйĕн кăмăлне мĕн хумхантарни çинчен лирикăлла сăвăсем те, поэмăсем те çырать. «Бакуран «Çирĕм улттă» поэмăпа хавхаланса таврăнтăм»,— тет вăл хăйĕн «Кĕске автобиографийĕнче». Малалла çавăнтах: «1931 çулта эпĕ... Мускава куçрăм. «Коммунар» ятлă чăваш хаçатĕнче тухса çӳрекен корреспондент пулса, эпĕ нумай çĕре çитсе куртăм,—тет.— Çĕнĕрен ӳссе çитĕнекен чăваш рабочийĕсемпе паллашрăм. Горькири (Чулхулари), Магнитогорскри, Донбасри рабочисен пурнăçне пĕлме тăрăшрăм. Çав тапхăрта эпĕ «Магнитту» поэмăпа йышлă сăвăсем çыртăм». Çавăн чухне ĕнтĕ поэт-патриот халăхсен туслăхĕ çинчен «Малашлăх маршĕ» ятлă сăвă çырать. Унта вăл ирĕке тухнă халăха тĕреклĕ, туслă пулма, ударлă ĕçре чысне ӳстерсех пыма чĕнет.

Ăçта кайсан та, ăçта çитсен те П. Хусанкай халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕллевпе нумай ĕçленĕ. Вăл тăванла халăхсене чăваш литературин паха тĕслĕхĕсемпе паллаштарас тесе нумай вăй хунă, Н. Шелепин, Çеçпĕл Мишшин, Митта Ваçлейĕн, Ухсай Яккăвĕн, А. Алган, С. Элкерĕн, Иван Ивникĕн, И. Тукташăн тата ыттисен произведенийĕсене вырăсла куçарнă.

Эпĕ халĕ П. Хусанкай нумай нациллĕ литературăсем хушшинчи çыхăнусене вăйлатас енĕпе мĕнле ĕçлени çинчен кĕскен те пулин каласа парасшăн.

Карели поэчĕ А. Тимонен П. Хусанкай çинчен çапла çырнă:« Сăнран лăпкă та шухăшлă Петĕр Хусанкай—питĕ канăçсăр çын. Вăл çур тĕнче тавра çаврăннă: çуран утнă, тĕвепе, ашакпа, автомашинăпа, поездпа çӳренĕ, самолетпа вĕçнĕ. Вăл хăйĕн куçĕпе Вăтам Азие, Кавказа, Украинăна, Латвие, Польшăна, Румыние, Чехословакие, Кубăна, Болгарие курнă... Ăçта кăна çӳремен-тĕр вăл, мĕнле çĕршыв çинчен кăна сăвă хывман-тăр»,—тенĕ.

П. Хусанкай уйрăмах Болгарие кайса çӳреме юрататчĕ, ăна унта тăван вырăнне хурса йышăнатчĕç. «Совет элчи, чăваш элчи»,—тетчĕç пăлхар писателĕсем пирĕн мухтавлă сăвăçа юратса. Вăл нумай тăрăшнипе пăлхарпа чăваш культура деятелĕсем хушшинчи туслăх куллен-кун аталанса пычĕ. Болгарире К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмине, Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр», А. Талвирĕн «Пăва çулĕ çинче» романĕсене, П. Хусанкайăн суйласа илнĕ кĕнеки-

не, Çеçпĕл Мишшин, Ухсай Яккăвĕн, А. Алган, Стихван Шавлин тата ытти чаваш писателĕсен произведенийĕсене пичетлесе кăларчĕç, халĕ те хаçатсемпе журналсенче сăвăсемпе калавсем тăтăшах пичетленеççĕ.

Пирĕн республикăра тĕрлĕ вăхăтра П. Хусанкай чĕннипе пăлхар халăхĕн паллă писателĕсем — Ангел Тодоров, Ламар, Стефан Марков, Веселин Иосифов, Дмитрина Иосифова килсе кайрĕç. Кайран вĕсем Чăваш çĕршывĕн ӳсĕмĕсем çинчен хаçатсемпе журналсенче хăтлă статьясем, сăвăсем пичетлерĕç.

П. Хусанкай пăлхарла лайăх калаçатчĕ. Болгарирен пирĕн пата хăнасем килсен, тăлмач вырăнне вăлах çӳретчĕ. Пăлхар поэчĕсен сăввисене вара тӳрех чăвашла е вырăсла куçаратчĕ. Хальхи пекех астăватăп. 1969 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнче Болгарире фашистла диктатурăна сирпĕтсе антарнăранпа 25 çул çитнине социализмлă çĕршывсенче, çавăн пекех Чăваш республикинче те паллă турĕç. Çавăн чух П. Хусанкай пăлхарларан 25 поэтăн сăввисене чăвашла та, вырăсла та куçарчĕ. Вĕсене «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ» хаçатсем пичетлерĕç. «Ĕçлени харам пулмарĕ, Пăлхара пушă алăпа каймастăп»,— тесе савăнса çыру çырнăччĕ вăл ун чухне ман пата.

Туслăх çулĕ питĕ анлă, вăл халăхсене пĕрлештерет, коммунизм обществи тума чĕнет. П. Хусанкай Болгарире тата ытти çĕршывсенче турист пек курса çеç çӳремен, вăл совет культурин çитĕнĕвĕсем çинчен, Чăваш çĕршывĕн кунçулĕ çинчен кала-кала панă, хамăрăн литературăпа паллаштарнă. Шупашкара таврăнсан, колхозсемпе совхозсенче, фабрик-заводсенче пулатчĕ, Болгарири социализм çитĕнĕвĕсем çинчен савăнса калаçатчĕ, хаçат-журналсенче пăлхар халăхĕн паллă писателĕсем Христо Ботев, Пей Яворов, Ангел Тодоров, Елисавета Багряна тата ыттисем çинчен çыратчĕ.

Кунта П. Хусанкай ытти çĕршывсенче çӳрени çинчен çырнă чух уйрăмах акă мĕн çирĕплетсех калас килет. Чăваш халăх поэчĕ, таçта кайса çӳресен те, Тăван çĕршыва асран кăлармасть, вăл Совет çĕрĕнчине ялан чунра тытать, Совет çĕрĕ тĕнче тĕрекĕ иккенне самантлăха та манмасть тет Н. И. Иванов тĕпчевçĕ хăйĕн «Чăваш халăх сăвăçи Петĕр Хусанкай» кĕнекинче. Тĕрĕс, питĕ тĕрĕс каланă. Вăл шухăш-туйăма поэт «Тăван çĕршыв», «Аслă çулпа», «Эп — Советлă Союз гражданинĕ», «Океан, океан»... тата ытти чылай произведенисенче те лайăх кăтартнă.

П. Хусанкай Болгарире, ытти çĕршывсенчи пекех, К. В. Ивановăн пултарулăхне пропагандăлас тĕлĕшпе чун-

не парса ĕçлерĕ. «Нарспи» поэмăна пăлхар паллă поэчĕсенчен пĕри Н. Марангозов 1961 çулта пичетлесе кăларнă. Ку ĕçре ăна П. Хусанкай нумай пулăшнă. Вăл ку кĕнеке валли «Чăваш поэзийĕн ахахĕ—чăваш халăхĕн мухтавĕ» ятлă умсăмах çырнă. «Нарспи» поэма çинчен А. Тодоров, В. Йосифов, И. Сестримский тата ытти писательсем рецензисем çырса кăларчĕç.

«Нарспи» поэмăна 1975 çулта венгрла пичетлесе кăларчĕç. Çак ĕçе те П. Хусанкай пуçарса янăччĕ. П. Хусанкай хăй К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмине те, тата ытти произведенийĕсене те вырăсла куçарса кăларчĕ. Çапла вара, чăваш халăх сăвăçин çак пархатарлă ĕçĕ халăхсем хушшинчи туслăха вăйлатма татах пулăшрĕ.

1969 çулта Софире пăлхар чĕлхинчен куçаракансен пĕтĕм тĕнчери симпозиумĕ (канашлăвĕ) пулса иртнĕччĕ. Унта куçару енĕпе питĕ хастар ĕçлекен писательсене Пăлхар писателĕсен Союзĕн премине пачĕç. Вăл чаплă премие илме Петр Петрович та тивĕçлĕ пулчĕ.

П. Хусанкай Украинăра час-часах пулатчĕ, вăл украина литературине тĕлĕнмелле лайăх пĕлетчĕ, чунтан хаклатчĕ. Чăваш çыравçисен сăввисем, калавĕсем украинла тухнине вăл яланах Çеçпĕл ячĕпе сыхăнтаратчĕ. «Украина çулне пире вăл уçса пачĕ, пирĕн аслă туслăх сăпкине те вăлах сиктернĕ»,— тетчĕ вăл. «Çеçпĕл юртан тасалнă вăрманти пĕрремĕш чечек пулнă пулсан, Хусанкай—Атăл хĕрринче, пĕтĕм Совет çĕрĕнче тата чикĕ леш енче шăтса ӳснĕ чечексен ыр кăшăлĕ. Юратать Хусанкая Украина»,— çапла çырать Украина паллă писателĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Юрий Збанацкий, П. Хусанкая аса илсе.

Украинăра нумай çĕрте пулнă вăл. Çапах та кашни каймассерен Чернигов облаçĕнчи Остер хулинче пулатчех. Унта Çеçпĕлĕн вилтăпри, кунта ăна чысласа гранитран чаплă палăк лартнă, ун çине поэтăн «Чăваш чĕлхи» сăввинчи тăвата йĕркене виçĕ чĕлхепе—чăвашла, украинла, вырăсла картса çырнă.

Украина ĕççыннисем чăваш поэтне манмаççĕ, ăна яланах хисеплесе асăнаççĕ. П. Хусанкай та, кунта килсен, ялан вулакансемпе тĕл пулса калаçатчĕ. Çеçпĕлĕнне те, хăйĕнне те, ытти чăваш поэчĕсен сăввисене те вулатчĕ, тăван республикăн çитĕнĕвĕсем çинчен тĕплĕн каласа паратчĕ. Вăл кунта та чăваш элчи пек тăрăшса ĕçленĕ. «Тарас тăвĕ çинче» статьяра (малтан хаçатра «Т. Г. Шевченко çĕршывĕнче» ятпа пичетленсе тухнă) поэт Совет Украинин чи чаплă çыравçисем — Павло Тычина, Максим Рыльский, Микола Бажан, Андрей Малышко, Володи-

мир Сосюра тата ыттисем те Çеçпĕл Мишшин сăввисене куçарса «Сталева вира» кĕнеке кăларни çинчен пĕлтерет.

1969 çулта П. Хусанкайăн хăйĕн те «Салам сана, Украина!» ятлă сăвăсен кĕнеки украинла пичетленсе тухрĕ. Ун чухне вăл, чирлĕскер, кĕнеки çине: «Украинăра та сасă патăм... Кăшт упранĕ-ши тата хăватăм? Курăпăр!»— тесе çырчĕ те: «Ĕçлемелли, çÿремелли нумай-ха. Часрах Çеçпĕлĕн програмлă пĕр сăввине — «Çĕн Кун акине»—50 чĕлхепе кăларасчĕ»,— терĕ.

Чăнах та çак кĕнекене кăларас пирки вăл питĕ нумай ĕçлерĕ. Сăвва куçаракансем—паллă поэтсем пулчĕç, кашнинпех вăл хăй калаçнă е çыру çÿретнĕ. Куçаракансем хушшинче: СССР государство премийĕн лауреачĕсем Андрей Малышкăпа Сильва Капутикян, хăйсен тăван халăх поэчĕсем Юсуп Хаппалаевпа Миклай Казаков, Латви культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Ванаг, пăлхар поэчĕ Ангел Тодоров, чех поэчĕ Ольга Машкова тата ытти паллă поэтсем.

Кĕнеке тухиччен Переделкинăри кану çуртĕнчен вăл ман пата çапла çырнăччĕ: «Вăраха хăварнă ĕçĕм-хĕлĕме пĕтермелле... Çеçпĕл сăвви килчĕ литвалла, кабардинла, балкарла, словакла, хорватла, сербла... Финла, полякла тума ыйтса ятăм».

П. Хусанкай Украин паллă поэчĕпе Павло Тычинăпа питĕ çывăх, туслă пулнă. Вĕсем пĕр-пĕрин сăввине нумай куçарнă. «Тычина Хусанкай çырнисене пысăка хурса хаклатчĕ, чăваш поэчĕсен ĕçĕсем çинчен те ытларах пĕлесшĕн çунатчĕ»,— тет Ю. Збанацкий.

П. Хусанкайăн Украинăри çывăх тусĕсем хушшинче рабочисем те, колхозниксем те пулнă, вĕсемпе вăл туслă çыхăну тытнă. Акă, Донецк облаçĕнчи Т. Шевченко ячĕпе хисепленекен колхозран 1966 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче ун патне янă çыру:

«Уважаемый Петр Петрович!

Просим Вас дать свое согласие на избрание Вас почетным колхозником нашей сельхозартели. При этом мы исходим из того, что наш колхоз носит имя великого украинского поэта Тараса Григорьевича Шевченко, поэзия которого остается для всех нас вечно живой и зовущей. Мы считаем, что Вы — прямой родственник и близкий друг Тараса Григорьевича, а значит и наш. Ждем ответа».

П. Хусанкай ку çырăва илсен савăнать те, пăшăрханать те. Чаплă колхозник пулма чаплă ĕçсем тумалла тет вăл. Колхозниксем патне, тав туса, пысăк çыру çырать. Ăна пухура пăхса тухаççĕ, поэта «Хисеплĕ колхозник» ят-

не, унтан вара ĕç кĕнеки параççĕ. П. Хусанкай çырăвне халиччен ниçта та пичетлемен. Вуласа пăхар-ха:

«Дорогие друзья!

Извините меня за то, что я отвечаю на Ваше письмо с некоторым опозданием. Я целый месяц был в отъезде и вернулся только вчера. Меня глубоко тронуло и окрылило Ваше письмо. Вы мне оказали незаслуженно высокую честь, выразив желание избрать меня почетным колхозником вашей сельхозартели. Я очень взволнован этим, и, кажется, сразу помолодел лет на десять. Конечно, ни о каком отказе с моей стороны не может быть и речи. Я согласен. Но тут же начинаю думать: чем и как мне быть бы Вам полезным? Ведь до пенсионного возраста (по колхозному) мне еще остается лет шесть, а по нашему (писательскому) уже меньше года. А быть просто «свадебным генералом», как говорят, было бы неудобно.

Я думаю, что в колхозе имени Великого Кобзаря очень любят поэзию. Может быть, поэтому и вспомнили про меня. Поэтому я для начала сразу хочу послать для Вашей библиотеки мои стихи, поэмы и сказки в двух томах. Это было издано здесь, у нас, в русском переводе. Есть там и стихи об Украине.

Я давно дружу с многими украинскими поэтами. Мы переводим друг друга. Бываем в гостях друг у друга, встречаемся на съездах, пленумах и т. д. Эта наша дружба освещена именами Шевченко, который оставил сочувственные записки о чувашах в своем дневнике, и Сеспеля—нашего поэта, работавшего на Украине в начале двадцатых годов и умершего там. Украина высоко чтит его память. Вы, разумеется, знаете об этом. А с 1962 года украинский и чувашский народы породнились, побратились и на небесах—аж в космосе. Об этом писал очень сердечно Павло Тычина в дни пребывания Павла Поповича на родине.

Выразив желание избрать меня почетным колхозником, Вы, может быть, вспомнили и об этом. Это новые грани дружбы народов, чем сильна и непобедима наша Родина.

Я сердечно благодарю вас и всех колхозников за братское доверие, за высокую честь, оказанные мне. Надо подумать о формах нашего общения: может быть я сумел бы приехать к Вам, мне предстоит поездка на Украину.

10.III.66 г. Ваш П. Хузангай...»

Петр Петровича пур тĕлте те вулакансем юратса, кăмăлласа йышăннă. Ана Тутар республикинче уйрăмах лайăх пĕлеççĕ. Вал унта çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе

тухсан, Хусанти чăваш педтехникумĕнче, унтан Хĕвелтухăç педагогика институтĕнче вĕренне. Çакăнта ĕнтĕ вăл чăваш литератури çулĕ çине тăнă, тутар писателĕсемпе паллашнă. Пуринчен ытла Хади Такташпа, Адель Кутуйпа, Хасан Туфанпа, Муса Джалильпе туслă пулнă. Тутар поэчĕсемпе яланах тутарла калаçатчĕ, вĕсен сăввисене чăвашла куçаратчĕ. Унăн хăйĕн те 1968 çулта тутарла «Туссемпе» ятлă сăвăсен кĕнеки тухрĕ.

Поэт час-часах Кавказра та пулатчĕ. Унта унăн тусĕсем чылай пулнă: Расул Гамзатов, Юсуп Хаппалаев, Кайсын Кулиев, Ираклий Абашидзе, Сильва Капутикян тата ыттисем те. Унта та вăл чăваш культури, литератури çинчен каласа пама юрататчĕ, хăйĕн сăввисемпе кăна мар, хамăрăн нумай поэтсен произведенийĕсемпе вĕсене паллаштаратчĕ.

Петĕр Хусанкайăн пултарулăхĕ, пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ совет поэзийĕнче чи паллă вырăн йышăнчĕ. «Тăван халăхăн иртнĕ, хальхи тата пулас пурнăçĕ çинчен тарăн шутлакан поэт»,— тенĕ ăна вырăс поэчĕ Сергей Смирнов. «Эпĕ сана ялан асра усратăп, эсĕ маншăн пысăк культурăллă писательсенчен пĕри, ăслă та такамран çывăх тусăм»,— тесе çырнă Кайсын Кулиев.

Латви халăх поэчĕ Ян Судрабкалн, П. Хусанкая ырăпа асăнса, хăйĕнпе курнăçичченех çапла каланă: «Эпĕ Сире нихçан та курман, анчах Эсир мана питĕ çывăх, Сирĕн çинчен эпĕ чылай пĕлетĕп, мĕн пĕлни вара пĕтĕмпе — лайăх, аван. Эсир, халăх поэчĕ, хăвăр тăван республикăшăн, ырă Чăваш çĕрĕшĕн нумай вăй хуратăр, пĕтĕм Совет Союзĕшĕн те, апла пулсан, пĕтĕм тĕнчешĕн те».

Тăван çĕршывăн аслă вăрçин çулĕсенче П. Хусанкай çарта пулать, фашизма хирĕç пăшалпа та, перопа та паттăр çапăçать терĕмĕр. Дон шывĕ çинче, Сталинград патĕнче, Брянск фронтĕнче, Украина фронтĕнче тĕрлĕ лару-тăрура пулать. Поэт-воин, тăшмана аркатса, вилĕме çĕнтерсе, йывăр аманнă пулсан та, Польшăна çитет. Çав хаяр кунсене асăнса, вăл акă мĕн калать:

Сарлака Россия, ылтăн Украина,
Хĕм хĕвеллĕ Грузи пулчĕç асăмра...
Казахпа туркменăн, латышпа литвинăн—
Пур йăхсен çилли те çунчĕ ăшăмра.
Тӳсĕмлĕ, илемлĕ, чул касан чĕлхешĕн
Чунăм пулчĕ хурçă, шухăшăм—кăвар;
Аслă Ивановшăн, Çеçпĕлшĕн, Элкершĕн,—
Хамарăн мухтавшăн çапăçрăм хаяр.

Вăрçăра поэт мĕнле çын пулнине унăн фронтри юлташĕ отставкăри полковник В. Демидов çапла çырса кăтартать: «1943 çулхи февральте Петр Петровича кандидатран ВКП(б) членне куçарчĕç. Эпĕ ăна партие илме сĕнсе рекомендаци çырсаттăм. Çавăн чухне Петр Петрович хытă хĕпĕртерĕ: «Сталинградшăн çапăçнă чухне коммунист пулма тӳр килнĕшĕн хама телейлĕ çын тетĕп. Çырас килет, ĕçлес килет»,— терĕ... П. Хусанкай мана пурнăçра тĕл пулнă малтанхи чăвашчĕ. Унпа курса калаçнисем ăста та маттур чăваш халăхне чунтан хисеплеме вĕрентрĕç, чăваш наци характерĕнчи ĕçченлĕхе, сăпайлăха, чăтăмлăха, хăюлăха курма тата чăннипе хаклама май пачĕç. П. Хусанкай хăйĕн чăн-чăн чăвашлăхĕпе чăваш çыннин таса та ырă кăмăлне питĕ лайăх курма пулăшрĕ.

Тăван халăхне юратнипе пĕрлех Петр Петрович вырăс халăхĕпе Российăри ытти халăхсем çинчен хисеплесе ăшшăн калаçатчĕ. Вăрçă хыççăн вăл совет халăхĕн туслăхĕ çинчен, Чăваш çĕршывĕн пуласлăхĕ çинчен, социализмлă обществăри çынсен таса кăмăлĕ çинчен сăвăсем çырма шутлатчĕ».

Хăй умне лартнă тĕллеве П. Хусанкай вăрçă хыççăн пурнăçлама тăрăшрĕ. Вăл «Тăван çĕршыв» (1948—1956) ятлă поэма çырчĕ. Унта Тăван çĕршывăмăр мĕн тери илемлине, вăйлине, пирĕнпе кӳршĕллĕ пурăнакан халăхсем епле ĕçлесе пурăннине конкретлă тĕслĕхсемпе кăтартса пачĕ. 1954 çулта «Аптраман тавраш» ятлă сăвăллă романа çырса пĕтерет. Романра чăваш халăхĕн вăрçă умĕнхи хаваслă пурнăçне те, вăрçă тапхăрĕнчи патриотизмлă ĕçнехĕлне те, вăрçă хыççăнхи пурнăçне те, революцичченхи кунçулне те тĕрĕс çутатса панă. Ку романа вырăсла куçарсан, мари халăх поэчĕ Миклай Казаков ăна чăваш поэчĕн паттăр ĕçĕ тесе хакланă.

П. Хусанкай пирĕн совет çĕршывĕнчи нумай халăхсен поэчĕсемпе çыхăну тытнă, вĕсемпе туслă пулнă, чунтан кăмăлласа çырусем, сăвăсем çырнă. Акă унăн совет писателĕсене халалласа çырнă сăввисем: «Максим Горький», «Владимир Маяковский», «Сергей Есенин патĕнче», «Павло Тычинăна», «Кайсын Кулиев патĕнче», «Назым Хикмете», «Максим Рыльские», «Муса Джалиле», «Ян Судрабкална», «Хади Такташа», «Семен Данилова» тата ыттисем те. Çав вăхăтрах вăл тĕнче поэзийĕнчи паллă поэтсене те лайăх пĕлнĕ, вĕсен пархатарлă ĕçне тивĕçлипе хакланă.

1954 çулта П. Хусанкай «Тăван сасăсем» ятлă тĕрлĕ халăх поэчĕсен сăввисен кĕнекине кăларчĕ. Унта тĕнчери 57 поэтăн произведенийĕ. «Хăшĕ вĕсенчен тахçанах çĕре

кĕнĕ, хăшĕ инçе пурăнать, теприсене тăлмач курнă çеç мар, вĕсен сассине куçа-куçăн курăнса илтме те тивĕçлĕ пулнă. Маяковский, Тычина, Купала, Леонидзе, Тихонов, Рыльский, Твардовский... Çак ятсенче вăл хамăр саманари поэзи ăсталăхне курнă, вĕсен сассисем малашне те нумайччен янăрассине туйнă... Вырăс чĕлхине пула вĕсен сассисем Чăваш çĕршывне çитрĕç»,— тет кĕнекене хатĕрлекенĕ тата куçараканĕ. П. Хусанкай хавасланса çак кĕнекене кĕртнĕ виçĕ поэтăн сăввисенче чăваш халăхĕн культурипе пуласлăхĕ çинчен çырнине асăнать.

Халăхсен пахчине эп, Варшава поэчĕ, мухтатăп!
Чăвашран, марирен Ньютонсем тухасса эп шанатăп,—

тенĕ Юлиан Тувим «Хĕвелтухăçĕнчен—çутă!» ятлă сăввинче. Тăванла халăх поэчĕсем хамăр халăх çинчен ырăпа каланине П. Хусанкай уйрăмах тараватчĕ.

П. Хусанкайăн çывăх тусĕ Максим Рыльский ятарласа «Чăваш тĕрĕçисене» ятлă сăвă халалланă пирĕн республикăна. Çак сăвва вăл Чăваш çĕршывĕнчен тĕрленĕ парне кĕпи илнĕ хыççăн çырнă. Унăн çак тăвата йĕркине асăнса хăварас килет.

Ман ТАВТАПУÇ сăмах мăн Атăл çине çиттĕр,
Çул тыттăр вăрмана, йăрансăр уй-хире...
Эпир халь ирĕкре: чĕлхе пĕр мар пулин те,
Пит çăмăл ăнланма пĕрне-пĕри пире!

Украинăн тепĕр паллă поэчĕ Борислав Степанюк Çеçпĕл Мишши сăнарĕпе хавхаланса «Чăваш юрăçи» ятлă сăвă çырса панă. Унта вăл: «Ķăйкăрпа кăйкăр пек тăванланнă Чăвашпа Украина юрри»,— тет.

1969 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче Петĕр Хусанкая сывлăхĕ начарланнă пирки больницăна хумалла пулчĕ. Çитес çула кĕтсе илес умĕн, декабрĕн 30-мĕшĕнче, чăваш писателĕсен ушкăнĕ ун патĕнче пулчĕ. Тулли кăмăлтан сума суса, эпир ăна çакăн пек саламлă çыру вуласа патăмăр:

«Петĕр пичче! Ĕнтĕ хĕрĕх çул ытла эс тăван халăх ăсхакăлĕпе пултарулăхне, унăн чысне тĕнче умĕнче, хăмач ялав пек çӳле-çӳле çĕклесе, улăпла утатăн. Уншăн сана тав тума, ырă сунма сăмах та çитес çук. Сан кашни сăвву-юрру, кашни сăмаху чĕрĕ ахах пĕрчи пек, ватти-вĕттин куçĕ умĕнче ялкăшса çиçсе тăрать. Хамăр йышра е юлташла калаçса ларнă чухне те эпир сана яланах сывлас сывлăша чарса, савăнса итлетпĕр. Сан сăмаху—халăх кăмăлĕ, халăх ăс-хакăлĕ пек иксĕлми пулĕ.

Ырă чун хавалĕпе хывнă саламлă сăмахăмăр сывлăхна хăвăртрах сиплеме пулăштăрччĕ.

Кăрлачăн 22-мĕшĕ—эс çуралнă кун. Çак чыслă куна эпир санпа пĕрле кĕтсе илессе пĕр иккĕленмесĕр шанса, кĕтсе тăратпăр, ĕçчен аллуна хĕрӳллĕ чăмăртатпăр».

Çак сăмахсене П. Хусанкай хытă пăлханса итлерĕ, йывăр чирне çĕнтерсе, тата та пысăк хăватпа ĕçлесшĕнччĕ вăл.

Петĕр Хусанкай поэзийĕ — малалла утма, коммунизм тума, халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетме чĕнекен поэзи. Вăл — хĕвеллĕ пурнăç юрăçи, унăн сăвви-юррисем халăхпа пĕрле пархатарлă ĕçре ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕç.

## III. Петĕр Хусанкай — Ленинградра

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăн çирĕм çула яхăн эпĕ Ленинградра пурăнтăм. Çав вăхăтра Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай кашни çулах Ленинграда темиçе хут та пырса кайнине лайăх астăватăп. Вăрçăччен те унта вăл час-часах пулнă. Ун çинчен Мĕтри Васлейĕ хăйĕн асаилĕвĕсенче аван каласа панăччĕ.

Вăрçăччен пуринчен ытла вăл Ленинградра 1934—1936 çулсенче пулнă. Ун чухне А. С. Пушкин вилнĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле П. Хусанкай чаплă поэтăн нумай сăввисене, «Евгений Онегин» сăвăлла романне чăвашла куçарнă. Çавăн чух ĕнтĕ вăл А. С. Пушкинăн пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе питĕ интересленет, поэт пурăннă вырăнсенче темиçе хут та пулать. Каярах, 1951 çулта «Евгений Онегин» чăвашла уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухсан, вăл А. Пушкин çинчен çапла çырнăччĕ: «Пирĕн çĕнĕ поэзи анине пĕр чарăнмасăр шăваракан тепĕр юхăм вăл — вырăс поэзийĕн иксĕлми тинĕсĕ, çав тинĕсре чи малтан Пушкинăн пархатарлă хумĕсем, çине-çинех хӳсе килсе, пире хамăр чĕлхен хăватне, ун тӳсĕмлĕхне ĕнентереççĕ. Эпир Пушкинпа чăвашла калаçса пăхрăмăр. Пушкин халь пĕтĕм чăваш халăхĕпе калаçать. Пушкина эпир хамăр тума тытăннă çĕнĕ, социализмлă культура Керменĕн чи кирлĕ чулĕ тетпĕр...»

1937 çулта П. Хусанкай «Аван-и, Пушкин!» ятлă сăвă çырчĕ. «Вăрçă хыççăн, Ленинграда пырсан, эпĕ ăна кăшт якатрăм, улăштартăм»,— тесе пĕлтерчĕ вăл мана 1949 çулта пĕр çырăвĕнче. Ăна вăл хăех вырăсла куçарса пичетлерĕ. Акă тата 1962 çулхи февралĕн 13-мĕшĕнче Ленинградри юлташĕсене вăл хулари чи илемлĕ вырăнсенчен пĕринче—Искусство площадĕнчи А. Пушкинăн палăкĕ умĕнче хăйĕн халĕ çеç вырăсла çырнă сăввине вуласа пани аса килет.

Малтанах поэт пире А. Пушкинăн хваттерне кайса курма чĕнчĕ. «Унта çак уйăхра юсав пуçланать, çавăнпа та музее хупиччен кайса курар-ха»,— терĕ Петр Петрович. Кайрăмăр. Пирĕн хăна пуриншĕн те кассăра билет туянчĕ. «Сирĕн кăшт тăхтамалла пулать, экскурсовод килеймерĕ-ха»,—терĕç пире. «Пире вăл кирлех те мар, эпир хамăрах курса çӳрĕпĕр»,—ответлерĕ П. Хусанкай. Кĕтĕмĕр. Чăнах та, вăл А. Пушкин музейне питĕ лайăх пĕлет иккен. Тытăнчĕ пире экспонатсемпе паллаштарма, поэтăн пурнăçĕнчи паллăрах ĕçĕсем çинчен сăввисемпе усă курса калама... Тĕлĕнсе кайрăмăр! Çав вăхăтра пирĕн пата пĕр хĕрарăм пырса тăчĕ те: «Кам пултăр эсир!»— тесе ыйтрĕ. «Ку Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай — пирĕн ентеш»,— терĕм эпĕ. Ку сăмахсене илтсен, çак хĕрарăм (вăл экскурсовод пулнă иккен) тĕлĕнсе кайрĕ. «Илтнĕ, тахçанах илтнĕ, анчах халиччен Сире курман. Эсир пирĕншĕн чаплă хăна, паллă поэт, куçаруçă...»— терĕ вăл. Пирĕн ушкăн пысăкланчĕ. Пуçланчĕ вара калаçу!.. Петр Петрович Пушкин произведенийĕсене мĕнле куçарни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Ыйтусем пулчĕç. Ответлерĕ. Юлашкинчен Ленинградра вырăсла çырнă «Пушкин» ятлă сăвва каласа пачĕ. Питĕ хавхаланса, çĕкленсе каларĕ вăл.

Паллах, Ленинграда час-часах пыма П. Хусанкайăн сăлтавĕсем тата та нумай пулнă. Вăл писательсен Союзĕ кунта ирттерекен канашлусене активлă хутшăннă, хăйĕн юратнă вырăс поэчĕсемпе Н. Тихоновпа, В. Саяновпа, М. Дудинпа тата ыттисемпе те темиçе хут тĕл пулса калаçнă. Кунтах унăн Саламби ятлă хĕрĕ пурăнатчĕ. Саламби халĕ те Ленинградрах, заводра инженерта ĕçлет. Ун патĕнче П. Хусанкайăн çырăвĕсем питĕ нумай. Эпĕ вĕсемпе паллашрăм та тĕлĕнсе кайрăм: Петр Петрович хĕрĕ патне ăçта çитнĕ унтан çырусем çырса тăнă, хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă, Ленинградра ĕçлекен чăваш ученăйĕсене салам каланă, вĕсен пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлнĕ... Ленинградри А. А. Жданов ячĕпе хисепленекен государство университетĕнче поэтăн ывăлĕ Атнер вĕренетчĕ. Вăл мĕнле вĕреннипе те П. Хусанкай кашни пымассерен интересленетчĕ, университета кĕрсе тухма тăрăшатчĕ.

Ленинградра унăн çывăх туссем — чăвашсем те, вырăссем те тата ытти халăх çыннисем те чылайччĕ. Чи малтанах вăл мана Василий Дмитриевич Дмитриевпа (Мĕтри Ваçлейĕпе) паллаштарчĕ. Ун çинчен эпĕ вăрçăчченех илтнĕ, вăл ача-пăча сăввисем çырнине пĕлнĕ. Каярах вăл, В. М. Бехтеров ячĕпе тăракан Миме институтĕнчен вĕренсе тухсан, литературăпа çеç мар, нумайрах физиологипе

интересленчĕ. Унăн биологи наукисен кандидачĕн диссертацийĕ ятне чăвашла темиçе çын та куçарса пăхрĕç, анчах П. Хусанкай куçарни чи тĕрĕсси терĕç пирĕн чĕлхеçĕсем... Акă вăл: «Çурăм шăммин мими пăсăлсан, пуç мимин пысăк çур çаврашкисем ал̆-урана ĕçлеттерме пултарасси». Мĕтри Ваçлейĕ доктор диссертацийĕ çырса пĕтерчĕ. Унăн ятне те чăвашла куçарма çăмăлах мар пулчĕ. Ăна та П. Хусанкай куçарса пачĕ. Вăл «Сарăпланнă ӳт-пĕве хăнăхтарса ĕлĕкхи шайне çитерес проблема И. М. Сеченовпа И. П. Павлов вĕрентнĕ тăрăх мĕнле сарăлса пыни» ятлă.

П. Хусанкай Мĕтри Ваçлейне юрататчĕ. Ленинграда пырсан, унпа тĕл пулса е телефонпа та пулин каласма тăрăшатчĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне 1930 çулсенчех лайăх пĕлнĕ. «Тăван чĕлхепе сăвăсем, калавсем, очерксем çырма пуçласа, наука аслă çулĕ çине тухрĕ. Юратать вăл тăван чĕлхене, тăван культурăна. Чыс та мухтав ăна — писателе тата ученăя»,— терĕ вăл Мĕтри Ваçлейне 60 çул тултарнă ятпа саламланă чух. 1956 çулта «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Çыравçă-тĕпчевçĕ» ятлă статья та кăларчĕ.

Мĕтри Ваçлейĕ патĕнче П. Хусанкай час-часах: «Памастпăр ирĕк хулана!», «Сăпка юрри», «Атăл хĕрринчи юман» ятлă сăвăсене каласа панине лайăх астăватăп. Поэт хăй сăввисене кăна мар, ытти поэтсен сăввисене те нумайăшне пăхмасăр калатчĕ.

«Памастпăр ирĕк хулана!» сăвва вăл Ленинградра, Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçлансанах, Мĕтри Ваçлейĕ хваттерĕнче çырнă. Ун чухне поэт Ленинграда айăпсăртан тĕрмере ларнă чух пăсăлнă куçне юсаттарма пынă пулнă. П. Хусанкай Ленинград çыннисен паттăрлăхĕпе чăтăмлăхне лайăх пĕлнĕ. Вулакан курать: поэт умĕнче — аслă Ленинăн хаклă сăнарĕ, унăн вилĕмсĕр ĕçĕ-хĕлĕ, çĕнтерӳллĕ ялавĕ. Ку сăвăра вăл совет халăхĕн шухăш-кăмăлне, ĕмĕтне уçса парать: Ленинград нихăçан та никама та парăнман, нихăçан та тăшман аллинче пулман, пулас та çук!

1956 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче ман хваттере кĕтмен çĕртен пĕр çӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, утмăл çултан иртнĕ çын пычĕ. Паллашрăмăр. Вăл ватă коммунист, В. И. Ленина, Н. К. Крупскаяна, Я. М. Свердлова лайăх пĕлекен чăваш çынни Максим Георгиевич Булочников пулчĕ. Ун çинчен эпĕ ку таранччен пĕлмен, илтмен. Пĕр çырура П. Хусанкай çапла çырнăччĕ: «Эсĕ пурăнакан урамрах (Скороходов урамĕ, 9-мĕш çурт, 28-мĕш хваттер) питĕ чаплă чăваш, виçĕ революци салтакĕ пурăнать, вăл асаилӳсем çырма тытăннă, ăна пулăшас пулать вĕт, шăллăм!»

— Эпӗ Шупашкарта пултӑм. Чӑваш халӑх поэчӗпе паллашрӑм. Вӑл П. Хусанкай пулчӗ. Унпа нумайччен калаҫрӑмӑр. Асаилӳсем ҫырма тытӑнтӑм. Эпӗ Ленин заданийӗсемпе ҫӳренӗ. Документсем те пур. Хусанкай сире тупма хушрӗ,— терӗ М. Г. Булочников.

Булочниковӑн асаилӗвӗсемпе, унӑн тӗрлӗрен документчӗсемпе паллашмалла пулчӗ. 10—15 страница ҫыратчӗ те унтан вара вӑл ман пата вулама илсе пыратчӗ. 1961 ҫулта Чӑваш кӗнеке издательствинче унӑн асаилӗвӗсем «Записки участника трех революций» ятлӑ уйрӑм кӗнекепе тухрӗҫ. Тепӗр ҫулта, февралӗн 12-мӗшӗнче, П. Хусанкай Ленинграда пырсан, эпир Булочников патне кайрӑмӑр. Пирӗнпе перле ун чухне Ҫар медицини академинче ӗҫлекен пирӗн ентеш М. К. Микушкин та пулчӗ. Булочниковӑн хваттерӗнче хӑй сӑрланӑ картинӑсем чылайччӗ. Вӗсемпе паллашнӑ хыҫҫӑн Петр Петрович чӑваш искусстви ҫинчен питӗ хавхаланса калаҫма пуҫларӗ.

«Тӗлӗнмелле сирӗн пек хастар та пултаруллӑ чӑвашсенчен,— терӗ вӑл.— Революци ӗҫне те тунӑ, Совет влаҫне ҫирӗплетме те хутшӑннӑ, искусствӑпа та интересленнӗ. Эсир пӗлетӗр-и, Питӗрте революцичченех чӑваш ачисем Художество академинче вӗреннине! Акӑ вӗсем: пӗтӗм тӗнчипе паллӑ художник — Алексей Афанасьевич Кокель, хальхи Чӑваш халӑх художникӗсем Моисей Спиридонович Спиридоновпа Никита Кузьмич Сверчков». Вӗсен пултарулӑхӗ ҫинчен кӗскен каларӗ те: «Халлӗхе ҫитет, тепре килсен нумайрах каласа парӑп, ҫӗнӗ кӗнекесем те илсе килӗп. Нумай пӗлес тесен, Максим Георгиевич, Шупашкара пырса пурӑнӑр»,— терӗ ӑна халӑх поэчӗ.

Урама тухсан, вӑл пире: «Айтӑр, юлташсем, Шупашкар тӑкӑрлӑкне кайса куратпӑр»,—терӗ. Кайрӑмӑр. Вӑл Нева проспекчӗпе юнашар. Кӗнеке ҫурчӗн хыҫӗнче. Эпир ку тӑкӑрлӑкра маларах та пулнӑ, анчах ун чухне те, халӗ те ӑна мӗншӗн Шупашкар урамӗ тенине пӗлместпӗр-ха. П. Хусанкай тӑкӑрлӑк историйӗпе питӗ интересленчӗ, ӑна шырама, тӗпчеме хушрӗ.

Шупашкар тӑкӑрлӑкӗ икӗ пысӑк ҫуртран ҫеҫ тӑрать. Пӗр ҫурт ҫине асӑну хӑмисем ҫапнӑ: «В. Я. Шишков 1941—1942 ҫулсенче, В. М. Саянов 1934—1959 ҫулсенче ҫак ҫуртра пурӑннӑ»,—тесе ҫырнӑ. Кунта эпир чарӑнса тӑтӑмӑр та П. Хусанкай В. Саянов пултарулӑхӗ ҫинчен каланине итлерӗмӗр. «Эпӗ ӑна халалласа 1959 ҫулта вырӑсла пӗр сӑвӑ ҫырнӑччӗ, итлесе пӑхӑр-ха»,— терӗ те вӑл хурлӑхлӑ сасӑпа «Ровесник» ятлӑ пысӑк сӑвва вуласа пачӗ. Унта вӑл Саяновпа вӑрҫӑччен Петрозаводскра «Ка-

левала» эпоса пичетлесе кăларнăранпа 100 çул тултарнă ятпа ирттернĕ уявра тĕл пулнине асăнать. Чăнах та, «Красная Карелия» хаçат тата поэт хăйĕн арăмĕ патне янă çыру тăрăх П. Хусанкай унта пулнине халĕ лайăх пĕлтĕмĕр эпир. Çавăнта ĕнтĕ икĕ паллă поэт хушшинче туслăх пуçланать. Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче, вăрçă хыççăн та вĕсем пĕр-пĕринпе час-часах тĕл пулнă. «Работаю. Ищу. Горю. Не мне от жизни отстраниться»,— тет П. Хусанкай çак сăвăра хăйĕн юлташне асăнса.

Уйрăлас умĕн эпир каллех А. С. Пушкин палăкĕ умĕнче пултăмăр. Кунта пире пĕр паллакан фотограф ӳкерсе илчĕ те, эпир Нева хĕрринчи Çуллахи сад патне тухрăмăр. «Курнă ĕнтĕ эсир çак садăн илемлĕ картине. Кам илтмен ун çинчен! Вырăс поэзийĕнче те ун çинчен нумай çырнă. Анчах çав эрешлĕ капăр карта авторĕ пĕрремĕш чăваш архитекторĕ Петр Егоров пулнине нумайăшĕ пĕлмеççĕ-ха»,— терĕ Петр Петрович. Егоров XVIII-мĕш ĕмĕрте пурăннă. Ун пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен П. Хусанкай Ленинградра кăна мар, чăваш халăхĕн кунçулĕ çинчен калаnă чух вăл Мускавра та, Киевра та, тĕрлĕрен статьясенче те асăннă. 1964 çулта Чăваш кĕнеке издательстви «Архитектор Петр Егоров» ятлă кĕнеке кăларчĕ. Авторĕсем — Ленинградра пурăнакан чăваш тĕпчевçисем Ф. Д. Кузнецовпа унăн хĕрĕ Э. Ф. Кузнецова-Рыцк. Вăл кĕнекене П. Хусанкай ман пата та, Ленинградри юлташĕсем патне те ярса пачĕ. Ман пата янă кĕнеке хуплашки çине вăл çапла çырнă:

Асаттесем мĕн авалтан
Чăваш ятне çĕртме хушман.
Аçта пулсан та яланах
Асра тытар çак йăлана!

Ленинградри Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ А. Я. Ваганова профессор ячĕпе хисепленекен хореографи училищине балет искусствине юратакансем лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çакăнта 1957 çулта чăваш ачисен малтанхи ушкăнĕ (7 арçын ача, 7 хĕрача) вĕренме тытăнчĕ. 9 çул вĕренчĕç вĕсем. Унтан вара Шупашкара ĕçлеме килчĕç. 1958 çултан пуçласа, кашни çулах, вĕренсе пĕтериччен, вĕсемпе Петр Петрович тĕл пулатчĕ. Пĕррехинче, 1958 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнче, вăл çамрăк ачасем патне хăйĕн хĕрĕпе пуканесем, чăваш писателĕсен кĕнекисене, аквариум илсе пычĕ. Унпа пĕрле А. И. Улитин инженер, Мĕтри Ваçлейĕ тата эпĕ пынăччĕ. Ун чухне пирĕн пĕчĕк ентешсемпе калаçма та çăмăл марччĕ. Нумайăшĕ ялта çуралса ӳснĕ, вырăсла вĕсем

начар калаçатчĕç. П. Хусанкай кам ăçтан килнине ыйтса пĕлчĕ те питĕ хавхаланса тăван республика çинчен калама тытăнчĕ, Шупашкарти театрсенче мĕнле спектакльсем пынине пĕлтерчĕ. Юлашкинчен вăл хăйĕн «Сăпка юрри» сăввине вуласа пачĕ. Ку сăвва пурте хапăл туса йышăнчĕç. Пĕр хĕрача: «Ăçтан тупма пулать-ши ку сăвва?— тесе ыйтрĕ.— Пирĕн ăна пăхмасăр калама вĕренес килет». Кў сăмахсене илтсен, поэтăн кăмăлĕ тата та çĕкленчĕ. Вăл вара пĕр хут татăкĕ илчĕ те ун çине çак сăвва хăй аллипе хăй çырса пачĕ. Эпĕ ăна кайран машинкăпа пичетлесе пурне те валеçсе патăм, алçырăвне автортан ыйтса хам патăмрах хăвартăм.

Хореографи училищинчен вĕренсе тухнă çамрăксемпе П. Хусанкай Шупашкарта та темиçе хут тĕл пулса калаçнă. Вĕсем пур енĕпе те культурăллă, пысăк квалификациллĕ специалистсем пулнипе вăл питĕ савăнатчĕ, концертсене, балет спектаклĕсене курма пĕрмаях çӳретчĕ. Пуринчен ытла Шупашкарти музыка театрĕнче çамрăк артистсем кăтартнă «Жизель» спектакльшĕн хĕпĕртенĕччĕ вăл. «Чăваш театрĕн пĕрремĕш балечĕ! Тĕнчипе паллă француз композиторĕн А. Аданăн гениллĕ произведенине чăваш артисчĕсем тĕлĕнмелле лайăх кăтартса пачĕç. Жизель рольне Галина Васильева вылярĕ. Епле илемлĕ, çăмăл, пĕтĕм чунне парса ташларĕ»,— тесе çырнăччĕ вăл ман пата 1967 çулхи майăн 19-мĕшĕнче çак спектакле курнă хыççăн. Çав çулах майăн 22—27-мĕшĕсенче Мускавра совет писателĕсен 4-мĕш съездĕнче пĕрле пултăмăр. Унта та вăл пирĕн халĕ балет çурални çинчен, чи малтанах «Жизель» спектакле Ленинградран килнĕ çамрăк артистсем кăтарнине юлташĕсене çĕкленсе кала-кала пачĕ. Тепĕр çултан Галина Васильевăна халалласа «Жизель» ятлă сăвă çырчĕ. Ăна «Коммунизм ялавĕ» хаçатра 1968 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче пичетленĕччĕ. Акă унта мĕнле ăшă кăмăлпа, чун-чĕререн çырнă йĕркесем пур:

> Тавах ăсталăхне! Хавассăн
> Туятăп хамшăн чунăмра:
> Сан ташшуна курман пулсассăн —
> Пулаттăм эпĕ чухăнрах.
> Çакна та калама хăятăп:
> Талант вăл — ылтăн, ан йӳнел!..
> Шуралнă пуçăма таятăп
> Сана, вунсаккăрти Жизель!

Ленинградри тĕлпулусем çинчен каламалли нумай, анчах пурне те тăруках каласа пĕтерес çук. Асран каймасть,

акă, Анна Ахматова поэтессăн ывăлĕ Лев Николаевич Гумилев профессор патĕнче 1961 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче пулни. Питĕ кăмăллă, нумай чĕлхе пĕлекен çын, «Хунну» кĕнеке авторĕ, М. Ф. Хван чĕлхеçĕпе Н. Я. Бичуринăн «Собрание сведений по исторической географии восточной и срединной Азии» ятлă тĕпчев ĕçне хатĕрлесе Шупашкарта пичетлесе кăларакан Гумилевпа Хусанкай тĕрĕк чĕлхисем çинчен, чăваш чĕлхи историйĕ çинчен нумай калаçрĕç. Л. Н. Гумилев араб чĕлхисенчен сăвăсем куçарать иккен, хăшне-пĕрне вырăсла пичетленĕ те. Куçару ĕçĕпе Хусанкай уйрăмах интересленчĕ, хăй мĕнле ĕçлени çинчен, пăлхар поэчĕсен сăввисене вырăсла та, чăвашла та куçарни çинчен каласа пачĕ. Паллă ученăй чăваш поэтне мухтарĕ. Хусанкай вара: «Ватăлатпăр, сывлăх пур чух кăшт усăллă ĕç туса хăварас килет. Халĕ тата грузи халăхĕн генийлĕ поэчĕн Шота Руставелин «Тигр тирĕ тăхăннăскер» поэмине чăвашла куçарма хатĕрленетĕп, анчах халлĕхе чĕлхине япăх пĕлетĕп-ха. Грузире темиçе хут та пултăм, татах кайма шутлатăп»,— терĕ. Тăлмачăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ çитессе Гумилев та, поэтăн ытти юлташĕсем те шанса пурăнчĕç. «Ялав» журналăн 1966 çулхи 9-мĕш номерĕнче çак чаплă поэмăн малтанхи виçĕ пайне пичетленĕччĕ те. Ытти сыпăкĕсене вăл куçарса пĕтерейменĕ...

Ленинградра П. Хусанкай вулакансемпе М. Е. Салтыков-Щедрин ячĕпе хисепленекен государство библиотекинче те, Çар округĕнчи чаçсенче те тĕлпулусем ирттерни мар манас çук. Эпĕ Ленинград çар округĕнче ĕçленĕ чух вăл пирĕн подразделенисенче салтаксемпе икĕ хут тĕл пулчĕ. Пĕрре çапла, чăваш салтакĕсем округра тухса тăракан «На страже Родины» хаçата П. Хусанкай 60 çул тултарнă ятпа çыру çырнă, поэтăн пултарулăхĕ çинчен тĕплĕнрех çырса пĕлтерме, хăшпĕр сăввисене пичетлеме ыйтнă. Редакци вара çак хаçатра 1967 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче манăн «Навек полюбил Россию» ятлă статьяна тата П. Хусанкайăн сăнӳкерчĕкне, «Аврора», «Приглашение» сăввисене пичетлерĕ. Унччен çак хаçатрах П. Хусанкайăн «Поют дубравы» ятлă Мускавра тухнă сăвăсен кĕнеки çинчен те эпĕ çырнă рецензи тухнăччĕ.

Салтаксемпе тĕл пулсан, Петр Петрович вĕсене чăваш писателĕсен ячĕпе ăшшăн саламларĕ, ĕçре те, вĕренӳре те хастар, çирĕп, таса чунлă пулма пиллерĕ, Тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр пулмалли çинчен асăрхаттарчĕ. Унтан вара вăл хăй те вăрçă вăхăтĕнче фашистсене хирĕç салтак та, офицер та пулса çапăçни çинчен, фронтра хытă аманни çинчен каласа пачĕ, вăрçăра çырнă сăввисене ча-

вашла та, вырăсла та вуларĕ. Уйрăмах «Салтак сăмахĕ» сăвва хĕрӳллĕ, çĕкленӳллĕ каларĕ вăл:

Самана салтакĕ эпĕ:
Пăшалпа е перопа —
Пĕтиччен кунçул хисепĕ
Хуралта эп тăрапах.

Çак сăмахсене каланă хыççăн салтаксем тăваллăн алă çупрĕç. Вĕсене поэт асăнмалăх хăйĕн виçĕ кĕнекине — «Избранное», «Аптраман тавраш», «Хушка хумсем» парса хăварчĕ.

Юлашкинчен хам пурнăçри савăнăçлă кунпа çыхăннă пĕр тĕлпулу çинчен кĕскен те пулин калас килет. Вăл 1964 çулхи майăн 7-мĕшĕнче эпĕ Ленинградри А. А. Жданов ячĕпе хисепленекен государство университетĕнче «Тăван çĕршывăн аслă вăрçи тапхăрĕнчи чăваш литератури» темăпа диссертаци хӳтĕленипе çыхăннă. Халăх нумай: университет ученăйĕсем, студентсем, хамăр ентешсем. Хӳтĕленĕ вăхăтра, манăн оппонент Л. А. Плоткин профессор калаçнă чух П. Хусанкайпа унăн хĕрĕ Саламли пырса кĕчĕç. Тĕлĕнсе кайрăм. Е. И. Наумовпа Б. Г. Реизов профессорсем хыççăн П. Хусанкай сăмах илчĕ. Мĕн калать-ши тесе кĕтсе тăратăп. Акă мĕн каларĕ вăл (стенограмма тăрăх, кĕскен):

— Ман умран тухса калакан Наумов юлташ чăваш литератури çинчен чи малтан эпĕ Маяковский урлă пĕлтĕм,—терĕ.—Унăн чăвашсене кăмăлласа асăннă сăвви пур, вăл сăвăра чăваш поэчĕсене те ырăпа асăннă, вĕсемпе тĕл пулнă, калаçнă иккен,—терĕ.—Тĕрĕс. Питĕ тĕрĕс. Мана ку питĕ савăнтарчĕ. Хусанта 1928 çулта Маяковский патне пыракан чăвашсенчен пĕри эпĕ пулнă. Асран кайми кунсем, тĕлĕнмелле çыхăнусем куç умне килеççĕ. Ленинградпа Чăваш çĕршывĕ хушшинче те пысăк çыхăну паллисем пур вĕт. Кунта Шупашкар тăкăрлăкĕ пур, кунта тĕнчипе паллă архитектор Петр Егоров, чаплă чĕлхевçĕ-китаевед Никита Бичурин пурăннă. Вĕсем — чăвашсем.

Ученăй советра П. Хусанкай Ленинградпа Чăваш республики хушшинчи нумайранпа пыракан туслăх çинчен, чăваш культурине çĕклеме Ленинград мĕнле пулăшни çинчен питĕ лайăх каларĕ. Хăйĕн сăмахне вăл çапла вĕçлерĕ:

— Хаяр вăрçă чаплă Çĕнтерӳпе вĕçленчĕ. Вăл вăрçăра ман халăх та паттăр çапăçрĕ. Халăхпа пĕрле писательсем те пулчĕç, вĕсем пăшалпа та, перопа та тăшмана хирĕç тухрĕç. Хăшĕ-пĕри Ленин хулине хӳтĕленĕ çĕрте пулчĕç, халĕ, акă, кунта диссертаци хӳтĕлеме килнĕ. Чун-

чěререн савăнатпăр эпир — чăваш халăхěн ывăлě-хěрěсем. Вăрçă вăхăтěнче çырнă сăвă-поэмăсем, очерксемпе калавсем, повеçсем, пьесăсем пирěн халăхăн чи паха енěсене уçса пачěç. Чăваш литератури çěнě жанрсемпе, çěнě сăнарсемпе пуянланчě. Чăнах та, пирěн литературăра тěпчемелěх произведенисем пур. Вăрçă темипе Дедушкин юлташăн диссертацийě—пěрремěш тěпчев ěçě. Унта çитменлěхсем те пулěç, анчах диссертант пысăк ěç тунă. Эпě пěтěм чунăмпа лирик, çавăнпа та ку ěçе пěтěмпех хаклаймăп. Оппонентсемпе пěтěмпех килěшетěп. Автора нумай пулмасть эпир писательсен Союзне илтěмěр, вăл филологи наукисен кандидачě пулма та тивěçлě пулě тетěп.

Калаçакансем тата та пулчěç. Ученăй совет членěсенчен пěри: «Чăваш чěлхи мěнле илтěнет, мěнле янăрать!»— терě те чăвашла мěн те пулин вуласа пама ыйтрě. Ман портфельте чăваш писателěсен кěнекисем чылайччě. Петр Петровича пурте кăмăлласа йышăннă хыççăн эпě унăн «Эпир Российăра пурăнатпăр» сăввин пěр сыпăкне вуласа патăм:

Кирек хăçан, кирек ăçта
Тăван çěршывăмăр асраччě.
Асраччě кăмăллă чěлхе,
Ун илемне ăçта туятпăр?
Ěмěртенпе, ěмěрлěхе
Эпир Российăра пурнатпăр.

Петěр Хусанкайăн чăваш культуринчи пысăк ěçě нумай енлě, ăна тăван республикăра çеç мар, пур çěрте те лайăх курма пулать. Унăн ячě ěмěр хěвел пек çунса тăрě.

*1982*

## ТĂВАН ÇĚР СĚТКЕНĚПЕ ЎСНĚ ПОЭЗИ

Чăваш халăх поэчěн Ухсай Яккăвěн пурнăçěпе пултарулăх çулě чăннипех те питě пуян. Вăл 1911 çулхи ноябрěн 26-мěшěнче чăваш литератури классикěн К. В. Ивановăн тăван ялěнче — Пушкăрт республикинчи Слакпуç ялěнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Пуçламăш шкул хыççăн пулас поэт хресчен çамрăкěсен шкулěнче, унтан Уфари педагогика институчěн хатěрлев уйрăмěнче, кайран Мускаври М. В. Ломоносов ячěпе хисепленекен университетра вěренет. Темиçе çул хушши вăл Мускавра чăвашла тухса тăракан «Коммунар» хаçат редакцийěнче ěçленě, Пушкăрт АССР Министрсен Совечě çумěнчи наукăпа

тĕпчев институчĕн сотрудникĕ пулнă. Патăръелпе Ульяновскри педагогика училищисенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан, Ухсай Яккăвĕ халăх ополченийĕн отрядне каять, 1942 çулхи май уйăхĕнче вĕренӳ батальонĕн курсанчĕ пулса тăрать, унтах Коммунистсен партине кĕрет. Малалла вăл çар хаçачĕсенче ĕçлет. «Çĕршывăмшăн эпĕ патăм вĕри вăя, хăватлă юнăма»,— тет вăл 1943 çулта çырнă пĕр лирикăллă сăвăра. Вăрçă çулĕсенче фашистсене хирĕç паттăр çапăçнăшăн ăна капитан ятне, II степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденне панă. Вăрçă хыççăн поэт-салтак каллех мирлĕ ĕçе таврăнать: Чăваш АССР кĕнеке издательствин редакторĕ, «Тăван Атăл» альманахăн редакторĕ пулать, 1948 çултан пуçласа творчество ĕçĕпе çеç пурăнма тытăнать.

Халăх поэчĕн пурнăçпа творчествăлла биографийĕ пĕтĕмпех революципе те çĕршыври социализмлă строительствăпа уйрăлми тачă çыхăннă. Вăл патша Раççейĕнчи хресченсен асаплă та выçă пурнăçне лайăх астăвать. Чăваш ялĕсенче трахомăпа чирлсе суккăрланнă арçынсем, хĕрарăмсем, ачасем епле çӳренине те хăй куçĕпе хăй курнă.

Пушкăрт хирĕсенче граждан вăрçи вучĕ алхаснă чухне Ухсай Яккăвĕ саккăрти ача пулнă. Мирлĕ халăха Колчак эшкерĕ епле тискеррĕн асаплантарнисем, Чапаевăн хĕрлĕ салтакĕсем шурă гвардеецсене хирĕç паттăррăн çапăçнисем те çав çулсенче чылайăшĕ Ухсай куçĕ умĕнче пулса иртнĕ. Кайран, нумай çулсем иртнĕ хыççăн, çакăн çинчен поэт хăйĕн чи лайăх произведенийĕсенче каласа панă.

Ача чухнехи çулсене аса илсе, Ухсай Яккăвĕ хăйĕн ашшĕпе амăшне чун-чĕререн тав тăвать. Вĕсем ăна çепĕç юрăсем нумай юрласа панă иккен, паттăрсем çинчен тĕрлĕ юмах-халап кала-кала кăтартнă. Чăваш халăхĕпе вырăс халăхĕн сăмах вĕççĕн çӳрекен произведенийĕсемпе паллашнăçемĕн пулас поэт умĕнче çапла çĕнĕ, халиччен пĕлмен тĕнче, уçăлать, пултаруллă çамрăк йĕкĕтĕн кăмăлĕ калавсем, очерксем, сăвăсем çырас туртăмпа çĕкленет.

Хăйĕн чи малтанхи сăввине («Юратрăм эп, хирсем, сире») Ухсай Яккăвĕ çур ĕмĕре яхăн каялла пичетлесе кăларнă. Тăван çĕре мĕн тери юратнине унта вăл акă епле сăмахсемпе каласа панă:

Юратрăм эп, хирсем, сире,
Сана та, сĕм-хура вăрман!
Нихçан та шухă чĕрере
Ку юрату çухалмĕ ман.
Нихçан та эп хăватăра
Манмастăп, хамăн юррăмра

Ура тапса, пуҫа ухса
Сире мухтатăп эп, Ухсай.

Ҫакăнтан пуҫласа халăх поэчĕ паян кунчченех тăван ҫĕр темипе кăвапаран ҫыхнă пек тачă ҫыхăннă. Хăйсен тăван ҫĕрне, тăван Совет ҫĕршывне вĕҫĕмсĕр юратакан ҫĕр ĕҫченĕсем, вăрҫă паттăрĕсем — акă камсем Ухсай Яккăвĕн сăвви-поэмисенчи тĕп геройсем. Унăн поэзийĕ пурнăҫ тĕрĕслĕхĕпе, калама ҫук ăшă лирикăпа, халăх ăсĕпе, ăшă юморпа тулнă. Литературăра ĕҫлеме тытăннăранпа Ухсай аллă ытла кĕнеке (чăвашла, вырăсла) пичетлесе кăларнă.

Вăрҫăччenex унăн творчествинче пĕр паллă туртăм паларса тăратчĕ—чăваш халăхĕн хальхи пурнăҫне революцичченхи пурнăҫпа танлаштарса кăтартасси. Колхоз пурнăҫĕ ҫинчен калакан сăвăсемпе, балладăсемпе, юмахсемпе, лирикăллă пĕчĕк поэмăсемпе пĕрлех вăл историллĕ темăпа лирикăллă-эпикăллă, драмăллă пысăк произведенисем те ҫыратчĕ. Ҫавнашкаллисен шутне эпир унăн «Халăхсен ылтăн кĕнеки» поэмăна тата сăвăласа ҫырнă «Тутимĕр» трагедие кĕртме пултаратпăр.

«Халăхсен ылтăн кĕнеки» поэмăна поэт СССР Конституцин проектне халăхра анлăн сӳтсе явнă май хавхаланса ҫырнă. Унăн композицине, сюжетне вăл пĕтĕмпех чăваш халăхĕн хальхипе иртнĕ пурнăҫĕн танлаштарăвĕ урлă майлаштарнă.

Совет ҫыннисен пурнăҫĕ епле пуянланса, тулăхланса пынине поэт «Кĕрхи октавăсем», «Уфа пасарĕ», «Чăваш ҫĕрĕ», «Кĕрхи кĕреке» ятлă лирикăллă пысăк мар сăвăсенче, «Туй», «Телей юмахĕ» поэмăсенче илемлĕ ҫырса кăтартнă. Ку сăвăсене вуласан, эпир тӳрех унăн пултарулăхĕ ҫав ҫулсенче епле ӳсе кайнине, халăхăн сăмах вĕҫҫĕн ҫӳрекен творчествинчи тĕслĕхсемпе вăл мĕн тери пĕлсе уса курма пултарнине туйса илетпĕр.

Вăрҫă умĕнхи ҫулсенче Ухсай Яккăвĕ ачасемпе ҫамрăксем валли те сахал мар ăста произведени ҫырчĕ. «Кăмака ҫинчи Иван», «Пуканесен бригади» поэмăсем чăвашсен ача-пăча литературин фондне яланлăхах ҫирĕппĕн кĕрсе вырнаҫнă ĕнтĕ. Вĕсене поэт пуян та илемлĕ чĕлхепе ҫырнă.

Халăх поэчĕн творчествинче «Ĕмĕт» поэма пысăк вырăн йышăнать. Поэмăра кивĕ чăваш ялĕн пурнăҫне, йăли-йĕркине, тĕп геройăн ача чухнехипе ҫамрăк чухнехи пурнăҫне, унăн ĕмĕчĕ-туйăмĕсене тĕплĕн кăтартса панă. Чи хакли вара поэмăра ҫапах та ку мар, урăххи: чăваш литерату-

ринче Ухсай Яккăвĕ пĕрремĕш хут Владимир Ульянов чăваш çыннине Охотникова вĕренӳ аттестачĕ илмешкĕн экзамен пама епле пулăшнине кăтартса пани.

Вăрçă умĕнхи драматургире Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕр» трагедийĕ тивĕçлипех паллă вырăн йышăнчĕ. Кунта поэт Тутимĕр чăваш паттăрĕ, Пугачевпа Салават Юлаев ĕçĕсене малалла тăсса, XVIII ĕмĕрте чăваш халăхне ирĕклехшĕн пыракан кĕрешӳре епле ертсе пынине кăтартнă. Выранти хресченсен çав кĕрешĕвĕ йĕркесĕр те сапаланчăк пулнипе, пăлхава çĕкленнисем хăйсен умĕнчи тĕллевсене уçăмсăр курнипе чăнах та трагедиллĕ пулса тухнă. Çакна хайĕн произведенийĕнче поэт истори тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырса панă. Трагедири çынсене — Тутимĕр паттăра, Эрпикене, пăлхава хутшăннă ытти геройсене поэт чăн-чăн реализмла сăнарсем туса кăтартма пултарнă. Поэмăра Пушкăрт республикинче пурăнакан ĕлĕкхи чăвашсен юррисемпе, преданийĕсемпе пĕлсе усă курни Ухсай Яккăвĕн çак чаплă произведенине историллĕ, нациллĕ паха колорит парса тăрать.

Ухсай творчестви Тăван çĕршывшăн пынă аслă вăрçă вăхăтĕнче вăйлă аталанса кайрĕ. Çар хаçатĕнче ĕçленине, çапăçусене тăтăш хутшăннине пăхмасăрах (поэт вăрçăра икĕ хут аманнă) ку çулсенче Ухсай Яккăвĕ сахал мар лирикăллă, çавăн пекех эпикăллă произведенисем çырма пултарчĕ. Совет салтакĕ унăн сăвви-поэмисенче алла хĕçпăшал тытса çапăçакан çын çеç мар. Чи малтан вăл аслă çĕршыв хуçи, çĕршыв шăпи çинчен шухăшлакан, ун илемлĕхне-пуянлăхне чунпа туйса тăракан çын пулса тухса тăрать. Совет салтакĕсем юратнă Тăван çĕршыв чысĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре мĕн тери паттăррăн çапăçни çинчен Ухсай Яккăвĕ сахал мар сăвăпоэма çырчĕ.

Чăваш писателĕсем вăрçă вăхăтĕнче çырнă произведенисенчи чи таса ĕмĕт—Çĕнтерӳ ĕмĕчĕ, чи пысăк шанчăк—Çĕнтерӳ шанчăкĕ. Çав ĕмĕтпе çав шанчăк пирĕн халăха, унăн фронтри ывăлĕ-хĕрĕсене усал тăшмана хирĕç пĕтĕм вăя хурса çапăçма, ăна пуçĕпех аркатма хавхалантарнă. Халăхăн патриотла çĕкленĕвне, вăл тăшмана ылханнине, пирĕн тĕрĕслĕх пурпĕр çĕнтерессе шанса тăнине Ухсай Яккăвĕ те хăйĕн произведенийĕсенче, витĕмлĕ кăтартрĕ.

Поэт-воин вăрçăн тертлĕ кунĕсенче хăйĕн вырăнне халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекенсен малти ретĕнче курнă.

1943 çулта Ухсайăн «Вăрçă хирĕнче» ятлă сăвăсен кĕнеки пичетленсе тухать. Унта поэтăн походсенче, окопсенче, блиндажсенче чĕререн тухакан сăмахсемпе çырнă сăв-

висем пичетленнĕ. Кашни сăвăра гражданла туйăм тапса тăрать, вĕсем совет воинĕсен чун-чĕрине, кăмăлне çĕклесçĕ, тăшмана ним шеллемесĕр аркатма чĕнеççĕ.

Тăван çĕршыв çинче пĕр чун та
Фашист таврашĕ юлмиччен
Салтак чĕри кăвар пек çунтăр
Мухтавлă вăрçă хирĕнче!
Шăвваймĕ вăр-хурах çĕленĕн.
Саланĕç унăн шăммисем.
Тасалĕ çĕр!.. Пире ĕненĕр,
Янравлă саслă тăрнасем!

*(«Тăрнасем», 1942 çул)*

Гитлер вăрçă пуçлансанах пирĕн Тăван çĕршыв столицине — Мускава хăвăрт тытса илесшĕн пулнă, анчах унăн тискер ĕмĕчĕ çав çулах путланчĕ. Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем юратнă çĕршыва, унăн столицине хӳтĕлеме пĕр çын пек çĕкленчĕç. Мускав патĕнче Гитлерăн дивизийĕсене аркатрĕç. «Мускав» сăвăпа уçăлать Ухсай Яккăвĕн «Вăрçă хирĕнче» кĕнеки. Поэт унта Тăван çĕршывăн столицине пирĕн халăх хăйĕн ывăлĕ-хĕрĕсене атте-анне пек вĕрентсе ӳстернĕшĕн, вĕсенчен нумайăшне наукăпа культурăн паллă деятелĕсем пулма пулăшнăшăн чĕререн тав тăвать, хаяр тăшман вăйĕсене Совет Çарĕ çапса çĕмĕрни çинчен савăнса çырать:

Пурте, пĕтĕм çĕршывĕпе
Çĕклентĕмĕр, хастарлăн, вирлĕн.
Мускав тавралăхĕ, уй-хирĕ
Сăрланчĕ нимĕç юнĕпе.
Унта хăварчĕ Гитлер мурĕ
Салтакĕсен виллисене.
Тĕнче хитре Мускав вăйне
Курать те, курнă та, вăл курĕ
Пиншер çултан та малашне.

Ухсай Яккăвĕн сăввисемпе поэмисенче совет воинĕ фашистсене хирĕç алла пăшал тытса çапăçакан ахаль çын кăна мар. Вăл вулакан умне аслă çĕршывăн шанчăклă хуçи пек, унăн илемне, пуянлăхне пĕтĕм вăй-халĕпе, чунчĕрипе туйса тăракан патриот пек тухса тăрать. Поэт совет воинĕн сăн-сăпатне, унăн паттăр ĕçĕсене, шухăш-туйăмне тарăн кăтартса пама тăрăшать. Окопра ларать-и салтак, атакăна хатĕрленет-и е çапăçу хирĕнчен тăшмана çĕнтерсе тухать — шухăшĕпе вăл яланах тăван тавралăха курать. Ахальтен мар ĕнтĕ поэтăн «Çыру», «Çумăр», «Ачин ачи», «Кĕлпуксем» сăввисенче çутçанталăк хăй те вилĕме хирĕç, фашистсен тискер ĕçĕсене хирĕç тăрать. Воронеж, Курск, Белгород хулисем патĕнчи çапăçу хирĕсенчен е

Висла леш енчен тăван хирсем енне пăхать те поэт илемлĕ çутçанталăкшăн хăюллăн кĕрешме тупа тăвать:

Тухатăп эпĕ нӳрлĕ окопран,
Хуркайăксем, сире пăхса тăратăп,
Тупа туса калатăп кăмăлтан:
Кăвакăн-симĕсĕн хумханĕ Атăл,
Кĕрлĕ куккуклă, шăпчаклă вăрман,
Унта çӳреймĕ иртĕхсе тăшман!

Поэтăн лирикăллă сăввисенче эпир салтакăн таса чунне туятпăр, инçетрен, вăрçă хиренчен килекен сассине илтетпĕр. Акă, вăл «Карти-карти кикак-кикак хуркайăк» (1943) ятлă сăввинче кăнтăралла тата хĕвелтухăçнелле вĕççе каякан хуркайăксемпе калаçать, вĕсене хăйĕн тăван тавралăхне çитме, ватă амăшне фронтри ывăлĕн тертлĕ çул-йĕрĕ çинчен каласа пама ыйтать.

Чăваш воинĕсен вăрçăри хăюлăхпа паттăрлăхне, вĕсен шухăш-кăмăлне Ухсай Яккăвĕ 1942 çулхи декабрь уйăхĕнче Воронеж фронтĕнче «Пĕр дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне» ятлă сăвăлласа çырнă çырура лайăх кăтартнă. Çак çыру-поэмăра чăваш халăхĕн ывăлĕсем Тăван çĕршыва мĕн тери хытă юратнине, унăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешнине вулакансем лайăх курнă, вăл фронтовиксен ашшĕ-амăшĕсен, ачи-пăчисен, арăмĕсен, савнийĕсен патриотизмла туйăмĕсене çĕкленĕ, вĕсене тылри хĕрӳллĕ ĕçре хавхалантарнă.

Чăваш боецĕсемпе командирĕсем тăван халăх умĕнче уçă кăмăлпа, таса чĕрепе отчет тытаççĕ, тăшмана çĕмĕрсеаркатса пĕрмай малалла утни çинчен, Çĕнтерӳ кунĕ çитессе ĕмĕтленсе çапăçни çинчен каласа параççĕ. Совет Союзĕ пысăк, анлă, анчах каялла чакма вырăн çук. Аслă Дон шывĕ хĕрринче, çапăçу хирĕнче тупа тăваççĕ вĕсем:

Эх, Тăван çĕршыв, аннемĕр,
Шан пире, ĕнен пире:
Аслă Атăлăн илемĕ
Сывă пулĕ ĕмĕрех!

Халăхăмăр, савнă халăх,
Çĕртмĕпĕр чăваш ятне:
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Çĕклĕпĕр ун мухтавне.

Чĕр юна тумлам-тумламăн
Хĕрхенмесĕр тăкрăмăр.
Тăкăпăр, анчах та хамăр
Çĕршыва хăтарăпăр.

«Çырура» поэт фронтпа тыл тачă çыхăнса тăни çинчен те питĕ витĕмлĕ калать. Уралта та, Çĕпĕрте те совет çыннисем фронт вали хурçă-чугун шăратаççĕ, танксем, самолетсем, минăсем тăваççĕ. Колхозлă ял Совет Çарĕ валли апат-çимĕç парса тăрать.

«Çырура» сăнласа кăтартнă геройсем — мораль тĕлĕшĕнчен çирĕп чĕреллĕ, таса чунлă çынсем. Вулакансем умне фронтри йывăрлăхсемпе хăрушлăхсене çĕнтерсе пыракан пирĕн ентешсем: Гаврилов командир, Голицын политрук, Можаев разведчик, Фролов автоматчик, Михайлов сапер тата ытти воинсен сăнарĕсем яр-уççăн тухса тăраççĕ. Вĕсем тăван халăха панă сăмаха çав тери йывăр пулсан та, çирĕп тытса пыраççĕ.

Çавăн пекех Ухсай Яккăвĕ «Гастелло капитан» сăвăра паттăр летчикăн çапăçури хастарлăхне пысăк туйăмпа çырса кăтартать. «Хĕрлĕ галстук» сăвăра фашистсем персе вĕлернĕ пионерăн патриотла ĕçĕ куç умне килсе тухать. Вĕсем пурте, поэт пекех, Тăван çĕршыва фашистсенчен часрах хăтарас ĕмĕт-шухăшпа пурăннă.

Вăхăтсăр пуçне хунă юратнă шăллĕ Кирле çинчен поэт «Шăллăм» ятлă пĕчĕк поэма çырать. Унта вăл ача чухнехи ялти пурнăçа, ӳссе çитĕнсен шăллĕ салтака кайнине, усал тăшмана хирĕç хĕçпăшалпа çапăçма тухнине аса илет. Хĕрӳллĕ çапăçу хыççăн пĕр танк çывăхĕнче тĕлĕрсе кайнă пиччĕшĕ патне тĕлĕкре çамрăк салтак, поэтăн вилнĕ шăллĕ, пырать, вăл пиччĕшне тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешме чĕнет. Пиччĕшĕпе шăллĕ тăван тавралăх, Силпи уй-хирĕ, вăрманĕ çинчен, тискер тăшмана çапса аркатасси çинчен калаçнине поэт пысăк туйăмпа çырса кăтартать.

Совет çыннин чунĕ вăрçăра та çав тери кăмăллă, çутă та таса, çирĕп те чăтăмлă пулнине Ухсай «Шăпчăк» ятлă пĕчĕк поэмăра лайăх кăтартса парать. Поэма геройĕ — чăваш ачи Александр Туринке, вăрçăччен консерватори студенчĕ пулнăскер, йывăр тытăçу вăхăтĕнче нимĕçсен «тигрне» пĕччен чарса лартать. Çапăçу лăпланнă самантра вăл шăпчăк юрланине киленсе итлет, унтах хăюллă шăпчăк çинчен «Шăпчăк» ятлă юрă кĕвĕлет. Çапла поэт пысăках мар сăнарсемпе совет çыннин иксĕлми вăйне, чунхалне уçса парать:

Пурăнма юрри чĕнет,
Ун юрри вăрçмасть пихçан та,
Çавăшпа ăна итлет
Пур салтак та, пур сержант та.

Ухсай Яккăвĕн вăрçă вăхăтĕнчи сăввисемпе поэмисен

ярăмĕ «Влтава шыве хĕрринче» (1945) лирикăллă поэма-хроникăпа вĕçленет. Кунта вăл Аслă Отечественнăй вăрçăн юлашки кунĕсене сăнласа панă. Ун чухне поэт çапла çырнă:

Ылтăн Прага хĕпĕртетчĕ,
Çӳл çуртра, аял пӳртре
Уçнă пур чӳречере
Хĕрлĕ хĕм ялав вĕçетчĕ.
Çитмĕл çичĕ халăх ячĕ
Шавлакан çар хушшинче
Прагăна пĕр танк çинче
Кĕтĕм эп, чăваш поэчĕ.

Кунта поэт хăйĕн лирикăлла геройне чех хĕрĕпе пурнăç шăпи çинчен калаçтарать. Çав калаçура вăл совет воинĕсен вăрçă вăхăтĕнчи патриотла шухăш-кăмăлне витĕр туйса илмелле, чун-чĕрене хумхантармалла уçса панă. Хамăрăн Тăван çĕршыва пуринчен ытларах юратнине, ăна темрен те çывăха хунине чăваш поэчĕ, гварди капитанĕ кăмăла çĕклемелле çырса кăтартать:

Хулара мана чи лайăх
Ылтăн çурт парнелеме
Тытăнсан та, эпĕ кайăп
Хам çуралнă хирĕме...
Чи хакли—Тăван çĕршывăм,
Тĕнчере пĕрре кăна.

Чăваш халăхĕн ывăлĕ-хĕрĕсем вăрçă çулĕсенче, ытти халăхсен çыннисем пекех, ăçта-ăçта кăна çитмен пулĕ, фашистсене хирĕç ăçта кăна кĕрешмен пулĕ! Пур çĕрте те поэт-воин тăван чĕлхе мĕнле янăранине илтет, совет салтакĕсем хăйсен чĕлхине чунтан юратнине курать, нумай юнлă çапăçусенче чăваш чĕлхипе поэзийĕ мĕнле вырăн йышăннине питĕ лайăх курать, ун çинчен вăл «Чăваш чĕлхи» ятлă сăвăра хавхаланса калать:

Орел та, Киев та, Варшава,
Белград та, Будапешт та, Порт-Артур...
Татти-сыпписĕр пычĕ вăрçă шавĕ,
Унта чăваш чĕлхин те пайĕ пур.

Этемлĕх историйĕнчи чи йывăр вăрçă Совет Союзĕ çĕнтернипе вĕçленчĕ. Фашистла вăрă-хурахсене çапса çĕмĕрнĕ çĕнтерӳçĕсем нумайăшĕ килĕсене таврăнчĕç, мирлĕ ĕçе пуçăнчĕç. Чăваш халăхĕн юратнă поэчĕ те 1946 çулта киле таврăнчĕ, пĕтĕм вăя хурса хаяр вăрçă витĕр тухнă халăхăн пархатарлă мирлĕ ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çĕнĕ сăвăсемпе поэмăсем çырчĕ. Вĕсене вулакансем ырласа йышăнчĕç.

Анчах Яков Гаврилович мир вăйĕсене халĕ те куллен-кун çирĕплетмеллине, пирĕн яланах сыхă пулмаллине манмасть, çамрăк ăрăва патриотла воспитани парассишĕн ырми-канми ĕçлет. «Чăн сăмах» сăвăра пĕтĕм чун-чĕререн вăл çапла калать:

Çынсен телейĕпе хисепĕ
Сыв пултăр—уншăн çапăçма
Пăшал тытма вĕрентрĕм эпĕ
Çырма вĕреннĕ аллăма.

Ялан аса илетĕп ăшшăн
Хăйсен юнне те пурнăçне
Пĕр хĕрхенми парса, çĕршывшăн
Пуç хунă савнă туссене.

Нумай-нумай чĕлхеллĕ халăх
Планетăн пур кĕтессинче —
Мир!— тенĕ чух пусатăп алă
Ачап сăпкийĕ умĕнче.

Совет Çарĕ юнлă вăрçăра фашизма çĕнтерни хыççăн пирĕн нумай нациллĕ литература малалла çĕнĕ условисенче хăватлăн чечекленме пуçларĕ. Халĕ ĕнтĕ ун умĕнчи тĕп тĕллевсенчен пĕри вăл — совет халăхĕн вăрçăри паттăрлăхне, çав паттăрлăхăн ку вăхăтрипе малашнехи пĕлтерĕшне анлăн та тарăннăн кăтартасси пулса тăчĕ. Вăрçă хыççăнхи уйăхсенче çырнă произведенийĕсенче чылайăшĕнче чăваш писателĕсем çĕнтерӳ савăнăçне, халăх мирлĕ ĕçе пуçăннине сăнларĕç.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Ухсай Яккăвĕн творчествинчи тĕп темăсенчен пĕри Чăваш çĕрĕнче колхозлă йĕрке епле пуçланса кайса çирĕпленсе çитнине кăтартакан тема пулчĕ. Хăйĕн сăввисемпе поэмисенче вăл халăх пурнăçĕн тĕлĕнмелле вăйĕпе илемне, çĕр ĕçченĕн чĕре çумĕнчи чи хаклă шухăш-туйăмĕсене калама çук пысăк ăсталăхпа çырса сăнларĕ. Çакă вăл уйрăмах «Кĕлпук мучи» поэмăпа «Ту урлă çул» романра палăрчĕ.

«Кĕлпук мучи» поэма—чăваш çĕр ĕçченĕн кунçулĕпе шăпине кăтартакан эпикăллă произведени. Поэмăри тĕп геройсен сăнарĕсенче чăваш çыннин нациллĕ характерĕн чи лайăх енĕсем палăрнă.

Пурнăçра Кĕлпук мучин нумай курма, нумай чăтса ирттерме тивнĕ: кулаксемпе улпутсен пусмăрне те, шурă гвардеецсен тискерлĕхне те тăраничченех тутаннă çак этем. Акă ĕнтĕ Октябрьти революци çĕнтерет. Пачах урăх «юрă» пуçланать Кĕлпукшăн та. Чунĕпе пĕтĕмпех çамрăкланса

кайнăскер, çĕнĕ пурнăç тунă çĕре калама çук хастаррăн хутшăнать вăл. Фашистла Германие хирĕç пынă вăрçă çулĕсенче те Кĕлпук пурнăçĕ — ырми-канми хĕрӳ ĕçлĕ пурнăç. Иксĕлми ĕçченлĕх, кирек мĕнле самантра та пусăрăнчăк кăмăла сӳнтерме пĕлни, пур япала çине те обществăлла куçпа пăхни, халăх ĕçне яланах хастар хутшăнни— акă мĕнле чун-чĕреллĕ çын Кĕлпук мучи Ухсайăн çак чаплă произведенийĕнче. Поэма малтан пуçласа вĕçне çитиех ăшă та хаваслă юморпа тулнă, унтах тĕллĕн-тĕллĕн вичкĕн сатира куратăн.

Колхозлă пурнăç çулĕ çине тăрасси чăваш ялĕнче те, ытти çĕрти ялсенчи пекех, çăмăллăн пулса пыман. Уйрăмах вăтам хресчен хытă иккĕленнĕ. Ухсай хăйĕн «Ту урлă çул» поэминче çавнашкал çынна Калля сăнарĕ урлă кăтартнă. Йывăр та асаплă çулпа пырса кĕрет колхоза Калля. Хăй хуçалăхĕшĕн çунакан çын психологине автор чăн пурнăçри тĕслĕхсене çывăххăн аса илтерекен сăрсемпе çырса кăтартать. Канăç паман иккĕленӳсене сирсе ывăтма пурнăçран кая юлнă тĕшмĕшлĕхлĕ Калляна коммунистсем пулăшаççĕ. Вулакан çакна ĕненет: каярахпа Калляпа унăн арăмĕ Чинавье чи малта пыракан колхозниксем пулса тăнине курать.

Кăмăла килекен ытарайми чăваш хĕрарăмĕн вăйлă сăнарĕ пулса тухнă Чинавье инке поэмăра. Хут пĕлмен тĕттĕм чăваш хĕрарăмĕ, колхоза кĕрсен вăл куç умĕнчех улшăнса пырать, пурнăçри çĕнĕлĕхсене хăюллăн йышăнма пуçлать. Хастар ĕçленĕшĕн ăна ялхуçалăхĕнчи ытти паллă çынсемпе пĕрле Ленин орденĕ параççĕ. Чинавье инке Мускавра пулнине, Кремльте М. И. Калинин аллинчен государствăн чаплă наградине илнине Ухсай Яккăвĕ чуна ачашлакан ăшă сăмахсемпе çырса кăтартать.

Пĕр ӳстермесĕрех эпикăллă произведенисен чăн-чăн ăстаçи тесе калас пулать Ухсай Яккăвне. Унăн «Кĕлпук мучи», «Ача чухнехи çăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Шурă хурăнпа калаçни» поэмисем, «Ту урлă çул», «Акăшкӳль» романĕсем чăваш литературинче çеç мар, нумай нациллĕ пĕтĕм совет литературинче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Чăваш халăхĕ революци тунă çĕрте, Совет влаçне çирĕплетессишĕн пынă кĕрешӳре, социализмлă строительствăра мĕнле вăй-хал хунине анлăн çырса кăтартнă çак произведенисенче.

«Ача чухнехи çăлтăрăм» кĕнекене кĕнĕ виçĕ поэмăна («Ача чухнехи çăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Силпири асамат кĕперĕ») Мускавра та тивĕçлипе пысăк хак парĕç. Вĕсемшĕн поэт М. Горький ячĕпе хисепленекен

РСФСР Государство премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку кĕнекере Ухсай чăваш халăхĕн революци умĕнхи, Октябрь кунĕсенчи тата граждан вăрçи çулĕсенчи пурнăçне эпикăллă картинăсемпе сăнласа парать.

Чухăнлăхпа, асаппа та хĕн-хурпа — акă мĕнле хăрушă паллăсемпе тухса тăрать поэт куçĕ умне чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕ. Анчах поэма геройĕ чăтмалла мар йывăр саманара та тăван çĕрĕн ăшшине туйса тăрать, халăхпа пĕрле пурăнать. Сюжет аталанса пынă май Ухсай Яккăвĕ хăйĕн çак поэмисенче ытларах та ытларах социаллă проблемăсене хускатать. Çамрăк Якку халь ĕнтĕ пурнăçра пулса иртекен ĕçсене, çав ĕçсенчи хире-хирĕçлĕхсемпе хирĕçӳсене тимлĕн асăрхама тытăнать. Ялти ачасемпе пĕрле вăл юртан патша кĕлетки тăвать, кайран ăна патакпа çапа-çапа ватать. Тата каярахпа чухăн хресченсемпе пĕрле ялти çĕрме пуянăн çаранĕсене туртса илнĕ çĕре хутшăнать.

Уйрăмах поэт халăха Аслă Октябрь çутине уçса пама, ăна пурнăçра тĕрĕс çул шыраса тупма пулăшакан ывăлĕсене — большевиксене чуна çывăх ăшă сăмахсемпе сăнарласа парать.

...Вут-çулăмлă çав кунсем иртсе кайнă ĕнтĕ, халăх халь ирĕклĕ çĕр çинче мирлĕ пурнăç тума çанă тавăрнă. Хĕрӳллĕ ĕçре ĕççыннисене аслă Ленинăн — пусмăртисен çулпуçĕпе чи çывăх тусĕн сăнарĕ куллен хавхалантарса, вăй парса пырать. Ленин халăхшăн — пуласлăх шанчăкĕ, пуласлăх ялавĕ.

Ильич  
Хăй лартнă самана сакки.  
Пире сехметлĕ  
Вилĕмрен хăтарчĕ,  
Мана ӳтре  
Вăй ĕрĕхнĕ пирки  
Ыраш вырма  
Каçалăка кăларчĕ.

Палламалла мар чечекленсе улшăнчĕ, çĕнелчĕ çав çулсенче Чăваш çĕрĕ. Хаваслă, телейлĕ те тулăх пурнăçпа пурăнать ĕнтĕ халь ĕлĕк ĕмĕр-ĕмĕр пусмăр айĕнчен тухайман чăваш халăхĕ. Ухсай поэзийĕ те çавна май Силпи шывĕпе çуса тасатнă пек çуттăн та илемлĕн шăнкăртатса юхать. Вăл, çав поэзи, малтан пуçласа вĕçне çитиех çĕрпе уйрăлми тачă çыхăннă, çĕр сĕткенĕпе тулнă.

«Çăкăртан асли çук» тенĕ чăваш авалтан. Çакна асран ямасăр, халăх поэчĕ хăйĕн кашни произведенийĕнчех çĕре, ун çинче тырă ӳстерекен ĕçчен çын аллине мухтать.

Ухсай Яккӑвӗ поэт ҫеҫ мар, ӑста публицист та. Кулленхи пичетре час-часах эпир унӑн халӑх хуҫалӑхӗпе культури ҫинчен ҫырнӑ тарӑн шухӑшлӑ статйисене вулатпӑр. Чӑваш литературине пуҫарса яраканӗн К. В. Ивановӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тӗпчесе ҫырнӑ кӗнекине те унӑнне критикӑра пысӑк хак панӑ.

Чӑваш литературинче тунӑ пархатарлӑ ӗҫӗсемшӗн Ухсай Яккӑвӗ 1946 ҫулта Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ ятне, 1950 ҫулта ЧАССР халӑх поэчӗн ятне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Чӑннипех те савӑнатпӑр, мухтанатпӑр эпир хамӑр литратурӑра ҫавнашкал пултаруллӑ та чаплӑ поэт пурришӗн.

## ҪУЛӐМРА ТУПТАННӐ ПУЛТАРУЛӐХ

Чӑваш халӑх поэчӗ Александр Алга ҫырнӑ произведенисем чи малтанах нумай енлӗ, тарӑн шухӑшлӑ, чӑннипех те илемлӗ пулнипе палӑрса тӑраҫҫӗ. Вӑл поэт та, прозаик та, драматург та пулнӑ, вӑлах паллӑ куҫаруҫӑ та, публицист та, литература критикӗ те. Тӑван литературӑра хӗрӗх ҫул ытла ӗҫлесе, А. Алга вулакансене сахал мар сӑвӑ-юрӑ, поэмӑсем, калавсемпе повеҫсем, очерксемпе статьясем парнелерӗ. Вӗсенче вӑл совет ҫыннисен ҫутӑ ӗмӗтшухӑшне, чун-чӗре пуянлӑхӗпе тасалӑхне, Тӑван ҫӗршывӑн телейӗпе чысӗшӗн ӗҫпе те хӗҫпе кӗрешекенсене тӗрлӗ енчен тата пысӑк ӑсталӑхпа ҫырса кӑтартрӗ. Ҫавӑнпа та вулакан унӑн произведенийӗсене яланах чӗре патне илет, юратать, халӑхӑн кӑмӑлӗпе шухӑш-туйӑмне тарӑннӑн палӑртса тӑнӑшӑн пысӑка хурать.

Александр Егорович Алга (Бачков) халӗхи Тутар республикинчи Теччӗ районне кӗрекен Кӑнна Кушки ялӗнче 1913 ҫулхи ноябрӗн 27-мӗшӗнче чухӑн хресчен килйышӗнче ҫуралнӑ. Пӗчӗклех ашшӗнчен юлнӑскер, вӑл выҫӑллӑ-тутӑллӑ ӳснӗ, сухапуҫ хыҫӗнчен утнӑ, ҫиме ҫӑкӑршӑн ҫын анисене те сӳреленӗ, тырӑ вырма та ҫамрӑклах ҫӳренӗ. Ялти пуҫламӑш шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн пулас поэта тӑлӑх ачасен ҫуртне вырнаҫтарнӑ. Ҫавӑнтан пӗтерсе тухать те вӑл вӑтам шкул, унтан вара, 1927—1930 ҫулсенче, Хусанти Чӑваш педтехникумӗнче вӗренет. «Ҫав ҫулсенчех эпӗ чи малтанхи хут Ҫеҫпӗл Мишши сӑввисемпе паллашрӑм, вӗсенчен тӑрӑшса вӗрентӗм,— тет поэт.— Манӑн малтанхи сӑвӑ Хусанта кӑларакан «Утӑм» альманахра пичетленсе тухрӗ. Ҫакӑнтан вара эпӗ сӑвӑ ҫырмасӑр пӗр ҫул та ирттермен темелле...»

Техникумран вĕренсе тухнă хыççăн А. Алга виçĕ çул хушши пуçламăш шкулта ĕçлет, унтан 1935 çулхи январь уйăхĕнче Чăваш педагогика институчĕн чĕлхепе литература факультетне вĕренме кĕрет. Кунта вăл литература ĕçне чăнласа тытăнать. Унăн сăввисем ĕнтĕ республикăри хаçатсемпе журналсенче тăтăшах çапăнса тухма пуçлаççĕ. 1936 çултан вара вĕсене вăл Бачков хушаматпа мар, Алга псевдонимпа пичетлеме тытăнать.

1938 çулта techинститут пĕтерсе тухнă хыççăн çамрăк, поэт пĕр çул Етĕрнери педагогика училищинче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. 1939 çулта ăна Совет Çарне илсен, вăл çав çулах Хĕвеланăç Украинăна Польша панĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă похода хутшăннă. Гитлерла Германи Совет Союзне вăрă-хурахла килсе тапăнсан вара Александр Алга вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласа фашистла Германие çĕнтеричченех фронтра пулнă. Тăватă çул хушшинче темиçе хут аманнă. Çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн ăна икĕ хутчен Аслă Отечественнăй вăрçăн II степеньлĕ орденĕпе, Хĕрлĕ Ялав, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе, темиçе медальпе наградăланă.

1946 çулта çартан таврăннă хыççăн А. Алга пилĕк çул хушши «Ялав» журнал редакторĕнче ĕçленĕ, унтан Чăваш писателĕсен Союзĕнче литература консультанчĕ, правлени секретарĕ, 1960—1967 çулсенче Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ, СССР тата РСФСР писателĕсен Союзĕсен правлени членĕ, 1963—1967 çулсенче Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă.

Илемлĕ литература произведенийĕсене вырăсларан тата ытти чĕлхесенчен чăвашла куçарас енĕпе те поэт çине тăрса ĕçлет. Вăл А. С. Пушкинăн «Русланпа Людмила» поэма-юмахĕпе нумай сăввине, Т. Г. Шевченкăн «Гайдамаксем» поэмипе сăввисене, Эдуард Багрицкин «Опанас çинчен хунă юррине», «Вильям Шекспирăн «Гамлет» трагедине, Максим Горькин «Итали çинчен хунă юмахĕсене», Юрий Збанацкин «Çеçпĕл» романне, пăлхар, венгр тата ытти халăхсен паллă писателĕсем çырнă произведенисене те нумай куçарнă.

Чăваш композиторĕсем унăн чылай сăввине юрра хывнă. Уйрăмах поэтăн «Шывarmanĕ» легендипе «Хамăр ялсем» поэми тăрăх Федор Васильев композитор çырнă операсене пирĕн халăх юратса йышăнчĕ.

Талантлă поэтăн кунçулĕпе пултарулăх çулĕ — чăннипех те пархатарлă, илемлĕ, тухăçлă çул. Вăл çырнă произведенисем ăсталăх тĕлĕшĕнчен те, шухăш тарăнăшĕпе те чăваш совет литературине пуянлатаççĕ, унăн ылтăн фон-

дӗнче паллӑ вырӑн йышӑнаççӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ ӑна Еçлӗх Хӗрлӗ Ялавпа «Хисеп палли» орденсемпе наградӑланӑ, Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗ, А. Алган тӑван литературӑри тава тивӗçлӗ ӗçӗсене пысӑка хурса, ӑна 1970 çулта Чӑваш халӑх поэчӗн ятне пачӗ.

Пирӗн литературӑра Александр Алга пултарулӑхӗ вӑрçӑ умӗнхи çулсенчех паларса çитрӗ: ун чухне унӑн «Хӗвеллӗ ир», «Сӑвасемпе поэмӑсем» кӗнекисемпе «Шывармане» легенди, «Иккӗн», «Илюк», «Çӗнӗ Кармен», «Ултав» поэмисем пичетленсе тухрӗç. Вӗсенче поэт пуринчен те ытла «ирӗклӗ çӗршывӑн ирӗклӗ кунçулӗ», «чечекленнӗ çӗршыв та маттур çамрӑксем», çӗнӗ саманари çӗнӗ çынсен телейлӗ пурнӑçӗпе юратӑвӗ çинчен чӗре тулли савӑнӑçпа хавхаланса çырать, тӑван халӑха хӑйӗн пархатарлӑ та паттӑр ӗçӗнче çӗнӗрен çӗнӗ çитӗнӳсем тума чӗнет. Асӑннӑ кӗнекесенчи сӑвӑсемпе поэмӑсем çамрӑк поэтӑн ӑсталӑхӗ вӑй илсе çитнине, вӑл пурнӑça сарлакан сӑнлама вӗренсе пынине палӑртаççӗ. Вӗсенче шухӑш яланах уçӑмлӑ, тӗтреллӗ, тӗксӗм картинӑсем çук. Поэт пурнӑça, килес кунçула, вӑл татах чаплӑрах, пуянрах, телейлӗрех пуласса оптимистла курса-ӗненсе тӑрать.

Паллӑ ӗнтӗ, çӗршывра социализм тӑвас ӗç çӑмӑлпа килмен. Ун чухне совет халӑхне шалтан та, тулашран та ура хума сӗмсӗрленекен тӑшман пайтах пулнӑ-ха. Çавӑнпа та поэт йывӑр кӗрешӳре çӗнсе илнӗ телейлӗ пурнӑça куç шӑрçи пек сыхлама чӗнекен патриотла сӑвӑсем чылай çырнӑ («Юн», «Пурнӑç», «Шанчӑк» т. ыт. те).

«Иккӗн» поэма содержанийӗпе те, форма енчен те поэтӑн вӑрçӑччен çырнӑ произведенийӗсенчен чи пысӑкки те вӑйлӑраххи темелле. Поэма геройӗсем, Сантӑрпа Павӑл— пӗр тантӑшсем; вӗсем пӗчӗк чухне вӑйӑра та, килте те, шкулта та, выртмара та пӗрле пулнӑ, туслӑ ӳснӗ. Анчах ашшӗсем вӗсен—пачах икӗ тӗрлӗ çынсем.

Пӗрремӗш тӗнче вӑрçинчен таврӑнсан, Сантӑр ашшӗ ял халӑхне Совет влаçӗ çинчен ӑнлантарать, ӑна хӑйсен ялӗнче йӗркелесе ярассишӗн чунне парса тӑрӑшать. Ун чухне çӗршывра питӗ йывӑр вӑхӑт пулнӑ, урса кайнӑ контрреволюци çав-çавах-ха Совет влаçне пӗтерсе хурассишӗн сӗмсӗррӗн çапӑçнӑ. Павӑл ашшӗ, хӑравçӑскер, шурӑ офицер аллинчи нагана курсан, чӑтаймасть, Сантӑр ашшӗ ӑçта пытаннине кӑтартса ярать... Пӗчӗк Сантӑрпа амӑшӗ тӑлӑха тӑрса юлаççӗ. Çапла вара «Иккӗн» поэмӑра, пӗр енчен, революци салтакне, ӗçхалӑхне ирӗке кӑларассишӗн хастаррӑн кӗрешекен патриота, тепӗр енчен, ӑна сутакана, нӑйкӑш чунлӑ этеме сӑнласа кӑтартнӑ.

Выçлăх çулхине амăшĕ вилнĕ хыççăн Сантăр тăлăх ачасен çуртĕнче ӳсет. Унтан ăна Совет Çарне илсе каяççĕ те, вăл лейтенанта вĕренсе тухать, çĕршыва Инçет Хĕвелтухăç чиккинчи пĕр заставăра хураллать. Кунта вăл ача чухнехи тусĕпе Павăлпа тĕл пулать, шухăша каять. Çавăн пекех Павăл та шухăшлать, иртнине аса илет, хăйĕн хăравçă ашшĕне ӳпкелешсе ылханать. Мĕнех-ха тепĕр тесен ашшĕ? Уншăн Павăл айăплă мар-çке. Вăл колхозра ялти комсомолецсемпе пĕрле ĕçлесе ӳснĕ, халĕ акă пограничник, Тăван çĕршыв чиккине сыхлать, хастар часовой. Анчах ача чухнехи юлташĕпе вăл чунтан калаçса ĕлкĕреймест: тăшман чикĕ урлă каçнă, çапăçма каймалла. Павăл Тăван çĕршыв чиккине хӳтĕлесе чаплă вилĕмпе вилет. Сантăр унăн вилтăприйĕ çинче сăмах калать, паттăр пограничника тусĕ-юлташĕсем ĕмĕрех асра тытса пурăнасси çинчен шантарать.

Çапла вĕçленнĕччĕ «Иккĕн» поэмăн малтанхи вариантчĕ. Вулакансем хăй вăхăтĕнче А. Алга патне: «Павăла вĕлермелле мар, сыватмалла, Сантăрпа вĕсем ача чухнехи пекех пĕрле пулмалла»,— тесе нумай çыратчĕç. Поэт вара вĕсен шухăшĕпе килĕшнĕ. Поэмăн çĕнĕ вариантĕнче Сантăрпа Павăл иккĕшĕ те сывă юлаççĕ, каллех туслашаççĕ, тăван ялне пĕрле таврăнаççĕ.

«Шыварманĕ» легенда чĕлхе илемĕпе те, шухăш тарăнлăхĕпе те А. Алга пултарулăхĕнче паллă вырăн йышăнать. Ахальтен мар вăл каярахпа чăвашсен пĕрремĕш оперин никĕсĕ пулса тăчĕ.

Сĕве шывĕ. «Çап-çуттăн ялкăшать пĕве, таппи ун пит инçе,— тет поэт.— Шарланкă — вăй çаврать, çаврать арман урапине, вара электро çиçĕмĕ вĕçет хире, яла... Ялсем ят панă халь ăна «Ильич çути» тесе. Каç. Йăлтăр-йăлтăр курăнать кашни урам, кĕтес. Кунта юмахри пек тĕнче. Сĕве тăрăх — садсем. Пĕр чарăнми халь вĕсенче юрлаççĕ кайăксем...»

Çĕнĕ пурнăç кӳнĕ пысăк савăнăç, сутă телей кунта тапса тăрать. Анчах халăхра тахçан ĕлĕк пулса иртнĕ ирсĕр ĕçе те манмаççĕ-ха. Сĕве хĕрринчи пĕр ялта ĕлĕк-авал Сарпи ятлă хĕр пурăннă-мĕн. Вăл мĕн ачаран Тăмпай пуян патĕнче лăш курмасăр ĕçленĕ, выçăллă-тутăллă пурăннă.

Сарпи «çап-çамрăк сарă хĕр», çӳçĕ ун «кăлкан пек кăтра», «алка пек куçĕсем—ытарайми сенкер», «çамрăк пĕвĕ—шап-шур яштак хăва». Кунçулĕ тем тери йывăр пулин те, вăл телейлĕ пулас çутă ĕмĕтпе пурăнать. Вăл хăйĕн савнă каччине чунтан юратать, савнийĕ те, хăй пекех чухăнскер, ăна савать. Анчах тискер чĕреллĕ Тăмпай

ирсĕр шухăш тытнă иккен. Вăл çамрăк хĕр-тарçа мăшкăллама тăрать, анчах Сарпи парăнмасть, «сурать те ун питне, кӳршĕ яла тухса тарать — хăй аппăшĕ патне». Тăмпай —«ватсупнă, йĕрĕнчĕк этем» — хĕре хыçран çитсе тытса арман пĕвине пăрахать. Хăйĕн тискер ĕçне тӳрре кăларас тесе, вăл айăпа авалхи киревсĕр йăла çине ярать. Çав йăла тăрăх, пĕве татăласран ун айне хитре хĕре чĕрĕллех пăрахмалла имĕш.

Сарпи савниййĕ Тăмпая тавăрать, ăна хăйне те пĕве хыçне пăрахать.

Легендăна халăх чĕлхин пуянлăхĕпе тирпейлĕ те ăста усă курса çырнă. Сарпи сăнарне поэт халăх юмахĕсенчи пекех кăмăла каймалла, асра юлмалла кăтартнă. Композици енчен те, шухăшпа илемлĕх тĕлĕшĕнчен те «Шывармане» легенда чуна тытса илекен хитре произведени пулса тăнă.

Каларăмăр ĕнтĕ, Александр Алга Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă кунах хаяр çапăçава кĕнĕ, фашистла вăрă-хурахсене аркатса тăкичченех фронтра çапăçнă. Апла пулин те, вăл хăйĕн поэт тивĕçне те асран кăлармарĕ, нӳрлĕ окопсенче, блиндажсенче е тата госпитальсенче совет салтакĕсем Тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратнине кăтартакан, тăшмана ним шелсĕр аркатма, мĕнпур мăшкăл-инкекшĕн тавăрма чĕнекен çулăмлă сăвăсем çырчĕ.

Акă, вăрçă пуçланнă кун çырнă «Июнĕн 22-мĕшĕ» ятлă сăвă. Унта поэт совет салтакĕсен паттăр шухăш-кăмăлне, вĕсем ирсĕр фашистсемпе юлашки юн тумламĕ юлмиччен, вăрçа чаплă Çĕнтерӳпе вĕçличчен кĕрешме хатĕррине чуна хускатмалла уçса панă:

Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк, пĕр харăс тăрса,
Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе
Васкарăмăр аслă вăрçа.
Эпир—малтисемччĕ; çĕнме çĕкленсе
Кĕрейрĕмĕр çулăм ăшне,
Ахлатрĕ тавралăх, шартах чĕтренсе,
Тем шăхăрчĕ: хăшĕ-хăшне!
Вăл вут пек снаряд-мĕн шартлатрĕ çумра,
Сӳ килчĕ, сӳ кайрĕ хĕрӳ...
Пĕрех, çирĕп шанчăк çуралчĕ чунра,
Ун ячĕ—асту—Çĕнтерӳ.

«Эпир—малтисемччĕ»,—тет поэт. Пăшала аларан пăрахмасăр çапăçнă кунсенче вăл «чи шанчăклă ĕмĕт—пулас Çĕнтерӳ» салтакăн йăваш кăмăлне хытарни çинчен калать, çав ĕмĕт Çĕнтерӳ кунĕ килсе çитиччен чĕререн тух-

маннине палăртать. Витĕмлĕ те ĕненмелле янăраççĕ «Харушлăхпа хаярлăх» сăвăра поэтăн çулăмлă сăмахĕсем:

Хитре хуласем ялкăшаççĕ вутра,
Ялсем çулăмра, улăхсем чĕрĕ юнлă...
Тăшман пуснă вырăн суранлă выртать,
Тăшман иртнĕ вырăн пушхир пулса юлнă.

Анчах ăçта çитнĕ унта тискер вилĕм акакан фашистсен иртĕхесси вăхăтлăх кăна. Тăван çĕр суранĕсемшĕн вĕсем нихçан та каçару ан кĕтчĕр! Сăвăç ăшчиккинче вилесле тавăру вучĕ çулăмланса çунать:

Шанатпăр эпир: çав çĕлен-калтана
Час нӳрлĕ çĕр çăтĕ, час нӳрлĕ юн витĕ,
Хаяр тавăру ярса тытнă ăна.
Пире Çĕнтерӳ курăнать çулăм витĕр.

«Шухăш», «Асил-ха, юлташ!..», «Ырă ят», «Хаяр чунри ачашлăх», «Инçетре, Сĕве таврашĕнче» сăвăсенче те çапăçу хирĕнчи совет салтакĕн вăйлă та пысăк туйăмĕсем тарăннăн сăнланса юлнă. Поэтăн лирикăллă геройĕ вăрçăн вăрăм та тертлĕ çулĕ çинче — Çĕршывăн хĕвеланăç чиккинчен тытăнса Атăл хĕррине çитиччен, унтан Атăл хĕрринчен Берлина çитиччен — чунĕпе çирĕпленсе вăй илнĕ. Пурнăçа ĕненесси, тăшмана пурпĕр çĕнтерессине шанасси пайтах йывăрлăхсене тӳссе ирттернипе пĕрле килет. «Тар-шурлă çул та, çил сивви те çӳçентермерĕç салтак чунне: вăр-вăркăшуллă тĕтĕм витĕр эп куртăм Çĕнтерӳ кунне»,— тет поэтăн çапăçусенче сахал мар хĕн-асап тӳснĕ лирикăллă геройĕ «Çул çинче» (1944) сăвăра.

Совет Çарĕ фашистла Германи çĕрĕ çине çитсе кĕрсен, унти нихçан манăçми çапăçу картинине, пирĕн çарсем тăшмана хăватлăн çĕмĕрсе-çĕнтерсе пынине поэт «Тăшман çĕршывне кĕрсен» (1944) сăввинче лайăх сăнласа кăтартать:

Пуç урлă шăхăрать шав тăтăшшăн
Апăçалла пиншер снаряд.
«Тăван çĕршывшăн! Халăхшăн!»—
Саспа пĕтĕм вăрман янрать.

Вут хирĕçет. Чарасшăн. Курăпăр!
Танксем тухаççĕ мăн çула.
Тăшман тарать. Хăтласшăн. Пурĕпĕр
Ая пулса выртса юлать.

Поэт-воин, тăшмана аркатса, вилĕме çĕнтерсе, хăватлă Совет Çарĕпе пĕрле купран-кун Аслă Çĕнтерӳ патне çыв-

харса пырать. «Нумай çĕршыва, юлташсем, çитсе куртă-мăр, пит вăрăм çулсем пулчĕç юнлă, тар-шурлă, çапах ӳкермерĕмĕр хамăр чыса»,— тет вăл «Бранденбург хапхи умĕнче» (1945) ятлă сăввинче.

Кĕтнĕ Çĕнтерӳ çитрĕ. «Паян тул çутăлчĕ йăлт урăх сăнпа», —савăнăçлăн хумханса калать поэт «Майăн 9-мĕшĕ» ятлă сăввинче. «Паян Çĕр кăкăрĕ сывларĕ урăх вăйпа»,— çавнах хавхаланса çирĕплетет вăл тепĕр ятсăр сăввинче те.

Вăрçăн юлашки çулĕ, çывхарса килекен Çĕнтерӳ Алга поэзине çĕнĕ сывлăш, çĕнĕ ĕмĕт-шухăш вĕрсе кĕртет. Унăн фронтра пайтах хура-шур тӳснĕ геройĕсем ĕнтĕ хăйсем çывăх вăхăтрах мирлĕ ĕçпе пурăнма тытăнасси çинчен шухăшлаççĕ. Çапăçакан халăхăн çак çутă та ырă ĕмĕчĕпе шухăш-туйăмĕ «Дунай хумĕсем», «Вена вăрманĕ», «Пурнăçпа ĕмĕт» сăвăсенче уйрăмах вăйлă палăрать.

Вăрçă канонади урăм-сурăм тискеррĕн ӳлесе-кĕрлесе тăнă тертлĕ çулсенче поэт-фронтовик пысăк жанрлă произведенисем те сăвăларĕ. Вĕсем: «Атăл каччи», «Вĕсем çирĕм саккăрăн пулнă», «Тупăпа сĕрме купăс», «Одер çинче», «Полк ялавĕ» т. ыт. те.

«Атăл каччи» поэмăра (1941) Тăван çĕршывăн аслă вăрçин пуçламăш кунĕсене сăнланă. Йывăр вăхăт. Тăшман вăйлă та тискер. Вăл урса кайсах пирĕн хуласемпе ялсем çине вут тăкать. Çав трагедиллĕ кунсем çинчен Алга поэми тĕрĕс те чуна пырса тивмелле каласа парать. Совет воинĕсем Гитлер вăрă-хурахĕсемпе паттăррăн çапăçаççĕ, анчах эпир тăшмана 1941 çултах çĕнтерме пултарайман-ха, пирĕн çарсен ун чухне ирĕксĕр каялла чакма тивнĕ.

«Вĕсем çирĕм саккăрăн пулнă» поэмăра Мускава хӳтĕлекен паттăрсен сăнарĕсем вулакан умне уççăн тухса тăраççĕ. Вĕсем — панфиловецсем, тăшмана вилсен те парăнман гварди салтакĕсем. Поэт вĕсем Диев политрук ертсе пынипе Тăван çĕршывшăн, Мускавшăн тĕлĕнмелле харсăррăн çапăçнине асра юлмалла сăнласа парать.

Çирĕм сакăр героя асăнса, совет литературинче пайтах сăвă-юрă, легендăсемпе поэмăсем çырнă. Çав паха произведенисем хушшинче А. Алга поэми те хăйне тивĕçлĕ пысăк вырăн йышăнать.

«Полк ялавĕ» поэма пысăк мар, вăл совет офицерĕн ырă кăмăлĕпе çапăçури паттăрлăхĕ çинчен калакан легенда майлăрах янăрать. Çак произведени вулакана вăрçăн юлашки çулне, фашистсен çарне аркатса тăкнă кунсене аса илтерет. Совет Çарĕ вут-çулăм витĕр тăшман çĕрĕ çине çитсе кĕнĕ, анчах фашистсем çаплах-ха парăнас-

шăн мар, пирĕн полксене малалла кайма чăрмантарса унта та кунта хирĕç тăраççĕ.

Поэма геройĕ — полк командирĕ Волгин, Атăл тăрăхĕнче çуралса ӳснĕскер. Вăл çарти йăлапа хаяр çапăçу умĕн полк ялавне чуптуса илет. «Ялав вĕлкĕшет çилпе, чĕнет çапăçăва»,— тет поэт. Волгин — вĕри чунлă, ăслă командир, чăн-чăн патриот. Чи хăрушă самантра вăл «Ялав кăларăр хăвăртрах!» тесе приказ парать.

Тăшман темиçе хутчен асар-писер атака пуçлать, ялавçă ӳкет, вара тăван полк ялавне тепри васкаса çĕклет. Хĕрлĕ ялав алăран алла куçать, юлашкинчен ăна полк командирĕ хăй çĕклет. «Пĕтмен-ха полк! Полк сывă! Ялав вĕл-вĕлкĕшет кăна — тăшман çине полк ыткăнать».

Вăрçă хура-шурне лайăх пĕлекен поэтăн хăй курни-тӳсни çинчен каламалли пайтах. «Одер çинче» сăвăлла очеркра та, «Аслă тивĕç», «Çулăм витĕр çул выртать» поэмисенче те, вăрçă хыççăн çырнă нумай-нумай сăввинче те Александр Алга Совет Çарĕ иртнĕ вăрçăра Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн çапăçни çинчен пысăк ăсталăхпа çырса кăтартать.

Уйрăмах унăн 1975 çулта чаплă Çĕнтерӳ юбилейне халалласа çырнă «Вăтăр çултан» поэми тарăн шухăшлă. Кунти лирикăллă герой ылханлă фашистсене хирĕç вăрçăн малтанхи кунĕнчен пуçласа юлашки сехетченех хастаррăн çапăçнă. Вăл Мускава хӳтĕленĕ, Сталинградшăн, Киевшăн, Днепршăн юнпа тар тăкса кĕрешнĕ, пусмăрта тарăхса пурăнакан ют çĕршыв çыннисене ирĕке кăларнă, çĕре хутшăннă, рейхстага штурмланă... Вăл аран сывă юлнă. Вăтăр çул иртсен, герой хăй çапăçнă вырăнсене ывăлĕпе çитсе курать. Анчах вăл чавнă окопсемпе траншейăсене, вăрçă вăхăтĕнче тăшман ишнĕ, çунтарнă хуласемпе ялсене тупаймасть. Вăтăр çул хушшинче пурнăç кунта калама çук улшăннă. Çапах та хăрушă çапăçусен йĕрĕ халăх асĕнчен нихçан та тухас çук. Поэт-воин, вăрçăн малтанхи кунĕсене аса илсе, акă мĕнле калать ывăлне:

> Тăнла, çакăнтан тухрĕ манăн
> Тарпа та юнпа шӳнĕ çул.
> Хăшне-пĕрне маннă та ĕнтĕ,
> Пĕрремĕш куна манас çук.

Пайтах ĕмĕр иртĕ, анчх совет халăхĕ 1418 кун хушши пынă çапăçура тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтарнине, Аслă Çĕнтерӳшĕн пĕтĕм вăйне хурса, çĕрне-кунне пăхмасăр ĕçленине манмĕ, ăна пĕтĕм тĕнчери этемлĕх ĕмĕр-ĕмĕр ырăпа асăнĕ. Тĕнче фашизм ирсĕрĕнчен тасалчĕ, эпир халĕ

миршӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешмелле, ҫӗршывӑмӑр хӑватне пӗрмаях ҫирӗплетмелле тет автор.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче Александр Егорович проза жанрӗпе те чылаи ӗҫлерӗ. Чӑваш вулаканӗсем унан малтанхи калавӗсемпе 40-мӗш ҫулсен вӗҫӗпе 50-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче паллашма пултарчӗҫ. Каярахпа автор вӗсене хӑйӗн прозӑпа ҫырнӑ «Юлташпа юнашар» ятлӑ пӗрремӗш кӗнекинче пухса кӑларчӗ.

Кӗнекери калавсенче пуринче те совет салтакӗсен вӑрҫӑ ҫулӗсенчи паттӑр ӗҫӗ-хӗлӗ тӗп вырӑнта тӑрать. Автор хӑйӗн геройӗсене фронтри тӗрлӗ ситуацисенче, тӗрлӗ ларутӑрура илсе кӑтартать. Ҫакӑ ӑна чи малтанах геройсен характерӗсене нумай енлӗн уҫса пама пулӑшнӑ. Сӑмахран, «Малтанхи кун» калавах илӗпӗр.

...Ирхине ирех тревога янӑраса каять те, боецсем, питӗ хӑвӑрт тумланса, палаткӑран вирхӗнсе тухаҫҫӗ. Ҫавӑнтах хыр вӑрманӗ ҫинче, пуҫ тӑрринчех, темскер хӑрушшӑн кӗрлени илтӗнсе каять, сывлӑшра хура самолетсен пысӑк ушкӑнӗ тискеррӗн ӳлесе вӗҫет. Вӗсене сиввӗн пӑхса ӑсатакан боецсем ку мӗне пӗлтернине тӳрех тавҫӑраймаҫҫӗха, каярах кӑна ҫав виле ҫӑханӗ пек самолетсем кунтан пит инҫетри мар хуласем ҫине темӗн чухлӗ бомба тӑкнине, станцисене аркатнине, чаплӑ ҫуртсене ватса-ҫӗмӗрсе пӗтернине ҫилленсе те тарӑхса пӗлӗҫ. Тата мӗн чухлӗ ҫын, канмалли куна курма вӑранаймасӑр, чул купи айне юлнӑ!..

Кунта, чикӗре, вӑрҫӑ тин ҫеҫ пуҫланнӑ-ха. Саперсен батальонӗн уйрӑм взвочӗ, хӑвӑрт пуҫтарӑнса, вӑрман хӗррине тухать. Чикӗ енчен татти-сыпписӗр кӗрӗслетнӗ, шатӑртатнӑ, кӗмсӗртетнӗ сасӑсем вӑйланнӑҫем вӑйланса сывхараҫҫӗ. Сывлӑшра ҫаплах тӑшман самолечӗсем явӑнаҫҫӗ, бомба хыҫҫӑн бомба тӑкӑнать, пулеметсем ҫӗр ҫине вилӗм тӑхланӗ сапаҫҫӗ. Хӗрнӗҫемӗн хӗрсе пырать вӑрҫӑ...

Писатель малалла вӑрҫӑ хирне, совет салтакӗсемпе командирӗсен паттӑрлӑхне ҫырса кӑтартать. Акӑ, Набойщиков лейтенант взвочӗ, питӗ асӑрханса, чугун ҫул станцине поездсем иртсе ҫӳреме юрӑхсӑра кӑларса хӑварать. Ун хыҫҫӑн саперсем хӑйсен ротине шырама пуҫлаҫҫӗ. Ҫула май ыраш хушшинче виҫӗ нимӗҫ разведчикне тытаҫҫӗ. Кӗҫех взвод, ял вӗҫӗнчи пӗчӗк сӑрт хыҫне ҫитсе тухса, тӑшман ҫулне пулеметпа пӳлет те, пирӗннисем нимӗҫсене ялтан хӑваласа кӑлараҫҫӗ. Ҫапла вара вулакан Никушев генерал-майор ертсе пынӑ 41-мӗш дивизи вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенче те тискер тӑшманпа паттӑр ҫапӑҫнине «Малтанхи кун» калаври пӗр взвод салтакӗсен хӑюллӑ ӗҫӗсенчен те аван курать.

Александр Алга калавĕсенче вăрçă картинисем куçа курăнмалла уççăн тухса тăраççĕ. Вĕсенче ытлашши сăрсем çук, çавăнпа та вĕсем чăн пурнăçри пекех витĕмлĕ те ĕненмелле пулса тухнă.

Акă, пĕр тĕслĕх. Килти ăпăр-тапăра тиенĕ урапасем, çурăм хыçне хутаç çакнă ватăсем, ачисене çавăтнă е йăтнă хĕрарăмсем фашистсенчен тарса ӳкме васкаççĕ. Сасартăках вĕсем тĕлне тăшман самолечĕсем килсе тухаççĕ. Вилнисем, аманнисем. Тата ăçтан-ха хумханмасăр вулама пулĕ çак йĕркесене: «Вĕсем çул хĕрринче пĕр хĕрарăм выртнине курчĕç. Унăн сарă кăтра çӳç пайăрки куçе çине ӳкнĕ, таса шурă пичĕ çинче суран йĕрĕ çук. Çамрăк. Вăл, аллисене лĕнчĕр ярса, хускалмасăр выртать, кăкăрĕ çĕкленмест. Ун çумĕнчех кăлкан пек шурă çӳçлĕ пĕр хĕрача ларать. Вăл йĕмест. Пăвăнса тăракан ӳтлĕ аллисемпе амăш кăкăрне хыпашлать. Унăн çиесси килнĕ...» («Çулсем-йĕрсем».)

Е тата: пĕр яла, каç пулас умĕн, нимĕçсем пырса кĕреççĕ те унтах çĕр каçаççĕ. Ирхине çаксем кил хуçи карчăкне икерчĕ пĕçерме хушаççĕ. Килĕнче улттăри хĕрача пулнă. Фашистсем ăна икерчĕ сĕнеççĕ. «Эпĕ нимĕç икерчине çиместĕп!»— тет хĕрача çирĕппĕн. «Офицер, çак сăмахсене илтсен, куçне чарса пăрахнă, унтан пистолетне вĕлт çеç туртса кăларнă та—пӳрт ăшчикки янлатса кайнă. Пуçĕнчен тивертнĕ хĕрача урайне персе ӳкнĕ». («Дубов».)

1945 çулхи çуркунне, хăй юлашки хут амансан, писатель Германири пĕр госпитальте сывалса пурăннă. Суранĕ тӳрленсе çитерехпе вăл уçă сывлăша тухкаласа çӳренĕ. «Эпĕ хир тăрăх ансăр сукмакпа утрăм,— çырать автор.— Сисмен те, шухăша пула, инçетех кайнă иккен... Хĕвел каçалана сулăннă. Госпитале хăвăртрах таврăнас тесе, тӳрĕ çул шыраса, анкартисем енне пăрăнтăм. Пĕр пахчара вара пĕчĕкрех кăна хуралтă умне çитсе тăтăм. Чӳречисем те пур, ахăртнех, çулла пурăнмалли пӳрт пулас. Алăкĕ уçă. Мĕншĕн кĕрсе пăхас мар юриех? Шалта пĕр сĕтел, пукан, кравать—урăх нимĕн те çук. Стенасем çине — куратăп — кăранташпа тем çыркаласа пĕтернĕ. Вулатăп: Валя, Надя, Эвелина. Вырăс хĕрĕсен ячĕсем иккен. «Мĕнле майпа, ăçтан?»— шухăш кĕрет пуçа. Шухăш тупсăмне шыраса, сĕтеле уçса пăхрăм. Çав пĕчĕк сĕтелте вара эпĕ пĕр хулăн тетрадь тупрăм... Тетрачĕн хуплашки çине «Мезенцева Эвелина» тесе çырнă. Акă вăл, çав тетрадь».

Çапла пуçланать «Ютра» повесть. Малалла вара эпир Эвелина Мезенцеван дневникне вулама тытăнатпăр. Çыр-

са кăтартнă ĕçсем ăннипех те питĕ хăрушă. Германие тытса кайнă хĕрсен синкерлĕ шăпи-инкекĕ, терт-асапĕ, чуна кишĕклесе ыраттаракан йывăр шухăшĕ — кирек кама та хурлантармалла, тарăхтармалла, фашистла чуралăха хирĕç хаяр курайманлăх çулăмне чĕртмелле. Повесть фашизм этемлĕхшĕн мĕн тери хăрушшине, вăл халăхсене инкек-синкекпе асап тата вилĕм кăна кӳнине вулакана çивĕччĕн туйтарать, Гитлер вăрă-хурахĕсене пĕтĕм чĕре хăвачĕпе курайми пулма, халăхсен тăнăç пурнăçне яланах сыхă упрама вĕрентет. Кунпа пĕрлех çак паха произведени вăрçă çулĕсенче совет çыннисен ирсĕртен те ирсĕр тăшманпа кĕрешес шанчăкĕпе ĕмĕт-шухăшĕ фашистсен тамăкĕнче те çав-çавах çирĕп пулнине, вĕсем хамăрăн ытарайми Тăван çĕршывăмăра хĕрӳллĕн юратнине кăтартса парать.

Повесть малтан пуçласа вĕçне çитиччен вулакана хăйĕн тарăн шухăшĕпе, ăста тунă сюжечĕпе, яр-уççăн ӳкерсе кăтартнă сăнарсемпе тытса пырать. Ахальтен мар, вăл пичетленсе тухсан, писатель патне, унта сăнланă вырăс хĕрĕсен малашнехи шăпи çинчен ыйтса, нумай çырусем килнĕ.

1968 çулта А. Алга «Хĕçпе çурла» романăн пĕрремĕш кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Писатель унта иртнĕ вăрçăн малтанхи çулне анлăн сăнласа кăтартать. Куç умне 1941 çулхи ял пурнăçĕ, çынсен ырми-канми ĕçĕ-хĕлĕ тата фронтри хаяр çапăçусем туха-туха тăраççĕ.

Романра вулакан пуринчен ытла Гурьяновсен килйышĕн пурнăçĕпе кĕрешĕвне, шăпине интересленсе сăнаса пырать. Вĕсем — чи асли, Алексей Гурьянов, ватăлмалăх кунĕнче колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçлать, вăрçа пула вăйпитти арçынсемсĕр юлнă пысăк хуçалăха ертсе пырать; аслă ывăлĕ, Игнатий, вăрçăччен председательте ĕçленĕскер, фронта тухса каять, нимĕç фашисчĕсемпе Мускав патĕнче çапăçать; кĕçĕн ывăлĕ, Николай, Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче паттăррăн кĕрешет; хĕрĕ, Елена, мединститут студентки, фронта кайма хатĕрленет; аслă кинне, Укçинене, бригадира суйлаççĕ; кĕçĕн кинĕ кăна, Николайăн çамрăк мăшăрĕ, Валентина, тин çеç вăтам шкултан вĕренсе тухнăскер, малтанлăха нимле ĕç патне те çыпăçаймасть, каярахпа ялти шкулта ачасене вĕрентме пуçлать.

Романра сăнласа кăтартнă геройсем вăрçăн малтанхи тапхăрĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе çирĕпленеççĕ, унччен пулман кăткăс ыйтусене тĕрĕс татса пама вĕренеççĕ.

Акă, Николай Гурьянов. Вăл — совет воинĕсен нумай

паха енĕсене пĕтĕмлетекен сăнар, хăюллă та ăслă командир. Тăшман кусĕ умĕнчех вăл ротăри саперсемпе пĕрле кĕпере сывлăша сирпĕтсе ярать, вăрçăри юлташĕсен пурнăçне сыхласа хăварать. Çапăçу мĕнле вĕçленесси командиртан нумай килнине романра тĕрĕс кăтартса панă. Çакна эпир Николай Гурьянов, хăйĕн ротипе тăшман тылне татăлса юлсан, тан мар çапăçусем витĕр пурпĕр çĕнтерсе тухнинчен те аван куратпăр.

Çар çыннисенчен Илларионов майор, Фатюшин политрук, Кураков лейтенантпа Бойко старшина, Савандеев ефрейтор сăнарĕсем те асра юлаççĕ. Вĕсен ĕçне-хĕлне, шухăшкăмăлне автор вăрçăри тĕрлĕ эпизодсенче уçса панă.

Алексей Гурьянов — утмăл çулхи колхозник, ялта ăна пурте хисеплеççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр çулсенче вăл колхоза аванах ертсе пырать. Уншăн пулсан, пĕр утăм çĕр те усăсăр ан выртттăр, хирте пĕр çĕрулми те юр айне ан юлтăр, пур ĕç те вăхăтра пулса пытăр. Кунне-çĕрне пĕлми тăрăшса ĕçлеме ăна фронт хушать, фронтри ывăлĕсем хушаççĕ. Мĕнле ырă çын тата вăл хăйĕн килйышĕнче! Хĕрĕх çул ытла пурăннă арăмĕпе шӳтлесе харкашкаласа илет те, пуçне усса, шухăша каять; ĕçчен те юратнă машарне пытарнă чухне, çын куçĕнчен пăранса, куççульне шăлать. Нимĕнле йывăр ĕçрен те хăраман, нихçан та суйкăн пулман, тĕрĕс, йĕркеллĕ пурнăçпа пурăнакан çын сăнарне кăтартса парать писатель. Гурьянов нумай кăткăс ĕçре пулать (çĕр ĕçĕ, халăх ĕçĕ), темĕнле йывăрлăх та курать, тӳсет (элек, суялăх), анчах ниçта та парăнмасть, хăй çулĕнчен пăрăнмасть. Ахальтен мар унăн вăрçăри ывăлĕсем çинчен ялта: «Йăлтах ашшĕне хывнă»,— теççĕ. Вăл чăн-чăн таса чунлă çын — пурнăç çынни!

А. Алга вăрçă тапхăрĕнчи пурнăçпа çынсем çинчен çырнă прозăллă произведенисенче эпир чи кирлине, чи хаклине уççăн курса тăратпăр. Çав вăхăтрах автор киревсĕр те нишлĕ çынсене те асăрхамасăр иртмест. Вĕсем — фашистсене сутăнса полицай тумтирне тăхăннă йĕрĕнчĕк Хмара («Çулсем-йĕрсем»), çăмăл пурнăç шыракан, ейкеленсе пурнакан вĕçкĕн Барановский майор («Хĕçпе çурла»), çапкаланчăк та элекçĕ Мирун Тимахвийĕ (çавăнтах) т. ыт. те. Пурнăç пĕр тикĕс пымасть. Халăх ĕçĕпе кĕрешĕвĕнчен пăрăнакансене, çăмăл пурнăç шыракансене фронтра та, тылра та вăхăтра тăрă шыв çине кăлармалла, вĕсене тĕпĕ-тымарĕпе кăкламалла,— çакна каласшăн пулнă вулакана вĕсен йĕрĕнчĕк сăнарĕсемпе писатель.

Çапла вара, прозăра илсен, калавсенчен пуçласа повеç-

сем патне çитнĕ писатель юлашки çулсенче чăнласах пысăк ĕçе тытăннăччĕ. Анчах «Хĕçпе çурла» романа вăл пĕтĕмпех çырса пĕтереймерĕ, чылай вăхăт чирлесе пурăннă хыççăн 1977 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче вилчĕ.

Александр Алга хăйĕн произведенийĕсенче çарпа патриотизм темине хускатать-и е паянхи мирлĕ пурнăç çинчен çырать — кирек хăçан та вăл тĕнчере вăрçă хăрушлăхĕ сирĕлменнине, империалистсен çăткăн вăйĕсем ăна çĕнĕрен амалантарса яма хатĕрленнине асра тытать, ялан хыхă пулма, мир вăйĕсене куллен-кун çирĕплетсе пыма чĕнет.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче поэтăн пултарулăхĕнче коммунизм обществине туса хурас аслă тĕллевпе хавхаланнă совет халăхĕн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ тĕп вырăн йышăнать. Çак темăпа çырнă пысăк пĕлтерĕшлĕ произведенисен хисепне тивĕçлипех унăн «Хурама та хурăн» (1960) повеçĕ, «Хамăр ялсем» (1953—1955) тата «Тăван тавралăх» (1968—1970) поэмисем кĕреççĕ.

«Хамăр ялсем» поэмăри ĕçсем Мăнъял çыннисен кулленхи пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă. Поэма пуçламăшĕнчех А. Алга вулакана хăйĕн тĕп геройĕсемпе — хуларан тин таврăннă МТС директорĕ Иван Юмановпа, колхоз председателĕнче ĕçлекен Якур Степановпа, Ольга Алексеевна агрономпа паллаштарать. Виççĕшĕ те вĕсем:

> Пĕрле ӳссе, пĕрле вылянӑ,
> Пĕрле вĕреннĕ пĕр шкулта,
> Ĕмĕтсене вĕçтернĕ янă
> Инçе, инçе... Унтан... унтан
> Хăрушă вăрçă витĕр тухнă,
> Аçта кăна çитсе курман!

Вĕсемпе пĕрлех пирĕн ума Иван Юмановăн утмăлтан иртнĕ ашшĕ (вăл колхоз утарĕнче ĕçлет), таса чунлă, пурнăçа юратакан хастар чĕреллĕ çамрăксем — Варвари, Санюк, Сантăр, парторганизаци секретарĕ Веселовский, вĕчĕх чунлă, хăйшĕн çеç антăхса тăрăшакан Цифиркин бухгалтер сăнарĕсем тухса тăраççĕ.

«Хамăр ялсем» поэмăна тишкернĕ май хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай çапла çырнăччĕ: «Мал ĕмĕтлĕ çынсем паянхи кунпа çеç пурăнмаççĕ. Вĕсем, мăн çултан пăрăнса, уйрăм çыншăн кăна илĕртӳллĕ улах сукмак шырамаççĕ, пĕтĕм халăхăн пуласлăхне курса тăраççĕ, çавна çывхартасшăн хыпса çунаççĕ. Çавăн пек паттăрсем çинчен çырать Алга. Унăн Юмановĕ, Ульки, Веселовскийĕ тата ытти çав шухăшлă çыннисем чăваш ялĕнче пу-

рӑнсах пӗтӗм ҫӗршыв ӗҫне, парти ӗҫне, коммунизм ӗҫне тӑваҫҫӗ». («Асталӑхпа чӑнлӑх»—статьясен пуххи, 1964 ҫ., 70 с.)

Юманов — вӑрҫӑ хура-шурне тӳссе-чӑтса ирттернӗ коммунист. Ҫамрӑк чухне вӑл Улькана юратнӑ, вӑрҫӑ вӗсене уйӑрнӑ. Фронтран таврӑннӑ хыҫҫӑн малтанах вӑл заводра ӗҫлет, унтан парти чӗннипе, чӗри хушнипе яла таврӑнать, МТС директорӗнче ӗҫлет, района ҫӗклессишӗн пӗтӗм вӑйхалне парса тӑрӑшать, рабочисем хушшинче ӗҫ дисциплинине хӑпартать, Цифиркин пек сӑтӑрҫӑсене аппаратран тасатать. Райком пленумӗнче Юманов малта пыракан колхоз председательне Степанова хытӑ критиклет, мӗншӗн тесен вӑл хӑйне ҫеҫ юратать, чапшӑн ҫунать, кая юлнӑ кӳршӗ колхозсене пулӑшмасть.

Унтан кӗҫех Юмановпа Степанов хирӗҫсе каяҫҫӗ. Пӗрле ӳснӗ, ача чухне туслӑ пулнӑ юлташӗ пирки Степанов элеклеме тытӑнать, Цифиркинпа пӗрле ӑна путарма тӑрӑшать.

Юманов — халӑхпа чӗререн калаҫма, ӑна ӑнланма, уншӑн тӑрӑшма пӗлекен руководитель. Ҫавӑнпа та ун авторитечӗ МТСри механизаторсем хушшинче куллен-кун ӳссе пырать. Коллектив ӗҫне йӗркелесе ертсе пыма ӑна парторганизаци секретарӗ Павел Веселовский те нумай пулӑшать. Веселовский — вырӑс ҫынни, МТСа промышленноҫран килнӗ, халӑхпа ҫывӑхрах пулас тесе, чӑвашла калаҫма та вӗренет. Ун ҫинчен поэмӑра нумаях каламан пулсан та, вӑл асра юлакан сӑнар.

Улька — Ольга Алексеевна — тӑван колхоз уй-хирӗнче вӑйлӑ тырпул акса ҫитӗнтерессишӗн пӗтӗм хастарлӑхне паракан агроном. Эпир яланах ӑна кулленхи ӗҫре, халӑх хушшинче куратпӑр. Ҫамрӑк пулсан та, вӑл сахал мар хура-шур курнӑ, нумай тӳснӗ, чӑтнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ӑна ялти хӗрарӑмсемпе ватӑсем колхоз председательне суйлаҫҫӗ. Вӑрҫӑра унӑн юратнӑ тусӗ ҫухалать. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн ӑна Степанов качча илесшӗн, анчах вӑл ун пек каппайчӑк ҫын мӑшӑрӗ пулас ҫук. Улька — чӑваш совет хӗрарӑмӗн чӑн-чӑн илемлӗ сӑнарӗ, ҫӗнӗ самана ӳстернӗ тӳрӗ кӑмӑллӑ коммунист. Ытарайми хитре сӑн-сӑпатпа, ҫутӑ та таса чун-чӗрепе тухса тӑрать вӑл пирӗн ума. «Ырӑ кӑмӑл, ӗҫченлӗх, сӑпайлӑх, ҫутӑ ӑс, юратуллӑ чӗре, аннелӗх туйӑмӗ, юлташлӑха тата халӑх ӗҫне нимрен мала хуни, Тӑван ҫӗршывшӑн ҫунни, унӑн тӑшманӗсене курӑманни — ҫакӑ этем чунне пуянлатакан, этеме этем тӑвакан пахалӑхсем Улькан сӑнарӗнче, хӗвел ҫутин элеменчӗсем тырӑ пӗрчинче пӗрлешсе ӳсӗм вӑйӗ тунӑ пек, пултаруллӑ пӗрлеш-

нĕ»,—тенĕ Ольга Алексеевна пирки «Пурнăç чăнлăхĕ» статйинче Митта Ваçлейĕ. Вулакан курать: Улька Юманова юрататъ, Юманов — ăна, апла пулсан, вĕсен пĕрле пулмалла.

«Хамăр ялсем» поэма тăватă пайран тăрать. Кашни пайĕ çулталăкăн пĕр вăхăчĕпе çыхăннă. Автор кунта вулакана хăйпе хăй калаçса, шухăшласа ларнă пек илсе пырать. Поэмăра калаçу чĕлхипе, халăх сăмахлăхĕпе ирĕклĕн те пĕлсе усă курнă. Чăнах та, кунта уйрăм çитменлĕхсем те çук мар. Автор геройсен характерĕсене пĕтĕмпех уçса çитерейменнине, уйрăм сăмахсене чăваш чĕлхишĕн килĕшӳсĕр, тĕрĕс мар формăна лартнине вулакансем те асăрхарĕç. Апла пулин те, «Хамăр ялсем» поэмăна 60-мĕш çулсенчи чăваш поэзийĕн чылай пысăк çитĕнĕвĕ теме пулать.

1971 çулта А. Алган «Ытарайми тăван тавралăх» кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Поэт унта хăйĕн «Тăван тавралăх» ятлă лирикăллă поэмипе юлашки çулсенче çырнă сăвăсен ярăмне те кĕртнĕ. Мĕн ачаран савса-юратса ӳснĕ тăван тавралăх, асран тухми тăван кĕтес поэт чĕрине нихçан манăçми тарăннăн кĕрсе юлнă. Вĕсене вăл вăрçăччен те, вăрçăра та, вăрçă хыççăн та ялан асра тытса пурăннă, ялан аса илет.

Поэт хăйĕн тăван тавралăхне, хăй çуралнă Кăнна Кушки ялне уйрăммăн илсе мар, пĕтĕм Чăваш çĕршывĕпе пĕрле, унăн паянхи хăвачĕн хĕвеллĕ ытамĕнче курать, çав илемлĕ тĕсе тытса пырса, чăваш халăхĕн ку чухнехи телейлĕ кунçулĕ çинчен хумханса калать, халăхăн çутă ĕмĕт-туйăмĕпе шухăш-кăмăлне уçса парать. Кунпа пĕрлех вăл нацилле хăйнеевĕрлĕх, чăвашлăх тенине пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕпе çыхăнтарса кăтартать. Çаксем пурте вулакан кăмăлне тыткăна илеççĕ, унăн чунĕнче ăшă та çутă шухăш-туйăм çуратса хавхалантараççĕ.

Кĕнекере, асăннă поэмăсăр пуçне, сăвăсем те чылай. Вĕсенче поэт тăван уй-хирсен, ешĕл хурăнсен, шăнкăртатса юхакан тăрă çăлкуççен, хĕлле тураттисем пасарнă чăлтшурă çӳçлĕ йăмрасен, тилĕпе мулчак йĕрĕсен илемлĕ картинисене куç умне кăларса тăрататъ.

«Тăван тавралăх» поэмăра лирикăллă герой Атăл тăрăх «Ракетăпа» анать, мĕн курни-илтни çинчен чунĕпе хумханса-хавхаланса каласа парать. Сĕнтĕрвăрринче ăна Андриян Николаев çуралса ӳснĕ Шуршăл ялĕ шухăша ярать. Колхоз утарĕнче çур ĕмĕрне пыл хурчĕсемпе ĕçлесе ирттернĕ Илле пиччепе калаçать, иртнĕ вăрçа аса илсен, «час лăпланаймасть вара чĕре», мĕншĕн тесен:

Пиртен пит инҫетре паян та
Ҫил варкӑшать, хум варкӑшать.
Куҫ умӗнче курӑнмасан та
Вӑл вут пек ҫунтарать ӑша.

Поэмӑн пӗр сыпӑкӗ «Тӑван ялта» ятлӑ. Тӑван ялӗ— Кӑнна Кушки. Поэт ял ҫыннисен ӗҫченлӗхӗпе типтерлӗхӗ, вӗсем кирек мӗнле йывӑрлӑх умӗнче те пуҫа усманни, малашлӑхшӑн хӑюллӑн кӗрешни, ялйыш ӗнтӗ хӑйӗн чӑн-чӑн телейне тупни ҫинчен калакан йӗркесем нумайлӑха аса кӗрсе юлаҫҫӗ. Уйрӑмах ӗҫчен платник Игнатий Павлович, Ануш аппа, колхоз председателӗ, ӗне сӑвакан хӗрсен сӑнарӗсем кӑмӑллӑ та витӗмлӗ пулса тухнӑ. Вӗсем — пӗрлешӳллӗ ӗҫре ҫирӗпленнӗ, ырӑ, таса, хастар чун-чӗреллӗ ҫынсем. Вӗсене курса, вӗсемшӗн савӑнса, поэт юлашкинчен ҫакӑн пек шухӑш патне пырса тухать:

Ҫын килмест Ҫӗр ҫине хӑнана.
Пыл та ҫу ҫеҫ кӗтмест-мӗн ӑна.
Ҫул каять тӑвалла, тӑвалла.
Ҫӗнмелле шӑрӑха, тӑвӑла.
Ҫӗнмелле вӑрҫӑ чӗртнӗ вута,
Чармалла ирсӗр-пилсӗр юта.
Тухмалла выҫлӑхран, асапран,
Пурнӑҫ пултӑр-и ӗмӗт таран;
Анмалла тарӑн тинӗс тӗпне,
Вӗҫмелле йӑлтӑр ҫӑлтӑр патне,—
Ҫӗр ҫине ҫын килмест хӑнана,
Ал парать шав малашлӑх ӑна.

Пӗтӗм чун-чӗререн шӑранса тухнӑ ҫак илемлӗ йӗркесенче халӑх поэчӗн шухӑшӗпе ӗмӗчӗ, унӑн пурнӑҫри ҫутӑ та ырӑ тӗллевӗ хӑватлӑн тапса тӑрать.

Александр Алга пысӑк ӑсталӑхпа ҫырнӑ хӳхӗм кӗнекесем тӑван халӑха сахал мар парнелерӗ. Унӑн вут-ҫулӑмра туптаннӑ пултарулӑхӗ юлашки ҫулсенче тата ҫӳллӗрех пусӑма ҫӗкленчӗ.

## НУМАЙ ЕНЛӖ ТАЛАНТ

Леонид Яковлевич Агаков — чӑвашсен паллӑ писателӗ, журналисчӗ. Вӑл 1910 ҫулхи апрелӗн 18-мӗшӗнче Чӑваш республикинче Етӗрне районӗнчи Ҫуткасси ялӗнче ҫуралнӑ. Етӗрнери педагогика техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, 1929 ҫулта, ӑна, активлӑ корреспондента, Шупашкара чӗнсе илнӗ. Унта вӑл «Канаш» (хальхи «Коммунизм ялавӗ») хаҫатра, «Хатӗр пул», «Капкӑн» журналсен редакцийӗсенче ӗҫленӗ, ҫав хушӑрах калавсемпе очерксем

те çырнă. 1920 çулта унăн «Волонтер» коммунăн пурнăçĕ» ятлă пысăк очеркне Чăвашгосиздат уйрăм кĕнекепе кăларнă. Тепĕр çултан вара çамрăк писателĕн «Юлашки сăмах», «Вĕтлĕхри отряд», «Инкесем» ятлă кĕнекесем пичетленсе тухаççĕ. 1932 çулта вăл «Хăват», 1934 çулта «Ултав» ятлă пьесăсем çырса кăларать.

1932—1935 çулсенче Л. Агаков Мускаври А. В. Луначарский ячĕпе хисепленекен театр искусстви институтĕнче вĕреннĕ, ун хыççăн чылай вăхăт Чăваш писателĕсен Союзĕнче, искусство учрежденийĕсенче ĕçленĕ. Çав вăхăтра çырнă произведенисенчен Л. Агаков творчествинче «Пĕрре çуркунне» повесть уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăрать.

Л. Агаков — алла пăшал тытса икĕ вăрçăра Тăван çĕршыва паттăр хӳтĕленĕ писатель-воин. Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи вăрçăран аманса таврăннă хыççăн нумай вăхăт иртмест,— Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланать. Çак хаяр вăрçăра вăл урса кайнă фашистсене хирĕç пăшалпа та, перопа та çапăçнă, фронтрах коммунистсен партийĕн ретне кĕнĕ. Вăрçăран таврăнсан, Чăваш АССР кĕнеке издательствин главнăй редакторĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ пулнă, «Тăван Атăл» альманах редакторĕнче ĕçлерĕ.

Л. Агаков çарпа патриотизм темипе паха произведенисем нумай çырчĕ. Çак тема унăн пултарулăхĕнче тĕп вырăн йышăнса тăрать тесен те, тĕрĕсех. Талантлă писателĕн кĕнекисем çамрăк ăрăва çирĕп кăмăллă, хăюллă та хастар пулма, аслă Совет çĕршывне чун-чĕререн парăнса ĕçлеме, кĕрешме вĕрентеççĕ. Ку енĕпе унăн Тăван çĕршывăн аслă вăрçи умĕн çырнă произведенийĕсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ («Танкист калавĕ», «Разведчик Джунгали», «Пулеметчик юрлать» т. ыт. те).

Иртнĕ вăрçă çулĕсенче çырнă калавсемпе новеллăсем писатель совет çыннисен — салтаксен, партизансен, хĕрарăмсемпе ачасен паттăр ĕçĕсене сăнласа кăтартрĕ. Унăн геройĕсем Тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçшĕн хăйсен пĕтĕм чунчĕре хăватне, юратуне, вăй-халĕпе пултарулăхне параççĕ.

Акă, илсе пăхар-ха «Старик № 33» калава. Унта ватă учитель Яков Иванович уйрăмах асра юлмалла сăнар пулса тухнă. Фашистсем пĕтĕм яла вут чĕртсе çунтарса янă. Çынсем çĕрпӳртсенче асапланса пурăнаççĕ, выçăпа аптăраса çитнĕ. Шкулпа больница çурчĕсенче — нимĕç салтакĕсен казарми. Совет партизанĕсене тыттарма килĕшменшĕн фашистсем Яков Ивановича тем тĕрлĕ асаплантарса пĕтереççĕ пулин те, вăл тăшмана сутăнмасть. Ватă

учитель фашистсем оккупациленӗ вӑхӑтри йывӑр условисенче, яла Совет Ҫарен чаҫӗсем килсе ҫитиччченех, пилӗк уйӑх ытла ҫӗрпӳртсем тӑрӑх ачасене хут вӗрентсе ҫӳрет, Тӑван ҫӗршывпа парти ҫинчен, совет ҫыннисем тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешни тата вӗсен таса, илемлӗ шухӑшкӑмӑлӗпе патриотизмӗ ҫинчен хумханса каласа парать. Писатель ватӑ учитель сӑнарӗпе вӑрҫӑ ҫулӗсенче кашни ҫын хаклӑ пулнине, совет интеллигенцийӗ халӑхпа уйрӑлми тачӑ ҫыхӑннине, вӑл пӗтӗм чунӗ-юнӗпе халӑхшӑн ӗҫленине кӑтартать. «Унашкал ҫынсене никам та нихҫан та парӑнтараймӗ»,— тет автор, учитель паттӑрлӑхӗ ҫинчен ҫырнӑ калавне вӗҫленӗ май.

Л. Агаковӑн «Юлташ пурнӑҫӗ», «Йӑваш ҫын», «Катюша», «Салтак чунӗ» калавӗсенче те пирӗн ума хӑюллӑ совет салтакӗсемпе командирӗсен сӑнарӗсем тухса тӑраҫҫӗ. Пурте вӗсем пурнӑҫ ҫине ҫутӑ та сарлака чунпа пӑхаҫҫӗ, фашистла оккупантсем тӑван ҫӗре кӳнӗ йывӑр сурана хӑйсен суранӗ ырӑнне шутлаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ҫак произведенисенчи геройсем (Акатов разведчик, Куракин ездовой, Попов стрелок) Тӑван ҫӗршывӑн кирек хӑш заданине те чыслӑн пурнӑҫа кӗртме хатӗр.

Пирӗн ҫарсем хӗвелтухӑҫнелле чакнӑ вӑхӑтра, Л. Агаков «Партизан Мурат» ятлӑ повесть ҫырнӑ. Яла нимӗҫ ҫарӗсем ҫитеймен-ха, анчах вӗсем пирӗн ҫулсене йышӑнса илнӗ ӗнтӗ. Ҫамрӑксемпе ватӑ ҫынсем, хӗрарӑмсемпе ачасем — алла пӑшал тытма пултарканнисем пурте — вӑрманта пуҫтарӑнаҫҫӗ. Отряд хаяр ҫапӑҫусенче ӳссе ҫирӗпленет, унтан партизансен штабӗпе ҫыхӑнать. Мурат ятлӑ ача, ҫар заданийӗсене пӗрин хыҫҫӑн теприне пурнӑҫланӑ май, куҫ умӗнчех ӳсет, чӑн-чӑн партизан пулса тӑрать.

Пурнӑҫа сарлакан сӑнласа кӑтартас тата геройсен индивидуаллӑ характерӗсене уҫса парас енӗпе илсен, Л. Агаковӑн «Вилӗмрен те вӑйлӑрах» повеҫӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Вӑл писатель пултарулӑхӗшӗн кӑна мар, вӑрҫӑ ҫулӗсенчи пӗтӗм чӑваш прозишӗн те ҫӗнӗ утӑм пулса тӑчӗ. Автор асӑннӑ повеҫре совет патриочӗсем фашистла оккупантсене хирӗҫ тӑшман тылӗнче паттӑррӑн ҫапӑҫнине, вӗсен нимӗҫ захватчикӗсене ҫӗнтерес шухӑш-туйӑмӗ кунран кун ҫирӗпленсе пынине тӗрӗс кӑтартнӑ.

Куҫ умне тӑшман мӑшкӑл кӳнӗ тӑван ҫӗрӗн, гитлеровецсен сӗмсӗр те тискер ӗҫӗсен картинисем туха-туха тӑраҫҫӗ. Анчах повеҫри Палюков капитан пек, Варвара Васильевна коммунист пек ҫынсене парӑнтарма ҫук, вӗсен курайманлӑхӗпе ҫилли аҫа-ҫиҫӗм пек вӗри, ҫавӑнпа та тӑшмана кашни утӑмрах тавӑрупа вилӗм кӑна кӗтет. Ҫакӑ пул-

са тăрать те «Вилĕмрен те вăйлăрах» повеçĕн тĕп шухăшĕ.

Вăрçă хыççăн Л. Агаков приключениллĕ произведенисем çырас енĕпе ăнăçлă ĕçлерĕ. Вĕсенчен паллăраххи — «Юманлăхра çапла пулнă» повесть. Унтан писатель «Вырăс каччи» ятлă пысăк повесть çырса пĕтерчĕ, унăн пĕрремĕш пайĕ 1968—1969 çулсенче «Ялав» журналта пичетленсе тухрĕ. Çак çивĕч сюжетлă повеçре революци пуçламăшĕнчех вырăнти Советсене пулăшма Чăваш çĕршывне килнĕ çамрăк вырăс рабочийĕ çинчен хумханмалла çырса кăтартнă.

1967 çулта Л. Агаков вăрçă темипе çырнă «Салтак ачисем», «Партизан Мурат», «Ылтăн вăчăра», «Кăсăя» ятлă патриотла повеçĕсемшĕн Çеçпĕл Мишши премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. 1968 çулта писателе Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн ятне, 1974 çулта Чăваш АССР халăх писателĕн ятне панă. Тăван çĕршыв чысĕпе мухтавĕшĕн, унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн хăюллăн çапăçнăшăн, литература ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн партипе правительство Л. Агакова Хĕрлĕ Çăлтăр, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Л. Агаков чăваш литературинче сатирăпа юмор жанрне аталантарас тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлерĕ. Унăн сатирăллă калавĕсемпе фельетонĕсен кĕнекисем — «Кулас килет», «Хаклă кĕрӳ», «Качака такисем», «Лайăх эмел» т. ыт. те — пирĕн пурнăçра халĕ те тĕл пулакан çитменлĕхсемпе çивĕччĕн кĕрешме чĕнеççĕ.

Л. Агаков ячĕ чăваш совет литературинче пултаруллă тăлмачă пулнипе те паллă. Вăл вырăс тата ытти халăхсен писателĕсем çырнă чи лайăх произведенисене чăваш вулаканĕсене паллаштарас енĕпе ăнăçлă ĕçлерĕ, нумай куçарчĕ. Çав хушăрах ырми-канми ĕçчен писатель, тăван литературăпа искусствăра пулса пыракан улшăнусене тĕпчесе, пирĕн театрсенче кăтартакан спектакльсем çинчен, писательсемпе артистсен пултарулăхĕ çинчен тата ытти ыйтусемпе статьясемпе рецензисем, очерксем çырчĕ.

* * *

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пирĕн çарсен чаплă çĕнтерĕвĕпе вĕçленнĕ хыççăн Л. Агаков тискер фашизма хирĕç пынă хаяр кĕрешӳ çулĕсем çинчен, çав тапхăрта чăнчăн паттăрлăх кăтартнă совет патриочĕсем çинчен сахал мар паха произведени çырчĕ. Тĕрĕссипе илсен, унăн вăрçă хыççăнхи пултарулăхĕнче çарпа патриотизм теми чи пар-

хатарлă вырăн йышăнчĕ. Кунта пирĕн уйрăмах унăн «Ылтăн вăчăра» (1947), «Пĕр хулара» (1947), «Салтак ачисем» (1958—1964), «Кăсăя» (1965), «Яланах салтаксем» (1966—1971) повеçĕсене, «Шанчăк» (1969—1970) романне палăртса хăварас килет.

Паллă ĕнтĕ, вăрçă çулĕсенче фашистла вăрă-хурахсене хирĕç кĕрешес ĕçре пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле ачасем те пысăк паттăрлăх кăтартнă. Вĕсем ун чухне никам тытайми связнойсем, разведчиксем, питĕ лайăх стрелоксем, харсăр партизансем пулнине пурте пĕлеççĕ. Кунпа пĕрлех çав йывăр вăхăтра ачасем, колхозсенче, фабрикăсемпе заводсенче ырми-канми ĕçлесе, фронта сахал мар пулăшнă. Фронтра е партизансен отрячĕсенче паттăррăн çапăçнă тата пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ чылай ачасем правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулнă. Шăпах çавăн пек хастар чун-чĕреллĕ çамрăк патриотсене сăнласа кăтартать те ĕнтĕ Л. Агаков эпир çӳлерех асăннă произведенисенче. Вĕсенче совет ачисен вăрçă çулĕсенчи паттăр ĕçĕ-хĕлĕ куçа курăнмалла уççăн тухса тăрать, нумайлăха асра юлать.

Акă, «Ылтăн вăчăра» повеçех илĕпĕр. Çак произведение мĕнле çырма пуçлани çинчен автор çапла каланă:

«1943 çулхи февраль уйăхĕнче, Курск облаçĕнчи Чернихово ялĕнче, эпĕ блокнота çапла çырса хунă: «Ĕненмелле мар хăрушă историсем каласа кăтартаççĕ. Нимĕçсем пирĕн çынсене çĕршерĕн-çĕршерĕн персе пăрахнă, вута пăрахса çунтарнă. Паян пĕр хĕрарăмпа калаçрăм. Ку ялсем мар вăл, темиçе çухрăмри Веретенино ялĕнчен, халь вăл ял çук, çунтарса янă. Нимĕçсем вĕсен ялне тăрук хупăрласа илсе, пурне те хăваласа кăларса, 197 çынна персе пăрахнă. Ку хĕрарăмăн 7 ачипе упăшкине вĕлернĕ, хăй аманса тăнсăр пулса выртса юлнă. Унсăр пуçне тепĕр арçын ача — вăл та аманнă — чĕрĕ юлнă». Çакăн çинчен писатель тепĕр икĕ кунтанах вырăсла «Убийцы» ятлă очерк çырса дивизири «Советский патриот» хаçатра пичетлет. Чăвашла вăл «Ленин çулĕпе» хаçатра (1943 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче) «Нимĕçсем — çынсем мар, çынçиенсем» ятпа çапăнса тухнă. Çак материалпа усă курса çырма пуçланă повеçе автор малтанах «Персе вĕлернĕ ача» тесе ят панă пулнă, анчах ăна вăл вăрçă хыççăн тин çырса пĕтерет, вара çав повесть «Ялав» журналта «Ылтăн вăчăра» ятпа 1947 çулта пичетленсе тухать.

Повеçри тĕп герой—Ваня Долбин. Вăл пурăнакан яла фашистсем пĕтĕмпех çунтарса-аркатса пĕтереççĕ, çыннисене пурне те—ваттисене те, ачасене те—хире хăваласа тухса пере-пере пăрахаççĕ. Ваня Долбин ăнсăртран кăна ви-

лёмрен ҫăлăнса юлать, унтан вăл, аманса пĕтнĕскер, партизансем патне пырса ҫитет, хăйĕн вăхăтсăр вилнĕ тăванĕсемшĕн, ялйышĕшĕн май килнĕ таран тăшмана ытларах тавăрма тупа тăвать. Уйрăмах вăл фашистсен тискертен те тискер карательне Генрих Шварца вилесле курайманить. Ҫамрăк партизан куҫĕ умне яланах ҫав «тимĕр хĕреслĕ», «ылтăн вăчăраллă» Гитлер вăрă-хурахĕ тухса тăрăть. Ун хыҫҫăн йĕрлесе ҫӳресен-ҫӳресен, Ваня пурпĕр ăна тавăратьтавăратех.

Ваня Долбин—вырăс ачи, пионер. Вăл хамăрăн Тăван ҫĕршыва чи хĕрӳ туйăмпа юрататать, Совет Ҫарĕ фашистсене пурпĕр ҫĕнтерессе ҫирĕп шанса-ĕненсе пурăнать. Ваньăн чи ҫывăх тусĕ пур. Вăл — тăлăха юлнă чăваш ачи Санька, вăрҫăччен чикĕ хĕрринче пурăннă совет офицерĕн ывăлĕ. Санька амăшĕн ылтăн вăчăраллă сехетне те ҫав ирсĕр Генрих Шварцах туртса илнĕ иккен, амăшне хăйне персе вĕлернĕ. Ҫапла вара фашист-чунилли икĕ ачана тăлăха тăратса хăварнă.

Икĕ ҫамрăк патриот пĕр-пĕринпе калама ҫук туслă пурăннă. Хăйсене питĕ йывăр хуйхă килнĕ пулсан та, вĕсем ăна тӳссе ирттерме чăтăм ҫитереҫҫĕ, чунĕсемпе хаярланса, тăшмана тавăрма ĕмĕтленеҫҫĕ. Ваня Долбинпа Санькăна кĕрешӳре ҫирĕп те хастар пулма партизан отрячĕн командирĕпе комиссарĕ, Федор Иванович фельдшер, хастар разведчик Михаҫ, Тоня учительница тата ыттисем те хăйсем тĕслĕх кăтартса вĕрентеҫҫĕ, куллен пулăшса пыраҫҫĕ. Повеҫре Ваня Долбинпа Санька тăшман аллинчи кĕпере сывлăша сиктерсе янине, фашистсен тыткăнĕнчен хăтăлса тухса, отряда пĕр сутăнчăк старостăна тытса таврăннине, Генрих Шварца вĕлернине тата ытти эпизодсене те ăста ҫырса кăтартнă.

Повесть ҫăмăллăн вуланать. Сюжет ҫивĕччĕн аталанать. Геройсен паттăр ĕҫĕсем асра юлаҫҫĕ. Ҫапах та хăй вăхăтĕнче критиксем те, вулакансем те повеҫĕн хăшпĕр ҫитменлĕхĕсене палăртнăччĕ. Чи малтанах вĕсем геройсен сăнарĕсем, характерĕсем, калаҫăвĕ пĕрпекрех пулни ҫинчен каланăччĕ тата хăшпĕр персонажсем сюжетпа ҫыхăнманнине те асăрхаттарнăччĕ.

«Пĕр хулара» повесть калăпăшĕпе пысăк мар. Автор кунта иртнĕ вăрҫă вăхăтĕнчи ҫамрăк паттăрсен ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен ҫырать. Анчах та сăнласа кăтартнă ĕҫсен масштабне шута илсен, ăна вăрҫă вăхăчĕпе, совет ҫыннисен фашистсемпе хирĕҫ пынă кĕрешĕвĕпе анлăн паллаштаракан произведени теме те май пур.

1941 ҫулхи кĕр кунĕсем. Питĕ йывăр вăхăт. Фронтран

кунсерен хăрушăран хăрушă хыпарсем килсе тăраççĕ. Фашистсем кĕç-вĕç Мускава тытса илессипе, Хĕрлĕ площадьре парад ирттерессипе каппайса мухтанаççĕ. Анчах та, пирĕн нумай хуласемпе ялсем вăхăтлăха вĕсен аллинче юлнă пулин те, совет халăхĕ урса кайнă тăшмана парăнмасть, ăна хирĕç пĕтĕм вăя хурса кĕрешет. Коммунистсем ертсе пынипе çак кĕрешĕве ачасем те йышлăн хутшăннă. Шăпах çакна кăтартса парать те Л. Агаков писатель 1947 çултах ача-пăча литературин конкурсĕнче премии илме тивĕçлĕ пулнă «Пĕр хулара» повеçĕнче.

Произведенири ĕçсем пĕр пысăках мар хулара пулса иртеççĕ. Вĕсем çинчен вулакансене Репкин, Мускав çывăхĕнче пурăннă ырăс ачи, нумай пулмасть улттăмĕш класран вĕренсе тухнăскер, каласа парать. «Манăн атте,— тет вăл,— граждан вăрçи вăхăтĕнчех взвод командирĕ пулнă. Нумай фронтсенче çапăçнă... Çапăçусенче темиçе хут та аманнă... Пĕр сăмахпа каласан, хамăрăн Тăван çĕршывшăн пĕтĕм пурнăçне, чунне пама хатĕр çын, чăн-чăн ырăс салтакĕ пулнă. Çавăнпа та Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан тепĕр куннех, хăйне повестка пырса парассине кĕтмесĕрех, çурăмĕ хыçне кутамкка çакса, вăл военкомата тухса утрĕ...»

Çакăн пек килйышра ӳснĕ Юрăпа унăн Коля ятлă шăллĕ. Вăрçă пуçлансан, вĕсен пурнăçĕ йăлтах улшăнать. Темĕн те курма, темĕн те тӳсме тивет вĕсен, анчах та çамрăк патриотсем нимĕнле йывăрлăхран та хăрамаççĕ, нимĕнле кăткăс лару-тăрура та аптраса ӳкмеççĕ, хăйсен тусĕсемпе—Сережăпа Ваççа Авдеевсемпе хаяр тăшмана хирĕç пыракан кĕрешĕве хăюллăн хутшăнаççĕ. Юра Репкин Сережăпа Ваççана: «Хальхи вăхăтра вĕт... фронта кайнисем ырăнне тăмалла!— тет — Фашистсене хăваласа янă хыççăн кашниченех ыйтаççĕ акă: вăрçă вăхăтĕнче эсĕ мĕн турăн? Çĕнтерӳ валли мĕн панă?»

Типографи директорĕ пулăшнипе çамрăк патриотсем кĕçех типографире ĕçлеме пуçлаççĕ. Хулана нимĕç фашисчĕсем пырса кĕрсен вара вĕсем тăшмана хирĕç кĕрешме чĕнекен листовкăсем пичетлеççĕ, хăйсемех хӳмесем çумне çыпăçтарса çӳреççĕ, халăх хушшине салатаççĕ. Паллах, çав вăхăтра вăрçă çинчен, Хĕрлĕ Çар çинчен, фашистсен тискерлĕхĕсем çинчен, вĕсене хирĕç ним хăрамасăр кĕрешмелли çинчен чăн сăмах сарасси питĕ йывăр та кăткăс ĕç пулнă. Ку çеç те мар-ха, çамрăк паттăрсем аслисем вĕрентнипеле фашистсем иртсе çӳрекен çулсем çине минăсем лартса вĕсен машинисене, салтакĕсене сывлăша сирпĕтеççĕ. Пĕррехинче вĕсем вăрманта фашистсем йывăр амант-

нă совет воинĕсем патне пырса тухаççĕ, вĕсене хулана вăрттăн илсе пырса шанчăклă вырăна пытараççĕ, унтан Авдеевсен аппăшĕ пулăшнипе сиплесе сыватаççĕ. Аманнă воинсен шухăш-кăмăлне те автор вулакана хумхантармалла çырса кăтартать. Подвалта дежурствăра пулнă чух, сăмахран, Юра Репкинпа аманнă лейтенант хушшинче ак çакăн пек калаçу пулса иртет:

— Эс ăçтисем, пичче?— тесе ыйтатăп эпĕ, ун çумне ларса.

— Атăл таврашĕнчен...— тет лейтенант.— Илтнĕ-и эс Атăл çинчен?

— Питĕ лайăх пĕлетĕп, вăл Калинин облаçĕнчен пуçланса Каспи тинĕсĕ таран юхать.

— Тĕрĕс,— тет лейтенант. Унтан сывлăш çавăрса илет те куçне уçмасăрах, ерипен, хăйăлтатакан сасăпа калама тытăнать.

— Çав аслă Атăл çинче Чăваш çĕршывĕ пур... Калама та çук илемлĕ, чечекленекен çĕршыв... Унта паттăр Чапаев çуралнă... Эпĕ те çавăнта çуралса ӳснĕ... Анчах эпĕ паттăр ĕçсемех тăваймарăм-ха ку таранччен. Пĕтĕмпе те темиçе фашиста çеç тĕп тунă. Манăн вĕсене çĕр, икçĕр, пинĕ-пинĕпе пĕтересчĕ. Унтан вĕсен шуйттан йăвине, Берлинне, кайса аркатасчĕ. Сываласчĕ часрах!.. Сываласчĕ те каллех çапăçăва каясчĕ.

Вăл кăштах чĕнмесĕр выртать те, вĕри тутине çуласа, шăлĕсене шатăртаттарса илет.

— Фашистсене Атăл шывне ĕçтерес марччĕ...

— Вĕсем Атăл шывне ĕçесси нихçан та пулмасть, пичче, нихçан та пулмасть,— тесе лăплантарăп эпĕ ăна.

Икĕ совет çынни: пĕри—лейтенант, тепри — пионер. Иккĕшин те пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт. Вĕсем нихçан та тăшман умĕнче пуçа чиксе тăрас çук — Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр.

Сережăпа Юра подвала Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе килни çинчен пĕлтерекен листовкăсем илсе пырсан, лейтенант вĕсене çав тери хыпăнса вулама пуçлать. «Куçĕсем енчен енне сиккелесе кăна тăраççĕ. Тепĕр минутран унăн сăнĕ çуталса кайрĕ, хăй темшĕн хашкама пуçларĕ, унăн тутисем кулма пуçларĕç... Листовкăна вуласа тухсан, пачах та чирлĕ мар çын пек сиксе тăрса, юлташĕсене силлеме тытăнчĕ.

— Тăрăр-ха! Тăрăр! Викулов! Кукушкин! Юрамасть çывăрма!..

— Мĕн пулнă? Мĕн пулнă?— хăраса вăранса кайрĕç лешсем.

— Тем те пулнă! Хĕвел урăх майлă çаврăнма тытăннă, хĕл варринче чечексем çурăлма пуçланă.

...Ну ĕнтĕ, ниçта кайса кĕме, ним тума пĕлмерĕç вара пирĕн салтаксем! Пĕр-пĕрне ыталаççĕ, пĕрне-пĕри чуптурĕç. Савăннипе пирĕн те куççулĕ тухса кайрĕ».

Чăнах та нумай паттăр ĕç тăваççĕ ачасем. Юлашкинчен, Мускав енчен çĕнтерсе килекен Хĕрлĕ Çар вĕсен тăван хулине ирĕке кăларнă чух, тăшманпа алла пăшал тытса çăпаçаççĕ. Нимĕç вăрă-хурахĕсене хĕвеланăçнелле хăваласа ярсан, вĕсем фашистсен пусмăрĕ вăхăтĕнче сывă юлнă рабочисемпе пĕрле каллех ĕçе тытăнаççĕ. «Эпир пĕрпĕрне алă парса хыттăн чăмăртарăмăр. Çакă вăл эпир малашне хамăрăн çĕнтерÿшĕн, хамăрăн телейшĕн пĕтĕм чунчĕререн тăрăшса, вăя шеллемесĕр ĕçлеме хатĕррине палăртса çирĕплетрĕ»,— тет таса чун-чĕреллĕ, хастар та ырă кăмăллă Юра Репкин.

Çамрăк паттăрсем çинчен çырнă «Пĕр хулара» повеçе хумханмасăр вулама çук. «Повеçри ачасемпе ватă çынсен сăнарĕсем ĕненмелле пулса тухнă, кĕнекене вуланă хыççăн вĕсене манмастăн, нумайччен асра усратăн»,— тесе хак пачĕ ăна пирĕн паллă критик В. Долгов Л. Агаковăн «Вăрçă кĕрленĕ чух...» кĕнекинчи хыççăмахра.

Ача-пăча валли çырнă произведенисем хушшинче уйрăмах «Салтак ачисем» повесть палăрса тăрать. Ăна пирĕн критиксем те, вулакансем те хак парса ырларĕç.

Произведение сăнласа кăтартнă ĕçсем вăрçă вăхăтĕнче чăваш ялĕнче пулса иртеççĕ.

...1941 çул. Хура тинĕсрен пуçласа Пăрлă океан таран хаяр та хăрушă вăрçă ахăрашать. Кĕркунне. Сивĕ. Асар-писер вăрçă пыракан вырăнсенчен тăшман пусмăрĕнче асапланса вилесрен хăтăлас тесе, хĕрарăмсем, ваттисемпе пĕчĕк ачасем хĕвелтухăçнелле, вăрçă çук çĕрелле, куçса килеççĕ. Вĕсем Чăваш республикине те çитеççĕ. Темиçе çемье — эстонецсемпе белоруссем —«Çĕнĕ самана» колхоза пырса лекеççĕ. Çав тери ачашшăн, чăн-чăн тăванла кĕтсе илеççĕ вĕсене чăваш ялĕнче. Инçетрен куçса килнĕ ачасемпе «Çĕнĕ самана» колхоз ачисем хушшинче иксĕлми çирĕп туслăх пуçланать. Вĕсем пĕрле ял хуçалăхĕнче, вăрçа кайнă ашшĕсемпе пиччĕшĕсем вырăнне тăрса, çитĕннисемпе тан ĕçлеççĕ, тăрăшса вĕренеççĕ, пĕр-пĕрне сывăххăн пулăшаççĕ. Çапла вара писатель пирĕн çĕршыври тăванла халăхсем хушшинчи туслăх хурçă пек çирĕп пулнине, вăл нихçан та арканас çуккине питĕ лайăх кăтартса панă.

Вăрçă вăхăтĕнче, тылри мĕнпур халăх «Пĕтĕмпех фронт

валли! Пĕтĕмпех çĕнтерӳ валли!» лозунгпа кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ чух, фронта ачасем те çав тери нумай пулăшнă. «Çĕнĕ самана» колхозра та акă утмăлтан иртнĕ колхоз председателĕ Назар Егорччă, Рина Петровна учительница ертсе пынипе ачасем фронт валли апат-çимĕç, кĕпетумтир, алсиш-чăлха пуçтараççĕ, госпитальте сывалакан çар çыннисем патне кайса çӳреççĕ, вĕсене хăйсен вăйĕпе концертсем кăтартаççĕ. Ачасем амăшĕсемпе тата аппăшĕсемпе пĕрле акаççĕ, выраççĕ, кĕлте турттараççĕ, авăн çапаççĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхаççĕ, «фронт пахчи» тăваççĕ.

Салтак ачисем — Евгенипе Аркаш — чăн-чăн çамрăк патриотсем. Вĕсем килте те, колхозра та канăçа пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, Белоруссипе Эстонирен килнĕ юлташĕсене вырăсла та чăвашла калаçма вĕрентеççĕ, хăйсемпе пĕрле концертсемпе субботниксем ирттернĕ çĕре хутшăнтараççĕ... Л. Агаков хăйĕн çамрăк геройĕсен психологине, шухăшкăмăлне лайăх пĕлет. Пурте вĕсен ача-пăчалла пулса пырать, пурне те хăйсем ăнланнă пек тума пултараççĕ, çав вăхăтрах кирек хăш ĕçе те аслисенчен вĕренсе пыма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та ача-пăча ĕçĕ ача вăййи кăна пулса юлмасть.

Повесть пĕтĕм халăхăн чаплăран та чаплă уявĕ — Аслă Çĕнтерӳ кунĕ çитнипе вĕçленет. Совет Çарĕ фашистла Германи çарне тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкнă, тăшмана çĕнтернĕ паттăр совет салтакĕсем тăван килĕсене таврăнаççĕ, Чăваш çĕршывне эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çемьесем хăйсем çуралса ӳснĕ вырăнсене каяççĕ. «Киле пирĕн васкасах каяс пулать. Пурнăç тумалла. Çĕнĕ пурнăç...» — тет Пауль Киккас. Чăваш йăлипе Назар Егорччă туссене ятарласа тутарнă кăпăклă сăра ĕçтерсе, виçшер хутчен чуптуса тухать. Унпа пĕрлех вĕсене пĕтĕм ял ăшă кăмăлпа ăсатать.

Аслă Çĕнтерӳ! Тинех тĕп пулчĕ ылханлă фашист эшкерĕ, тинех шалчи тулчĕ унăн. Çак савăнăçлă хыпар ялта мĕнле сарăлни çинчен Л. Агаков пĕтĕм чуна çĕклентерсе хускатмалла çырса кăтартнă. Акă, хирте ачасем суха тăваççĕ. «Аркаш тилхепе тытса лашасене касă йĕрĕпе уттарать, Евгени плуг хыççăн пырать. Сухаламалли лаптăк пысăк, йĕри-тавра пĕр-ик километр та пулать пулĕ... Таврара çав тери шăп, тӳпере çеç тăрисем каçса кайса юрлаççĕ... Ачасен çывăрасси те килет, уя ирех тухнă вĕт-ха вĕсем. Анчах çывăрма юрамасть, ĕçлемелле, пĕр чарăнмасăр, çине тăрсах ĕçлемелле. Вăхăт кĕтмест. Ака-суха тунă чух пĕр кун та тем пекех тăрать, ялти ачасем ăна пит лайăх пĕлеççĕ».

Çынçиен Гитлера пирĕннисем ярса тытсан мĕн тăвасси çинчен, вăрçă пĕтсен ăçта вĕренме каясси çинчен ачасем тĕплĕ шухăшлаççĕ. Ĕмĕчĕсем пысăк, анчах вăрçă пĕтмен-ха. Çапла калаçнă вăхăтра вĕсем пĕр ялтан юланут ыткăнса килнине кураççĕ. «Малтан Аркаш çыннине паллаймарĕ — те ача, те мăн çын, лашине пĕрмай хулăпа çапса, урисемпе аякĕсенчен тапса пынине çеç лайăх курчĕ. Унтан, юланут самаях çывхарсан, уйăрса илчĕ: председатель иккен, Назар Егорччă... Карттусне те тăхăнман, çара пуçăнах, çав тери васкавлă курăнать.

— Ташлăр, ачасем!— тăрук кăшкăрчĕ старик вĕсене хирĕç, хулă тытнă аллине çӳлелле çĕклесе.— Ташлăр, юрлăр, сикĕр!.. Çĕнтерӳ, ачасем, çĕнтерӳ-ӳ! Пирĕннисем Германие йăлт çĕнтернĕ!.. Кончал Гитлер, капут!»

Çăмăл килмерĕ çав Çĕнтерӳ Совет çĕршывĕнчи халăхсемшĕн. Пайтах юн тăкма, йывăртан йывăр çухатусем тӳссе ирттерме, çĕрне-кунне пĕлмесĕр тар юхтарса ĕçлеме тиврĕ ăна çывхартас тесе. Çак пархатарлă та чыслă ĕçшĕн Чăваш республикинчи ачасем те хăйсем мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех турĕç. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнче фронтра çапăçакан ашшĕсемпе пиччĕшĕсем вырăнне станоксем умне тăчĕç, уй-хирте тухăçлă тырпул акса çитĕнтерес, фронта май килнĕ таран ытларах пулăшас тесе тăрăшрĕç. Çавăн пек хастар ачасене сăнласа кăтартать те Л. Агаков писатель хăйĕн кĕнекинче.

Повеçри ырă çынсем хушшинче вулаканшăн ырă кăмăллă та çутă ĕмĕтлĕ колхоз председателĕ Назар Егорччă, ватă эстонец Пауль Киккас, Рина Петровна учительница, Антонина Клементьевна медсестра сăнарĕсем уйрăмах çывăх та хаклă. Вĕсем пурте тӳрĕ чунлă, çирĕп те таса шухăш-кăмăллă совет çыннисем. Вĕсене нимĕнле ĕç те, нимĕнле йывăрлăх та хăратмасть, пуçа устармасть, нихăшĕ те «эпĕ пултараймастăп», «маншăн вăл йывăр пулать», «манăн вăхăт çук» тесе турткалашса тăмасть, вĕсем ытти колхозниксемпе пĕрле вăй çитнĕ таран чунĕсене парса ĕçлеççĕ.

Паллах, çав вăхăтра халăх ĕçĕнчен пăрăнма, харпăр хăйĕншĕн кăна тăрăшма пăхакан уйрăм ханттарсем те тупăнкаланă. Писатель хăйĕн повеçĕнче ун пек типсене те сăнламасăр иртсе кайман. Евгенипе Аркаш вĕренекен класрах, сăмахран, Палля ятлă ача пур. Юлташĕсем колхозра е шкулта ĕçленĕ чух вăл яра кунах сулланса çӳрет, йĕркеллĕ вĕренмест, дисциплини те унăн начар. Мĕншĕн-ха вăл ачаранах çапла ӳсет?

Акă мĕншĕн иккен: унăн амăшĕ те, куккăшĕ те хура

ăшчиклĕ, общество шучĕпе ырă курма, ăна сăтăр тума хăнăхнă çынсем-мĕн. Амăшĕ пĕрмаях сăмакун юхтарса, çынсене улталаса пурăнать; куккăшĕ вăрçă вăхăтĕнчех вăрăхурахсемпе пĕрле çапкаланса çӳрет. Палля тата унăн амăшĕпе куккăшĕ çинчен çырса кăтартнă вырăнсем пурнăçра усал ĕç тăвакан, этем чысне çухатнă çынсемпе çирĕппĕн кĕрешме кирлине асăрхаттараççĕ, ача-пăчана килте те, шкулта та, обществăра та мĕнле вĕрентсе ӳстермелли çинчен шухăшлаттараççĕ.

Повеçре сăнласа кăтартнă геройсем хĕрӳллĕ ĕçре, коллективра улшăнса, ӳссе пыраççĕ. Çакна эпир Палля та, çавăн пекех тепĕр чарусăр ача Колька та, пурăна киле юсаннинчен, тĕрĕс çул çине тăрса, колхозра ыттисемпе танах йĕркеллĕ ĕçлесе пурăнма тытăннинчен аван куратпăр.

«Эпĕ Сирĕн «Салтак ачисем» кĕнекене савăнса вуласа тухрăм, çак интереслĕ повеçшĕн Сире питĕ тав тăватăп,— тесе çырнăччĕ Мари республикинчи Кокшайск ялĕнче 7-мĕш класра вĕренекен В. Самсонова.— Сирĕн кĕнекĕртен эпĕ чăваш ачисен Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçĕ çинчен нумай пĕлтĕм. Мана икĕ тус — Аркадипе Илюш питĕ килĕшрĕç. Пĕлместĕр-и Эсир: ăçта-ши халĕ вĕсем? Пауль, Ильмар, Амали, Ян, Эльга Эстоние чиперех çитнĕ-ши? Ăçта пурăнаççĕ халĕ вĕсем?»

Акă, тепĕр çыру. «Ку кĕнекене вуласан, эпир чăваш ачисемпе белорус тата эстони ачисем хушшинчи вăрçă çулĕсенчи çирĕп туслăх çинчен пĕлтĕмĕр... Вăл пирĕн ачасене Чăваш çĕршывĕпе хамăр халăх çинчен, туслăх çинчен нумай интереслине пĕлме пулăшрĕ... Эпир Сирĕн кĕнекĕр тăрăх вулакансен конференцине ирттертĕмĕр, ăна Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне туса хуни 50 çул çитнипе çыхăнтартăмăр. Ачасем Эсир кĕнекере çырса кăтартнă ĕçсене чăн пурнăçранах илни-илменнине питĕ пĕлесшĕн. Мĕнле-ши Илюшпа Аркашăн малашнехи кунçулĕ? Пирĕн ачасем çав тери килĕштернĕ Киккас килйышĕ çинчен халĕ мĕн пĕлетĕр эсир?.. Питĕ те тĕл пулас килет Сирĕнпе».

Ку çыру Улатăр районĕнчи ял библиотекинче ĕçлекенсенчен килнĕ. Вăл та Л. Агаков кĕнеки çамрăксене Тăван çĕршывăн усăллă çынни пулма, халăхшăн ырă ĕçсем тума хавхалантаракан паха произведени пулса тăни çинчен калать.

1965 çулта писатель Миша Телегин разведчикпа Наташа Синичкина хĕрачан вăрçăри паттăрлăхне сăнласа кăтартакан «Кăсăя» ятлă тепĕр пысăках мар повесть çырчĕ. Повеçре Телегин Наташăна йăмăк тесе чĕнет. Салтаксемпе медсанбатра ĕçлекенсем вара ăна «Кăсăя» теççĕ.

Повеçĕн сюжечĕ çапла. Çирĕп чун-чĕреллĕ, харсăр çамрăксем çинчен Атнаров лейтенант, дивизи хаçачĕн редакцийĕнче ĕçлекенскер, каласа кăтартать. Йывăр аманнă Наташăна Телегин сержант ыраш хушшинче тупса вилĕмрен çăлнă иккен. Сывалнă хыççăн çак «полк хĕрĕ» медсанбатра санитаркăра ĕçлеме пуçлать, пĕр хĕрарăм врач ăна хăй патне усрава илет. Аманнă салтаксем хушшинче ĕçленĕ чухне Кăсăя пирĕннисене нимĕç шпионне тытма пулăшать. Çавăн пек сыхăлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăлаççĕ.

«Эпир Германи çĕрĕ тăрăх утрăмăр, шалтан шала кĕрсе пытăмăр. Ку ĕнтĕ 1945 çул пуçламăшĕнче пулчĕ»,—тет Атнаров лейтенант. Анчах Германие çитсе кĕрсен, Телегин разведчик йывăр аманать те тек вара фронта таврăнаймасть. Вăл малашне Магнитогорск хулинчи военкоматра ĕçлеме тытăнать. Медсанбатпа пĕрле Кăсăя Хĕвелтухăç Пруссине çитичченех каять. Кунта та вăл паттăр ĕç тăвать: пĕр хулана пырса кĕрсен, фашистсем тупăсемпе те пулеметсемпе персе тăнине пăхмасăр, нимĕç ачине вилĕмрен çăлса тухать — хăй йывăр аманать. Ăна кĕçех сывалма тылри госпитале ăсатаççĕ...

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ çирĕм çул тултарнине вăрçă ветеранĕсем чаплăн уявлама хатĕрленеççĕ. Кĕтмен-туман çĕртенех Атнаров çыру илет. Калама çук савăнăçлă çыру: Атнарова Телегинпа Кăсăя хăнана чĕнсе янă иккен. Вĕсем халь пĕрле ĕçлеççĕ, пĕрле пурăнаççĕ. Иккĕшĕ те пĕр хушаматлă, телейлĕ.

Куратпăр ĕнтĕ, «Кăсăя» повеçĕн сюжечĕ пысăк мар. Апла пулин те унта вăрçă кĕрленĕ çулсенчи çамрăксен паттăр ĕçĕсем çинчен пысăк туйăмпа каласа кăтартнă.

Çак повесть пирки В. Долгов критик çырнă йĕркесем аса килеççĕ: «Наташа Синичкина сăнарĕ — питĕ кăмăллă, ырă сăнар,— тет вăл.— Миша Телегин разведчик сăнарĕ те куçран каймасть; вăл тăшмана хирĕç пĕр шиксĕр, хăюллă та паттăр кĕрешекен совет воинĕ, комсомолец, каярахпа — коммунист. Автор медсанбатри врачсен сăнарĕсене те лайăх ӳкерсе панă, вĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлекен, аманнă воинсене хăвăртрах сыватас тесе вăй-халне шеллемесĕр тăрăшакан çынсем». (Л. Агаков «Вăрçă кĕрленĕ чух...», 1973 ç., 455 с.)

* * *

Л. Агаковăн «Шанчăк» романне тишкернĕ май, Чăваш халăх писателĕ А. Артемьев «Пурнăç чăнлăхĕпе писатель

литературин çĕнĕ çитĕнĕвĕ пулнине палăртрĕ. «Романта пысăк драматизмлă, трагедилле вырăнсем те пур, çапах пĕтĕмĕшле вăл — оптимистла произведени. Романри çынсем хăйсем çак вăрçăра та, малашне те çĕнтерсе пырасса çирĕп шанса кĕрешеççĕ. Çакăнта произведенин социалла пĕлтерĕшĕ»— тенĕччĕ вăл («Ялав», 1972, 6-мĕш №).

Чăнах та пирĕн юратнă çĕршывăн иксĕлми хăвачĕпе сӳнми чапĕ, совет çыннисен моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхĕ, тăшмана курайманлăхĕ, ăна çапăçура çĕнтерессе çирĕп шанса тăни «Шанчăк» романта вăйлă палăрать. Вăл вулакансен чун-чĕринче патриотла шухăш-туйăм çĕклекен произведени, çавна май Л. Агаков пултарулăхĕнче çеç мар, пĕтĕм чăваш совет литературинче паллă вырăн йышăнчĕ.

Кунта эпир совет халăхĕн, уйрăмах интеллигенцин — врачсен, писательсен, художникпа музыкантăн паттăр ĕçĕсене хăюллă та хастар шухăш-кăмăлне уççăн куратпăр.

«Шанчăк» романăн сюжетне малтан пуçласа вĕçне çитиччене çирĕп тытса пыракан тĕп геройсем — Римма Сурская, Тимофей Сарьялов, Иван Васильевич Васильев-Актай, Андрей Кованый. Автор геройсен вăрçăри е госпитальти пурнăçне сăнланипе пĕрлех вĕсен вăрçăччен хи пурнăçĕ, вĕренĕвĕ, юратăвĕ çинчен те чуна хускатмалла каласа парать.

Римма Сурская — пединститутра вĕреннĕ çĕртенех хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă чăваш хĕрĕ. Медсестра вăл, комсомолка. «Манăн чăн-чăн ĕçре пулас килет, вут-çулăм ăшĕнче. Аманнисене пулăшмалли, вĕсен пурнăçне çăлмалли çĕрте!..»— шухăшлать вăл вăрçа каяс умĕн. Унăн фронтри тĕлĕнмелле хастарлăхне кăтартса паракан тĕслĕхсем романра нумай. Пĕррехинче вăл питĕ йывăр аманнă салтака операци хыççăн вилĕмрен çăлать. Тепрехинче аманнисене пулăшнă чух хăй çинелле ыткăнса пынă фашиста персе пăрахать. Çапах та Римма — кăмăлĕпе питĕ сăпайлă хĕр, хăйне ыттисем умĕнче кăштах та пулин мухтаннă пекрех тытас йăла ун пачах çук. Рота командирĕ Васильев-Актай писатель ун çинчен Шупашкара чăваш хаçатне çырса пĕлтерес тесен, хĕрелсе кайса ӳкĕтлет: «Тархасшăн ан çырăр, Иван Васильевич! Паллакансем: мухтанчăк, вĕçкĕн тейĕç. Аван мар...»— тет вăл.

Римма чунĕпе те, сăн-сăпачĕпе те çурхи хĕвел пек çутă, илемлĕ сăнар. Фронтри салтаксемпе офицерсем хушшинче çак чипер те сăпайлă хĕре куç хывакансем сахал мар. Анчах вăл хăйĕн çывăх тусне, Сергее, пĕр самантлăха та асран кăлармасть, лешĕ хыпарсăр çухалнине пĕлсен те, ăна вилнĕ тесе шутламасть, вăл таврăнасса шанчăк-

не çухатмасăр кĕтет. Çак вăйлă туйăм ирĕксĕрех К. Симонов поэтăн «Кĕт мана» сăввинчи сăмахсене аса илтерет:

Кĕт мана, эп таврăнап,
Анчах хытă кĕт...

Ансăртран мар çак сăмахсене эпиграф вырăнне илнĕ те Л. Агаков роман пуçламăшĕнче.

Çирĕп чунлă, чăтăмлă та хăюллă çынсене, Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсене сăнлать писатель «Шанчăк» романра. «Хурçă тӳсмест, анчах эпир, совет çыннисем, тӳсетпĕр»,— тет аманнă Кованый лейтенанта санитари пуйăсĕн начальникĕ. Совет çыннисен вăрçăри хурçă пек çирĕплĕхĕпе тӳсĕмлĕхĕ пуринчен ытла вĕсем Тăван çĕршыва чи хĕрӳ юратупа юратнинчен килет. Акă мĕнле калаçаççĕ çуралнă çĕршыв пирки Риммăпа Кованый лейтенант Шупашкара килнĕ чух.

— Мĕн çине çав териех ытараймасăр пăхса пыратăр эсир, хаклă юлташсем?— тесе ыйтать Кованый.

— Хамăр çуралса ӳснĕ çĕршыв çине пăхатпăр, лейтенант юлташ... Тăван вырăнсемпе, Чăваш республикипе пыратпăр-çке!— хуравлать Римма.

Римма Сурская санитари пуйăсĕ çинче Сарьялов сержантпа паллашать. Сарьялов вăрçăччен консерваторире вĕреннĕ иккен, сĕрме купăс калама ăста пулнă. Вăрçăра сулахай аллинчи виçĕ пӳрнине çухатнă. Çавăншăн вăл хытă хурланса кулянать. Врачсене те вăрçать Сарьялов. «Мĕн тумалла?..—тет тарăхса. — Ман пĕтĕм пурнăç, пĕтĕм телей çав виçĕ пӳрнере пулнă!.. Мана халь никам та, нимĕн те лăплантараймĕ. Масар шăтăкĕ çеç лăплантарĕ».

Римма пурнăç çине çутă куçпа, оптимистла пăхать, юлташĕсемпе пĕрле Сарьялова та çавăн пек пулма хавхалантарать. Медицина службин подполковникĕ Крутогоров Сарьялова кăшт хăтăрсарах каланă сăмахсем те асра юлаççĕ. «Лăплан, çирĕпрех пул,— ăс парать вăл ăна.— Теприсем сан пек те мар аманса пĕтеççĕ, алсăр-урасăр тăрса юлаççĕ, суккăр пулаççĕ, анчах пурпĕрех парăнмаççĕ, пурнăç çинчен ĕмĕтленеççĕ». Çапла вара ырă кăмăллă çынсем пулăшнипе пула Сарьялов шухăш-кăмăлĕ çирĕпленет, чĕринче манăçми юрату та çĕнĕрен амаланса вăй илет.

Л. Агаков «Шанчăк» романра вăрçăри писателĕн сăнарне те кăмăла каймалла кăтартса панă. Фронтра малтан рота командирĕ (каярахпа çар журналисчĕ) пулса çапăçнă Васильев-Актай вăрçăра та хăйĕн пархатарлă тивĕçне манмасть, нумай ĕçлет, фронтра çырнă калавĕсемпе очеркĕсене пĕрле пухса, «Çапăçу хирĕнче» ятлă кĕнеке те кăларать.

Çăмăл пулман асар-писер вăрçă кĕрленĕ çулсенче çар корреспонденчĕсен ĕçĕ. Вĕсем урса кайнă тăшмана хирĕç пăшалпа та, перопа та хастаррăн кĕрешнĕ. Чăваш писателĕсем те, тĕрлĕ фронтсенче пулса, халăха хăйсен çирĕплĕхĕпе хăюлăхне кăтартса пачĕç, вăрçă çулăмĕ витĕр тивĕçлĕн утса тухрĕç.

Ирĕксĕрех Риммăпа Иван Актай калаçни аса килет. «Писательсене те вăрçа яраççĕ-и вара?»— ыйтать Римма. «Вĕсем, мĕн, совет çыннисем мар-и-мĕн, вĕсемшĕн Тăван çĕршыв хаклă мар-им?»—хуравлать Актай. «Апла та-ха... Анчах вĕсене вĕлерсе пĕтерсен, кайран халăх валли кĕнекесем кам çырĕ?»—тет Римма. «Эпир халь сирĕнпе вилес шухăшпа мар, тăшмана пĕтерес шухăшпа пурăнатпăр... Эс темле те, анчах эп пурăнасшăн-ха, йăмăкăм. Кам пĕлет, тен, вăрçă хыççăн сан çинчен те кĕнеке çырăп».

Иван Актай вăрçăра чăн-чăн хăюлăх кăтартать. Çавăншăн ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлаççĕ. Çавăн пек пулнă вĕсем, пирĕн писательсем, çар хаçачĕсенче ырми-канми ĕçленĕ журналистсем.

Л. Агаков вăрçă паттăрĕсен фронтри чаплă ĕçĕсене сăнланипе пĕрлех хальхи мирлĕ пурнăçра та халăхсен çутă пуласлăхĕшĕн — коммунизмшăн ырми-канми кĕрешни, чуна парса ĕçлени çинчен калавсемпе повеçсем çырчĕ. Çавăн пек асран кайми сăнарсене эпир унăн «Яланах салтаксем» повеçĕпе «Туссем каллех тĕл пулаççĕ», «Пĕр витре шыв», «Бруствер çинчи чечексем» тата ытти калавĕсемпе очеркĕсенче те куратпăр.

Фронтри тата тылри пурнăçа Л. Агаков лайăх пĕлнĕ, туллин те тĕрĕс сăнласа панă. Çакна совет çыннисен Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи паттăр ĕçĕсене кăтартса паракан хăшпĕр сăнарсемпе кĕскен паллашнинчен те аванах туйма пулать. Çак асран кайми сăнарсем ку чухнехи çамрăк ăрушăн Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратма, тăшмансене хирĕç яланах хăюллăн кĕрешме вĕрентекен чаплă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

*1974*

## ПОЭТ ВУТПА КĂВАР ПЕК ЯЛКĂШРĔ

*(Стихван Шавли çуралнăранпа 70 çул çитнĕ май)*

Чăваш халăх поэчĕ Стихван Шавли (Степан Антонович Шумков) 1910 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче Куйбышев облаçĕнчи Шунтал районĕнчи Чулçырма ялĕнче çуралнă. Ачаллах тăлăха тăрса юлнăскер, пулас поэт темиçе çул

Харьковри ача çуртĕнче пурăннă, унтах хут вĕренме те тытăннă. Тăван ялне таврăнсан, малтанах хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче, унтан Самарти (хальхи Куйбышев хулинчи) рабфакра пĕлӳ илнĕ. 1939 çулта Хусанти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вара çав çулах Шупашкара пурăнма куçнă. Кунта вăл Чăваш кĕнеке издательствинче, «Сунтал» журнал (халĕ «Ялав») редакцийĕнче ĕçленĕ, писательсен Союзĕн правленийĕнче литература консультанчĕ, Чăвашрадио комитечĕн председателĕ пулнă, юлашки çулсенче литература ĕçĕпе çеç пурăннă. Вăрах вăхăт чирлесе пурăннă хыççăн 1976 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче хастар чĕреллĕ поэт-коммунист, тăван литературăра хĕрĕх пилĕк çул ырми-канми ĕçленĕ юлташăмăр вăхăтсăр вилсе кайрĕ.

Степан Антонович сасси Чăвашра çеç мар, Мускаврa та, Ленинградра та, Украинăра та, Белоруссире те, Дагестанра та, ытти республикăсемпе хуласенче те, колхозсемпе совхозсенче те сулăмлăн янăратчĕ. Вăл ялан халăх хушшинчеччĕ, паянхи кунпа, пурнăçпа тан утма тăрăшатчĕ. Поэт, палăртсах каламалла, чăваш литературине çӳлтенçӳле çĕклессишĕн пысăк вăй хурса, чун-чĕререн хавхаланса ĕçлерĕ.

Стихван Шавлипе эпĕ вăл Шупашкара куçса килсен 1939 çулта паллашрăм. Ун чухне эпир Çеçпĕл Мишши 40 çул тултарнă ятпа тăтăшах литература каçĕсем ирттереттĕмĕр. Пĕррехинче пирĕн пата, педагогика институтне, ытти поэтсемпе пĕрле Степан Антонович та пынăччĕ. Вăл Çеçпĕлĕн «Тинĕсе» сăввине, унтан хăйĕн сăввисене питĕ уçăмлă каласа пачĕ. Çавăнтанпа пирĕн хушăра çыхăну пачах татăлмарĕ, пĕр-пĕрин патне çырусем те час-часах çӳрететтĕмĕр.

Шавли литература ĕçне 1930 çулта тытăннă. Унăн малтанхи «Юлташа» ятлă сăвви 1931 çулта Самарта «Пăр тапранчĕ» альманахра çапăнса тухрĕ. Унтанпа пайтах сăвăпоэма, калавсемпе очерксем, статьясем çырчĕ поэт, 30 кĕнеке ытла кăларчĕ. Çав вăхăтрах вăл вырăс тата ытти халăх поэчĕсен сăввисене те чăвашла нумай куçарчĕ. Унăн хăйĕн произведенийĕсене илсен те, халĕ вĕсене пирĕн çĕршыври 18 халăх чĕлхипе вулаççĕ.

Калас пулать, Шавлин малтанхи сăввисенчех унăн хăйĕн сасси, хăйĕн сăнарлăхĕ, хăйне уйрăм енĕ палăрнăччĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисенче шав, риторика ытларах илтĕнетчĕ пулин те, каярахпа, пуринчен ытла Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче çырнисенче, вĕсем шухăш-кăмăлпа ăсталăх енчен çирĕпленсе пыни уççăнах сисĕнсе çитрĕ.

Фашистла Германи Тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăнсан, поэт сывлăхĕ начар пирки фронтра пулаймарĕ, хаяр тăшмана хирĕç алла пăшал тытса çапăçаймарĕ. Ун пирки вăл час-часах пухусенче пăшăрханса каланă, фронтри юлташĕсем патне те хăйне ўпкелешсе çырусем çырнă. Çапах та поэт хаяр вăрçă çулĕсенче тылра хастарлă ĕçлерĕ, патриотла сăвă-поэмăсем, очерксем, статьясем пичетлерĕ, фронтри юлташĕсемпе пĕрмаях çыхăну тытрĕ, вĕсем патне çапăçура хавхалантаракан çырусем çырса тăчĕ. Вĕсенче вăл пуринчен ытла чăваш халăхĕ фронта мĕнле пулăшни çинчен пĕлтеретчĕ, литературăпа искусствăри ĕçсемпе кĕскен паллаштаратчĕ. Акă ман умра Шавлин 1943 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче çырнă пысăк çырăвĕ. Унта вăл: «Вăрçăра пирĕн 22 писатель,— тет.— Нумайăшĕ çыраççĕ. Халĕ Агаков килсе кайрĕ. Икĕ кĕнекелĕх алçырăвĕ хăварчĕ». Малалла вара тĕрлĕ фронтри çапăçусенче паттăррăн çапăçса пуç хунă писательсене асăнать те: «Ылхан нимĕçе! Тавăрар тăшмана!»— тесе чĕнет. Юлашкинчен хăй мĕнле ĕçлени çинчен хыпарлать: «Вăрçă вăхăтĕнче «Йыхрав» ятлă сăвăсен кĕнекине кăлартăм, халĕ «Поэт сасси» ятлă сăвăсен кĕнекине хатĕрлесе çитертĕм... Радио тăрăх çапла кĕрлеттеретĕп, агиткантăка материалсем парсах тăратăп».

Вăрçă вăхăтĕнче Шавли совет çыннисем Тăван çĕршыва чун-чĕререн парăнса юратни, фашистла захватчиксене хирĕç паттăррăн çапăçни çинчен сăвă-поэма нумай çырчĕ («Ялав», «Салават çĕршывĕнче», «Титенков Мускава сыхлать», «Степан Волков каласа хăварни», «Килне килет салтак» т. ыт. те). Çав сăвăсенче эпир поэт Çĕнтерў кунĕ килессе, фашизма Совет Çарĕ пурпĕр аркатасса пĕтĕм чĕре хăвачĕпе ĕненнине уççăн туятпăр. Акă, чăваш ачи Титенков летчик Мускав патĕнче килес Çĕнтерў ячĕпе ăмăрткайăк пек шуххăн çапăçать, чăваш поэчĕ В. Бараев лейтенант Сталинград патĕнче «вăтăр иккĕре ĕмĕрлĕхе ўкет çĕр çине» («Реквием» сăвă), чăваш хĕрĕ Марине çапăçура хытă аманнă салтака çăлма хăйĕн юнне парать («Донор» сăвă).

Вăрçă çулĕсенче Шавли мĕнле ĕçлени çинчен вăл çырнă «Киев пионерĕ», «Маттур Якур», «Зоя» поэмăсем лайăх кăтартса параççĕ.

«Киев пионерĕ» поэмăн историйĕ акă мĕнле. 1944 çулхи май уйăхĕнче «Пионерская правда» хаçат Киев хулинчи вунă çулхи пионер Костя Кравчук тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтарни çинчен пысăк мар очерк пичетлесе кăларнăччĕ. Нимĕç фашисчĕсем Украинăн тĕп хулине çĕмĕрсе кĕрсен,

пирĕн салтаксенчен пĕри Костьăна икĕ Хĕрлĕ ялав панă, ăна хамăрăн çарсем таврăниччен упраса усрама хушнă. Костя çав ялавсене хула тулашĕнчи вĕлтĕрен пусса илнĕ типĕ пусăра икĕ çул пытарса усранă. Кун çинчен никам та, Костя амăшĕ те пĕлмен. Киева тăшманран ирĕке кăларсан вара вăл ялавсене совет генералне парать. Çакăн пек патриотла ĕç тунăшăн Костьăна орденпа наградăлаççĕ. Хаçатри информацие вуласан: «...эпĕ поэма çырма лартăм, электричество токĕ пек пĕçерсе илнĕ кăмăлăм хĕрнĕçемĕн хĕрсе, сарăлнăçемĕн сарăлса пычĕ. Вунă кун хушшинче эпĕ «Киев пионерĕ» поэмăна çырса та пĕтертĕм»,— тет автор. Поэмăн геройĕ Николай Лещук (пурнăçра вăл Костя Кравчук) халĕ Киевра пурăнать, «Арсенал» заводра ĕçлет.

Çапла ĕнтĕ поэмăн содержанийĕ пĕтĕмпех чăн пурнăçпа çыхăннă. Поэт 1972 çулта хăйĕн геройĕ Костя Кравчук патĕнче хăнара та пулнă. «Поэмăпа çыхăннă вырăнсемпе паллашнă хыççăн эпĕ пур енчен те тĕрĕс кăтартнă иккен, чăнлăхран пĕр утăм та пăрăнман иккен»,— тесе çырнăччĕ Шавли «Пионер сасси» хаçатра (1972 çул, январĕн 22-мĕшĕ).

«Маттур Якур» поэмăра та Тăван çĕршывăн аслă вăрçи кĕрлевĕ вăйлă илтĕнет. Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ, тăванлăхĕ вăрçă хирĕсенче кăна мар, тылри хĕрӳллĕ ĕçре те хăватлăн палăрнине поэмăра тĕрĕс сăнласа кăтартнă. Кунти геройсем — пионерсем. Вĕсем колхоз уйхирĕсем валли кĕл, заводсем валли—тимĕр-тăмăр, аманнă салтаксем валли кучченеçсем пуçтараççĕ, колхозниксемпе пĕрле çĕрне-кунне пĕлмесĕр хирте ĕçлеççĕ. Пурне те поэт асра юлмалла витĕмлĕ çырса кăтартнă. Вăл чĕнсе каланă сăмахсем вара çарти приказ пек янăраççĕ:

> Тăшман усал, тăшман хаяр,
> Вăл уйрăм мар выç кашкăртан.
> Пĕр çын юлмашкăн тивĕç мар
> Тăван çĕре пулăшасран.

Вулакансем поэтăн «Зоя» поэмине те питĕ килĕштерсе йышăнчĕç. Унта чăваш хĕрĕн Зоя Семенова радисткăн вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен каланă. «Сана чăваш çемйи çуратнă. Эс ӳснĕ ват Шупашкарта»,—тет поэт поэма героини çинчен. Мĕнле паттăрлăх кăтартнă-ха вăл вăрçăра, мĕншĕн поэт ун çинчен «хисеплĕ пултăр, пултăр çутă, Ан тухтăр халăх асĕнчен»,— тет?

Зоя, вунсаккăрти комсомолка, çар командованийĕ хушнипе хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле тăшман тылне каять, ун-

тан вăл хамăрăн артиллерие тĕл пеме координатсем пĕлтерсе тăрать. Фашистсем тĕлĕнеççĕ: ăçтан переççĕ, кам снарядсене питĕ тĕл ярать? Сывлăшалла сирпĕнеççĕ снаряд тиенĕ составсем... «Тĕнче пĕтсе килет элле!.. Тĕлĕнмелле!» Çакă йăлтах Зоя ĕçĕ-мĕн. Пысăк маçтăрлăхпа сăнласа кăтартнă çамрăк радисткăн хастарлăхне поэт. Ун сăнарĕ поэмăра чăннипех те ăнăçлă пулса тухнă.

Зойăна нимĕç салтакĕсем хупăрласа илеççĕ. Совет хĕрен ĕнтĕ патрон та, граната та юлман. Вилĕм хăрушлăхĕ килсе тухрĕ пулсан та, вăл хăраса ӳкмест, тăшмана парăнмасть. Хăй пытанса ларакан вырăна пеме чĕнсе, радистка хамăрăннисем патне мĕн виличчен «хум хыççăн хум ярать» тет поэт.

Шавли поэмисен геройĕсем хастар, хăюллă, çирĕп кăмăллă. Ăçта çитсен те, ăçта пулсан та, кирек мĕнле йывăрлăх килсе тухсан та, вĕсем тăван кĕтесе, çуралнă çĕршыва манмаççĕ, шухăш-кăмăлĕпе те, ĕçĕ-хĕлĕпе те хăйсем çинчен ырă ят хăвараççĕ. «Çăлтăр çынни» поэмăра эпир Андриян Николаев космонавтăн тĕлĕнмелле паттăрлăхне куратпăр. «Хăлат Эрхип Иванĕ» поэмăра поэт çирĕп кăмăллă, нимĕнле хуйхă-суйхă та, инкек-синкек те хуçма пултарайман чăтăмлă çынна сăнлать. «Федерико, Хĕветĕр» поэмăра хаяр тăшмана хирĕç Испани поэчĕпе пĕрле чăваш летчикĕ те мĕнпур вăй-халне парса кĕрешни çинчен хумхануса каласа парать.

Поэт иртнĕ самана çинчен те нумай çырчĕ. Анчах вăл ун пек поэмăсенче иртни урлă паянхи куна уçăмлăрах курасшăн, тарăнрах ăнланасшăн. Çак енчен илсен, унăн «Хăяхван çамрăклăхĕ», «Октябрь поэми», «Тăван кĕтес», «Çапата» поэмисем уйрăмах асра юлаççĕ. Юлашки çул вăл хăватлă трактор заводне тăвакан строительсем çинчен поэма та, сăвăсем те çырчĕ, чăваш халăх пĕрремĕш писателĕ, историкĕ, этнографĕ Спиридон Михайлов çинчен историллĕ поэма çырса пĕтерес тесе вăй хучĕ.

Шавли творчествинче аслă çулпуçăмăр В. И. Ленин çинчен, чăваш халăхĕн совет самани çулĕсенчи кунçулĕ çинчен çырнă сăвăсемпе поэмăсем пысăк та хисеплĕ вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенчен пуринчен ытла «Ленин», «Аслă урам», «Тăван халăха», «Тăван çĕршыв», «И. Н. Ульянов уçнă Хутар шкулĕ» сăвăсене, «Ĕшĕл палăк» поэмăна уйрăммăн палăртса хăварас килет.

Поэт юлашки çулсенче прозăллă произведенисем те чылай çырчĕ. «Кĕсле тытрăм аллăма» ятлă хитре очерксемпе калавсен кĕнекине кăларчĕ. Ку кĕнеке пирĕн республикăра чи пирвайхи коммунăсем мĕнле çурални çинчен кала-

кан «Хушпу» тĕрленчĕкĕпе уҫăлать. Вăл малтан «Коммунизм ялавĕнче», унтан «Советская Россия» хаҫатра та пичетленсе тухнăччĕ. Очеркра автор Вăрнар районĕнчи «Волонтер» коммунăри хĕрарăмсем пĕрремĕш трактор туянма тесе хăйсен хушпăвĕсене пухса пани ҫинчен питĕ хумханмалла ҫырса кăтартнă. Ытти очеркĕсенче те Шавли чăваш ялĕсен сăн-сăпачĕ, ял ĕҫченĕсен шухăш-кăмăлĕпе тавракурăмĕ совет самани ҫулĕсенче тĕпрен улшăнса ҫĕнелни ҫинчен чун-чĕререн савăнса ҫырать.

Поэт ҫул ҫӳреме питĕ юрататчĕ. Ăҫта кăна ҫитмерĕ пулĕ вăл! Кирек ăҫта кайсан та очерксăр е статьясăр таврăнмастчĕ. Халĕ те асран тухмаҫҫĕ унăн «Виҫĕ улăп», «Аслă кобзарь ҫĕршывĕнче», «Пенза чăвашĕсен юррисем», «Кунта Лермонтов ӳснĕ» очеркĕсем. Вĕсенче самана туйăмĕ_чĕрĕ ҫăлкуҫ пек тапса тăрать.

Стихван Шавли сатирăпа юмор жанрĕнче те тухăҫлă ĕҫлерĕ. Ҫавнашкал сăвăсенче, фельетонсемпе кĕске калавсенче вăл халăхран уйрăлса кайнă чиновниксемпе бюрократсене, ĕҫке ернĕ ҫынсене, тĕрлĕ харам пырсене ним хĕрхенӳсĕр ҫунтара-ҫунтара илетчĕ. Ҫав произведенисем каярахпа «Пӳрнепе тĕллесе» (1958), «Ăшă кулă — йĕплĕ хулă» (1965), «Ырă канаш» (1971) кĕнекесенче, тĕрлĕрен сборниксенче ҫапăнса тухрĕҫ.

Поэт литература критикинче те активлă ĕҫлерĕ. Вăл ватă писательсен произведенийĕсене те, ҫамрăк авторсен алҫырăвĕсене те тĕплĕн пăхса тухатчĕ, хăйĕн шухăшне тӳррĕн калама юрататчĕ. Анчах уйрăм статйисенче ытларах хурласа е мухтаса каланисем те пулман мар. Тĕслĕхрен, «Тăван Атăл» журналăн 1975 ҫулхи 12-мĕш номерĕнче пичетленĕ «Тăван поэзин тĕп ҫулĕ—Ивановпа Ҫеҫпĕл ҫулĕ» статйинче тĕрĕс мар, хирĕҫӳллĕ шухăшсем те палăрнăччĕ. Вĕсене писательсем те, вулакансем те сивлерĕҫ, йышăнмарĕҫ. Ҫакăнпа автор кайрантарах хăй те килĕшнĕ.

Стихван Шавли литературăри ĕҫĕ-хĕлĕ халăх хушшинче пысăк хисепе тивĕҫлĕ пулчĕ. Тăван республикăн культура пурнăҫне активлă хутшăннăшăн 1970 ҫулта ăна Чăваш АССР тава тивĕҫлĕ культура работникĕ ятне, чăваш литературине аталантарас тĕлĕшпе туна пысăк та паха ĕҫсемшĕн 1974 ҫулта Чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне паҫĕҫ.

Пултаруллă поэтăн сăввисемпе поэмисем нихҫан та кивелмĕҫ, мĕншĕн тесен вĕсенче Тăван ҫĕршыва, тăван халăха, унăн чĕлхине чун-чĕререн юратни таса ҫăлкуҫĕ пек тапса-вĕресе тăрать, пире пурнăҫра ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсем тума хавхалантарать.

Стихван Шавлин литературăри çулĕ яланах такăр пулман, поэт хăшпĕр чухне такăнкаланă та, йăнăшнă та. Анчах унăн пултарулăхне пĕтĕмшпе пăхса тухсан, вăл хăйĕн чи лайăх произведенийĕсенче яланах тĕрĕс çул тытса пынине куратпăр. Поэт хăйĕн ĕçне-хĕлне, халăх умĕнчи тивĕçне тĕрĕс ăнланса, пĕтĕм чунĕ-кăмăлĕпе çапла çырнă:

Эп çĕнĕ ĕмĕр юрăçи,
Калатăп эп: «Кил çĕнĕ ритм!
Вĕре чĕремçĕмре сăмах хуçи,
Çынсен чунне хускат эс хыттăн!»

Çĕршывăм умĕнче паян
Чунпа тупа туса калатăп:
«Тăван çĕршывăмçăм, эп сан,
Сан ырлăхушăн эп çунатăп».

Калатăп эпĕ: «Ан хĕрхен,
Поэт, вутпа кăвар пек ялкăш!
Вутчулĕ пек эс сап хĕлхем,
Çил чӳхекен ялав пек варкăш!»

*1980*

## ЧАПЛĂ ĔМĔР ЮРĂÇИ

Унпа эпĕ чи малтанах 1936 çулта «Сунтал» журнал редакцине А. Кăлканăн «Анисса» пьеси пирки çырнă статьяна илсе пырсан паллашрăм. Çавăнтанпа вара пирĕн хушăри çыхăну татăлман тесен те тĕрĕсех. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче те пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретме вăхăт тупаттăмăр. Кайрантарах вара, уйрăмах Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕнче пĕрле ĕçленĕ çулсенче, пушшех те çывăхланса çитрĕмĕр.

Уйăп Мишши (Михаил Данилович Шумилов) 1911 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Мăштавăш ялĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Пулас поэтăн ачалăхĕ питĕ йывăр иртни çинче чарăнса тăмăпăр, кун çинчен вăл (вулакансем астăваççĕ ĕнтĕ) хăйĕн «Ачалăх кунĕсем» (1962) кĕнекинчех тĕплĕ çырса кăтартнăччĕ. Пуçламăш шкул, Шупашкарти коммуна шкулĕ, Горький хулинчи педагогика институчĕ,— çакăн пек пулнă, типпĕнрех каласан, вут-кăвар чунлă çамрăк Уйăп Мишши вĕренсе, апĕлӳ илсе пурнăç çулĕ çине вăйпиттиллĕн утса тухнă ачалăхпа яшлăх вăхăчĕ. Унтан вăл пĕр хушă Шупашкарти ялхуçалăх рабфакĕнче вĕрентет. 1933—1935 çç. Хĕрлĕ Çар службинче тăрать, 1935—1939 çç. «Сунтал» журнал редакторĕн заместителĕнче, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленин председателĕнче ĕçлет, 1939 çулхи сентябрьте ăна тепĕр

хут Хӗрлӗ Ҫара илеҫҫӗ, ҫар ретӗнчен 1952 ҫулта таврӑнсан, виҫӗ ҫул Чӑваш писателӗсен Союзӗн правлени председателӗнче ӗҫлет.

Сӑвӑсем ҫырма Михаил Данилович ачаллах тытӑннӑ. «Хальхи ҫамрӑксене» ятлӑ пӗрремӗш сӑвви 1925 ҫулта «Канаш» хаҫатра пичетленнӗ. Ҫав ҫултах 13 ҫулхи пионерӑн «Ҫамрӑк хресчен» хаҫатра «Ленин мавзолейӗнче» сӑвви ҫапӑнса тухнӑ. Чӑваш хрестоматийӗсене ҫирӗп кӗрсе юлнӑ ҫав сӑвва халӗ те нумай-нумай шкул ачи пӑхмасӑр калама пӗлет.

Вӑрҫӑчченхи ҫулсенче Уйӑп Мишши пултарулӑхӗ питӗ хӑвӑрт сарӑлса ҫитет. Хӑйӗн творчествинче вӑл пуринчен ытла Тӑван ҫӗршыв, унӑн улӑпла утӑмӗсем, халӑхсен иксӗлми туслӑхӗ ҫинчен хавхаланса ҫырать, ҫарпа патриотизм темипе чун-чӗрене ҫӗклентерекен илемлӗ сӑвӑсем шӑрататать («Ҫурҫӗр ҫӑлтӑрӗ», «Ҫунатлӑ ҫӗршыв», «Ҫурҫӗр экспресӗ», «Ҫилхи витӗр ҫил вӗрет» т. ыт. те).

Талантлӑ поэт яланах пурнӑҫпа тан утма тӑрӑшать, социализм саманинче ҫӗнни ҫӗнтерсе, ҫӗкленсе пыни ҫинчен ҫийӗнчех илемлӗ сӑвӑсем е очерксем ҫырать. Ҫапла ҫуралаҫҫӗ те унӑн «Автобуспа», «Поезд ҫинче» сӑввисем, «Автозавод» очеркӗ, «Днепрострой» поэми. Вӗсене вӑл час-часах радиопа вуласа паратчӗ, республикӑри ялсемпе хуласене тӑтӑшах тухса ҫӳресе те вулакансене паллаштаратчӗ. Таҫта ҫитме те ӗлкӗретчӗ вӑл, юлташӗсене те халӑх хушшинче ытларах пулма хистетчӗ, хавхалантаратчӗ. Тӗптӗрӗсех ҫырчӗ А. Эсхель поэт: «Уйӑп Мишши пултарулӑхне малтан пуҫласа вӗҫне ҫити сӑнаса тухсассӑн, тӳрех асӑрхатӑн: поэт шухӑш-кӑмӑлӗ халӑх шухӑш-кӑмӑлӗпе яланах питӗ тачӑ ҫыхӑнса пырать».

Михаил Данилович Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫи пуҫланнӑ чухне Совет ҫӗрӗн хӗвеланӑҫ чиккинче службӑра пулчӗ. Кун умӗн вӑл сыхлӑх темипе хӗрӳллӗ-хӑпартланулла сӑвӑ-юрӑ питӗ нумай шӑрантарчӗ. Юлташӗсем патне янӑ ҫырусенче те поэт Тӑван ҫӗршыва кунӗн-ҫӗрӗн вӑйлатса-ҫирӗплетсе пыма кирлине астутаратчӗ. Акӑ мӗнле ҫырнӑччӗ, сӑмахран, вӑл ман пата 1940 ҫулхи январӗн 29-мӗшӗнче хӗвеланӑҫӗнчи чикӗрен: «Куллен ӗҫре, куллен салтаксен умӗнче. Тӗнчере лару-тӑру лӑпкӑ мар. Ҫар ӗҫне, техникине эпир ҫеҫ мар, сирӗн те вӗренмелле. Эсӗ ӗнтӗ кӑҫал институтран вӗренсе тухатӑн. Аван ӗҫ. Унтан ҫар пурнӑҫӗпе те паллашма лекӗ. Унсӑр арҫын шутне кӗме ҫук. «Симӗс» тейӗҫ ҫынсем... Ӗнер Шупашкара сӑвӑсем ятӑм. Пурте вӗсем ҫӗршыва сыхлас темӑпа, халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетес ӗҫпе ҫыхӑннӑ».

Вăрçă çулĕсенче Уйăп Мишши тĕрлĕ вырăнсенче пулчĕ. Пуринчен ытла вăл Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн çар политуправленийĕнче ĕçлерĕ. Çав вăхăтра та поэт-воин фронтри тата Шупашкарти тусĕ-юлташĕсемпе çыхăнсах тăчĕ. П. Хусанкайпа, А. Алгапа, И. Тукташпа, А. Эсхельпе, А. Кăлканпа, С. Шавлипе тата ытти писательсемпе те тăтăшах çырусем çӳретрĕ. Унăн патриотла шухăш-туйăмĕ, ĕçченлĕхĕ, вĕресе тăракан вăй-халĕ поэзире тарăн йĕр хăварчĕ. «Çине тăрсах, шăла çыртса ĕçлетĕп,—пĕлтерчĕ вăл 1943 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче ман пата янă çырура.— Пĕр кĕнекелĕх сăвăсем çыртăм. Тата «Салтак амăшĕ» поэма çырса пĕтертĕм, ăна Шупашкара яратăп».

Чăнах та, вăрçăра сăвăсем çырма çăмăл пулман. Анчах çав йывăр тапхăрта та поэт тăван поэзире хăйĕн сассине парсах пычĕ. Унăн Тăван çĕршывăн чаплă Çĕнтерĕвĕ ячĕпе тискер тăшмана хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешекен паттăр совет салтакĕсене мухтаса çырнă сăввисене пирĕн халăх юратса йышăнчĕ, вĕсем чăваш литературине яланлăха кĕрсе юлчĕç.

1943 çулта Уйăп Мишшин «Малалла, хĕвеланăçнелле!» ятлă сăвă кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Унта вăл вулакансене фашистсен тискертен те тискер ĕçĕсем çинчен чуна ыраттармалла каласа парать. Поэт Днепрогэс ишĕлнине, ача-пăча вилнине курать, фашист йăх-яхĕсем ишĕлтернĕ ял-хула витĕр тухать. Çакăнта ĕнтĕ ун чунĕнче тăшмана курайманлăхпа хаярлăх мĕнле хускалса кайни те лайăх курăнать. Вăл совет салтакĕсене нимĕç захватчикĕсене сывлăш çавăрма памасăр хăвалама, пĕр шеллемесĕр, канăç памасăр хаяррăн тавăрма йыхăрать:

Çавăн пекех унăн «Ан чак!», «Сталинград», «Ан ман!», «Наступлени» ятлă сăввисем те сулмаклă, витĕмлĕ. Вĕсене Уйăп Мишши пысăк туйăмпа, çапăçури боецсен чĕри патне çитермелле çырнă.

Вăрçă вăхăтĕнчи лирикинче поэт-воин тăван çĕрпе ăна паттăррăн хӳтĕлекенсем çинчен куллен шухăшлани уççăн палăрать. Акă вăл чăваш салтакĕсемпе тĕл пулнă та вĕсемпе Чăваш çĕршывне асăнса чĕререн калаçать, вĕсене хăйĕн сăввисене вуласа парать. Çав вăхăтра вăл кашни боец ăшра тупа тунине асăнать («Тупа» сăвă).

Лирикăллă сăвăсемпе пĕрлех Уйăп Мишши фашизма питлекен вичкĕн сатирăллă сăвăсемпе памфлетсем те сахал мар çырчĕ. «Эрзац атă», «Мускава çитеймен фриц», «Капут», «Йыт амисем» тата ытти сăвăллă фельетонсем— халăх фашизма пĕтĕм чун-чĕререн курайманнине кăтартакан произведенисем.

Вăрçă вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕнче Уйăп Мишшин «Салтак амăшĕ» (1943) поэми уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Кунта Тăван çĕршыв ячĕпе фронтра хаяр тăшманпа çапăçма хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлне пехиллесе ăсатнă чăваш хĕрарăмĕн пысăк сăнарĕ тухса тăрать. Ун ывăлĕ фашистсемпе паттăррăн çапăçса вилет, анчах ватă хĕрарăма ывăлĕн фронтри тусĕсем манмаççĕ, хăйсен иккĕмĕш амăшĕ пулма ыйтаççĕ. Яланах çынсемпе, халăхпа пĕрле пулни салтак амăшĕн асаплă хуйхине пусарма пулăшать.

Вăрçă хыççăн Михаил Данилович ытларах прозăллă произведенисем çырчĕ. Хамăр çĕршыв тăрăх та, ют çĕршывсенче те нумай çӳрерĕ вăл. Акă, Инçет Хĕвелтухăçĕнче пулнă хыççăн «Инçе çулсем тăрăх» (1960) ятлă очерксен кĕнекине пичетлесе кăларать. Унта вăл Хабаровск, Владивосток, Комсомольск, Совгавань хулисенче, Сахалинпа Курил утравĕсем çинче пурăнакан совет çыннисен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен питĕ тĕплĕ те интереслĕ çырса кăтартнă. Каярах, 1961 çулта, вăл Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенче — Чехословакире Франците, Англире т. ыт. çĕрте те пулчĕ. 1963 çулхи ноябрĕн 5—16-мĕшĕсенче Уйăп Мишши П. Хусанкайпа пĕрле Куба Халăх Республикине кайса килчĕ. Унта мĕнле çӳрени çинчен вăл ман пата (ун чухне эпĕ Ленинградра пурăнаттăм) темиçе çыру та çырчĕ. 1964 çулхи апрелĕн 28-мĕшĕнче çапла пĕлтерчĕ: «Урăх çĕршывсене çитсе курса çӳренисем çинчен очерксен кĕнекине çырса пĕтертĕм. Уйрăм сыпăксене, кĕскетсе те пулин, «Тăван Атăла» пама шутларĕç. Кубăна кайса килнĕ май унта курнисене те каласа памалла. Çавăнпа ларатăп-ха тата... Ĕçĕ нумай».

Çул çинче çырса пынисемпе усă курса, 1966 çулта вăл «Кай енче» ятлă кĕнеке кăларчĕ. «Акă, манăн «Кай енче» ятлă кĕнеке тин кăна магазинсене çитсе сутăнма пуçларĕ,— тесе çырнăччĕ 1966 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче.— Çакăн пек япаласем çырасси патне те çитсе тăтăмăр иккен! Ку вăл чăвашла пуçласа тунă япала. Опыт тени çук пирĕн ку тĕлĕшрен, çырма мĕн тери йывăр пулнине вуласа тухсан курăн. Анчах вăй çитертĕмĕр. Çапла пек туйăнать. Сăвă çырма пăрахса, çакăнпа лартăм вĕт».

Чăнах та, «Кай енче» кĕнекене çырма çăмăл пулман. Чăтăмлăх, хастарлăх, мĕн çинчен çырнине лайăх пĕлни кирлĕ пулнă. «Кай енче» кĕнекене пирĕн вулакансем те, критиксем те ырларĕç, пысăк хак пачĕç.

Михаил Данилович юлашки 3—4 çул хушшинче йывăр чирлесе пурăнчĕ, Шупашкарта та, Мускавра та больницăсенче чылай хушă выртрĕ. Мĕнле йывăр пулсан та, вăл

тăван литературăпа питĕ интересленетчĕ, пĕрмаях юл’ шĕсемпе калаçатчĕ, вĕсем патне çырусем çыратчĕ.

Мускавра больницăра выртнă чух ун патĕнче эпĕ темиçе хут та пултăм. Ун чухне эпĕ Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн председателĕччĕ, вăл ответлă секретарĕнче тата парти организацийĕн секретарĕнче ĕçлетчĕ. Мансăр пуçне, Уйăп Мишши патĕнче час-часах Мускавра пурăнакан чăваш писателĕсем И. Максимов-Кошкинский, М. Кипек, А. Каттай пулатчĕç. «Тавтапуç чăваш çыравçисене, тунсăхлама памаççĕ. Хавхалантараççĕ, ырлăх-сывлăх сунаççĕ»,— тетчĕ вăл.

Тĕл пулсан е çырусенче чăваш писателĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе интересленни, вĕсем çинчен шухăшлани тĕлĕнтеретчĕ. Пĕр çырăвĕнче вăл «Ĕçсем мĕнле пыраççĕ пирĕн?— тесе ыйтать.—Воронежа кайса килтĕр-и, литература кунĕсене унта мĕнле ирттертĕр? Виçĕ сăмахпа та пулин çавăн çинчен çырса пĕлтер. Вас. Алендей юбилейĕ епле иртрĕ-ши? Çеçпĕл юбилейне хатĕрленесси епле пырать? Ухсай манран больницăра выртса юлчĕ. Ун сывлăхĕ мĕнле? Хваттер ыйтăвĕ епле-ши? Манăн сĕтелте, сылтăм енчи ещĕкре, «Хваттер хучĕсен папки» выртать. Унта Эльбипе Сандров заявленийĕсем, хваттер хучĕсене хатĕрлемелли тĕслĕхсем. Хутсене тунă чухне çав тĕслĕхсемпе усă курмалла.

...22.10.69 ç. мана больницăна хучĕç. Тĕрĕслеме пуçларĕç. Тĕплĕн тĕрĕслетпĕр, унтан мĕн тума кирлине тăватпăр, сиплесе яратпăр, терĕç. Виçĕ хутчен юн илчĕç... чĕре таппине çырса илчĕç. Тирме те тытăнчĕç. Хĕрсе ĕçленĕ чух эпир сывлăх çинчен шухăшламастпăр. Кайран чиртен хăтăлма йывăр».

Тепĕр çырăвĕнче вăл парторганизаци ĕçĕсемпе интересленет, отчетпа суйлав пухăвне мĕнле ирттермелли çинчен çырать, писательсен Союзĕнче политвĕренӳ занятийĕсем мĕнле пыни çинчен питĕ пĕлес килет тет.

1969 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче Михаил Данилович ман пата пысăк çыру çырса янăччĕ. Унта вăл акă мĕн пĕлтерет. «Манăн операци ноябрĕн 27-мĕшĕнче кĕçнерникун пулчĕ,— тет.— Халиччен икĕ вĕркĕчĕлле туллин вашлаттарса сывланă кăкăрăмран сулахай ӳпкене пĕтĕмпех касса кăларса илчĕç. Юрăхсăра тухнă пулнă иккен. Эй, шел пулчĕ те вара аллă сакăр çул хушши мана чĕрĕлĕх сывлăшĕ парса пурăннă хăрах ӳпкене кăларса пăрахма! Анчах нимĕн те тума çук—кастармаллах пулчĕ. Халĕ пирĕн йышра хăрах ӳпкеллĕ çыравçă та пур ĕнтĕ... Çăмăл мар. Пĕлетĕп: Уйăпа та тимĕртен туман-çке. Кунта чун-чĕре вăйĕ мĕн чухлĕ кирлĕ пулнине каламасăрах ăнланмалла.

...Виççĕмĕш кунхине, операци хыççăнхи палатăра ăшаланса выртнă самантра мана санăн çырăвна тата Стихван Шавли çырăвне пырса тыттарчĕç. Чун кĕрсе кайрĕ... Кĕçех ман патăма купипе çыру килсе тулчĕ. Пурте ырă сунаççĕ, вăй-хал сунаççĕ. Хăвăртрах сывалса тухасса кĕтеççĕ».

Кунта эпĕ Уйăп Мишши çырăвĕсенчен хăшпĕр сыпăкĕсене çеç илтĕм. Вĕсем те пире Михаил Данилович мĕнле чăтăмлă çын, пысăк оптимист, таса чун-чĕреллĕ поэт-коммунист пулнине лайăх кăтартаççĕ, унăн вĕри чĕри, тулли кăмăлĕ вулакан умне яр-уççăн тухса тăраççĕ.

Поэт хăй больницăра йывăр чирлесе выртнă вăхăтра та тарăн шухăшлă, хавас туйăмлă сăвă çырма пултарнине те асăнса хăварас килет. Ку — унăн юлашки сăввисенчен пĕри. Акă мĕн вулатпăр унта:

Пĕрре килет-çке пурнăç.
Ĕçле, кĕреш чунтан.
«Çынна мĕн ырă турăн эс?»—
Тесен — ĕçпе мухтан.

Больницăран тухсан та вăл тăван литературăшăн сывлăхне шеллемесĕр тăрăшрĕ. «Паян тумалли ĕçе паянах тумалла, ырана хăварма юрамасть»,— тетчĕ вăл.

Çамрăксемпе тĕл пулсан, Михаил Данилович питĕ хавхаланса калаçатчĕ, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе интересленетчĕ. Çĕнĕ талантсене ӳстерсе пырас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлемелли çинчен вăл хаçатра çапла çырнăччĕ: «Творчествăри çамрăксен общество ĕçĕнчи активлăхне вăйлатма пирĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, вĕсене пурнăçпа тытакан çыхăнусене çирĕплетмелли интереслĕ ĕçсем хушмалла. Çак тĕллевпе писательсен Союзĕ ирттерекен семинарсен, конференцисен, конкурссен идейăпа политикăлла шайне ӳстермелле, çамрăксен пултарулăхне тĕплĕн, пур енлĕн тишкермелле, хак памалла, хамăр хушăри наставничествăна, производствăри пекех, аталантарса пымалла. Пуринчен ытла çамрăк авторсемпе уйрăммăн ĕçлесси çине тимлĕн пăхмалла».

Мĕнле лайăх, тĕрĕс шухăшсемпе сĕнӳсем! Вĕсем паян калана пекех илтĕнеççĕ.

Хушнă ĕçе Михаил Данилович пĕтĕм вăйне хурса тĕплĕ тума тăрăшатчĕ. Писательсен Союзĕн планĕсене хатĕрленĕ чух е районсенче, кӳршĕ республикăсенче литература кунĕсем ирттерме пуçтараннă вăхăтра правлени членĕсемпе те, творчество секцийĕсен пуçлăхĕсемпе те, хаçат-журналсенче ĕçлекен юлташсемпе те канашлатчĕ, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илме тăрăшатчĕ. Литература организацийĕн мероприяти-

йĕсене йĕркелесе пынă чух самантлăха та ĕç дисциплини çинчен манмастчĕ. Хăй те йĕркеллĕ, сăпайлă, ĕçчен çынччĕ вăл. Уйăп çавăн пекех юлташĕсенчен те пурнăçра яланах тĕрĕс чунлă та çирĕп пулма ыйтатчĕ. Хăш чухне хытах та калатчĕ, анчах çакăншăн ăна ватă писательсем те, çамрăккисем те кӳренме пĕлместчĕç.

Поэт халăх хушшинче тăтăшах пулатчĕ, обществăлла ĕçе хастарлă хутшăнатчĕ. Фабрикăсемпе заводсене, колхозсемпе совхозсене, шкулсене час-часах тухса çӳретчĕ, тĕнчери лару-тăру, тăван республика пурнăçĕпе чăваш литературин çитĕнĕвĕсем çинчен вулакансене каласа пама юрататчĕ. Ун пек чух йĕпе-сапана та, çил-тăманлă сивĕ кунсене те пăхса тăмастчĕ вăл. Манас çук 1968 çулхи август уйăхĕнче, пĕр тăтăш çумăр çунă вăхăтра, вăл П. Хусанкайпа, А. Кăлканпа, А. Воробьевпа, В. Грибановпа пĕрле Улатăр районне литература кунĕсем ирттерме кайнине. Хальхи пекех астăватăп, пĕр эрне хушшинче вăл юлташĕсемпе пĕрле 8 колхоза çитнĕ, сăвăсем вуланă, докладсем туса панă. 1969 çулхи март уйăхĕнче Елчĕк районĕнче пулчĕ. Ун чух унпа пĕрле А. Кăлкан, Илпек Микулайĕ, Н. Евстафьев, В. Эльби писательсемпе М. Денисов, Л. Романенко, Е. Белова т. ыт. артистсем те ку тăрăхри ялсенче çӳрерĕç. Сывлăхĕ начарланса çитнĕ пулин те, Уйăп Мишши кун çинчен никама та шарламан, коллективпа пĕрле ялтан яла çӳренĕ, çамрăксен сăввисемпе паллашнă, вĕсемпе занятисем ирттернĕ.

1970 çулхи март уйăхĕн 24—27 кунĕсенче Раççейри писательсен Союзĕн III съезчĕ пулса иртрĕ. Унта Уйăп Мишшин те каймаллаччĕ. Анчах сывлăхĕ хавшаса çитнипе вăл çав съездра пулаймарĕ, Мускаври врачсем патне çӳрерĕ. Кашни каç эпĕ ун патне хваттерне телефонпа шăнкăравлаттăмччĕ. Ун сăмахĕсенче вăл пурнăçа чун-чĕререн юратни, пурăнас, ĕçлес кăмăл çирĕп пулни сисĕнетчĕ. Шел, пĕр ӳпкине касса кăларнă хыççăн чаплă ĕмĕр юрăçи нумай пурăнаймарĕ: 1970 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнче вилсе кайрĕ.

Чăваш çĕршывĕн талантлă поэчĕ, тăван культурăн тава тивĕçлĕ работникĕ Уйăп Мишши халăх хушшинче пысăк хисепреччĕ. Икĕ хутчен вăл Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ пулчĕ. Ăна КПСС Шупашкар хула комитечĕн членне, КПСС Чăваш обкомĕн членĕн кандидатне тата 1967 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйланăччĕ. Тăван литературăра ăнăçлă та пултаруллă ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Уйăп Мишшине икĕ хутчен Хисеп грамоти панă.

Ҫакӑн пек, кӗскен илсен, пултаруллӑ поэт-гражданинӑн асран кайми сӑнарӗ. Ӑна, чаплӑ ӗмӗр ҫинчен чаплӑ сӑвӑ-юрӑсем ҫырнӑ поэта, тӑван халӑх нихҫан та манас ҫук.

*1981*

## ЧАПУ САН СӐНЕС ҪУК

Паллӑ писатель-коммунист, паттӑр салтак-патриот Максим Николаевич Данилов-Чалдун ҫуралнӑранпа 90 ҫул ҫитнине палӑртнӑ кунсенче эпир унӑн ӗҫне-хӗлне сума суса, хисеплесе аса илетпӗр.

Писателӗн кунҫулӗпе литературӑри пултарулӑхӗ ҫинчен ҫырнӑ статьясем, асаилӳсем чылаях. Анчах хӑшпӗр авторсем писателӗн пурнӑҫ ҫулне пӑтраштарса ҫырнине те, пӗр факта темиҫе тӗрлӗ ӑнлантарса е илемлетсе каланине те курма пулать. Хӑш чухне М. Н. Данилов-Чалдун хӑй хӑҫан ҫуралнине, ӑҫта ҫӳренине е ӗҫленине хӑех пӑтраштарни те пулнӑ иккен. Уйрӑмах писатель кунҫулӗ 1920 ҫулччен уҫӑмлӑ мар тесе ҫырать истори наукисен кандидачӗ А. Изоркин «Чалдун кунҫулӗн Ҫӗпӗрти тапхӑрӗ» статьяра («Ялав» журнал, 1984 ҫ., 1-мӗш №). Вӑл унта Томскри парти архивӗнче упранакан документсем тӑрӑх М. Н. Данилов-Чалдун биографийӗнчи хӑшпӗр фактсене тӗрӗс мар ҫырса кӑтартнисене тӳрлетнӗ. Тӗпчевҫӗ пысӑк ӗҫ тунӑ, ҫавӑнпа та унӑн статйине кӑмӑлласа асӑнас килет.

М. И. Данилов-Чалдун 1894 ҫулхи январӗн 6-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе—январӗн 18-мӗшӗнче) Ӗпхӳ кӗпӗрнинчи Стерлитамак уесне кӗнӗ Усӑлӑ ялӗнче чухӑн хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ (халӗ ку ял Пушкӑрт республикинчи Стерлитамак районне кӗрет).

Вӑл пурӑнса ирттернӗ сур ӗмӗр ҫӑмӑл пулман. Ҫӗпӗре куҫса кайсан, ҫамрӑклах ялти пуянсем патӗнче те, шахтӑра та ӗҫленӗ, 1914—1917 ҫулсенче патша ҫарӗнче пулнӑ, империализм варҫине хутшӑннӑ. Чирленӗ пирки ҫартан Ҫӗпӗре таврӑнать те каллех шахтӑра ӗҫлеме пуҫлать. Офицеров полковник бандине тӗп тунӑ ҫӗрте ҫапӑҫать. Ҫавӑн чухне ӗнтӗ, 1920 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗнче, вӑл Коммунистсен партине кӗрет. Кайран Максим Николаевич кӗпӗрнери совпартшкулта ултӑ уйӑх вӗренет унтан вара ялти кооперативра счетоводра ӗҫлет, профсоюз тата парти организацийӗсенче ӗҫлет. 1925—1926 ҫулсенче Мускавра партин Тӗп ко-

митечĕ çумĕнчи уессенчи парти работникĕсен курсĕнче вĕренет. Унтан таврăнсан, вăл партин Усинск (халĕ Красноярск крайĕ) райкомĕн секретарĕнче ĕçлет, 1933—1934 çулсенче кĕпĕрнери совпартшкулти чăвашсемпе тутар çамрăкĕсем вĕренекен уйрăма ертсе пырать. «Литература ĕçне эпĕ 20—21-мĕш çулсенче тытăнтăм», — тесе çырнă вăл хăйĕн автобиографийĕнче.

1934 çулта М. Данилов-Чалдун çемйипех Шупашкара куçса килнĕ. Çав çулах ăна СССР писателĕсен Союзĕн членне илеççĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн членне суйлаççĕ, Пĕтĕм Союзри писательсен 1-мĕш съездне яраççĕ. 1937—1938 çулсенче вăл Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн председателĕн заместителĕнче ĕçлет, Союз çумĕнчи парторганизацие ертсе пырать, 1939—1941 çулсенче «Чăваш коммуни» (халĕ «Коммунизм ялавĕ») хаçат редакцийĕнче, Чăвашрадио комитетĕнче ĕçлет.

1937 çулхи сентябрь уйăхĕнче эпир—Чăваш педагогика институтĕнче вĕренекен студентсем: Александр Алга, Кăтра Мишша тата эпĕ—Максим Николаевич патĕнче пултăмăр. Ун чухне вăл пире пĕрремĕш тĕнче вăрçипе граждан вăрçи çулĕсем çинчен, хăй тÿссе ирттернĕ кунсем çинчен, калавсемпе пĕчĕк очерксем мĕнле çырма тытăнни çинчен нумай каласа пачĕ.

— Эх, телейлĕ çамрăк юлташсем, лайăх, мирлĕ вăхăтра пурăнатăр, вĕренетĕр эсир. Эпĕ, акă, аран-аран пуçламăш шкулта, тĕрлĕрен курссенче çеç вĕренсе пăхрăм, вăтам е аслă шкулсене пырса та кĕреймерĕм. Калавсем çырма та хам тĕллĕн кăна вĕрентĕм. Çырмалли, ай, нумай. Эпĕ чăваш чĕлхин грамматикине нихçан та вĕренмен. Çавăнпа та тĕрĕс, яка çырма питĕ йывăр. Кашни калава е очерка пичете париччен эпĕ чи малтан Алакĕр Васлейне е Митта Петĕрне вулаттаратăп. Вĕсем чăваш çырулăхне лайăх пĕлеççĕ,— тетчĕ.

Чăнах та, эпĕ Алакĕр Васлейĕпе пĕрле М. Н. Данилов патĕнче ĕçре те, унăн килĕнче те темиçе хут та пулнă, унăн калавĕсем çинчен статьясем те çырнăччĕ. Вăл пире час-часах «Яланах халăх хушшинче пулма тăрăшăр, общество пурнăçне активлăн хутшăнăр, Тăван çĕршыва усă кÿме тăрăшăр»,— тесе каланă сăмахсене нихçан та манас çук.

М. Данилов-Чалдун литературăра профессионал пулса пĕр кун та ĕçлемен. «Вăл яланах халăх хушшинче пулнă, партипе совет ĕçĕнче-и е ытти ĕçре-и—яланах малта пынă»,— тесе çырнă ун çинчен чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер.

Шупашкарта ĕçленĕ чух вăл сĕтел хушшинче сахал ларнă, час-часах ялсемпе хуласене тухса çӳренĕ, республикăри ялхуçалăхĕпе промышленноçра малта пыракан çынсем çинчен очерксемпе калавсем çырнă. Паллах, çав вăхăтрах пултаруллă писатель Çĕпĕр партизанĕсем Совет влаçĕшĕн паттăр çапăçни çинчен те нумай çырать. Вулакансем унăн «Икĕ вăй», «Партизансем», «Ункăран», «Çулăм витĕр», «Хĕрлĕ çăлтăр», «Тайга паттăрĕсем» произведенийĕсене лайăх пĕлеççĕ. Вĕсенче автор ĕççыннисен революцилле патриотизмĕ çирĕп пулнине, ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕве тĕрлĕ халăх ĕççыннийĕсем, чухăнсемпе вăтам хресченсем, ĕçхĕрарăмĕсем, çамрăк ачасем активлă хутшăннине витĕмлĕ кăтартса панă. Акă, «Икĕ вăй» повеçре эпир тĕп геройсенчен пĕрне Яланпи ятлă чăваш хĕрарăмне куратпăр, «Шахтăра» калавра — çамрăк ачана Алешкăна, «Левентей масарĕ» калавра — ватă çынна Левентее, «Ункăран» калавра — Макар разведчика, «Çулăм витĕр» калавра — Карачăм шахтера тата ыттисене те. Колчак çарне хирĕç паттăр кĕрешекен çынсем хушшинче вырăссем те, чăвашсем те, тутарсем те, мăкшăсем те пулнă. Вĕсен çапăçури туслăхне писатель питĕ уççăн, ĕненмелле çырса панă.

Колхоз тунă вăхăтра чăваш ялĕсенче класс кĕрешĕвĕ пынине, хресченсем колхозлă пурнăç туса телейлĕ те культурăллă пурăнма тытăннине М. Данилов-Чалдун «Якур çулĕ», «Тăшман — куç умĕнче», «Бригадир калавĕ» тата ытти калавсемпе очерксенче уçăмлă кăтартнă. Вĕсене пурне те 1936 çулта тухнă «Колхоз калавĕсем» кĕнекене кĕртнĕ.

Çав вăхăтрах вăл «Вăрçă» тата «Климка» ятлă повеçсем çырма тытăннă. Анчах 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче фашистла Германи Совет Союзне вăрă-хурахла килсе тапăнчĕ, совет халăхĕн мирлĕ пурнăçĕ татăлчĕ. Тăван çĕршывшăн чи йывăр та хăрушă вăхăтра ватă коммунист М. Данилов-Чалдун, хулари çар комиссариатне кайса, хăйне хăвăртрах фронта яма ыйтнă. «Çийĕнчех çара илесшĕн пулмарĕç ăна, фронта яма пирĕн çамрăксем те çителĕклĕ тесе, ӳкĕте кĕртме хăтланса пăхрĕç. Хăйĕн ирĕкĕпе фронта кайма çирĕп шухăш тытнă ватă салтака ăçтан ӳкĕте кĕртĕн? Çук. 1941 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче Максим Николаевич фронта тухса каять»,— тесе çырать Алакĕр Васçлейĕ хăйĕн асаилĕвĕнче.

Хăй ирĕкĕпе вăрçа кайни çинчен писатель-фронтовик 1943 çулхи май уйăхĕнче «34-мĕш атака умĕн» ятлă çырура çапла çырать: «Виççĕмĕш хут вăрçăра пуласси çинчен эпĕ мирлĕ вăхăтра шутламан та темелле. Аллă çула çитнĕскер, хам ирĕкпе вăрçă çынни пулса тăтăм.

...Икĕ хутчен вăрçăра пулнă. Анчах халĕ, çĕршывшăн питех те хăрушă кунсем килсе тухнă вăхăтра, мĕнле килте ларас-ха? Çук, эпĕ ун пек çын мар. Маншăн Тăван çĕршыв хаклă. Эпĕ ăна вĕçĕмсĕр юрататăп... Тăван çĕршыва мăшкăллас, ăна чуралăха кĕртес шутпа килнĕ ирсĕр тăшмана çивĕч шăлсемпе туртса çурас килет.

...Паян акă эпĕ фронта çитсе фашистсене хирĕç çапăçма пуçлани 14 уйăх тулчĕ. Çак вăхăтра 33 хутчен наступленире пултăм. Икĕ хутчен çăмăл суранлантăм. Анчах суранлансан та, стройран тухман. Сурана туртса çыхнă та малаллах кайнă. Мĕнле те пулин нимĕç салтакĕсене нумайрах пĕтерме тăрăшатăп.

...Фашистсем манăн пĕртен-пĕр юратнă ывăлăма вĕлерчĕç. Ун вырăнне эпĕ вĕсене çĕр хут тавăрăп. Эпĕ — ашшĕ. Манăн вата алă чĕтресе тăмĕ...»

Çак çырура писатель хăй тăшмана епле курайманнине, çапăçура унăн паттăрлăхĕ ăçтан вăй илнине пĕлтерет. Фронтра вăл хăй валли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул çеç курать: вăл — тавăру çулĕ, çĕнтерӳ çулĕ.

М. Данилов-Чалдун алли тăшманпа çапăçнă чухне чĕтресе тăман. Вăтăр тăваттăмĕш атакăна кĕме приказ кĕтсе тăнă чух çырнă вĕт вăл çак чĕре патне пырса тивекен çырăва! Пĕрре мар, иккĕ мар — 34 атакăра пулнă çулăм чĕреллĕ писатель. Анчах вăрçăран таврăнаймарĕ вăл. 1944 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче хаяр çапăçура йывăр аманать, ăна вара Калинин облаçĕнчи Кувшиновка хулинчи çар госпитальне илсе каяççĕ. Мартăн 2-мĕшĕнче паттăр салтакăн, 548-мĕш миномет полкĕн 2-мĕш дивизион парторгĕн пурнăçĕ операци сĕтелĕ çинчех татăлать. Унăн вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен 1945 çулта С. Шавли «Вата салтак» ятлă поэма çырчĕ. «Чул ту пулса, чул ту пек тăтăн хăруш кунсем шавланă чух»,— тет поэт. Поэма çак сăмахсемпе вĕçленет:

Эс ху ятна ху юнупа хĕретрĕн
Çĕршывшăн йывăр килнĕ чух.
Çавăнпала чапна вилĕмсĕрлетрĕн,
Çавăнпала чапу сан сӳнес çук.

Гитлер вăрă-хурахĕсене хирĕç вата писатель-воин пăшалпа та, перопа та паттăррăн çапăçрĕ, çирĕплĕх, хăюлăх кăтартрĕ. Унăн ятне писательсен Союзĕн çуртĕнче мрамортан тунă асăну хăми çине ылтăн саспаллисемпе ĕмĕр асăнмалăх çырса хунă.

Хĕрӳ çапăçуллă кунсенче илемлĕ литература произведенийĕсем çырма унăн вăхăт пулман пулин те, вăл кăшт

каннӑ е оборонӑра тӑнӑ чух хӑй мӗн-мӗн курнине, тӳссе ирттернине ҫырса пӗлтерме тӑрӑшнӑ. Ҫапла унӑн пысӑках мар калавсемпе новеллӑсем ҫуралаҫҫӗ: «Кам айӑплӑ?», «Красноармеец Самсонов», «Фельдшер Кочетков», «Политрук», «Вӑрманта», «Лизавета Егоровна», «Антун ҫемйи» тата ыттисем. 1944 ҫулта Чӑваш кӗнеке издательстви, ҫав произведенисене пухса, «Фронтра» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ.

М. Данилов-Чалдун геройӗсем — таса чунлӑ, Тӑван ҫӗршыва чун-чӗререн юрататакан ҫынсем. Акӑ, «Красноармеец Самсонов» калавра вӑл вӑрҫӑччен автан пусма та хӑраса тӑнӑ ҫын фронтра тӑшман танкӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнине, вӑл чунӗпе ҫирӗпленсе пынине кӑтартать. «Лизавета Егоровна» калавра совет халӑхӗ тӑшмана пурпӗрех ҫӗнтерессе ҫирӗп ӗненекен колхоз председателӗ пулнӑ чӑнчӑн патриоткӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарать. «Антун ҫемйи» калавра совет партизанӗсем фашистсене хирӗҫ вирлӗн кӗрешнине, вӗсен ҫапӑҫури хастарлӑхӗпе ӑсталӑхӗ кулленкун ӳссе, ҫирӗпленсе пынине куратпӑр.

М. Данилов-Чалдун калавӗсемпе новеллисем нумайлӑха асра юлаҫҫӗ. Вӗсенче автор вӑрҫӑри событисене ҫӑмӑл чӗлхепе, ӑнланмалла ҫырса кӑтартнӑ, унӑн геройӗсем вулакансене ҫирӗп кӑмӑллӑ пулнипе савӑнтараҫҫӗ, ҫамрӑк ӑрӑва Тӑван ҫӗршывӑн хӑюллӑ та хастар патриочӗсем пулма чӗнеҫҫӗ.

*1984*

## ПАРХАТАРЛӐ КУНҪУЛ

*(Тихӑн Петӗркки ҫуралнӑранпа 80 ҫул ҫитнӗ май)*

Тихӑн Петӗрккипе эпӗ Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫланиччен паллашнӑччӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн вара, уйрӑмах юлашки вунӑ ҫул хушшинче, час-часах тӗл пулса калаҫнӑ. Анчах хӑйӗн пурнӑҫӗ, литературӑри ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен калаҫма юратмастчӗ вӑл. Хӑш чух мӗнле произведени ҫырни ҫинчен ҫырупа пӗлтеретчӗ е вулама тесе алҫырӑвне ярса паратчӗ. Халӗ, вӑл ҫуралнӑранпа 80 ҫул тултарнӑ май, хӑшпӗр тӗлпулусенче мӗн ҫинчен калаҫнисем, ҫырусенче мӗнле ыйту тапратнисем аса килчӗҫ.

Акӑ, 1968 ҫулхи июнь уйӑхӗнчи асран кайми кунсем. Ун чухне чӑваш халӑхӗн аслӑ ывӑлӗ Иван Яковлевич Яковлев ҫуралнӑранпа 120 ҫул ҫитнине, Чӗмпӗрти вӑл уҫнӑ

чăваш шкулĕ 100 çул тултарнине пирĕн республикăра та, республика тулашĕнче те анлăн палăртрĕç. Ку ятпа Мускавра та чаплă лару пулчĕ, хаçат-журналсенче статьясем, асаилӳсем пичетленчĕç. И. Яковлев юбилейне ирттернĕ чух чăваш çыравçисемпе артисчĕсен пĕр пысăк ушкăнĕ вăл çуралнă çĕршыва, хамăрпа кӳршĕллĕ Тутар республикине кайрĕ. Вăл ушкăнра Тихăн Петĕркки те (Петр Тихонович Петров) пулчĕ. Чи малтанах эпир Теччĕ хулинче, педучилищĕре литература каçĕ ирттертĕмĕр. Шăпах çавăн чух Петр Тихоновичпа çывăх паллашса кайрăмăр.

— Учитель пуласси — манăн чĕре патĕнчи тĕп ĕмĕтчĕ,— терĕ вăл ун чух.— Çавăнпа та эпĕ Пăва уесĕнчи Кӳрень ялĕнчи иккĕмĕш сыпăклă шкулта вĕреннĕ çĕртен 1918 çул вĕçĕнче Теччĕ хулине килтĕм те малтан учительсем хатĕрлекен курсăн аслă подгруппинче вĕрентĕм. Курсран (унччен вăл учительсен семинарийĕччĕ) педтехникум тусан, эпĕ унăн пĕрремĕш кăларăмĕнче, 1924 çулта, учитель ятне илтĕм. Çапла пуçланчĕ манăн халăха вĕрентес ĕçри кунçулăм, урăхла каласан — ĕç биографийĕ. 40 çул хушши тĕрлĕ çĕрте пĕтĕм вăя, чун-чĕрене шкул ĕçĕне çыхăнтартăм. Халĕ эпĕ — пенсионер.

Теччĕре вĕреннĕ чух Тихăн Петĕркки Çеçпĕл Мишшипе паллашнă, унăн ĕçне-хĕлне лайăх пĕлнĕ.

Сăмах çине сăмах, ыйту çине ыйту. Хăшĕ-пĕрисем Çеçпĕл Мишши çинчен нумайрах пĕлесшĕн пулчĕç.

— Эпĕ вĕреннĕ вăхăтра Михаил Кузьмин вĕренме пăрахнăччĕ, ĕçлеме тытăнчĕ вăл, анчах шкулпа çыхăну татман, яланах кĕркелесе тухнă, пирĕнпе, чăваш ачисемпе, нумай калаçнă. Тĕп ыйту комсомол çинчен пыратчĕ, эпир мĕнле кĕнекесем вулани çинчен ыйтса пĕлетчĕ. Астăватăп: пĕрре «Нарспи» поэма çинчен сăмха пынăччĕ. Ăна чăваш ачисенчен пĕлмен çын пулман пулĕ ун чух. Пирĕн ялта, Кушкăра, ăна ваттисем те пĕлетчĕç, сцена çинче те лартнă, эпĕ те Сентти рольне вылянă,— терĕ Петр Тихонович.

Тепĕр кунне, июнĕн 18-мĕшĕнче, эпир И. Я. Яковлев çуралнă яла, Кăнна Кушкине, çитрĕмĕр. Çак ялтах И. Максимов-Кошкинский, А. Алга, Тихăн Петĕркки çуралса ӳснĕ. Вĕсем халĕ пурте пирĕнпе пĕрле. Ял çыннисем Шупашкартан килнĕ хăнасене çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç, шкул умĕнчи лаптăкра çамрăксем вăйă карĕç...

Тихăн Петĕркки Кăнна Кушкинче чухăн хресчен çемйинче 1903 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче çуралнă. Çакăнтах вăл пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă.

— Ку шкула Иван Яковлевич Яковлевпа Илья Николаевич Ульянов 1871 çулта уçнă. Ун чухне Иван Яковлевич

Хусанти университетра веренне, çав вăхăтрах чăваш çырулăхне пуçарса янă. Тĕленмелле ăслă, хастар çын пулнă. Унăн кунçулĕ çинчен çĕнĕ документсем нумай тупрăм эпĕ, халĕ повесть çыратăп,— терĕ Тихăн Петĕркки ял историйĕпе И. Я. Яковлев пурнăçĕ çинчен каланă май.

— Теччĕри педтехникумран вĕренсе тухсан, чи малтанах Чемпĕрти педтехникум çумĕнчи кăтартуллă шкулта ĕçлерĕм. Асран кайми кунсем пулчĕç: И. Я. Яковлев ученикĕсемпе пĕрле савăнса пурăнтăм. Унтан 1926—1930 çулсенче Ульяновск облаçĕнчи Пухтел районне кĕрекен Кивĕ Улхашри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче вĕрентрĕм. 1930—1935 çулсенче Синкĕл районĕнчи тулли мар шкул учителĕ, директорĕ, 1935—1941 çулсенче районти çутĕç пайĕн заведующийĕ пултăм. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçрăм: ахаль салтак та, политрук та, рота командирĕ те пултăм. Мана Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тăватă медаль пачĕç.

Хастар учитель, паттăр салтак, вăрçăран таврăнсан, каллех хăй çамрăклах юратнă ĕçре пулать. «Синкĕл педагогика училищинче тăватă çул, каярах Хусанти хула районĕсенчен пĕринче çутĕç пайĕн заведующийĕнче ултă çул, вăтам шкул директорĕнче сакăр çул ĕçлерĕм. 1964 çулта пенсие тухрăм. 1930 çултанпа эпĕ — КПСС членĕ, 1965 çултанпа — СССР писателĕсен Союзĕн членĕ. Вăт çапла манăн кунçул уттийĕ»,—тесе вĕçлерĕ Петр Тихонович калаçăва.

Пĕр эрне хушши çӳрерĕмĕр ун чухне эпир Теччĕпе Пăва районĕсенчи чăваш ялĕсенче. Вулакансене вăл И. Я. Яковлев пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен питĕ нумай каласа пачĕ, пулас кĕнекин сыпăкĕсене вуларĕ. Иртнĕ вăрçăри çапăçусене асăнтăмăр, тăван чĕлхепе литература ыйтăвĕсем çинчен калаçрăмăр.

Тихăн Петĕрккин малтанхи сăввисем, очеркĕсемпе калавĕсем «Чăваш хресченĕ», «Колхозник» хаçатсенче, «Пирĕн çул», «Вăтам Атăл», «Сунтал» альманахсемпе журналсенче пичетленнĕ. Вĕсенче çамрăк писатель пуринчен ытла колхозсем тума пуçланă вăхăтри ял пурнăçĕпе, чăваш хресченĕсен шухăш-туйăмне сăнарлама тăрăшнă. Çав темăпах çырнă вăл Мускавра 1930 çулта «Пирĕн вăй» альманахра пичетленĕ «Трактор» ятлă пирвайхи поэмине те. Унта чăваш ялне пĕрремĕш трактор илсе килнине, вăл коллективлă пурнăç тума пулăшнине кăтартса панă. «Хум» ятлă романра та автор çав вăхăтри пурнăçа сăнлама тăрăшнă, анчах ăна çырса пĕтерейменрен, уйрăм сыпăксем çеç 1933 çулта «Вăтам Атăл» альманахра пичетленнĕччĕ.

Вăтăрмĕш çулсенчех Тихăн Петĕрккин умлăн-хыçлăн пьесăсем пичетленме пуçларĕç. Вĕсене пуринчен ытла ялти драмкружоксем валли çырнă («Ĕмĕт», «Тĕлĕк», «Укçа» т. ыт. те). 1938 çулта Чăваш республикинче иртнерĕ конкурсра унăн «Ĕмĕт» пьеси иккĕмĕш вырăн йышăнать. Каярахпа драматург «Çĕрлехи çиçĕм», «Халăхра — вăй», «Юнлă кунсем», «Тапрану», «Ничава Хветĕрĕ» пьесăсем çырать. Вĕсене вăрçăччен ялти пултарулăх кружокĕсем, колхоз театрĕсем сахал мар лартнă. Чăваш государство академи театрĕ унăн «Укçа» драмине чылай вăхăт хушши кăтартрĕ.

Тихăн Петĕркки—нумай енлĕ пултаруллă писатель. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл чăваш халăхĕн пурнăçне тĕрлĕ енчен кăтартса пачĕ. Учительте нумай ĕçленĕскер, вăл «Тимĕре туптама пĕлмелле» повеçре хальхи вăхăтра учительсем шкулта çамрăксене Тăван çĕршыва юрăхлă çынсем пулма мĕнле вĕрентнине лайăх кăтартса панă. «Çил-тăвăл» тата «Атлан» повеçсенче наука ыйтăвĕсем, фантастикăпа приключени жанрĕпе çыхăннă ĕçсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем паянхи пурнăç проблемисемпе тĕвĕленнĕ произведенисем. Çав вăхăтрах ун творчествинче истори темипе çырнă повеçсемпе пьесăсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенчен уйрăмах «Юнлă кунсем» пьесăпа «Кушкă ачи» повеçе палăртса хăварас килет.

«Юнлă кунсем» трагедире XIII ĕмĕрте тутар-монголсем Атăлçи Пăлхар патшалăхне аркатнă тапхăрти кĕрешĕве кăтартса панă. 1971 çулта пьеса уйрăм кĕнекен пичетленсе тухрĕ.

Тихăн Петĕрккин чи лайăх произведенийĕ вăл — «Кушкă ачи» ятлă повесть. Унта чăваш халăхне çутта кăларакан паттăр çыннăн — Иван Яковлевич Яковлевăн пурнăçне, пархатарлă ĕçне-хĕлне ĕненмелле çырса кăтартнă. Паллах, ун пек историллĕ произведени çырма çăмăл пулман. Ун çинчен вăл архивсенче ĕçленĕ чух историксемпе, И. Я. Яковлев ученикĕсемпе калаçнă хыççăн час-часах ман пата çырусем çыратчĕ. Акă, сăмахран, 1970 çулхи çыруран илнĕ йĕркесем: «Манăн Кушкă çинчен, Иван Яковлевичăн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен, вăл мĕнле йывăрлăхсене çĕнтерсе чăваш халăхĕ валли Чĕмпĕрте учительсем хатĕрлекен шкул уçни, Илья Николаевич Ульяновпа туслă пурăнни, пĕрле ĕçлени çинчен хам мĕн пĕлнине каласа хăвармаллах. Эпĕ — Кăнна Кушки çынни, Иван Яковлевичăн тантăшĕсем, тăванĕсем, тусĕсем хушшинче ӳснĕ-çке! Чи пирвайхи хут эпĕ Иван Яковлевича вунă çула çитсен, 1913 çулта, курнăччĕ. Ачаранпах эпĕ ăна чĕререн хисепле-

нĕ... Повеçре чăн пулса иртнĕ ĕçсем çинчен çырса кăтартма тăрăшрăм. Мана хам курни-илтни, Кушкă çыннисемпе çĕршывне лайăх пĕлни питĕ пулăшрĕ, тата архив документчĕсем усăллă пулчĕç».

«Кушкă ачи» повесть икĕ кĕнекерен тăрать: пĕрремĕш пайĕ 1971 çулта, иккĕмĕш пайĕ 1976 çулта пичетленсе тухрĕ. Повеçе вулакансем те, критиксем те ырларĕç, писатель пысăк, усăллă ĕç тунине палăртрĕç. 1976 çулта повесть Мускаврα вырăсла пичетленчĕ, кăçал вăл иккĕмĕш хут вырăсла Шупашкарта тухрĕ. Ăна вырăссен паллă поэчĕ Виктор Кочетков куçарнă. «Ку повеçе питĕ савăнса, хавхаланса куçартăм»,— тесе çырнăччĕ вăл ман пата кĕнеке Мускаврα тухсан.

Тихăн Петĕркки пысăк ĕмĕтпе пурăнатчĕ, хавхаланса ĕçлетчĕ. Вăл хăйĕн талантне парти ĕçне, совет халăхне, тăван литературăпа искусствăна аталантарма пачĕ. Чăваш писателĕсен пухăвĕсемпе съезчĕсенче тухса сăмах каланă чух пысăк ыйтусем тапрататчĕ. Яланах вăл писательсене литературăра социализмла реализм çулĕпе пыма, партилĕхпе халăхлăх принципĕсене пурнăçа кĕртсе, пысăкран пысăк çитĕнӳсем тума чĕнетчĕ.

Çырмаллисем унăн татах та нумай пулнă. «Пулни-иртни» ятлă автобиографиллĕ повесть çырса пĕтернӗччĕ вăл. Аслă Отечественнăй вăрçăра чăваш ывăл-хĕрĕсем паттăррăн çапăçни çинчен повесть çырас ĕмĕтпе пурăнатчĕ.

Чылай хушă йывăр чирлесе пурăннă хыççăн Тихăн Петĕркки 1976 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче Хусанта вилсе кайрĕ. Унăн пысăк ĕçĕ халăхăмăрта упранĕ.

*1983*

## ПАЛЛĂ ДРАМАТУРГ, САВĂÇ

Хăйĕн пĕтĕм кунçулне юратнă Тăван çĕршывпа çыхăнтарса, «Тăван çĕршыва» сăввинче Александр Кăлкан çапла калать:

Пилле мана, тăван чĕлхеçĕм,
Хĕвел хĕлхемлĕ ăш сăмах:
Пулам çурхи кунсен чĕкеçĕ,
Савса юрлам Çĕршывăма.
Вăл панă тивлетпе çын пултăм,
Эп ĕмĕр парăмлă ăна;
Нимле хăват та, нимле мул та
Уйтан сивтеймĕ ман чуна.
Вăл ман телейĕм, ман вăй-халăм!
Чи пысăк шанчăк — вăл пурри.

Унăн сăвви-юррисемпе юптарăвĕсене, калавĕсемпе повеçĕсене тата пьесисене вулакансем лайăх пĕлеççĕ, вĕсене юратса вулаççĕ. А. Кăлканăн тăван литературăри ĕçĕ-хĕлĕ нумай енлĕ, вăл çырнă произведенисен вăй-хăвачĕпе пĕлтерĕшĕ те пысăк. Ырми-канми ĕçлесе, Александр Дмитриевич тĕрлĕ жанрпа хĕрĕхе яхăн кĕнеке кăларчĕ, тĕрлĕ чĕлхерен чăвашла вăтăр пьеса куçарчĕ. Вĕсем совет çыннисене хулара та, ялта та ырă пуласлăхшăн кĕрешме хавхалантараççĕ.

Эпĕ ăна нумайранпа пĕлетĕп. Вăл Тутар республикинчи Пăва районĕнчи Çĕнĕ Мертлĕ ялĕнче çуралнă. Унти чăвашсен ĕлĕкхи йăли-йĕркисем çинчен иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче Г. Т. Тимофеев учитель «Тăхăръял» ятлă кĕнекере тĕплĕ çырса кăтартнă. Ку енчи чăвашсен юрри-сăмахĕсене, сăвăтакмакĕсене А. Кăлкан та çамрăклах тĕпчеме тытăннă, нумай çыра-çыра илнĕ.

Ялти шкултан вĕренсе тухсан, пулас писатель Упири икĕ сыпăклă шкулта икĕ çул вĕреннĕ, унтан Хусанти чăваш педтехникумне вĕренме куçнă. Çакăнта ĕнтĕ вăл хăй те сăвăсем çырма тытăннă. Чи малтанах унăн сăввисем Хусанта тухса тăнă «Утăм» альманахра 1928 çулта пичетленнĕ.

Астăватăп-ха: ун чухне эпир, кĕçĕн группăсенче вĕренекенсем, клубра е техникум садĕнче çамрăк поэтсен сăввисене итлеме пухăнаттăмăр. Унта А. Кăлкан, Алга тата ытти студентсем час-часах хăйсен сăввисене вулатчĕç, тĕрлĕрен халап-юмахсем каласа паратчĕç, пĕр-пĕринпе литература ыйтăвĕсем пирки тавлашатчĕç, чăваш халăх юррисене ушкăнпа юрлатчĕç. А. Кăлкан Тăхăръял çамрăкĕсен вăйă юррисене юрлама тата сĕрме купăс калама юрататчĕ. Вăл халĕ те сĕрме купăса аларан ямасть, час-часах çамрăксен юррисене шăрантарать.

А. Кăлкан вĕреннĕ чух педтехникумра паллă ученăйсем В. Г. Егоров, Г. И. Комиссаров, Д. Д. Данилов ĕçленĕ, вĕсем çамрăк авторсене тăван чĕлхене юратма, унăн пуянлăхĕпе пĕлсе усă курма вĕрентнĕ. Литературăна юратакан студентсем час-часах Н. Шелепи, П. Хусанкай, В. Рзай поэтсемпе тĕлпулусем ирттернĕ. Ку ĕнтĕ, паллах, çамрăксене сăвă-юрăсем çырма хавхалантарнă. Çав вăхăтсене аса илсе, Александр Дмитриевич «Хавхаланса аса илетĕп» сăвăра: «Ват Шелепин асран кайми сăнарĕ ман чĕрере çур ĕмĕр пурăнать»,— терĕ.

Педтехникумран вĕренсе тухнă хыççăн, А. Кăлкан учительте ĕçлет, Хусанти педагогика институчĕн чĕлхепе литература уйрăмĕнче икĕ çул вĕренет. 1935 çулта вăл Шу-

пашкара куçса килет. Кунта малтан Чăваш АССР писательсен Союзĕн правленийĕн ответлă секретарĕ пулнă, «Пионер сасси» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. «Хатĕр пул» журнала редакциленĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Александр Дмитриевич Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен управленийĕн начальникĕ пулнă, каярахпа чылай вăхăт хушши «Тăван Атăл» альманаха редакциленĕ. 1956—1958 çулсенче Максим Горький ячĕпе хисепленекен литература институчĕ çумĕнчи Литература аслă курсĕнче вĕреннĕ.

Партипе правительство унăн литературăпа искусствăра тунă ĕçĕсене пысăка хурса хакларĕç: ăна «Хисеп палли» орденпа, медальсемпе наградăланă, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне панă. Хальхи вăхăтра вăл — писатель-профессионал, тăван литературăна илемлĕ произведенисемпе пуянлатас тĕлĕшпе хастар ĕçлекенсенчен пĕри.

А. Кăлкан чăваш литературинче чи малтанах сăвă-юрăпа палăрчĕ. Çамрăк чухнех вăл Тăван çĕршывăмăра, тăван тавралăха, хресченĕн ирĕклĕ ĕçне мухтаса пысăках мар лирикăллă сăвăсем çырчĕ. Каярах та вăл сăвăсем çырма пăрахмарĕ, халĕ те çепĕç те янăравлă, вулаканăн чун-чĕрине çунатлантаракан сăвăсемпе юрăсем пĕрмаях çырать.

Поэт пултарулăхĕнче лирикăллă сăвăсемпе юптарусем уйрăмах пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенче вăл тӳрĕ, таса чунлă çынсене, юратушăн çирĕп тăракансене мухтать. Юрату çукран юратупа вылякансене, чееленсе çамрăк яш-кĕрĕме улталаса пурăнакан икĕ питсене вăл вара чăтма пултараймасть, тарăхса çивĕччĕн питлет, ятлать.

Юрату, туслăх, мораль ыйтăвĕсене поэт сатирăллă сăвăсемпе юптарусенче те, фельетонсенче те час-часах таптарать. Унăн сатирăллă сăввисем пĕтĕмпех пурнăçпа çыхăннă. Вĕсенче автор ĕçкĕпе иртĕхекенсене, пуш параппан çаптаракан мухтанчăксене, харам пырсене, йăпăлти, суя туссене, ĕçе çиелтен çеç тăвакансене тата пирĕн хушăра тĕл пулакан ытти çитменлĕхсене питĕ витĕмлĕ критиклет, вĕсемпе куллен-кун кĕрешме чĕнет.

«Сӳнми хĕвел çĕршывăм ман» тесе ят панă вăл пысăк туйăмлă пĕр сăввине. Кунта мĕнпур совет халăхĕ тăванлă пулнине, заводсемпе колхозсенче пуласлăхшăн хастар ĕçленине куратпăр эпир. «Тăван çĕршыва» ятлă сăввăн тĕп шухăшĕ те çавăн пекех. Юратнă çĕршыва, çуратса ӳстернĕ тăван кĕтесе тĕнчери тискер тăшмансенчен, мул хуçисен киревсĕр ĕмĕчĕсенчен пĕтĕм вăйпа сыхламалла тет поэт.

А. Кăлкан ача-пăча валли те сăвăсемпе юрăсем, халап-

юмахсем, калавсемпе повеçсем нумай çырать. Вĕсем çамрăк ăрăва çĕр çинче телейлĕ пурнăç тума, ĕçре паттăр пулма, çутçанталăкăн пуянлăхне юратма вĕрентеççĕ.

А. Кăлканăн творчествинче драматурги те пуллă вырăнта тăрать. Унăн ячĕ «Анисса» пьеса тухнă хыççăн палăрчĕ. Çав пьесăшăн драматург Чăваш автономине туса хунăранпа 15 çул тултарнă ятпа иртternĕ конкурсра преми илме тивĕçлĕ пулнă. Пьесăра чăваш ялĕнчи пуянсемпе чухăнсен хушшинчи класс кĕрешĕвне кăтартса панă. Тĕп геройсем — Аниссапа Кирук — патша саманинчи пусмăрлăхпа танмарлăха хирĕç, ирĕклĕ пурнăçшăн, телейлĕ юратушăн кĕрешеççĕ. Ялта Сатай, Пикментей йышши пуянсем чухăнсене пусмăрласа пурăнаççĕ. Вĕсем хĕсĕрленине парăнман Анисса, хăйĕн савнине Кирука хӳтĕлесе, вăхăтсăр вилет. Драматург Кирук характерĕ, тавракурăмĕ мĕнле çирĕпленсе пынине, ялти пуянсене хирĕç чухăнсемпе пĕрле мĕнле кĕрешме тытăннине лайăх кăтартнă.

Ку пьеса хыççăн А. Кăлкан драматургире активлă ĕçлеме пуçларĕ. Ача-пăча валли «Алим» пьеса çырчĕ. Унта вăл граждан вăрçи вăхăтĕнче ачасем пысăккисемпе пĕрле çамрăк Совет республикин тăшманĕсене хирĕç паттăр кĕрешни çинчен калать.

Вăрçă вăхăтĕнче, 1942 çулта, Чăваш академи драма театре А. Кăлканăн «Иван Кадыков» пьеси тăрăх спектакль лартса пачĕ. Ку вăл — чăваш литературинчи пысăк формăллă, сăвăласа çырнă пĕрремĕш историллĕ драма пулчĕ. Конкретлă историллĕ материала, фактсене тата пурнăçра чăн пулнă геройсен паттăрла ĕçне тĕпе хурса, А. Кăлкан большевкисем ертсе пынипе ĕççыннисем Совет влаçĕшĕн хастаррăн кĕрешнине ĕненмелле кăтартать.

Иван Кадыков — историре чăн пулнă герой, паллă революционер. Тăшмансем Шупашкарта Совет влаçне пĕтерсе лартма хатĕрленнĕ вăхăтра вăл хула Совечĕн членĕсемпе пĕрле хулари ĕççыннисене хăйĕн тĕрĕс те çулăмлă сăмахĕпе, хăюллă ĕçĕсемпе кĕрешӳре хавхалантарса пырать. Анчах тăшман хаяр, хĕрхенӳсĕр. Эсерсемпе буржуалла националистсем Кадыкова тискеррĕн вĕлереççĕ. Драма хурлăхлă вĕçленет, анчах вăл пурнăç çине çутă ĕмĕтпе пăхма, çĕнĕ самана çĕнтерессе çирĕп шанса тăма чĕнет.

1957 çулта А. Кăлкан пьесăна тепĕр хут пăхса тухрĕ те «Октябрь хумĕ» ятпа уйрăм кĕнеке туса кăларчĕ. Аслă Октябрь революцийĕ 40 çул тултарнине уявланă чух ăна Чăваш академи театрĕнче лартрĕç.

Вăрçă хыççăн А. Кăлканăн «Савăнăç», «Авлантарчĕç», «Маргарита тавăрать», «Çывăх çăлтăрсем», «Вăрман юр-

ри» тата ытти пьесисем пичетленсе тухрĕç, вĕсене вулакансем те, спектакль куракансем те хапăл туса йышăнчĕç.

Юлашки çулсенче вăл чăвашсен кăвар чĕреллĕ поэчĕн — Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен материалсем нумай пухрĕ, мухтавлă поэт сăнарне литература произведенийĕсенче кăтартса пама тăрăшрĕ. Акă унăн «Чи пысăк телей» ятлă драми пичетленсе тухрĕ. Драмăри ĕçсем 1919 çулхи январь—май уйăхĕсенче пулса иртеççĕ. Пурте вĕсем Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕпе çыхăннă. Эпир поэта следователь ĕçĕнче те, библиотекăра та, халăх йышлă пухăннă митингра та, Мускаври ВЦИК курсĕнче вĕренекенсем хушшинче те куратпăр. Çеçпĕл чăн-чăн коммунист, таса чунлă, çулăм чĕреллĕ кĕрешӳçĕ, ырă кăмăллă юлташ пулнине драматург тĕрлĕрен картинăсем, эпизодсем урлă витĕмлĕ сăнласа кăтартать.

Драмăра Çеçпĕлсĕр пуçне хăйсен чăн хушамачĕпех хăварнă çынсем те пур: Я. Андреев — парти укомĕн секретарĕ, П. Бекшанскипе П. Слесарев — Çеçпĕлĕн çывăх юлташĕсем, Анастасия Петровна — библиотека заведующийĕ.

Калас пулать: А. Кăлкан пурнăç чăнлăхĕнчен пăрăнмасть, историлле тапхăра тĕрĕс çутатса парать. Драмăн тĕп геройĕ Çеçпĕл Мишши вулакансем умне хĕвеллĕ пурнăçшăн хĕрӳллĕ кĕрешекен паттăр пек тухса тăрать. «Пуласлăхшăн, çутă коммунизмшăн кĕрешни—чи пысăк телей»,— тет вăл. Поэтăн чун-чĕререн тухакан çак сăмахĕсемпе вĕçленет драма.

«Чи пысăк телей» пьесăпа А. Кăлканăн «Çеçпĕл Ленина итлет» сăвви те çыхăннă. Сăвăра Çеçпĕл Мускавра вĕреннĕ чухне В. И. Ленина курни çинчен чуна хумхантармалла çырса кăтартнă. Чухăн чăваш ачи Çеçпĕл Мишши аслă çулпуçăн сăмахĕсене итлет, хавхаланса «Сыв пултăр Ленин!», «Мухтав Октябрь çулпуçне!» тесе «урра!» кăшкăрать, «Ун çĕнтерӳллĕ ялавне нихăçан ӳкермĕпĕр çĕре!» тесе тупа тăвать.

А. Кăлкан ăста драматург кăна мар, ăста тăлмачă та. Вăл В. Шекспирăн, А. Островскин, Н. Гоголĕн, Н. Погодинăн, К. Симоновăн, И. Стаднюкăн, Х. Вахитăн, А. Волковăн тата ытти драматургсен пьесисене, С. Михалковăн, М. Дудинăн тата ытти вырăс писателĕсен произведенийĕсене чăвашла нумай куçарчĕ. Ку таранччен унăн хăйĕн те сакăр кĕнеки вырăсла пичетленсе тухнă, ытти чĕлхесене нумай-нумай сăвă-юрăсем, халап-юмахсем куçарнă.

Александр Дмитриевич мĕн-мĕн çырни çинчен, вăл халăх хушшинче пĕрмаях пулни çинчен, çамрăк авторсене ăс парса, вĕрентсе вăхăтне те, сывлăхне те шеллемесĕр ĕçле-

нине татах та нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Ĕç-чен çыравçă литературăра халиччен мĕн тунипе лăплан-масть, вăл малашнехи ĕмĕтсемпе пурăнать.

Пирĕн юратнă писатель халĕ çитмĕлте ĕнтĕ. Анчах: «Ва-тăлмасть поэтăн чунĕ. Вăл çап-çамрăк ĕмĕрех»,— тет вăл хăйĕн пĕр сăввинче.

*1981*

## ПОЭТ—ВОИН—КОММУНИСТ

Владимир Васильевич Бараев-Сĕрккене эпĕ малтанхи хут 1937 çулта, çуркунне, наука тĕпчев институчĕн библио-текинче тĕл пултăм. Унта эпĕ Г. Т. Тимофеевăн «Тăхăръял» ятлă этнографилле очеркĕн алçырăвĕпе паллашас шутпа пынăччĕ. Бараев ăна маларахах вуласа тухнă-мĕн. Эпĕ хам çав «Тăхăръяла» кĕрекен Элшел ялĕнче çуралса ӳснине пĕлсен, вăл тӳрех хĕпĕртесе кайрĕ, тем-тем çинчен те ыйт-са пĕлме пуçларĕ.

— Хăçан каятăн унта? Ял ячĕсем халĕ те улшăнман-и-ха? «Тăхăръял» авторне пĕлекенсем Элшелĕнче пур-и? Эх, çитсе курасчĕ-çке, пĕр-ик эрне те пулин унта пурăнасчĕ, ваттисем калаçнине итлесчĕ,— терĕ вăл хавасланса.

Тепрехинче эпир унпа радиокомитетра тĕл пултăмăр. В. Бараев мана хăй ăçта çуралса ӳсни çинчен, вĕренни, ĕçлени çинчен, чăваш писателĕсемпе туслă пурăнни çин-чен каласа пачĕ. «Эпĕ Тăхăръял ачисемпе вĕреннĕ-çке, ун-та ман юлташсем нумай, вĕсем патĕнче ман пулмаллах,— терĕ вăл çул çине тухас ĕмĕтне пĕлтерсе.— Ман тепĕр «Али-паттăр» пек поэма çырас шухăш пур-ха. Çавăнпа чă-ваш халăх пултарулăхне пикенсех пухас, тĕпчес пулать. Ку вăл — пархатарлă та кирлĕ ĕç, ăна Шупашкарта пу-рănса тума çук. Час-часах пирĕн чăваш ялĕсенче пулмал-ла, ватă çынсемпе те, çамрăккисемпе те куçа-куçăн тĕл пул-са калаçмалла. Анчах Тăхăръяла çитиччен малтан эпĕ ха-мăн тăван яла кайса килесшĕн-ха»,— тесе пĕлтерчĕ вăл.

Поэтăн тăван ялĕ — Чăваш АССРĕнчи Шăмăршă район-не кĕрекен Виçпӳрт Шăмăршă. Кунта вăл чухăн хресчен килйышĕнче 1910 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче çуралнă. («Чă-ваш писателĕсем» кĕнекере В. Бараев ноябрĕн 24-мĕшĕнче çуралнă тесе каланă. Ку тĕрĕс мар, поэт хăй ноябрĕн 18-мĕшĕнче тесе çырнă. Çар документчĕсенче те çаплах кă-тартнă.) Малтан вăл ялти пуçламăш шкулта, унтан Тутар республикинчи Хурăнвар ялĕнчи вăтам шкулта вĕреннĕ;

Ульяновскри ялхуçалăх техникумĕнче, Самар (хальхи Куйбышев) хулинчи планпа экономика институтĕнче вĕреннĕ. 1934 çулта Бараев Шупашкара пурăнма куçнă. Кунта вăл халăх пултарулăх çуртĕнче, радиокомитетра, кĕнеке палатинче, хаçат редакцийĕсенче ĕçленĕ.

Чăваш литературинче Владимир Бараев 10 çула яхăн çеç ĕçлерĕ. Унăн малтанхи произведенийĕсем Куйбышевра тухса тăнă «Колхозник» хаçатпа «Вăтам Атăл» альманахра пичетленнĕччĕ. Кайран, Шупашкара килсен, ун ятне час-часах кунти хаçат-журналсенче курма пулатчĕ, радиопа та хăйĕн сăввисене вулатчĕ.

В. Бараевăн сăвви-юррисенче, калавĕсемпе очеркĕсенче çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешекен халăхăн ĕçĕ-хĕлĕ яр-уççăн курăнса тăрать. Поэт çул çӳреме юратнă. Вăл Вăтам Азире те, Кавказра та пулнă, Атăл çинчи пысăк хуласенче пурăннă, Чăваш республики тăрăх нумай çӳренĕ, час-часах вулакансемпе тĕл пулнă. Çапла çӳрени, ырми-канми ĕçлени поэта очерксем валли материалсем тупма пулăшнă, рабочисемпе колхозниксен ĕçне-хĕлне тĕрĕс кăтартса пама май панă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл хăйĕн пĕр сăввинче Тăван çĕршыв калама çук пысăк та пуяннине, совет халăхĕ пĕр кăмăлпа, пĕр шухăшпа ĕçлесе пурăннине çапла çырса кăтартнă:

Географ, сана кăшт задани парсассăн,
Миçе хут Союзăмăр — шитле.
Эп Магнитогорскинчен кăшкăрсассăн,
Эс Совет-форд заводĕнчен итле.

Акă тата пилĕкçуллăхăн хăватне кăтартакан хĕрӳллĕ сăмахсем:

Ыран ирпе
518 гудок пĕр харăс юрлĕç
Тата татти-сыпписĕр
Хурçă урхамахсем кĕçенĕç,
Пин те хĕрĕх витерен тухса.

Вăрçăччен çырнă сăвăсенче, калавсемпе очерксенче совет индустрин гиганчĕсене, çĕнĕрен çĕкленекен хуласемпе ялсене В. Бараев хăйне майлă, куç умĕнчи япаласене курнă пек сăнласа кăтартать. Кунта эпĕ поэтăн «Кавказ хăнисем» ятлă пысăк очеркне уйрăмах палăртса хăварасшăн. Ку очерк — Атăл тăрăхĕнчи, Кавказри халăхсен совет саманинчи çитĕнĕвĕсене тĕрĕс çутатса паракан произведени.

В. Бараев пултарулăхĕнче «Таврăнсан» калавпа «Сӳнми хĕлхем» повеçĕ, «Али-паттăрпа» «Вилĕме çĕнтерекен» поэ-

ма-юмахсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсене вăл вăрçă пуçланиччен çырнă. Çавăн пек произведенисем татах та çырас ĕмĕтпе пурăнатчĕ вăл. Çав ĕмĕтпех поэт Тăхăръял тăвраш ĕнче те пуласшăнччĕ. Анчах ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне фашизмăн хура вăйĕсем татрĕç.

Совет Союзне фашистла Германи вăрă-хурахла килсе тапăнсан, ик эрнеренех Владимир Бараев салтак шинелĕ тăхăнать. Малтан вăл Иваново хулинчи çар училищинче виçĕ уйăх вĕренет, унтан вара, нимĕç оккупанчĕсем Мускава тапăнса пынă вăхăтра, Малоярославец патĕнче пĕрремĕш хут çапăçăва кĕрет. Çав çапăçура чăваш курсанчĕсем те йышлăн пулнă, вĕсем паттăррăн çапăçса хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Вĕсене сума суса поэт-воин «Тупа тунă чухне» ятлă сăвă çырать.

Çапăçăва кĕрес умĕн курсантсем присяга параççĕ. Вĕсем комиссарăн хĕрӳллĕ, чĕре патне çитекен сăмахне итлеççĕ. Бараев вара Гитлер салтакĕсене ылханса çапла çырать:

Куç умне килсе тухаç
Автоматлă нимĕçсем,
Ӳсĕр куçпа çуйăхса
Хĕрсен ятне çĕртнисем,
Чĕчĕ ачи аллинчен
Сахăр туртса илнисем,
Ватă старик аллинчен
Çăмат хывса илнисем...
Ашкăнаймăр нумайччен,
Хуçăк шăллă йытăсем!

В. Бараев, мĕнпур совет çыннисем пекех, тăшмана çĕнтерессе шанса пурăннă, çав шанчăк ăна фашистла пусмăрçăсене хирĕç пынă хаяр кĕрешӳре вăй-хăват парса тăнă. Темле йывăр пулсан та, «Çĕнтерӳ пиртех вăл пулĕ!..»— тет поэт «Юлташа» ятлă сăввинче.

Виçпӳртре кĕтет аннеçĕм,
Ывăлăм кĕтет.
Нӳрленет шур пурçăн тутăр—
Мăшăрăм йĕрет.
Анчах ан хурлан, юлташăм,
Маншăн ан кулян.
Эпир тухрăмăр çĕршывшăн,—
Тĕп пулĕ тăшман.
. . . . . . . . . .
Кам унта хăравçă чунлă,
Пăрăн çул çинчен!
— Кил, Суворовла çапар-ха
Вилĕм çамкинчен!

Ку сăвва В. Бараев 1941 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче

çырнă. Вăл пирĕн талантлă поэт аслă Совет çĕршывĕн патриочĕ, тăван халăхăн шанчăклă ывăлĕ, паттăр салтакĕ пулнине питĕ лайăх кăтартса парать.

Акă тата поэт çапăçăва кĕрес умĕн хăйĕн ывăлĕ патне çырса янă сăвва илсе пăхар. Ăна та вăл Тăван çĕршыва çав тери йывăр килнĕ вăхăтра çырнă. Урса кайнă тăшман пирĕн ытарайми хуласемпе ялсене, чечекленекен вĕçĕ-хĕррисĕр уй-хирсемпе ешĕл вăрмансене вăрçă вучĕпе çунтарать, анчах паттăр совет воинĕ хăраса ÿкмест, чунпа хуçăлса пуçне усмасть, вăл Гитлер вăрă-хурахĕсене аркатсан каллех ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç пуçланасса шанать, уншăн хăйĕн вăй-халĕпе пурнăçне хĕрхенмесĕр кĕрешме сăмах парать.

Савнă чунăм, çитĕн эсĕ,
Аçуна ан ман,
Вăл путман шыва кĕрсен те,
Вутра та çунман.

Вăхăт çитĕ, мирлĕх çитĕ,
Каймĕ çын килтен,
Садри кайăк пек телейлĕ
Пурăнĕ этем.

1942 çулхи октябрь уйăхĕнче В. Бараев лейтенант хăйĕн миномет взвочĕпе Сталинград фронтĕнче çапăçать. «Аслă Октябрь уявне пирĕн землянкăра кĕтсе илмелле пулчĕ,— тесе çырать вăл «Чăваш коммуни» хаçат редакцине янă çырура.— Ирхине, тул çутăлас умĕн, эпир пурте хамăра палăртнă высота çинче пултăмăр... Çак йĕркесене эпĕ вăрçă кăшт лăпланнă вăхăтра, çÿлтен бомбăсем тăкăнма, çĕртен вилĕм çави —пулемет-минометсем—этеме çулма чарăннă вăхăтра, землянкăра, хытхура «вутти» çутипе çыратăп. Çав тискер кашлав-кĕрлев пиртен хăшпĕр çĕрте виçĕ, хăшпĕр çĕрте тăватă çухрăмра паян... Умăнта арман çÿллĕш тăпра çĕкленет, сывлăш таçта сирпĕтет сана, тăнна çухатан, анчах çав самант хушшинче тăпра пуснă питкуçа шăлса пăхатăн та, хăвăн тăван ывăлу,— тăван ывăлăм Лев-Арăслан, тухса тăрать. Пĕтĕм Шупашкар килет куç умне. Чăваш хорĕ юрлани илтĕнсе каять, Академи театрĕнче вилекен Чаккан юлашки саманчĕ курăнать... Умра Пичет çурчĕ кĕрлесе ларать, куçа тепре хупса иличчен çак картинăсем каллех юнпа пăтранса каяççĕ».

«Эпĕ кунта хăрушă кĕрлев çинчен çыртăм,—тет В. Бараев.—Тăшман Сталинград патне çитнĕ, каялла чакасшăн мар, пур тĕлте те хăйĕн оборонине çирĕплетнĕ. Эпир çĕмĕретпĕр вĕсене! Эпир çĕмĕрсе ун çулне татма тухнă, тататпăрах

ана! Эпир ăна ним хĕрхенми пĕтерме тухнă,— пĕтеретпĕрех!»— тет Сталинград Али-паттăрĕ В. Бараев лейтенант.

Малалла çак çырура Владимир Бараев хăй çар шкулне вĕренсе пĕтерсе лейтенант ятне илни, унтан вара минвзвод командирĕ пулни çинчен пĕлтерет. Пур тĕлте те, пур участокра та вăл хăйĕн паттăрлăхне кăтартнă, кашни ĕçе чун-чĕререн туса пынă. Çавăнпа та ăна командирсем те, боецсем те юратнă, çавăнпах вăл çапăçу хирĕнче Ленин партийĕн ретне кĕме тивĕçлĕ пулнă. «Эпĕ парти билетне çăмăллăн мар, тивĕçсĕр хыпаланчăкпа мар, юнпа илесшĕн пулнă,— тет вăл çав çырурах.— Мĕншĕн тесен парти билечĕ, Ленин партийĕн билечĕ — сăмахпа каласа пĕтерме çук, хут çине çырса кăтартма çук хăватлă, пĕтĕм чун-чĕрене вăй-хăват паракан документ, ăна пĕтĕм чун-чĕререн парти ĕçĕн тĕрĕслĕхне парăннă çын çех тивĕçлĕ, çăмăллăн илнĕ билет пит йӳн пулĕ, эпĕ парти билетне юнпа илетĕп!..»

«Эпĕ чăнах та вăрçă умне тухрăм. Сывă пултăр аслă Тăван çĕршывăм!.. Эпĕ Тăван çĕршывшăн çапăçнă вăхăтра чи малтанах, ывăлăм телейĕшĕн, ывăлăм пек пĕтĕм çĕршывăмри ачасемшĕн, тăван атте-аннешĕн, тăван атте-анне пек ват çынсен хисеплĕ патшалăхĕшĕн, пĕтĕм çывăх туссемпе тантăшсемшĕн çапăçатăп, тыткăнри халăхсене ирĕке кăларассишĕн юн тăкатăп»,— тесе вĕçлет вăл хăй паттăррăн вилес умĕн çырнă çырăвĕнче.

Тĕрĕс, чĕререн килекен сăмахсем! Вăрçă вăл çынна пур енчен те тĕрĕслет. Бараев фашизмăн хура вăйĕсене хирĕç çапăçнă чух чăтăмлăхпа хăюлăх, çĕнтерӳ тăвас ĕçре çирĕп кăмăл кăтартрĕ. Ывăлĕпе, юлташĕсемпе пĕрле пĕтĕм чăваш халăхĕ те унăн ятне нихçан та асран кăлармĕ.

Поэт-коммунист ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ. Хĕрĕх çул каялла совет халăхĕпе унăн мухтавлă çарĕ Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче фашистла Германие тĕппипех çапса аркатрĕç, пĕтĕм тĕнче халăхне тискер те хаяр тăшманран хăтарчĕç. Сахал мар хура-шур курма тиврĕ ун чухне совет халăхне, пайтах çухату чăтса ирттермелле пулчĕ унăн пурнăçпа вилĕм хушшинчи кĕрешӳре. Анчах, калама çук йывăр пулсан та, совет халăхĕ хăраса ӳкмерĕ, нимĕнле хĕнасап умĕнче те чунпа хуçăлса пуç усмарĕ, Гитлер вăрăхурахĕсене çĕмĕрсе тăкса аслă Çĕнтерӳ турĕ.

Пирĕн юратнă поэт-воин çак чаплă куна кĕтсе илеймерĕ. Ун çамрăк ĕмĕрне Сталинградшăн пыракан хаяр çапăçу 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче татрĕ. «Бараев арăслан пек çапăçса вилчĕ... Бараева тăшман пули тиврĕ, анчах вăл вилес умĕн: «Бараев нихçан та вилмĕ!..»—тесе иквиç сăмах каласа хăварчĕ. Эпир, Бараев взводĕнчи боец-

сем, хамăр командира вĕлерекенсене тарăхса, тăшман çине умлăн-хыçлăн минăсем пăрахрăмăр, тăшмана Жирко текен ялтан хăваласа кăларса ятăмăр»,— тесе çырса пĕлтернĕ Бараев çинчен унпа пĕрле çапăçнă чăваш салтакĕ Н. Семенов.

Хастар чĕреллĕ поэта ырă кăмăлпа асăнса, ун çинчен хăйĕн сăмахĕсемпе çапла калас килет:

Хăй пулмин те, ячĕ пур ун,
Ячĕ пирĕнпе.
Ырă ят вăл, чаплă ят вăл,
Юлĕ ĕмĕре!

Қашни кун тенĕ пекех малти линире, вут-çулăмра пулсан та, вăл чĕрене пырса тивекен, пĕтĕм кăмăл-туйăма хускатакан произведенисем çырас ĕмĕтпе пурăннă. Юлташĕсем патне янă çырăвĕсенче вăл чăваш писателĕсен ĕçĕсемпе, пичетленсе тухнă çĕнĕ произведенийĕсемпе интересленнĕ. «Эхер те çак вăрçăран сывах юлсан, эпĕ те пĕтĕм пултарулăхăма парса ĕмĕрлĕхе асра юлмалли сăвă кĕвĕлĕттĕм, тĕлĕнмелле калавсемпе повеçсем çырса тăван халăхăма савăнтарăттăм»,— тет Бараев пĕр çырăвĕнче.

Вăл пирĕн хăватлă сăвăçчĕ, прозаикчĕ, сатирикчĕ, тăван халăхăн юмах-халапĕсене, юрри-такмакĕсене пухма, тĕпчеме юратакан çынччĕ. Қалас сăмахне хаяр вăрçа пула поэт пĕтĕмпех калама ĕлкĕреймерĕ. Анчах унăн ырă сăнарĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, хĕрӳ патриотизмла поэзийĕ ĕмĕр-ĕмĕр чăваш халăх асĕнче пулĕ.

*1970*

## ПУРНĂÇА ЮРАТСА, ПУРНĂÇА МУХТАСА

*(В. Урдаш çуралнăранпа 50 çул çитнĕ май)*

Çук халь пирĕн хушăра чăвашсен паллă поэчĕ, чăваш халăхĕн юрăçи Валентин Урдаш: вăл, нумай хушă йывăр чирленĕ хыççăн, хĕрĕх тăхăр çула çитеймесĕр, 1973 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче пирĕнтен ĕмĕрлĕхе уйрăлса кайрĕ. Чĕри вăхăтсăр тапма чарăнчĕ пулин те, хастар чунлă поэт хăйĕн чĕрĕ çăлкуç пек тапса тăракан илемлĕ пултарулăхĕпе, ытарма çук хӳхĕм сăвви-юррисемпе яланах пурăнĕ, мĕншĕн тесен вĕсене пĕтĕм халăх пĕлет, юратса-кăмăлласа вулать, савăнса-хĕпĕртесе юрлать.

Валентин Андреевич Урдаш (чăн хушамачĕ Яковлев) 1924 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче Тутар республикине кĕ-

рекен Пăва районĕнчи Раккасси ялĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Пулас поэт ялти пуçламăш шкулта, ун хыççăн кӳршĕллĕ Элшелĕнчи вăтам шкулта вĕреннĕ, фашистла Германи пирĕн Тăван çĕршыв çине вăрçăпа тапăнсан вара, 1941 çулхи декабрь уйăхĕнче хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă. Пурнăçпа вилĕм хушшинче хаяр кĕрешӳ пынă çулсенче вăл чылай çапăçусене хутшăннă, тăшман тылне разведкăна çӳренĕ, çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн Аслă Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕш степень орденĕпе виçĕ медаль илме тивĕçлĕ пулнă. 1943 çул пуçламăшĕнче вăл питĕ йывăр аманнă, вăрах вăхăт госпитальте выртнă хыççăн, пĕрремĕш группа инваличĕ пулса, тăван килне таврăннă. Анчах чунĕпе хуçăлмасть. Хусанта тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцине ĕçлеме вырнаçать, пĕр вăхăт Чăвашрадио корреспонденчĕ пулать. 1946 çултанпа вăл поэт-профессионалччĕ.

Валентин Урдаш Элшелĕнчи вăтам шкулта вĕреннĕ вăхăтрах сăвăсем çырнă, чăваш хаçачĕсенче ял пурнăçĕ çинчен очерксемпе тĕрленчĕксем пичетленĕ, литература кружокне тимлĕ хутшăннă, халăх сăвви-юррисемпе юмахĕсене нумай пухнă. Вăрçă хыççăн вара унăн пултарулăхĕ çултан-çул çĕкленсе пычĕ, халăх шухăш-кăмăлне тĕрлĕ енчен палăртакан чăн-чăн илемлĕ произведенисемпе пуянланчĕ.

Вăрçă асапне, пурнăçри йывăрлăхсене пайтах чăтсатӳссе ирттернĕ поэт чун-чĕрипе ялан çирĕп, хăюллă, харсăрччĕ. Унăн произведенийĕсенче эпир пурнăç çине çутă куçпа, çутă шанчăкпа пăхнине куратпăр. Вĕсенче вăл асран кайми Тăван çĕршывăмăра, Коммунистсен партийĕпе хамăрăн чаплă саманана ĕмĕр парăнса пурăнма хĕрӳллĕн чĕнчĕ, вĕсене мухтав юрри юрларĕ. Ахальтен мар вăл хăйĕн «Сана юратрăм...» сăввинче те çапла çырнă:

— Тăван çĕршыв, сана юратрăм
Мĕн пĕчĕкрен, мĕн ачаран.
Пĕр саншăн çеç юрра шăратрăм
Чун савнăран, чун туртнăран.
Тăван çĕршыв, сана юратрăм
Ӳссе çитсен, салтак пулсан.
Пĕр саншăн çеç савса усрарăм
Хам ятăма та хам чыса.

Урдаш çырнă сăвăсемпе поэмăсен, очерксемпе калавсен кĕнекисем ку таранччен вуннă ытла тухрĕç.

1974 çулта В. Урдашăн Чăваш кĕнеке издательствинче «Араскал» ятлă суйласа илнĕ сăвăсемпе поэмăсен кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Ăна поэт вилĕс умĕн, хăй йывăр чир-

лесе выртнӑ вӑхӑтра хатӗрлесе пачӗ. Кӗнекере аслӑ В. И. Ленинӑн вилӗмсӗр сӑнарӗпе ҫыхӑннӑ, Коммунистсен партийӗпе Тӑван ҫӗршыва мухтакан тата фашистла Германие хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑ ҫинчен калакан ҫулӑмлӑ сӑвӑсем, юрату юррисем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ.

Кӗнеке «Ленин ҫинчен хунӑ юрӑпа» уҫӑлать. Унта вӑл совет халӑхӗ хӑйӗн телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫӗшӗн аслӑ Ленина вӗҫӗмсӗр тав туни ҫинчен хумханса калать:

Сан яту, аттемӗр Ленин,
Пӗтӗм халӑх чӗринче.
Тав сана, аттемӗр Ленин,
Тет паян пӗтӗм тӗнче.
Халӑха пиллерӗ Ленин
Хӑй ӑсне, хӑй хӑватне;
Партие пиллерӗ Ленин
Чӗринчи сӳнми вутне.
Ырлӑх ҫунӑ, ҫӗр ҫӗнелнӗ,
Юрӑ юхнӑ кунсенче
Сан сӑнна куратпӑр, Ленин,
Халӑх кӑкӑрӗ ҫинче.

«Ильич парни», «Аслӑ Ленин», «Ильич ҫулӗпе» сӑвӑсене те чун-чӗрепе киленмесӗр вулама ҫук. Вӗсенче пирӗн ума паттӑр та ӗҫчен совет халӑхӗ Ленин ячӗпе, парти ертсе пынипе тунӑ чаплӑ ҫитӗнӳсем уҫҫӑн тухса тӑраҫҫӗ. Поэт ҫав ҫитӗнӳсем ҫинчен илемлӗ сӑмах хӑвачӗпе кӑмӑла хускатмалла каласа пама пӗлнӗ.

Коммунистсен партийӗ коммунизм патне ҫул кӑтартса тата ертсе пынипе Чӑваш ҫӗршывӗ те совет самани ҫулӗсенче тӗпрен улшӑнса ҫӗнелчӗ. Ҫак улшӑнусене сӑнлас шухӑшпа поэт пире колхозлӑ ял ӗҫченӗсем патне — Шуршӑла, Раккассине, колхоз садне илсе ҫӳретет, анлӑ Атӑл хӗрринчи шурӑ Шупашкарӑн илемлӗ урамӗсемпе, унти чӑннипех те хастар, ӗҫчен те ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсемпе паллаштарать. («Хӑнасем пухать хуламӑр», «Шуршӑл йӑмрисем», «Пирӗн ял садӗнче», «Мухтар мучи ачисем», «Ма чипер-ши ферма хӗрӗ?», «Шупашкарӑн лӑпкӑ каҫӗсем» т. ыт. те.) Вӗсен пархатарлӑ ӗҫӗсене, ытарайми сӑнӗсене курса, поэт чӗринчен вӗҫӗ-хӗррисӗр савса юратма чӗнекен, шухӑш-кӑмӑла ҫӗклентерекен, чӑн-чӑн гражданла лирика тапса тӑракан манӑҫми сӑвӑ-юрӑсем шӑранса тухаҫҫӗ:

Ҫунат хушассӑм килет,
Шӑпчӑк пулассӑм килет,
Садран сада ҫӳре-ҫӳре,
Юрӑ юрлассӑм килет.
Атӑл пулассӑм килет,
Тинӗс пулассӑм килет,
Хам чӗреме, хам хӑвата
Ҫӗршыва парас килет.

Çунат хушассăм килет,
Вĕçсе каяссăм килет.
Уйăх çине, çăлтăр çине
Çитсе курассăм килет.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вут-çулăмĕ витĕр паттăррăн утса тухнă поэт, çав вăхăта аса илсе миршĕн кĕрешме чĕнекен хĕрӳллĕ сăвăсем те нумай çырчĕ. Акă мĕнле калать вăл хăй çинчен «Юрăпа» сăвăра:

Юрăпа вута-шыва эп кĕтĕм,
Юрăпа çĕнтертĕм вилĕме.
Юрăпа атте килне эп килтĕм,
Юрăпа çĕклерĕм килĕме.

В. Урдашăн лирикăллă геройĕ — Совет çĕршывĕн таса та çутă чунлă гражданинĕ, тăван халăхăн шанчăклă ывăлĕ, харсăр салтакĕ. Ăçта кăна çитмен, мĕн кăна курман çав алла пăшал тытса çапăçнă чăваш çамрăкĕ! Çапăçу хирне тухса кайнă чух вăл пĕтĕм ялйышпа ашшĕ-амăшĕ умĕнче Тăван çĕршывăмăра паттăррăн хӳтĕлеме тупа тăвать. Вăрçăн вăрăм та тертлĕ çулĕ çинче вăл темĕн те тӳсет, темиçе хут аманать, çапах та тăшмана пурпĕр аркатса тăкас шанчăка çухатмасть, куллен-кун чун хавалĕпе çирĕпленсе, вăй илсе пырать.

«Çулăмлă çулсем» ярăмри сăвăсенче поэтăн вăрçă вăхăтĕнче паттăр кунçулĕ, халăхăн фронтпа тылри мухтавлă ĕçĕ-хĕлĕ туллин палăрса тăрать. «Вăрçă мĕнне туссем-йышсем, ан манăр... Миршĕн мирпе тухмашкăн алă парăр»,— тет вăл «Ан манăр!» сăвăра.

«Пурнăçа юратса эпĕ кайрăм вăрçа...» Çак сăмахсемпе пуçлать поэт хăйĕн «Пурăнас килет» поэмине. Вăрçă çулĕсем вăрăм та тертлĕ пулчĕç. Анчах совет салтакĕ рейхстаг çине çĕнтерӳ ялавĕ çакичченех урса кайнă тăшманпа хаяррăн çапăçрĕ, çĕнтерӳ шанчăкĕ ăна нумай-нумай çапăçусенче иксĕлми хăват парса тăчĕ:

Эп çӳрерĕм вутра,
Эп çӳрерĕм ютра,
Тăшмансем умĕнче,
        Тăшмансем хыçĕнче...
Эп юрларăм юрра,
Пурнăç патăм юрра
Сĕм вăрман варринче,
        Çапăçу хирĕнче,—

тет Валентин Урдаш, вăрçă çулĕсенче хăй тӳсни-курнисене аса илсе. Поэмăра, поэтăн чылай сăввисенчи пекех, нихçан сӳнми патриотизм туйăмĕ, пурнăçа ытарайми юратни тĕп вырăн йышăнать.

«Йăхран йăха» поэмăри геройсем — сăпайлă, ырă кăмăллă, ĕçе юратакан ял çыннисем. Вĕсем вăрçă çулĕсенчи йывăрлăхсене чăтăмлăн тӳссе ирттереççĕ, аслă çĕнтерӳ ячĕпе çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, кĕрешеççĕ. Аçусен паттăрлăхĕ, аннӳсен çирĕплĕхĕ йăхран йăха куçтăр, анчах аçуна вĕлерни вăрçă, аннӳне çунтарнă хурлăх тек нихçан та ан килтĕр. Акă мĕнле шухăш витĕмлĕн тапса тăрать çак пысăках мар поэмăра.

Валентин Урдаш пултарулăхĕнче, çавăн пекех «Араскал» кĕнекере те, юрату лирики паллă вырăн йышăнать. Кам пĕлмест пулĕ унăн «Қалаймарăм», «Ма чипер-ши ферма хĕрĕ?», «Юратмасăр ан уç кантăкна», «Эп ирхи куна каç турăм...», «Шупашкар саламĕ», «Укăлча умĕнче», «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç», «Қам-ши, кам-ши?», «Тĕнчере пĕр эсĕ пулнăран» т. ыт. нумай-нумай сăвви-юррисене! Вĕсенче паянхи пурнăç илемĕ, ку чухнехи çамрăксен таса та çутă ĕмĕт-шухăшĕ, туслăхĕпе юратăвĕ чуна тытса илмелле шăранса тăрать.

Тăван литературăпа искусствăна халăх хушшинче пропагандăлас тĕлĕшпе те Валентин Урдаш пайтах вăй хурса ĕçлетчĕ. Чăнах та, ăçта кăна çитмерĕ-ши вăл! Час-часах чăваш писателĕсемпе пĕрле е пĕчченех колхозсемпе совхозсене, шефа илнĕ хуçалăхсене тухса çӳретчĕ, вулакансен конференцийĕсемпе литература каçĕсем ирттеретчĕ, хăйĕн сăввисене халăх умĕнче çĕкленсе, хавхаланса вуласа паратчĕ. Çавна шута илсе, 1970 çулта ăна СССР культура министерствипе культура работникĕсен, профсоюзăн Центральнăй Комитечĕ «Отличник культурного шефства над селом» значокпа та наградăланăччĕ.

Тăван çĕршывпа пирĕн вăхăтри хĕвеллĕ самана çинчен пайтах сăвă-юрă, поэмăсем, калавсемпе очерксем çырчĕ кирек хăçан та çутă ĕмĕт-шухăшпа хавхаланса пурăннă Валентин Урдаш.

Халăхран эп илтĕм вăйăма,
Халăхран вĕрентĕм пурăнма,
Халăх пек илемлĕ пурăнма
Ĕçĕмре паратăп чунăма,—

тенĕ вăл «Пурнăçран ытла саватăп» сăввинче. Çапла поэт чăнахах та чăваш литературинче пĕтĕм чунне, пĕтĕм пултарулăхне парса ĕçлерĕ, тăван халăхăмăрăн кăмăлне çĕклентерекен, пурнăçа хĕрӳллĕн юратма чĕнекен илемлĕ произведенисем сахал мар парнелесе хăварчĕ.

*1974*

## ПИСАТЕЛЬ, ХУДОЖНИК

*(Г. Д. Харлампьев çуралнăранпа 70 çул çитнĕ май)*

Герасим Дмитриевич Харлампьев художник вулакансем умне чи малтанах хăйĕн хаçат-журналсенче пичетленнĕ ӳкерчĕкĕсемпе, нумай тĕслĕ сăрсемпе илемлетсе кăларнă чăваш писателĕсен кĕнекисемпе тухрĕ. Мускаври художество техникумĕнчен вĕренсе тухсан, вăл чылай вăхăт Чăваш кĕнеке издательствинче художникра ĕçлерĕ. Çав вăхăтрах чăваш художникĕсен произведенийĕсем çинчен статьясем çырчĕ, илемлĕ ӳкерчĕксем тума вĕренекенсем валли «Çамрăк художник» ятлă кĕнеке çырса кăларчĕ. Ку кĕнеке пĕрремĕш хут 1939 çулта тухрĕ, каярахпа, çамрăк художниксем ыйтнипе, 1948 çулта ăна тепĕр хут пичетлесе кăлармалла пулчĕ.

1942—1945 çулсенче Г. Харлампьев Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче пулчĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче вăл «Çамрăк коммунист» хаçат редакцийĕнче, Чăваш художникĕсен Союзĕн правлени председателĕнче, художество галерейин директорĕнче ĕçлерĕ.

Пуринчен ытла Герасим Дмитриевич художник хăйĕн пултарулăхне Чăваш кĕнеке издательстви кăларакан кĕнекесене илемлетес ĕçре палăртрĕ. Куç умĕнчех, акă, вăл илемлетнĕ К. Ивановăн «Нарспи» поэмийĕ, Иван Ивникĕн «Телей çулĕ» юмахĕ, В. Алентейĕн «Пирĕн кил» кĕнеки, е тата Харлампьев хăй çырнă «Тăрна ташши», «Пĕчĕкçеç юмахсем», «Илемлĕ ир», «Юрату вилĕмсĕр» кĕнекесем. Ку кĕнекесене Г. Харлампьев нумай тĕслĕ сăрсемпе илемлетрĕ.

Г. Харлампьев кĕнекесем валли кăна мар, хамăр Чăваш çĕршывĕн илемĕпе пуянлăхне кăтартакан уйрăм ӳкерчĕксем те чылай турĕ, вĕсене те выставкăсенче кăтартрĕ. Акă, сăмахран: «Çуркунне», «Ешĕл вăрман», «Кӳлĕ хĕрринче», «Анлă Атăл», «Пăшисем», «Шăпчăксем» тата ытти те.

1940 çултанпа Харлампьев СССР художникĕсен Союзĕн членĕ. Халĕ 70 çула çитрĕ пулсан та, çамрăк хастарлăхпа ĕçлет-ха, хăйĕн ăсталăхне ӳстерсех пырать, тăван халăхăн ĕçне-хĕлне, пурнăçне тĕрĕс кăтартса панă ӳкерчĕксем тума тăрăшать. Çав вăхăтрах фабрик-заводсенче, колхозсенче, шкулсенче пулать, унта тĕлпулусем ирттерет, çапла вара тăван литературăпа искусствăна пропагандăлас ĕçе активлă хутшăнать.

Сăмах май эпĕ кунта вăл тунă пĕр ĕç çинчен кăна каласа паратăп. Г. Харлампьев, Аслă Отечественнăй вăрçăра

хăй те пулнăскер, нумай çул хушши чăваш писателĕсем иртнĕ вăрçăра тăшманпа мĕнле çапăçни çинчен тĕрлĕрен материалсем, документсем пухрĕ. Çав материалсем вара ăна «Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи чăваш литератури» ятлă пысăк выставка тума май пачĕ. Чылай çĕрте кăтартрĕ Харлампьев ку выставкăна. Унта фронтра пулнă писательсем те çӳрерĕç, выставка курма пынă çынсемпе тĕлпулусем ирттерчĕç.

Герасим Харлампьев халь художник кăна мар, вăл пултаруллă писатель те. Литература ĕçне вăл Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн тытăнчĕ. Унăн чи малтанхи произведенийĕ,—«Марфа» ятлă пĕр пайлă пьеса,— 1946 çулта «Ялав» журналта пичетленсе тухнăччĕ вăл, Харлампьева драматургие çул кăтартрĕ темелле. Кĕçех вăл çырнă «Çурхи кĕвĕсем» ятлă комедие Чăваш государство академи театрĕ лартрĕ. Ăнăçлă пулнă спектакль Харлампьева пьесасем тата çырма хавхалантарчĕ, вăл вара ытти çулсенче «Пĕр колхозра», «Юрату вилĕмсĕр», «Юлашки тĕлпулу», «Кăмăл уçăлсан» пьесăсем çырчĕ. «Пĕр колхозра» пьеса республикăри конкурсра 1-мĕш премии илме тивĕçлĕ пулчĕ, ыттисене Чăваш академи театрĕ спектакльсем лартса кăтартрĕ.

«Çурхи кĕвĕсем» спектакле те куракансем юратсах пăхрĕç. Кун çинчен драматургсемпе писательсем хамăр республика хаçачĕсемпе журналĕсенче çырчĕç. Çак хыпар кӳршĕри республикăсене те çитрĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, «Çурхи кĕвĕсем» комедие Тутар республикинче тутарла куçарса Альметьевскри театрта лартрĕç.

«Юрату вилĕмсĕр» драма тата инçетерех кайрĕ: ăна Украинăра Владимир-Волынск театрĕ лартрĕ. Кунтан Харлампьева çапла пĕлтерчĕç: «Сирĕн «Вилĕмсĕр юратăва» Украина çыннисем чун-чĕререн юратса пăхаççĕ. Çавăн пек пьесăсем пирĕн пата тата ярса парăр».

Тĕлĕнмелли çук. Мĕншĕн тесен «Юрату вилĕмсĕр» пьесăра Герасим Харлампьев сăнарсене питĕ витĕмлĕ кăтартса пачĕ.

Пьесăри событисем Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пулса иртеççĕ. Кунта таса чун-чĕреллĕ çынсемпе сутăнчăксем хушшинче мĕнле тытăçу пулнине кăтартса пана. Паллах, кун пек тытăçăва спектакле куракан лăпкăн пăхса лараймасть, çавăнпа театртан вăл тарăн шухăшпа тухса каять. Драматургăн, театрăн тĕллевĕ — çавă. Куна Герасим Харлампьев пысăк ăсталăхпа пурнăçларĕ.

Герасим Харлампьев пьесăсем кăна мар, калавсем те, повеçсем те нумай çырчĕ. Вĕсене Чăваш кĕнеке издатель-

стви кĕнекесем туса пичетлесе кăларчĕ. Çак кĕнекесенчен уйрăмах «Тăрна ташши», «Илемлĕ ир», «Палюк мучи кĕнеки», «Утарта», «Йăлтăр çăлкуç» ятлисем вулакансемшĕн чи юратнă кĕнекесем пулчĕç. Ахальтен мар ку кĕнекесене вырăсла куçарса Мускавра, украинла куçарса Киевра, туркменла куçарса Ашхабадра тата ытти республикăсенче те пичетлесе кăларчĕç.

Герасим Харлампьев иртнĕ çулсенче çутçанталăк çинчен калавсем нумай çырчĕ. Вулакансем ку калавсене те юратрĕç, критиксем те ырларĕç. Астăватăп, 1972 çул Хусанта РСФСР писателĕсен Союзĕн правленийĕ пысăк лару ирттерчĕ. Çак ларура вырăссен паллă писательници Мария Прилежаева Харлампьевăн çутçанталăк çинчен çырнă калавĕсене пысăк хак парса ырларĕ.

Герасим Харлампьевăн пултарулăхĕнче «Илемлĕ ир» повесть самаях пысăк вырăн йышăнчĕ. 1969 çулта Мускавра ку повесть те пичетленсе тухрĕ. Анчах вăл çутçанталăк çинчен мар, историпе революци çинчен, çавăнпа ку повеçе «Литературная газета» Ленин çинчен çырнă кĕнекесем шутне кĕртсе мухтарĕ.

Революци, Ленин çинчен çырасси писательшĕн пачах та çăмăл ĕç мар. Нумай вуламалла, архиври материалсемпе тĕплĕн паллашмалла. Çапла ĕçлерĕ ку повеçе çырнă чух Харлампьев та.

Эпĕ вăл вăхăтра Ленинградра пурăнаттăм. Герасим Харлампьев ман пата Октябрь революцийĕ вăхăтĕнче Питĕр мĕнлерех пулни çинчен архиври документсене тупса çырса пĕлтерме ыйтрĕ. Тусăма пулăшас тесе, эпĕ, чăнах та, архивра нумай ĕçлерĕм, вăл мĕн ыйтнине пĕтĕмпех çырса пĕлтертĕм. «Илемлĕ ир» паха кĕнеке пулнăшăн халь тусăмпа пĕрле эпĕ те савăнатăп.

Герасим Харлампьевăн кунçул утти çăмăл пулман. Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнче 1913 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă вăл. Сакăр çулта чухнех ашшĕ-амăшĕ вилсен, хăр-тăлăха юлнă, çавăнпа кĕтӳç те пулма тивнĕ ун, ӳсерехпе столярта та, тимĕрçре те ĕçленĕ...

Герасим Дмитриевич Харлампьев 70 çул тултарчĕ. Халь вăл ăста художник, паллă писатель. Çулĕпе çамрăк мар пулин те — ялан стройра. Çĕнĕрен çĕнĕ картинăсем ӳкерес, калавсем, повеçсем, пьесăсем çырас ĕмĕт пысăк ун.

*1983*

## ХИСЕПЛĔ УЧИТЕЛЕ АСĂНСА

*(М. Я. Сироткин çуралнăранпа 70 çул тултарнă май)*

Паллă ученăй, педагог тата литературовед Михаил Яковлевич Сироткин 1908 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Анаткас ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Халь ку ял çук ĕнтĕ, Çĕнĕ Шупашкар варрине кĕрсе юлса хулана куçрĕ.

«Пирĕн çемьере сакăр ача пулнă, вĕсенчен тăваттăшĕ, çав шутрах эпĕ те, учителе тухрăмăр»,— тетчĕ вăл. Ялти пуçламăш шкулпа Сĕнтĕрвăрринче иккĕмĕш сыпăклă шкултан тата педагогика курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Михаил Яковлевич пĕр вăхăт Шупашкар районĕнчи Мăн Чăкăрти пуçламăш шкулта ĕçленĕ, 1930—1934 çулсенче Шупашкарти педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Унтан вĕренсе тухнă чухне вăл «К. В. Иванов пултарулăхĕ» темăпа диплом ĕçĕ çырать, ăна пахаласа йышăннă май патшалăх комиссийĕ уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларма сĕнет. 1937 çулччен М. Я. Сироткин Чăваш АССР Çутĕç комиссариачĕн инспектор-методисчĕ пулнă.

Унпа хăйĕнпе эпĕ Тăван çĕршывăн аслă вăрçи умĕнхи çулсенче паллашнăччĕ. Ун чухне вăл Шупашкарти педагогика училищинче вырăс чĕлхипе литературине вĕренетчĕ, çав вăхăтрах вĕренӳ пай пуçлăхĕччĕ, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институчĕн ученăй секретарĕпе наука сотрудникĕн ĕçĕсене те туса пыратчĕ. Çав çулсенче вăл чăваш шкулĕсем валли тăван литературăпа темиçе учебник, вулав урокĕсем ирттермелли кĕнеке, методикăлла кăтартусем çырса кăларчĕ. Вĕсене кĕнеке издательствине тăратиччен пединститутра чăваш чĕлхипе литература уйрăмĕсенче вĕренсекен студентсене е вăтам шкулсенче ĕçлекен учительсене вулама паратчĕ, кайран вара вĕсен канашĕсене шута илсе, çĕнĕрен тĕплĕ пăхса тухатчĕ. М. Я. Сироткин вĕсене вăрçăччен те, вăрçă хыççăн та час-часах юсаса-çĕнетсе тăчĕ. Чăваш шкулĕсенче çав кĕнекесемпе нумай çул хушши усă курчĕç. Уйрăмах вăл чăваш шкулĕнче вырăс чĕлхине вĕрентмелли методикăна лайăхлатса çитерес тĕлĕшпе нумай ĕçлерĕ. Ку ыйтупа вăл вăрçă хыççăн «Вырăс чĕлхине чăваш шкулĕнче вĕрентмелли меслетсем» ятлă наука ĕçĕ те çырса кăларчĕ. Уншăн ăна 1950 çулта педагогика наукисен кандидачĕ ятне пачĕç.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче М. Я. Сироткин фашистла вăрă-хурахсене хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçнă, салтаксене политикăлла воспитани парас тĕлĕшпе

пайтах вăй хурса тăрăшнă. Вăл 1942 çул Кăнтăр-Хĕвеланăçпа Сталинград фрончĕсенче, 1943—1944 çулсенче— Ленинград фронтĕнче, унтан — 3-мĕш Прибалтика фронтĕнче политработник пулса çапăçнă, икĕ хут аманнă пулин те, стройрах юлнă. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçнă çулсенче паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, тăватă медальпе наградăланă.

Фронтран таврăнсан, М. Я. Сироткин каллех пединститутра ĕçлет: малтан — аслă преподаватель, унтан доцент, профессор, кафедра пуçлăхĕ пулать, 1967 çултан пуçласа мĕн виличченех И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш чĕлхипе литература кафедрин пуçлăхĕнче ĕçлет.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче М. Я. Сироткин чăваш литературин историне тата халăх сăмахлăхне тĕпчес енĕпе, учебниксемпе хрестоматисем çырса кăларас ĕçре калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕ. 1948 çулта вăл «Очерки дореволюционной чувашской литературы» ятлă пысăк монографи пичетлесе кăларчĕ. Кунта вăл халăхăн çырулăхĕпе илемлĕ литератури мĕнле пуçланса кайнине тата чăвашсен малтанхи писателĕсен пултарулăхне тĕплĕн тишкерет. Уйрăмах М. Федоров, И. Яковлев, Тайăр Тимкки, К. Иванов произведенийĕсене пĕрремĕш хут тĕрĕс хакланине кăтартса хăварас килет. 1951 çулта вăл «Революцичченхи чăваш литературин хрестоматийĕ» ятлă кĕнекене хатĕрлесе кăларать. Çак кĕнекесем пирĕн учительсемпе студентсемшĕн, çавăн пекех тăван литературăна юратакансемшĕн те, питĕ кирлĕ те усăллă пулчĕç.

1952—1954 çулсенче М. Я. Сироткин СССР Наукăсен академийĕн тĕнче литератури институчĕн докторантуринче вĕренчĕ. Çав вăхăтра вăл филологи наукисен докторĕ ятне илме «Очерки истории чувашской советской литературы» темăпа диссертаци çырчĕ, ăна 1955 çулта ăнăçлă хӳтĕлерĕ. Ку пысăк ĕç 1956 çулта уйрăм кĕнекепе çапăнса тухсан, пирĕн кӳршĕ халăхсен литература тĕпчевçисем Н. И. Черапкин, В. К. Ким т. ыт. те ăна пысăк хак парса ырларĕç.

Асăннă ĕçре паллă ученăй чăваш совет литератури аталанăвĕн тапхăрĕсене тĕплĕ тишкернĕ. Çеçпĕл Мишшин, Николай Шелепин, Çемен Элкерĕн, Петĕр Хусанкайăн, Ухсай Яккăвĕн пултарулăхне лайăх кăтартса панă. Вĕсен произведенийĕсем çинчен вăл уйрăм статьясем те чылай çырчĕ. Хăйĕн кашни статйинчех ученăй литературăна халах пурнăçĕпе çыхăнтарма тăрăшатчĕ, критикăра наукăллă принципа çирĕп тытса пыратчĕ. Çавăнпа та унăн чăваш

писателёсен пултарулăхне тишкернĕ тĕпчев ĕçĕсем яланах вулакансене хавхалантараççĕ, халăхăн ăс-хакăл культурин пуянлăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Революцичченхи тата совет тапхăрĕнчи чăваш литературин ыйтăвĕсем тăрăх вăл пĕтĕмпе утмăла яхăн наука ĕçĕ çырнă. Çамрăк авторсен алçырăвĕсене тишкерсе хак панă рецензисем тата та нумай. Вĕсем пурте чăваш литературоведенийĕпе критикин жанрне аталантарас ĕçре паллă вырăн йышăнаççĕ.

М. Я. Сироткин чăваш литературине тĕпченĕ хушăрах вулакансене вырăс литератури классикĕсен, ытти çĕршывсенчи писательсен произведенийĕсемпе çывăххăн паллаштарас енĕпе те пайтах тăрăшрĕ. Вăл чăвашла та, вырăсла та А. Чехов, М. Салтыков-Щедрин, М. Горький, В. Маяковский, А. Барбюс, Р. Роллан, В. Белинский, Н. Добролюбов т. ыт. писательсен пултарулăхĕ çинчен, «Н. А. Некрасов тата чăваш поэзийĕ», «А. С. Пушкин тата чăваш литератури», «М. Горький тата чăваш писателĕсем» ятлă пысăк статьясем çырчĕ.

Çав вăхăтрах паллă ученăй вырăс классикĕсен произведенийĕсене чăвашла, чăваш писателĕсен произведенийĕсене вырăсла куçарас тĕлĕшпе те нумай ĕçлерĕ. Н. Ваçанккапа пĕрле вăл А. Пушкинăн «Капитан хĕрĕ» повеçне чăвашла куçарчĕ, М. Федоровăн «Арçури» балладине, И. Тăхтин «Ыт-тĕкел» калавне, М. Акимовăн «Шӳт туни» тата «Тĕлĕнмелле» памфлечĕсене, И. Яковлевăн ача-пăча валли çырнă калавĕсене вырăсла куçарчĕ.

Михаил Яковлевич халăх сăмахлăхне пухас тата ăна тĕпчес ĕçсене чылай çул ăнăçлă туса пычĕ. Вырăсла çырнă «Чувашский фольклор» кĕнекинче, сăмахран, вăл чăваш халăх сăмахлăхĕнчи тĕп темăсене çутатса парать, чăвашсен йăла-йĕркепе çыхăннă поэзине пăхса тухать, ĕç юррисемпе ваттисен сăмахĕсене, сутмалли юмахсене, историллĕ халапсемпе юрăсене, совет саманинчи халăх поэзийĕн уйрăмлăхĕсене анлăн тĕпчет. Кунпа пĕрлех, унăн «Чăваш халап-юмахĕсем», «Ленин çинчен хунă чăваш халăхĕн юррисемпе калавĕсем» статйисем те хамăр фольклора тишкерес ĕçре паллă вырăн йышăнса тăраççĕ.

1970 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче чăваш халăхĕн паллă ученăйĕ, пирĕн юратнă вĕрентекенĕмĕр вăрах хушă йывăр чирленĕ хыççăн, пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Ун вилĕмĕ чăваш халăхĕшĕн пысăк çухату пулчĕ.

— Михаил Яковлевич Сироткин чăваш наци наукин никĕсне хывнă çынсенчен пĕри пулнă,— терĕ С. Ф. Сайкин профессор хурлăхлă митингра.— Унăн пурнăçĕпе ĕçĕсем

пирӗншӗн яланах паха тӗслӗх пулӗҫ, унӑн сӑнарӗ пире наука ӗҫӗсенче хавхалантарса пырӗ. Тӑван халӑх ӗҫӗшӗн, унӑн наукине аталантарас тесе, вӑл пурнӑҫне, вӑйне шеллемерӗ. Хӑйӗн пултарулӑхӗпе тата таланчӗпе вӑл чӑнчӑн халӑх ученӑйӗ мӗнле пулмаллине лайӑх кӑтартса пачӗ.

Ҫак хурлӑхлӑ митинграх И. Н. Ульянов ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх университетӗнчи мӗнпур студентсен ячӗпе Ольга Васильева студентка ҫапла каларӗ:

— Юратнӑ аттемӗр-учителӗмӗр, сирӗн ятӑра — ваттисем те, ҫамрӑккисем те — преподаватель-и, ученӑй-и вӑл е студент, учитель-и е шкул ачи — пурте ырӑпа, ӑшшӑн асӑнаҫҫӗ. Эсир вуланӑ лекцисене эпир яланах хумханса, Сирӗн кашни сӑмахӑра сывлама чарӑнса итленӗ... Эсир пире кирек хӑҫан та тӑван халӑх ырлӑхӗшӗн вӑя хӗрхенмесӗр кӗрешме, халӑха хисеплеме, унӑн культурине аталантарас ӗҫе хастар хутшӑнма, унӑн литературипе чӗлхине юратма тата упрама вӗрентрӗр...

М. Я. Сироткинӑн наукӑри ырми-канми ӗҫне унӑн вӗренекенӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Вӗсем ученӑй педагогикӑпа наука кадрӗсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе калама ҫук пысӑк вӑй хуни ҫинчен ӑшшӑн аса илсе каласа параҫҫӗ. Чӑнах та, пирӗн республикӑри аслӑ тата пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулсенче, наукӑпа тӗпчев учрежденийӗсенче вӑл вӗрентсе хатӗрленӗ ҫынсем ҫӗршерӗн ӗҫлеҫҫӗ, вӗсенчен чылайӑшӗ халӗ хӑйсем те пысӑк тавракурӑмлӑ тӗпчевҫӗсем пулса тӑчӗҫ.

Михаил Яковлевичӑн вӗренекенӗ, филологи наукисен кандидачӗ В. Я. Канюков критик-литературовед хӑйӗн учителӗ ҫинчен ҫырнӑ «Ялти ватӑ» статьяра ҫапла аса илни пур: «Кафедрӑра ӗҫлекенсене, пире, ҫамрӑкла пурнӑҫа хӑнӑхтарса ҫын турӗ. Темӗнле, чӑвашла, ялтилле ӑса вӗрентсе калаҫатчӗ. Ятлассине те йӑпатса тенӗ пек ятлатчӗ... Вӗрентекенӗмӗр пиртен уйрӑлса кайман пекех туйӑнать. Унӑн кӗнекисем пирӗнпе, унӑн ӗҫӗ-хӗлӗ, статйисенче юлнӑ ӑсӗ-шухӑшӗ, вӑл институтпа университетран вӗрентсе кӑларнӑ яш-кӗрӗм, ялти ватӑлла вӗрентсе хӑварнисем — пирӗнпе».

Михаил Яковлевич яланах тӑван халӑх пурнӑҫӗпе, унӑн шухӑш-туйӑмӗпе, ҫутӑ ӗмӗчӗсемпе хавхаланса пурӑннӑ. Паллӑ ученӑйӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫӗсене пысӑка хурса хакласа, унӑн ятне Чӑваш АССРӗн Ӗҫ Мухтавӗпе Паттӑрлӑхӑн Хисеп Кӗнекине кӗртнӗ, ӑна РСФСР тата Чӑваш АССР наукӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗн ятне панӑ, виҫӗ орденпа тата нумай медальпе наградӑланӑ.

Хисеплӗ ученӑй, педагог тата литературовед хӑйӗн пӗтӗм вӑй-халне халӑха вӗрентес, социализмла чӑваш культурине чечеклентерес ӗҫе хыврӗ. Ырӑ чунлӑ, сӑпайлӑ та уҫӑ кӑмӑллӑ ҫынччӗ вӑл, партипе халӑх ӗҫне чун-чӗререн парӑнса туса пынӑ хастар коммунисчӗ. Нихҫан та манас ҫук вӑл темиҫе ҫул хушши «Тӑван Атӑл» журнал редколлегийӗн членӗ, Чӑваш писателӗсен Союзӗн правлени членӗ пулса кирек хӑҫан та тимлӗ ӗҫленине. Ҫамрӑк авторсемпе, студентсемпе, аспирантсемпе ырми-канми ӗҫлетчӗ вӑл, вӗсен алҫырӑвӗсемпе паллашатчӗ, ырӑ канашсемпе пулӑшатчӗ, редакцилетчӗ те.

Ҫав хушӑрах вӑл общество ӗҫне те активлӑ хутшӑннине палӑртас килет. Ана темиҫе хутчен те Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутатне, КПСС обкомӗн членне суйларӗҫ, вӑл КПСС XXII съезчӗн делегачӗ пулчӗ, нумай ҫул хушши Азипе Африкӑри ҫӗршывсен пӗрлӗх организацийӗн Совет Комитечӗн членӗн ӗҫӗсене туса пычӗ. Чӑваш халӑх поэчӗ П. Хусанкай ахальтен мар ӑна пысӑк шыв ҫинчи бакенпа танлаштарса, ун ҫинчен хӑй пурӑннӑ чухнех «Бакен» ятлӑ сонет ҫырнӑччӗ. Акӑ вӑл:

Эс курнӑ-и?—ҫӗрле Атӑлпала
Пӑрахутпа е кимӗпе каюҫӑн
Пӗр хупланать, пӗр ялтӑрать каллех
Йӑваш та лӑпкӑ ҫутӑ чӗрӗ куҫӑн;

Пӗр хум ҫинче вӑл авӑсӑнкалать,
Пӗр чӑмнӑ свӗр... Руль тытса пыруҫӑ
Ана аякранах курса паллать,
Вӑл сӳнмесессӗн—малалла ҫул уҫӑ.

Ҫак пурнӑҫра ҫын ҫутӑрах ҫунасшӑн,
Вӑл тинӗсри маяк пек курӑнасшӑн,
Кам тиркӗ пархатарлӑ ӗмӗте?
Анчах ман асӑмра кирек хӑҫан та
Ҫав пӗчӗк пӑнчӑ: тӗксӗм ҫутатсан та—
Вӑл ҫул уҫать, вӑл ырӑнлӑ ҫӗрте.

Чӑнах та, М. Я. Сироткин хӑйӗн ӗҫӗ-хӗлӗпе, таса чунлӑ кӑмӑлӗпе, пурнӑҫри хастарлӑхӗпе ҫамрӑксене тинӗсри маяк пек аслӑ ҫул кӑтартса тӑчӗ. Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн чаплӑ ывӑлӗн ӗҫӗсене манас ҫук, вӗсем пирӗн наци наукипе культурине ӗмӗрлӗхех кӗрсе юлӗҫ.

*1978*

## ҪАЛАВҪӐ, СӐВӐҪ, ТИШКЕРӲҪӖ...

*(В. А. Долгов ҫуралнӑранпа 75 ҫул тултарнӑ май)*

Чӑваш халӑх поэчӗ Петӗр Хусанкай хӑйӗн «Ҫунҫул тӳпинчен» сӑввинче В. Долгова халалласа ҫапла каланӑччӗ:

Хутар Эрхипӗн ывӑлӗ Ваҫлей,
Ҫалавҫӑ, сӑвӑҫ, тишкерӳҫӗ... ҫын!
Тус-йышупа эп те сунам телей.
Ҫулсем иртеҫҫӗ тетӗн? Иртӗҫин!

Вӑл чӑваш литературинче нумайранпа ӗҫлекен писательсенчен пӗри. Унӑн малтанхи сӑввисем, очеркӗсем, тӗрленчӗкӗсем ҫирӗммӗш ҫулсенчех пичетленсе пынӑ. Унтанпа вӑхӑт нумай иртрӗ. Анчах кунҫулӑн тӳпинчен пӑхатпӑр та — саях яман пек ҫамрӑк ӗмӗре»,— тенӗ П. Хусанкай ҫав сӑвӑрах.

Унӑн малтанхи сӑввисен кӗнеки «Хура тар» ятпа 1929 ҫулта Мускавра тухнӑ. Ҫаярахпа «Турӑсӑрсем», «Ҫалмантайсем», «Мирун ҫилли», «Тӑван вӗлле», «Йӗрсем», «Мӗскӗн старик» тата ытти калавсем пичетленҫҫӗ, хаҫат-журналсенче те ҫине-ҫинех статьясем, рецензисем тухаҫҫӗ.

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ пынӑ ҫулсенче вӑл Ленинград патӗнчен пуҫласа Прагӑна ҫитиччен вӑрҫӑ ҫулӗпе пӑшалпа та, перопа та ҫапӑҫса утнӑ. Польша, Австри, Венгри, Румыни ҫӗрӗсене ирӗке кӑларассишӗн паттӑр кӗрешнӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче писатель-воин миномет батарейин комиссарӗ, дивизире тухса тӑнӑ «Путь к победе» хаҫатӑн литсотрудникӗ, унтан редактор заместителӗ пулнӑ. Фашистла вӑрӑхурахсене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче хӑюллӑ та паттӑр пулнӑшӑн ӑна пӗрремӗш тата иккӗмӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗсемпе, «Ҫапӑҫури тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн», «Ленинграда хӳтӗленӗшӗн», «Прагӑна ирӗке кӑларнӑшӑн», «1941—1945 ҫулсенчи Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра Германие ҫӗнтернӗшӗн» медальсемпе наградӑланӑ.

Вӑрҫӑра вӑл журналист ӗҫне те чун-чӗререн туса пынӑ: калавсем, очерксем, листовкӑсем, публицистикӑлла статьясем нумай ҫырнӑ. Вӗсенче эпир разведчиксен, снайперсен, пулеметчиксен, танкистсен, радистсен фронтри паттӑрлӑхне лайӑх куратпӑр. Писатель очеркӗсенче вӑрҫӑри ӗҫсем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Вӗсем пурнӑҫри чӑн геройӑн—совет ҫыннин пуян чун-чӗрине туллин уҫса параҫҫӗ. Очерксенчи кашни геройӑн хӑйӗн сӑн-сӑпачӗ, хӑйӗн характерӗ пур. В. Долгов пуринчен ытла хастар, вилӗмрен хӑраман, Тӑван ҫӗршыва чунтан-вартан юратакан ҫынсем

çинчен çырать. Вĕсем, мирлĕ ĕçпе пурăннă çынсем, вăрçăра хăюллă та ăста салтак пулса тăраççĕ, мораль тĕлĕшĕнчен çӳлти пусăма çĕкленеççĕ.

Фронтра унăн çĕнĕ жанр — прозăллă сăвăсем çуралаççĕ. Уйрăмах кунта «Тăван çĕршыв» ятлă лирикăллă монолога кăтартса хăвармалла. Унта писатель çапăçури чăваш салтакĕ Тăван çĕршывшăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕррине, ăна вăл нихçан та манма пултараяс çуккине сăнарласа парать. Писателĕн «Ĕмĕт» ятлă прозăллă сăввине те хумханмасăр вулама çук. Унти лирикăллă герой çапăçури хăйĕн тусне каланă кашни сăмах чуна пырса тивет, çутă ĕмĕт — çĕнтерӳ ĕмĕчĕ çуратать: «Тăван çĕршывшăн кĕрешĕпĕр, вилес пек çапăçăпăр. Анчах, тусăм, вилмĕпĕр. Тăван çĕршывăн чечекĕсем хушшинче вăтăр çул, хĕрĕх çул пурăнăпăр. Çавăн пек ман ĕмĕт». Çавăн пек пулнă совет халăхĕн ывăл-хĕрĕсем. Вĕсен вăрçă вăхăтĕнчи патриотла ĕçĕ-хĕлĕсем çинчен çулăмлă произведенисем çырса, В. Долгов чăваш литературине пуянлатрĕ.

Вăрçă хыççăн, фронтран таврăнсан, В. Долгов критика, литературоведени тата публицистика ыйтăвĕсемпе ытларах ĕçлет, чăваш çырулăх историйĕн тĕрлĕ тапхăрĕсене тĕпчесе, тĕрĕс хакласа нумай-нумай статьясем çырчĕ. Вĕсенчен уйрăмах паллăраххисем — К. В. Иванов, Тайăр Тимкки, Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкай, Ухсай Яккăвĕ, Стихван Шавли, Исаев Мĕтри пултарулăхĕпе çыхăннă. Çав вăхăтрах вăл хальхи çыравçăсен ĕçĕсене те е вĕсен пĕрпĕр çĕнĕ произведенине те тĕпчесе тĕрĕс хаклама тăрăшать.

Хĕрĕх çул ытла вăл К. В. Иванов пултарулăхне тĕпчет: «Чăваш халăх поэчĕ» ятлă кĕнеке кăларчĕ. Унта К. В. Иванов пурнăçĕпе творчестви çинчен питĕ тĕплĕн каланă, унăн сăввисемпе юмахĕсене, «Нарспи» поэмине пăхса тухнă хыççăн пĕтĕмлетсе çапла каланă: «Константин Иванов — поэт-демократ, унăн поэзийĕ — пĕтĕмпех гражданла поэзи, унăн сасси — самана сасси. Иванов произведенийĕсен никĕсĕсенче выртакан эстетикăлла тĕп принципсем халăх тунă ĕçсен илемлĕхĕнчен, унăн кĕрешĕвĕнчен тухса тăраççĕ».

К. В. Иванов пултарулăхĕ çинчен çырнă статьясем хушшинче «Константин Иванов — куçару ăсти» ятлă статья та пысăк вырăн йышăнать. Унта поэт, хăй чаплă произведенисем çырнă вăхăтрах, М. Лермонтовăн, А. Кольцовăн, Н. Некрасовăн, Н. Огаревăн, А. Майковăн произведенийĕсене вырăсларан чăвашла мĕнле ăсталăхпа куçарнине сăнаса, ман шухăшпа, В. Долгов питĕ тĕрĕс хаклать. «Иванов,— тет вăл,— сăмахсене шутласа мар, сăмахсен, йĕркесен,

строфасен тупсăмне, тĕп шухăшне ăса илсе куçарать, çав вăхăтрах вĕсен илемлĕхне те, художествăлла пахалăхне те упраса хăварать».

В. Долгов Çеçпĕл Мишшин кунçулĕпе ĕçне-хĕлне нумай çул хушши тĕпчерĕ, кăвар чĕреллĕ поэтăн сăвви-юррисене шухăш-туйăм енчен те илемлĕх енчен пăхса тухса, пысăк ĕç турĕ. Вăл чи малтанах çакна палăртрĕ: поэт-коммунист хăйĕн произведенийĕсенче яланах халăх пурнăçĕпе çыхăнса тăракан пысăк ыйтусене хускатнă, халăхсене çĕннишĕн кĕрешме чĕннĕ, малалла çирĕппĕн утма йыхăрнă. Çеçпĕлĕн пурнăçĕ темле йывăр пулсан та, вăл ырă пуласлăха ĕненме пăрахман: ăна çутă ир хĕвелне кĕтнĕ пек кĕтнĕ.

Чăваш литературин çул-йĕрĕпе паллашма В. Долговăн «Чăваш литературин сăн-сăпачĕ» тата «Ленин сăнарĕ — халăх чĕринче» ятлă кĕнекисем нумай пулăшаççĕ. Вĕсенче литературăн хăшпĕр ыйтăвĕсем çинчен çырнă статьясем, чылай писательсен пултарулăхне пăхса тухакан тĕпчев ĕçĕсем вулакансемшĕн уйрăмах усăллă. Вĕсене эпир ырăпа çеç асăнатпăр. Критик хăйĕн нумай-нумай статйисенче литература ĕçне партипе халăх интересĕсемпе тачă çыхăнтармалли çинчен калать, халăх пурнăçне, ĕçне-хĕлне тĕрĕс сăнласа кăтартмаллине лайăх тĕслĕхсемпе асăрхаттарать.

В. Долговăн тепĕр паха ĕçĕ — вăл И. Я. Яковлевпа И. Н. Ульянов хушшинчи туслăх çинчен çырнă «Ĕмĕрех пархатарлă туслăх» ятлă кĕнеке. Вĕсен туслăхĕ ĕçре, кĕрешӳре мĕнле çуралнине, тĕрекленнĕ туслăх яланах çирĕп пулнине куратпăр эпир. «Иккĕшĕ те халăхшăн, ăна çутта кăларассишĕн, унăн ăстăнне аталантарассишĕн чунтан тăрăшнă»,— тет тĕпчевçĕ.

Чăваш литература критикине аталантарас, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас тĕлĕшпе нумай ĕçленине кăтартса хăварас килет. Вăл В. И. Ленинăн «С чего начать?», «Что делать?», «К деревенской бедноте», «Две тактики социал-демократии в демократической революции», «Партийная организация и партийная литература», «Три источника и три составные части марксизма», «Апрельские тезисы», «Задачи союзов молодежи» тата ытти произведенийĕсене куçарнă.

Кирек мĕнле ĕçре те—пултаруллă писатель, критик, историк, редактор, куçаруçă... Хăй умне лартнă задачăсене халĕ те хавхаланса, иксĕлми хастарлăхпа, тирпейлĕ, тĕплĕ туса пырать. Вăл çырнă калавсем, очерксем, статьясем, тĕпчевсем кашни вулаканшăн интереслĕ, усăллă.

*1981*

## ПУЛТАРУЛЛĂ КРИТИК-ЛИТЕРАТУРОВЕД

Вăтăр çул хушши вăл чăваш литературинче ырмиканми ĕçлерĕ, статьясемпе кĕнекесем чăвашла та, вырăсла та чылай кăларчĕ. Кăçал хăйĕн 60 çулне наукăпа творчествăри ĕçре вăл пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илмеллеччĕ. Анчах пурăнса çитеймерĕ, 1983 çулхи май уйăхĕн 17-мĕшĕнче пултаруллă критик-литературовед пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ.

Тĕпчевçе хăйне куриччен чи малтан эпĕ унăн «Д. В.Исаев (Авраль) произведенийĕсенчи проблемăсем» ятлă статйипе паллашнăччĕ. Вăл 1952 çулта «Тăван Атăл» журналта пичетленнĕччĕ. «Исаев Мĕтри пекех тимлĕ, паллă пулĕ çак автор,— терĕ ун чухне чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай.— Ку пĕрремĕш статйи мар, унăн çамрăк писательсен пултарулăхĕпе А. Артемьевăн «Ан авăн, шĕшкĕ» калавĕ çинчен çырнă тĕпчев ĕçĕсем те пур».

Çак калаçу хыççăн икĕ çул иртсен, 1954 çулта, Исаев Мĕтри çинчен çырнă статья авторĕпе—Владимир Канюковпа хăйпе те паллашрăм вара. Ун чух ăна «Основные этапы развития чувашской детской литературы» ятлă тĕпчев ĕçĕшĕн филологи наукисен кандидачĕн ятне панăччĕ.

Владимир Яковлевич 1926 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Çĕнкас Юнтапа ялĕнче, хресчен килйышĕнче çуралнă. Малтан вăл ялти тулли мар вăтам шкултан, унтан, 1943 çулта, Калининăри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă, çав çулах ăна Совет Çарне илнĕ. Инçет Хĕвелтухăçĕнче вăл япон самурайĕсемпе понтонер-радист пулса çапăçнă.

1950 çулта И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн В. Канюков темиçе çул Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институтĕнче литературăпа искусство секторĕн сотрудникĕнче тата сектор заведующийĕнче ĕçлет. Шăпах çак вăхăтра вăл литература критикипе наука ĕçне хастарлăн хутшăнма тытăнать, чăваш писателĕсемпе çамрăк авторсен произведенийĕсене тишкерсе статья хыççăн статья çырать, çапла вара талантлă критикăн тата литература тĕпчевçин ячĕ ӳссе те çĕкленсе пырать.

В. Канюков наука ĕçне пуçăннăранпа пуринчен ытла ача-пăча сăмахлăхне, вĕсем валли çыракан писательсен пултарулăхне тишкерес тĕлĕшпе чăннипех те пысăк ĕç тăвать. Вăл çырнисенчен уйрăмах çаксене асăнса хăварас килет: «Чăвашсен ача-пăча литератури аталанăвĕн паллă тапхăрĕсем» (1954), «Дореволюционная чувашская детская

литература» (1954), «Трубина Мархви» (писательница пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнă критикăпа библиографи очеркĕ, 1959), «Ача-пăча сăмахлăхĕ» (сăвă-юрăсемпе юмах-халапсем, 1964), «Қасрăм-касрăм пĕрене» (ачасем валли пухса хатĕрленĕ юрă-сăвă кĕнеки, 1967), «И. Я. Яковлев и чувашская детская литература» (1969) т. ыт. те.

В. Қанюков чăваш ача-пăча литератури мĕнле аталанса пынине нумай тĕпчерĕ. Акă, «Ача-пăча сăмахлăхĕ» кĕнекенех илер-ха. Унта автор чăваш халăхĕн ачасем валли хывнă сăвви-юррисемпе юмах-халапĕсене тата çамрăк вулакансен пултарулăхне питĕ тĕплĕн пăхса тухнă, паха тĕслĕхсем чылай илсе кăтартнă.

Кĕнеке икĕ пайран тăрать. Пĕринче — кĕнекене хатĕрлекенĕ çырнă статьясем, тепринче — халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Статьясенче автор чăваш ача-пăча поэзине пĕтĕмĕшле тата кашни жанрăн историне, содержанипе илемлĕх уйрăмлăхне, пурнăçри пĕлтерĕшне палăртнă. Текстсенчен кунта сăпка юррисем, пĕчĕк ачасене йăпатмалли такмаксем, шӳтсем, юмах-халап, вăйă юррисем, юптарусем, ачасене вĕрентсе каланă ваттисен сăмахĕсем т. ыт. те пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Ача-пăча литературине юратса тĕпчениех В. Қанюкова Трубина Мархви пултарулăхĕпе те çирĕп çыхăнтарчĕ. Çамрăк вулакансен юратнă писателĕ çинчен, унăн калавĕсем, повеçĕсем, пьесисем çинчен нумай çырчĕ вăл. 1959 çулта вара Владимир Яковлевич «Трубина Мархви» ятлă критикăпа библиографи очеркне уйрăм кĕнекепе кăларчĕ. Ăна вуласан, куç умне Трубина Мархвин литературăри пултарулăхĕпе пĕрлех халăха вĕрентес тĕлĕшпе нумай çул хушши хастарлă ĕçленĕ кунçулĕ те анлăн тухса тăрать. Тĕпчевçĕ ача-пăча литературин никĕсне хывас тата ăна аталантарас тĕлĕшпе паллă писательница ырми-канми ĕçленине, вăл ачасем валли çырнă чылай сăвăсене, юмахсене, калавсемпе повеçсене тимлĕн пăхса тухать. Паллă ĕнтĕ, Трубина Мархви пултарулăхĕнче чăваш хĕрарăмĕн патша саманинчи тата совет самани тапхăрĕнчи пурнăçĕ çинчен калакан произведенисем паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсене критик тулли кăмăлпа тишкерет, кунпа пĕрлех писательница чăваш литературинче драматурги жанрне аталантарас тĕлĕшпе те нумай вăй хунине палăртать, çавна май унăн «Çĕр чĕлхи», «Çĕнтерчĕ», «Қилет», «Телейсĕр хĕр» пьесисене пăхса тухса тивĕçлĕ хак парать.

Владимир Қанюков чăваш поэзийĕн классикĕсем К. Иванов, Çеçпĕл Мишши, Н. Шупуççынни тата Ф. Павлов çырнисене пухса кăларас енĕпе те сахал мар тăрăшрĕ. Анлан-

малла, ку ĕçе çăмăл темелли çук: текстсене тĕрĕслемелле, асăрхаттарусемпе ăнлантарусем кĕртмелле, писательсем çырнисене хăш хаçат-журналтан е кĕнекерен илнине кăтартмалла, умсăмах хатĕрлемелле... Пултаруллă литературовед çакна çине тăрса тата тĕплĕ туса пычĕ.

Чăваш литературин тĕрлĕ тапхăрти уйрăмлăхĕсене тĕпчес енĕпе В. Канюков пайтах тăрăшнине унăн çак ĕçĕсем лайăх кăтартса параççĕ: «Литературные связи чувашского и украинского народов» (1955), «Развитие дореволюционной культуры чувашского народа и ее взаимосвязи с русской культурой» (1957), «Заметки о сюжетах в произведениях чувашской художественной литературы тридцатых годов», «Поэзи вăл—самана сасси», «Кашлать Иванов вăрманĕ», «Тăвăр калăп урана хĕсет», «Семерччен кĕслеçĕпе С. Шавли поэт», «Мĕнпур писателĕн ĕçĕ», «Тĕпчевçĕ, писатель» (С. Михайлов çинчен). Пурне те каласа пĕтерме çук, çапах та вăл чăваш писателĕсем В. Митта, М. Сироткин, В. Долгов, А. Кăлкан çинчен çырнисене уйрăммăн асăнса хăварас килет. Вĕсенче автор паллă писательсен пултарулăхĕнчи уйрăмлăхсене шырать, вĕсене тĕрĕс кăтартса парать.

В. Канюковăн тĕпчев ĕçĕсенчен пысăкраххи—1971 çулта вырăсла пичетленсе тухнă «От фольклора к письменности» ятлă кĕнеке. Унта вăл чăваш фольклорĕпе илемлĕ литератури хушшинчи çыхăнăва тишкерет. Кунашкал пысăк ĕç пирĕн халиччен пулманччĕ-ха. Çавăнпа та ăна тĕпчевçĕсем хапăл туса йышăнчĕç. Мускавра тухса тăракан журналсенче те («Дружба народов», 2 №, 1973; «Советская тюркология», 4 №, 1972) ырласа çырчĕç. Çавăн пекех унăн «Развитие литературы и народные художественные традиции» кĕнеки те чăваш литератури тĕпчевĕнче паллă вырăн йышăнать.

Владимир Яковлевич Тăван çĕршывшăн пынă аслă вăрçă вăхăтĕнчи чăваш литературине тĕпчес енĕпе те пайтах тăрăшрĕ. Чи малтанах вăл ку чухнехи литературăра писательсен пултарулăхĕ шалтан, ăшран çирĕпленсе улшăннине, çĕнĕ пахалăх туяннине кăтартрĕ. Акă, «Çирĕммĕш уяв» («Ялав», 5 №, 1965) ятлă статьяра вăл вăрçă вăхăтĕнчи литературăн вăйлă енĕсене çапла палăртать: «Литературăра çĕнĕ герой çуралать. Кĕрешӳçĕ паттăр, тĕнче цивилизацие хӳтĕлекен воин. Совет çыннине пирĕн писательсем çĕнĕ енчен, унăн моральпе политика пахалăхĕ, социализмла-интернационалла патриотлăхĕ капитализм çыннин ăшчик пахалăхĕнчен мĕн тери урăхла пулни енчен пăхса ӳкерме тытăнаççĕ».

Ку вăхăтри литературăра çĕнĕ жанрсем аталаннине те курмасăр иртмест тĕпчевçĕ. «Фронтран килекен очерксенче литературăлла портрет йĕркелене пуçлать... И. Тукташпа С. Элкер уйрăмшар кăларнă очерксем биографилле повесть капашне туртăнаççĕ»,— тет вăл. Вăрçă çулĕсенче фронтран килекен сăнарлă сăмах меслечĕпе хывнă çырусем (М. Данилов-Чалдун—«34-мĕш атака умĕн», Я. Ухсай—«Н-ски дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсен чăваш халăхне янă çырăвĕ» т. ыт. те) пысăк вырăн йышăнма тытăннине те асăрхать вăл.

Хăшпĕр тĕпчевçĕсем «вăрçă вăхăтĕнчи литературăн хăйĕн тематикине юриех ансăрлатма тивнĕ, пурнăçа нумай енчен çавăрса илме пултарайман вăл» тесе каланă тĕрĕс мар шухăшсемпе килĕшмест тимлĕ литературовед. «Писательсен сĕтел хушшийĕсем пушанса юлнă пулин те,— тет вăл, хăйĕн шухăшне çирĕплетсе,— вăрçă тапхăрĕнче пирĕн литература аталанма пăрахмасть. Пачах урăхла, çав çулсенче вăл малалла утăм тăвать». Питĕ тĕрĕс, татăклă хурав парать тĕпчевçĕ.

В. Канюков хăйĕн наука ĕçне çамрăк ăрăва коммунизмла воспитани парас ыйтупа тачă çыхăнтарса пычĕ. Нумай çул хушши вăл И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш литература кафедрин заведующийĕнче ĕçлерĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленин членĕн тата «Ялав» журнал редколлегийĕн членĕн ĕçĕсене хастарлăн туса пычĕ. Вăл час-часах ялти шкулсенче пулатчĕ, çамрăк учительсемпе канашлусем ирттеретчĕ. Кунпа пĕрлех вăл çиччĕмĕшпе саккăрмĕш классем валли тăван литературăпа хрестомати кĕнеки хатĕрлесе кăларчĕ.

Владимир Яковлевич 1950 çултанпа — КПСС членĕ, 1964 çултанпа СССР писателĕсен Союзĕн членĕ пулнă.

Нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче В. Канюковăн тăван литература утăмĕсемпе çыхăннă статьясен кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Вĕсене вăл тĕрлĕ вăхăтра çырнă. Хăшпĕр статйинче писательсен пултарулăхне пĕтĕмĕшлетсе тишкернĕ е вĕсен уйрăм произведенийĕсене, жанрпа стиль ыйтăвĕсене пăхса тухнă.

Çак кĕнекере вулакан чăваш литератури мĕнле аталанса, ўссе, çирĕпленсе пынине, писательсем Ленин партийĕ лартнă задачăсене тĕрĕс те ăнăçлă татса пама тăрăшнине лайăх курма пулать.

*1986*

## ПЕДАГОГ, ПИСАТЕЛЬ

Прохор Емельянов писателĕн произведенийĕсене юратса вулакансем — чи малтанах çамрăксем, шкул ачисем. Вăл— педагог, писатель. Чăваш республикинчи Элĕк районĕнче, Ураскилт ялĕнче 1913 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче хресчен килйышĕнче çуралнă. Чăвашсен паллă поэчĕ Никифор Васанкка та çак ялтанах. Вĕсем пĕр-пĕринпе туслă пурăннă. Н. Васанкка хăйĕн ентешне шкулта ĕçленĕшĕн, çав вăхăтрах ачасем валли калавсем, повеçсем çырнăшăн тивĕçлипе мухтатчĕ. Халĕ те астăватăп-ха унăн ырă сăмахĕсене. Вăл час-часах тĕлпулусенче çапла калатчĕ: «Қашни çыннăн пурнăçра хăйĕн вырăнĕ, хăйĕн ĕçĕ пур. Эсĕ, Прохор Кононович, хисеплĕ учитель, çамрăксене тĕрĕс пурăнма вĕрентетĕн, хĕрÿллĕн те тимлĕн тăрăшса, питĕ усăллă ĕç тăватăн: çамрăк ăру валли илемлĕ произведенисем çыратăн. Мухтав сана!»

Чăнах та, Прохор Емельянов хăйĕн пурнăç уттине пĕтĕмпех шкул ачисене коммунизмла воспитани парас ĕçпе çыхăнтарнă. Хĕрĕх çул ытла вăл тĕрлĕ çĕрте ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентсе пурăнчĕ. Халĕ те, тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те, канасси çинчен шухăшламасть, хăй пурăнакан Сĕнтĕрвăрри хулинчи тата ялсенчи шкулсемпе тачă çыхăну тытать.

— Пурнăçăм манăн çăмăлах пулмарĕ,— тет Прохор Кононович.— Элĕкри иккĕмĕш сыпăклă шкултан вĕренсе тухсанах Чулхулари (халĕ Горький хули) автомобиль заводне тунă çĕре комсомол путевкипе кайрăм. Унтан юханшыв техникумĕнче, ялхуçалăх институтĕнче вĕрентĕм, Çĕмĕрлери рабфакра, Қанашри чугун çул шкулĕнче ĕçлерĕм. Совет Çарĕнче те службăра пултăм. Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан, фронта кайрăм. Вăрçă хыççăн каллех шкулта ĕçлерĕм.

Литература ĕçне П. Емельянов 1930 çулта тытăннă. Ун чухне унăн «Сунтал» (халĕ «Ялав») журналта пĕр пĕчĕк сăвă пичетленет. Каярах вара «Қанаш», «Çамрăк колхозник» хаçатсенче калавсемпе фельетонсем те пичетленеççĕ. Вĕсенче çамрăк автор Чăваш çĕршывĕнче Октябрь революцийĕ хыççăн çĕнĕ пурнăç мĕнле аталанса, çирĕпленсе пынине кăтартма тăрăшнă. Анчах вăл литературăра активлă ĕçлеме вăрçă хыççăн çеç тытăнать. Пуринчен ытла шкул ачисен ĕçĕ-хĕлĕ, вĕренĕвĕ, вăййи-кулли, ĕмĕчĕ-шухăшĕ çинчен çырать. Вĕсенчен паллăраххисем уйрăм кĕнекесемпе те пичетленсе тухрĕç. Акă вĕсем: «Çумăр тумламĕ», «Кăмаша вăрманĕнче», «Эпĕ сукмакпа пыратăп», «Юратнă тусăм-

сем». Ку кĕнекесенчи калавсен геройĕсем — шкул ачисем. Писатель вĕсене тĕрлĕ çĕрте, тĕрлĕ ĕçре сăнласа кăтартать. Ачасен пурнăçĕ пуринчен ытла колхоз хирĕнчи, шкул пахчинчи ĕçсемпе çыхăннă. Ĕçре вĕсем ӳсеççĕ, Тăван çĕршывăн пуянлăхне сыхлама вĕренеççĕ.

Ача-пăча валли çырнă произведенисенче писателĕн ăсталăхĕ лайăх курăнать. Вăл вăтам çулсенчи шкул ачисене те, кĕçĕн классенче вĕренекенсене те тăван тавралăх, выльăх-чĕрлĕх, ӳсентăран çинчен хăйсене калаçтарать, вĕсем халăх хушшинче мĕнле çитĕнсе пынине кăтартать. Писатель хамăр таврари çутçанталăка илемлĕ, чун-чĕререн юратмалла çырса кăтартать. Уйрăмах «Юратнă тусăмсем» кĕнекери повеçпе калавсене кăтартса хăварас килет. Вĕсем шкул ачисене çĕр ĕçне юратма, пĕр-пĕринпе туслă пурăнма вĕрентеççĕ.

П. Емельяновăн повеçĕсемпе калавĕсенчи ачасемпе пĕрле яланах аслă юлташĕсем, ашшĕ-амăшĕсем, колхоз председателĕ е бригадир, агроном е учитель. Вĕсем пуян чунчĕреллĕ, кăмăллă çынсем, кашни ачана вăхăтра тĕрĕс çул кăтартса пама пултаракансем.

Хăйĕн хăшпĕр калавĕсенче писатель ачасене çамрăк Совет республики граждан вăрçи хыççăн мĕнле йывăрлăхсене çĕнтернине, арканнă хуçалăха Ленин пулăшнипе епле çĕкленине, чăваш ачисене вилĕмрен çăлса хăварнине лайăх кăтартса парать. Вăл енчен унăн «Сиплĕ çăкăр» калавĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен калас пулать.

Писатель пултарулăхĕнче Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен çырнă произведенисем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. 1978 çулта унăн вырăсла «Вдали от Отчизны» повеçĕ пичетленсе тухрĕ, 1980 çулта «Икĕ тĕлпулу» тата «Марине» повеçсем уйрăм кĕнекепе тухрĕç. Нумай пулмасть вăл «Запасри полкра» повесть çырса пĕтерчĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă тапхăрĕнчи халăх пурнăçĕ çинчен, вăл фашистла Германие хирĕç паттăррăн кĕрешни çинчен çырасси çăмăл мар. П. Емельянов вăрçă хăрушлăхне хăй тӳссе ирттернĕ, çавăнпа та унăн повеçĕсенче çырса кăтартнине ĕненетĕн, ăна вуланă чух хумханмасăр чăтса тăраймастăн. Илсе пăхар-ха, акă, «Маринепе» «Икĕ тĕлпулу» повеçсене.

«Икĕ тĕлпулу» повеçре автор фронтовиксен шухăш-кăмăлне, вĕсен мăшăрĕсен тылри пурнăçне, мораль енчен çирĕп те таса туйăмлă пулнине уçса парать. Повеçри тĕп герой — вăрçăра темиçе хутчен те аманнă аслă лейтенант, халĕ вăл учительте ĕçлет. Вăрçă çулĕсенче тыла командировкăна кайсан, Нина ятлă хĕрпе паллашнă пулнă. Вĕсем

пĕр-пĕрне килĕштерессĕ, юратассĕ. Анчах аслă лейтенант тепĕр хут фронта каять, фашистсене хирĕç паттăррăн çапăçать. Рейхстага штурмланă чухне каллех йывăр аманать. Хаçатра ăна вилнĕ хыççăн Ленин орденĕпе наградăланă тесе пĕлтерессĕ. Çапла вара Нина юратнă çынна çухатать. Анчах аслă лейтенант вилмен иккен. Нумай çул иртсен, вĕсем тепĕр хут тĕл пулассĕ. Темле йывăр вăхăтра та таса чунлă çынсем хăйсен юратăвне манман, манма та пултарайман, пĕр-пĕрне аса илсех пурăннă, шыранă. Ку ĕнтĕ чăн-чăн юрату, тăшмана çĕнтерме, пурнăçри йывăр кунсене çирĕппĕн тӳссе ирттерме пулăшакан юрату. Автор ăна пысăк ăсталăхпа çырса кăтартнă. Повеçĕн чĕлхи лайăх, вăл çăмăллăн вуланать.

Çавăн пекех «Марине» повеçе те килĕштермесĕр вулама çук. Пĕр-пĕрне чунтан юратса мăшăрланнă Маринепе Иван пĕрле телейлĕ пурнăç тума тытăнсан, вăрçă пуçланать. Иван фронта тухса каять, фашистсене хирĕç çапăçса вилет. Тем тери пысăк хуйхă килсе тиенсен те, Марине аллине усмасть, чунĕпе хуçăлмасть, хăйĕн хуйхине ялйышпа пĕрле ырми-канми ĕçлесе пусарать. Автор ун сăнарĕ урлă чăваш хĕрарăмĕн вăрçă çулĕсенчи чăннипех те хастар ĕçне-хĕлне, вăл Çĕнтерӳ кунне çывхартас тесе пĕтĕм вăй-халне парса тăрăшнине питĕ витĕмлĕ кăтартнă. Çавăн пекех Маринен кӳршĕ-арши те, ачисем те. Вĕсем пирĕн литературăри ырă, пархатарлă сăнарсем.

П. Емельянов чăваш драматургийĕнче те пысăк утăм турĕ. Вăл пĕр пайлă пьесăсем чылай çырчĕ. Вĕсенчен паллăраххисем: «Софрон Иванч кин кĕртет», «Хаклă тĕлпулу», «Тĕтре хупласа илсен», «Куккаллă чечек» тата ытти те. «Яланах пĕрле» пьеса тăрăх К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство академи драма театрĕ спектакль лартрĕ. «Тăван Атăл» журналăн 1983 çулхи 4-мĕш номерĕнче «Савăнаççĕ кумасем» ятлă икĕ пайлă комеди пичетленчĕ. Унта вăл хальхи вăхăтра ĕçрен пăрăнса çӳрекенсене, эрех ĕçсе çапкаланса пурăнакансене сатира вучĕпе çунтарать, наянсемпе харам пырсене хирĕç кĕрешме чĕнет.

Прохор Кононович васкамасăр, ĕçе тĕплĕн тума юратакан писатель, çамрăксемшĕн вăл—чăн-чăн педагог.

*1983*

## ÇАМРĂК CĂВĂÇСЕНЕ ПУЛĂШМА

Чăваш сăвви çинчен калаçнă е çырнă чух эпир часчасах Çеçпĕл Мишшин «Сăвă çырассипе ударени правилисем» ятлă статйине асăнатпăр. Çулăм чĕреллĕ поэт тăван поэзи пуласлăхĕ çинчен шухăшланă, унăн аталанăвне вăйлăлатма тăрăшнă. «Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ — çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ»,— тенĕ вăл. Сăвă ĕçне вĕренме, çĕклесе яма, çирĕплетме чĕннĕ Çеçпĕл. Вăл пуçарнă пархатарлă ĕçе пирĕн поэтсем шавах малалла аталантарса, пуянлатса пыраççĕ.

Çамрăксем хушшинче сăвă çырас, поэт пулас текенсем сахал мар. Вĕсен сăввисем хаçат-журналсен редакцийĕсене килсех тăраççĕ, анчах нумайăшĕ пичете юрăхлă мар. Мĕншĕн-ха? Мĕншĕн тесен вĕсенчен чылайăшĕ е сăвă çырмалли правилăсене, е тăван чĕлхе сăнарлăхне япăх пĕлеççĕ, хăш чухне тата хăйсен шухăш-туйăмне те уçса пама пултараймаççĕ. Поэзи çулĕпе утма шухăш тытнă çамрăксене, паллах, аслăрах юлташсем пулăшмалла, хавхалантармалла, вĕрентмелле. Ку енĕпе вĕсене чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн 1964 çулта пичетленсе тухнă «Асталăхпа чăнлăх» кĕнеки те чылай пулăшма пултарать. Çамрăк авторсене чăваш сăввин историйĕпе теорийĕн ыйтăвĕсем, виçе тытăмĕсем çинчен Н. Иванов тĕпчевçĕн 1977 çулта тухнă «Чăваш сăвви» кĕнекипе те паллашма сĕнес килет. Сăвă çыракансене пулăшас тĕллевпе 1980 çулта çырнă В. Тимаков поэтăн «Сăмах илемне туйсан...» ятлă кĕнеки вулакансем патне çитрĕ.

Вăл сăвă çырма тытăнакансемшĕн кăна мар, шкулсенче чăваш литературине вĕрентекенсемшĕн те лайăх пособи пулнине кăтартса хăварас килет. Унпа литература урокĕсенче те, кружок занятийĕсенче те тата кашни шкул ачипе студент та хăй тĕллĕн ĕçленĕ чухне уса курма пултарать.

Кĕнеке тăватă пайран тăрать. Кашнинчех автор теори ыйтăвĕсене çирĕплетме вырăс тата чăваш поэчĕсен произведенийĕсенчен тĕслĕхсем илсе кăтартать, вĕсене ăнлантарса парать.

Пĕрремĕш пайĕнче вулакансем сăвă çырмалли правилăсемпе паллашаççĕ. «Чи лайăх ăста та піртăсăр пÿрт тăваймасть, чаплă тĕрĕçĕ йĕпсĕр, тĕрлĕ тĕслĕ çипсĕр хăйĕн пултарулăхне кăтартаймасть. Поэта хăйĕн пултарулăхне кăтартма сăвă техникине, поэзи хăйевĕрлĕхне лайăх пĕлни кирлĕ»,— тет кĕнеке авторĕ. Унтан вара вăл сăвă çырас ĕçри ĕлĕкрен аталанса çирĕпленнĕ йĕркесене (системăсе-

не) пăхса тухать. Вĕсем çаксем: силлабо-тоника, тоника, силлабика, ирĕклĕ сăвă. Хальхи вăхăтри чи сарăлнă сăвă системи вăл — силлабо-тоника, çавăнпа та ун çинчен кĕнекере тĕплĕрех каланă. Кунта кашни сăвă виçин уйрăмлăхĕпе пĕлтерĕшне ăнлантарнă. Сăвă çырма вĕренекенсем ямб, хорей, дактиль, амфибрахий, анапест виçисемпе паллашаççĕ. Пирĕн поэзире силлабо-тоникăри пур виçепе те ирĕклĕн усă курма май пуррине В. Тимаков нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе панă.

Малалла вăл тĕрлĕ йышши ритмпа рифмăсем çинчен ăнлантарать, хальхи чăваш поэзийĕнче хĕреслĕ, юнашар тата çавра рифмăсем ытларах тĕл пулнине палăртать. Вĕсем валли те вăл выранлă тĕслĕхсем тупать.

Кĕнекере чăвашсен çыруллă поэзийĕнче, уйрăмах революцичченхи тапхăрта çичĕ сыпăклă сăвă виçи чылай пысăк вырăн йышăнни çинчен каланă. Вăл халăх юррисенче те час-часах тĕл пулакан виçе. «Пирĕн паллă поэтсем П. Хусанкай, В. Митта, Я. Ухсай, И. Тукташ тата ыттисем, çĕнĕ виçене савăнса йышăннă пулин те, халăх юррисен виçине сивлемен, унпа усă курса илемлĕх енчен палăрмалла произведенисем çырнă»,— тет автор.

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче сăвă сăнарлăхĕпе витĕмлĕхне тума пулăшакан тропсемпе («танлаштару, эпитет, метафора, аллегори, сăпатлантару, гипербола т. ыт. те) пирĕн поэтсем мĕнле усă курнине пăхса тухнă. Çавăнтах сăвăри е ытти йышши произведенисенчи калас шухăшăн сăнарлăхне, чĕлхен витĕмлĕхне ÿстерме поэзи синтаксисĕ пысăк вырăн йышăннине асăрхаттарнă. Çавна май автор К. Иванов, Çеçпĕл Мишши, П. Хусанкай, С. Шавли, А. Алга, Г. Орлов сăввисенчи ăнăçлă тĕслĕхсене илсе кăтартнă. Вăл тĕрĕс калать: «Поэзи синтаксисĕ — сăвă тытăмĕпе кĕввине йĕркелемелли вăйлă меслетсенчен пĕри».

Пурнăçри ĕçсем, пулăмсем, çынсен шухăш-кăмăлĕпе сăмах вăйĕ çинчен кĕнекере питĕ кирлĕ шухăшсем каланă, кашни çыраканăн хăйĕн чĕлхине ялан пуянлатса пымаллине астутарнă. Пултарулăх ĕçĕнче ăна халăх сăмахлăхне тĕпчесе вĕренни, тĕрлĕ словарьсемпе усă курни нумай пулăшма пултарать. В. Тимаков сăвă чĕлхине пуянлатас çĕрте неологизмсем, архаизмсем, диалектизмсем, синонимсем паллă вырăн йышăннине, вĕсемпе мĕнле пĕлсе усă курнине уйрăм поэтсен ăсталăхĕпе çыхăнтарать. «Писательшĕн Н. И. Ашмарин профессорăн 17 томлă словарĕ чаплă энциклопеди пулса тăмалла»,— тет автор.

Поэзи пайĕсемпе вĕсен формисем çинчен кĕнекен виççĕмĕш пайĕнче вуласа пĕлетпĕр. Кунта чăваш литературинче

эпикӑллӑ поэмӑпа лирикӑллӑ поэмӑн содержанийӗпе форми ҫинчен сӑмах хускатнӑ. Ҫавна май автор С. Элкерӗн «Хӗн-хур айӗнче», П. Хусанкайӑн «Аптраман тавраш», Я. Ухсайӑн «Ту урлӑ ҫул» эпикӑллӑ поэмисенче чӑваш халӑхӗн пурнӑҫне анлӑн, ҫынсен шухӑш-туйӑмне тӗрлӗ енлӗн сӑнласа ҫырнин поэтикӑлла уйрӑмлӑхӗсене кӑтартса парать. Паллах ӗнтӗ, кун пек пысӑк произведенисем ҫырма ҫӑмӑл мар, ҫакӑ пӗтӗмпех поэт пултарулӑхӗнчен, вӑл пурнӑҫа тӗпчеме пӗлнинчен, тӑрӑшса ӗҫленинчен килет.

Поэзире лирика паллӑ вырӑн йышӑнать. Хальхи вӑхӑтра философиллӗ лирика, интимлӑ лирика мӗнле аталанса пынине тата вӗсен уйрӑмлӑхӗсене ӑнлантарса пама автор каллех чӑваш поэчӗсен произведенийӗсемпе усӑ курать. Кунтах вӑл форми, тытӑмӗ, калӑпӑшӗ тӗлӗшӗнчен сӑвӑсем нумай енлӗ пулнине те палӑртать (ода, баллада, сонет, рондо, романс, серенада, экспромт, эпиграмма т. ыт. те).

Кӗнекен тӑваттӑмӗш пайӗнче поэтӑн обществӑри вырӑнӗпе гражданлӑхӗ ҫинчен те лайӑх каланӑ. «Сӑвӑҫ патриот кӑна мар, вӑл ытти ҫынсене ҫӗршыва чунтан-чӗререн юратма, уншӑн яланах тӑрӑшма хавхалантаракан, мала чӗнекен ҫын»,—тет автор. Поэтӑн обществӑри ӗҫӗ-хӗлӗ унӑн сӑвви-юррисенче те яр-уҫҫӑн курӑнать. Кашни совет гражданинӗ пекех, чӑваш халӑх поэчӗ Петӗр Хусанкай каланӑ сӑмахсене аса илтерени те кӗнекере вырӑнлӑ:

Манӑн чыс та мухтав
Малтан вӑл ак ҫак:
Эп—Советлӑ Союз гражданине!

«Лайӑх сӑвӑ е поэма ҫынсен чун-чӗрине пырса тивет, пысӑк шухӑш-туйӑм, хавхалану ҫуратать. Ҫавӑн пек произведенисем ҫырмашкӑн сӑвӑ техникине пӗлни пулӑшать»,— тенӗ кӗнекере. Паллах, нимӗнле кӗнеке те сӑвӑ ҫырма вӗренекене тӳрех поэт туса хураймасть. Кун ҫинчен В. Тимаков питӗ тӗрӗс каланӑ.

«Сӑмах илемне туйсан...» кӗнеке пирки кӗске калаҫу хускатнӑ май хамӑн шухӑшсене те автор сӑмахӗсемпех вӗҫлес килет. Вӑл сӑвӑ тытӑмӗпе кӗввине, унӑн сӑнарлӑх мелӗсене пӑхса тухсан, ҫапла пӗтӗҫтерсе ҫырнӑ:

— Хӑйӗн пӗтӗм ӗҫӗ-хӗлӗнче поэт яланах тӗпчет, вӗренет, ҫӗннине ҫине тӑрса шырать, хӑйӗн шухӑш-туйӑмӗсене витӗмлӗ, сӑнарлӑ калама тӑрӑшать. Сӑввӑн тытӑмӗпе кӗввине лайӑхран лайӑх вӗренсе пырасси те, пурнӑҫри шухӑш-туйӑма пӗтӗмлетесси те, хӑйӗн идейипе тематикине анлӑ-

латасси те унăн пултарулăхĕнчи пĕр-пĕринчен уйрăлми, пер пĕтĕмĕшле ĕç пулса тăрать».

Çак тĕллеве мĕнле пурнăçламалли çинчен çăмăл, пурте ăнланмалла чĕлхепе çырнă та эпир пăхса тухнă кĕнекене.

*1982*

## ПĂЛХАРСЕН ПАЛЛĂ ПИСАТЕЛĔ

*(Ангел Тодоров 80 çул тултарнă май)*

Болгари культурин тава тивĕçлĕ деятелĕ, Г. Димитров ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ, Болгари Халăх Республикин Ĕç Геройĕ—Ангел Тодоров 1906 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче Видин хулинче учитель килйышĕнче çуралнă. Çамрăклах, Болгарире монархилле йĕрке чухнех, хăйĕн кунçулне вăл тăван çĕршыва ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен вăйсемпе çыхăнтарать. 1923 çулта Коммунистсен партине кĕнĕ, Софийăри университетран вĕренсе тухнă хыççăн нумай çул юрист-адвокат пулса ĕçленĕ, пăлхар рабочийĕсен кружокĕсенче марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕ çинчен, Совет çĕршывĕнчи халăхсен пурнăçĕ çинчен докладсем тунă, ĕççыннисем хушшинче Коммунистсен партийĕ кăларакан листовкăсемпе прокламацисене сарнă. Болгарири патша правительствине нимĕç фашисчĕсем пăхăнтарсан, А. Тодорова тĕрмене тытса хупаççĕ, унтан вара темиçе çул хушши ăна лагерьте асаплантараççĕ. Нумай нуша курать хастар коммунист, çапах та вилĕмрен хăтăлса юлать.

1944 çулхи сентябрьте, Совет Çарĕ Болгарие çитсе кĕнĕ чух, пăлхар халăхĕ хĕçпăшал тытса восстани çĕклет. Çавăн чухне А. Тодоров Халăх Çарĕн ретне тăрать, хаяр тăшмана хирĕç пăшалпа та, перопа та паттăррăн çапăçать.

Вăрçă хыççăн А. Тодоров пĕтĕм вăй-халĕпе тăван Болгаринче социализм тăвассишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлет. Вăл—талантлă поэт тата прозаик, паллă критик, публицист, литературăпа истори тĕпчевçи, тĕнчери миршĕн кĕрешекенсен хĕрӳллĕ активисчĕ пулса тăрать. «Болгарире халăх революцийĕ çĕнтернĕ хыççăн ăна «Отечественнен фронт» хаçат редакторĕн заместителĕ тăваççĕ, унтан вăл «Вечерни новинки» хаçатăн главнăй редакторĕ, Пăлхар писателĕсен Союзĕн секретарĕ пулса ĕçлет. 1961 çултанпа «Больгаро-Советская дружба» журнала редакцилерĕ, хальхи вăхăтра вăл Пăлхар писателĕсен Союзĕ çумĕнчи куçару ĕçĕсен комиссине ертсе пырать.

Эпĕ А. Тодоровпа Болгарире те, Совет Союзĕнче те темиçе хутчен тĕл пулса калаçнă, унпа пĕрле нумай çӳренĕ, халĕ те пирĕн хушăра çыхăну татăлман, пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретсех тăратпăр.

Иксĕмĕре паллаштараканĕ Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай пулчĕ. Вăл Болгарире темиçе хутчен те пулнă, пăлхар литературине питĕ лайăх пĕлетчĕ. П. Хусанкайпа А. Тодоров туслă пулни чăваш литературипе пăлхар литератури хушшинчи çыхăнăва уйрăмах вăйлăлатма пулăшрĕ. Акă, А. Тодоров тăрăшнипе К. Ивановăн «Нарспи» поэмине, Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романне, А. Талвирĕн «Пăва çулĕ çинче» повеçне, П. Хусанкайăн суйласа илнĕ сăввисен кĕнекине, Çеçпĕл Мишши, С. Элкер, А. Алка, Я. Ухсай, С. Шавли, Г. Ефимов, П. Афанасьев, Ю. Сементе тата ытти поэтсен сăввисене, Л. Агаков, М. Илпек, А. Артемьев, А. Эсхель, Юхма Мишши тата ытти прозиаксен калавĕсене пăлхарла куçарса кăларнă.

А. Тодоров чăваш литературипе культурин çитĕнĕвĕсене Болгарире пропагандăлас пирки нумай тимлет. Ку енчен илсен, унăн Болгарире тухса тăракан хаçат-журналсенче пичетленнĕ хăшпĕр статйисене кăтартса хăварас килет. Пуринчен ытла «Константин Иванов Болгарире», «Ирĕклĕ Атăл хĕрринче», «Чăваш халăхĕн пурнăçне кăтартакан поэма-роман» (П. Хусанкайăн «Аптраман тавраш" пирки), «Н. Илпекăн «Хура çăкăр» романĕ болгарла», «Александр Алка пултарулăхĕ» ятлă статйисем паллă вырăн йышăнаççĕ.

Çывăх тусăмăр Чăваш çĕршывĕпе, унăн историйĕпе нумайранпа интересленет. 1957 çулта, сăмахран, вăл «Литературен фронт» хаçатра «Авалтан килекен тăванлăх» ятлă статья пичетлерĕ. Çавăн хыççăн пăлхар писателĕсемпе чăваш ученăйĕсем, литературăпа искусство деятелĕсем хушшинче çыхăну пушшех те çĕкленсе кайрĕ. Пирĕн республикăна А. Тодоровсăр пуçне чăваш чĕлхипе, литературипе, искусствипе тата чăваш халăхĕн историйĕпе интересленекенсем Ламар, Веселин Йосифов, Стефан Марков, Филипп Панайотов, Красин Химирски, Николай Хирстозов тата ытти писательсем, П. Кауфман, Стоян Петров, Иван Коев ученăйсем тата артистсем, художниксем, киноработниксем киле-киле кайрĕç. Вĕсем Чăваш çĕршывĕ çинчен, унăн экономикипе культури çултан-çул çĕкленсе пыни çинчен статьясемпе очерксем çырчĕç. Поликсена Найденова режиссер ак «Чăваш çĕршывĕпе тĕл пулни» ятлă кинофильм та кăларчĕ. «Калама çук хаклă фильм»,— тесе хакланăччĕ ăна А. Тодоров.

Литература ĕçне вăл 20-мĕш çулсенче тытăннă. Унăн малтанхи сăввисемпе калавĕсем пуçласа 1925 çулта пичетленнĕ. 30-мĕш çулсенче писатель критикăлла статьясемпе тĕпчев ĕçĕсем те çырса кăларать. Вĕсенче пăлхар халăхĕн йывăр пурнăçĕ çинчен, хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн нумай ĕмĕр хушши паттăррăн кĕрешни çинчен пĕтĕм чун-чĕрипе хумханса каланă («Суясăр поэмăсем»— 1936, «Усăллă поэмăсем»— 1938). Иртнĕ вăрçă çулĕсенче А. Тодоров Совет Союзне хӳтĕлесе, фашизма питлесе статьясем, листовкăсем çырать, пăлхар халăхне Гитлер вăрă-хурахĕсене хирĕç хăюллăн кĕрешме чĕнет.

Вăрçă хыççăн поэтăн «Хĕрлĕ ялав» (1949), «Ту çинчи юман» (1959), «Халăхпа пĕрле» (1966), «Пирĕн хĕвел, пирĕн сывлăш» (1971) тата ытти сăвăсемпе поэмăсен, калавсемпе фельетонсен кĕнекисем тухаççĕ. Патриотизмпа интернационализм туйăмĕ хăватлăн тапса тăрать çав кĕнекесенче, вĕсен авторĕ вулакансен умне мирпе социализмăн, халăхсем хушшинчи туслăхпа тăванлăхăн хастар йыхравçи пек тухса тăрать.

А. Тодоров сăввисемпе калавĕсене чăваш вулаканĕсем аван пĕлеççĕ. Унăн «Чун сăмахĕ» ятлă сăвă кĕнеки 1958 çулта чăвашла пичетленсе тухнăччĕ. Ку сборнике талантлă поэтăн тĕрлĕ вăхăтра çырнă сăввисем тата «Даринка» поэми кĕнĕ. Вĕсене пирĕн паллă поэтсем П. Хусанкай, А. Алга, А. Воробьев, Н. Евстафьев, Г. Ефимов куçарнă.

А. Тодоров хăй те чăваш поэчĕсен сăввисене пăлхарла куçарас ĕçе тимлĕ хутшăнать. «Çеçпĕл Мишшин «Çĕн Кун аки» сăввине эпĕ питĕ юратса куçартăм»,— тесе çырнăччĕ вăл ман пата 1968 çулта. «Эпĕ унăн пурнăçне те, сăввисене те лайăх пĕлетĕп. Сирĕн Çеçпĕл пирĕн Христо Смирненский поэт пекех. Иккĕшĕ те вĕсем пĕр вăхăтра пурăннă, иккĕшĕ те чăн-чăн коммунистсем пулнă»,— тенĕ çав çырурах.

1959 çулта, Украинăра пăлхар литературипе культури кунĕсем пынă чухне, А. Тодоров, П. Тычина, Ю. Збанацкий Остера çитсе курнă, вара Чăваш писателĕсен Союзне çакăн пек телеграмма янă: «Сирĕн тĕлĕнмелле ырă халăхăрпа унăн хӳхĕм культурине тăванла юратнине палăртса, эпир паян Чăваш çĕршывĕн çулăмлă поэчĕ Çеçпĕл Мишши тăпри çинче пултăмăр, унăн палăкĕ умне чечек çыххисем хутăмăр... Эпир сирĕн аслă поэтăра чун-чĕререн юрататпăр, унăн чаплă пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе хамăр халăхсене май килнĕ таран тĕплĕнрех паллаштарассишĕн тăрăшатпăр. Çеçпĕл вырăнĕсенче пĕрле çӳрени Чăваш, Пăлхар, Украина çĕршывĕсенчи тăванла халăхсем хушшинчи

туслăха малалла çирĕплетес ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать».

Ангел Тодоров пирĕн Çеçпĕле, унăн вилĕмсĕр поэзине чĕререн юратни çинчен Киевра пурăнакан чăваш писателĕ-художникĕ Петĕр Чичканов ак тата мĕн каласа парать: «Пĕррехинче ман пата телефонпа шăнкăравларĕç. Калаçаканĕ Украина писателĕсен Союзне килнĕ чаплă хăна Ангел Тодоров пулчĕ иккен. «Эпĕ сире миçе çул шыратăп ĕнтĕ,— терĕ саламланă хыççăнах.— Петĕр Хусанкай та, Украинăри тусăмсем те сирĕн çинчен питĕ нумай каласа пачĕç, Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе ĕç-хĕлне лайăх пĕлекен çын терĕç...» Тĕл пулсан вара, пĕтĕм сăмах-юмах чăвашсем çинчен, Çеçпĕл çинчен пулчĕ. Хăнапа поэтăмăр вĕреннĕ, Хĕрлĕ Çарта чух пурăннă çуртсем патне çитсе куртăмăр. Çеçпĕл Мишши пулнă нумай-нумай вырăнсемпе паллашрăмăр. Ангел Тодоров кашни çĕртех ыйту хыççăн ыйту пачĕ. Қаçпа вăл хăй мăшăрĕпе ман патăма хăнана та пырса ларчĕ. Кунĕпе пынă калаçу малалла тăсăлчĕ. Çур çĕрчченех лартăмăр. Ун чухне «пирĕн Бай-Ангел»— Хусанкай пăлхарсем евĕр çапла чĕнетчĕ ăна («Ангел» пичче тени пулать вăл, вĕсем çавăн пек пит хисеплĕ çынна кăна чĕнеççĕ) — хăй Шупашкарта пулни çинчен ырă кăмăлпа асăнчĕ. «Хамăрăн авалхи тăвансем патĕнче пулнине ĕмĕрте манас çук»,—терĕ.

Эпĕ ăна Остерти музейре кăвар чĕреллĕ поэтăмăра пысăк сума суса хĕрӳллĕ сăмахсем çырса хăварнăшăн тав турăм. Унта вăл çапла çырнăччĕ: «Чăваш халăхĕн аслă поэчĕ Çеçпĕл Мишши пурăннă, ĕçленĕ вырăна çитсе курма тĕл килнине манăн пысăк телейĕм тесе шутлатăп. Совет влаçĕшĕн, ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ халăх юрăçине мухтав! Çеçпĕлĕн паттăр ĕçĕпе çĕкленӳллĕ пултарулăхĕ умĕнче пăлхар халăхĕ пуç таять».

Қашни çырăвĕнчех, кашни тĕл пулмассеренех А. Тодоров П. Хусанкая асăнать, пĕр-пĕринпе çав тери туслă пурăнни çинчен калать. Вăл П. Хусанкайăн сăввисене пăлхарла куçарса кĕнеке кăларас тесе нумай вăй хучĕ. Уйрăмах ăна чăваш поэчĕн «Вазов чĕри», «Атăл хĕрринчи юман», «Мавзолей умĕнче» сăввисем, «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕ, «Таня» поэми кăмăла кайнă иккен.

А. Тодоров Чăваш республикине 1964 çулта мăшăрĕпе пĕрле килсе кайнăччĕ. Унпа 1973 çулта Софийăра тĕл пулса калаçнисем те асрах. Ун чухне Софийăра совет писателĕсемпе пăлхар писателĕсен симпозиумĕ (канашлăвĕ) пулнăччĕ. Кун йĕркинче «Совет тата пăлхар литературинчи хальхи вăхăтри ял ĕçчснĕсен сăнарĕ» ятлă ыйту тăратчĕ.

Канашлу умĕн пире социализмла Болгарин ялхуçалăхĕнчи паха улшăнусемпе паллаштарчĕç. А. Тодоров хулара та, ялсенче те яланах пирĕнпе пĕрле çӳрерĕ, Шупашкарта пулнă пăлхар писателĕсене шыраса тупса калаçу ирттерчĕ.

Ытла та уçă кăмăллă, хастар та çирĕп чунлă çын вăл. Унпа калаçма тытăнсан, яланах хавхаланса, çĕкленсе каятăн. Чăн-чăнах та вăл пысăк культурăллă, анлă тавракурăмлă писатель-патриот. Унăн библиотекинче чăваш писателĕсемпе ученăйсен кĕнекисем, чăвашла-вырăсла, вырăсла-чăвашла словарьсем, Чăваш çĕршывĕпе çыхăннă тĕрлĕрен альбомсем пур. Вăл французла, нимĕçле, вырăсла вулать те, çырать те, калаçать те.

Паллă интернационалист тата общество деятелĕ А. Тодоров Совет Союзĕпе Болгари халăхĕсем хушшинчи тăванла туслăх куллен-кун çирĕпленсе-çĕкленсе пынăшăн савăнса çапла çырать:

Совет çĕршывĕ—пирĕн аслă тус,<br>
Çав туслăхра пирĕн телей паян.<br>
Хĕвеллĕ кун е тĕттĕм каç—ан ус,<br>
Юлташăм, туслăх ялавне пихçан!

Пирĕн хаклă тусăмăр Ангел Тодоров утса тухнă кунçул—мухтавлă çул, хĕрӳллĕ ĕçпе кĕрешӳ çулĕ. Малашне те, хисеплĕ Бай-Ангел, санăн творчествăлла вăй-хăвату çирĕп, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр!

*1986*

## УНĂН ЯЧĔ ĔМĔРЕ

*(Габдулла Тукай çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май)*

«Вăл пирĕн поэзире — çутă çăлтăр, кăвар черелле поэт»,— тет Габдулла Тукай çинчен пушкăрт халăхĕн паллă поэчĕ Мустай Карим. «Эпĕ вырăс хĕвелĕсенчен — Пушкинпа Лермонтовран — çутă илтĕм, тутар уйăхĕ пултăм»,— тенĕ хăй çинчен тутар литературин классике Тукай.

Хăй вăл Хусан кĕпĕрнинчи Кушлавăш ялĕнче мулла çемйинче 1886 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. Пулас поэт мен пĕчĕкренех хĕн-хур тӳссе ӳснĕ: пилĕк уйăх тултарсан ашшĕ вилет, виçĕ çула çитсен амăшĕ çере кĕрет. Тăлăха юлнă Габдулла аларан алла куçнă, ялтан яла çӳренĕ.

Хăйĕн «Шурале» ятлă юмахĕнче ача чухнехи пурнăçне аса илсе вăл çапла çырать:

Хусан хули таврашĕнче
Кăрлай текен ял пурччĕ.
Унта чăхсем те ир çинче
Какалани маттурччĕ.

Унта ӳсмен те ӳсессе,
Анчах унта пăртакçă
Суха туса, çĕре чĕрсе
Çӳрене эп, сухаçă.

Малалла вăл мĕн ачаран хăй çуралса ӳснĕ тавралăхри çутçанталăка юратни, тăван чĕлхен пуянлăхне ăша хывни çинчен хавхаланса каласа парать.

Тăхăр çула çитсен, Тукай Уральск хулинчи тутар шкулĕнче — медресра вĕренме тытăнать. Çакăнта паллашать те вăл Пушкин, Лермонтов, Кольцов, Некрасов сăввисемпе. 1905—1907 çулсенче Уральскри «Уралец» хаçатра корректорта, наборщикра ĕçлет, сăвăсемпе юмахсем çырма пуçлать, вĕсенче патша тытăмĕн йĕркисене, капитализм тискерлĕхне, буржуалла националистсен сутăнчăк ĕçĕсене питлесе тăрă шыв çине кăларать.

Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай Габдулла Тукайпа Константин Иванов пултарулăхне тишкернĕ май «Пĕр чунлă, туслă тантăшсем» статйинче çапла калана: «Габдулла Тукай тутарпа Константин Иванов чăваш Раççейри малтанхи революци хумĕ çинче, халăхăмăрсем наци ирĕкĕшĕн çĕкленнĕ вăхăтра ӳссе аталаннă... Вĕсем пирĕн халăхсем çĕнĕрен чĕрĕлсе, наци тĕлĕшĕнчен çĕкленсе каяссине шанса ĕçленĕ. Çав чĕрĕлӳпе çĕкленĕвĕн тĕп никĕсне тăван чĕлхере курса, вĕсем ăна хăйсен пĕтĕм пултарулăхĕпе çирĕплетсе ĕнентернĕ».

1907 çулхи кĕркунне Г. Тукай Уральск хулинчен Хусана тухса каять. Кунта вăл Хусаин Ямашев большевикпа, тутарсен паллă писателĕсемпе паллашать, вĕсемпе пĕрле ĕçлеме тытăнать. Анчах Хусан хулинче те унăн пурнăçĕ çăмăл пулман, выçăллă-тутăллă пурăнакан талантлă поэтăн сывлăхĕ начарланса çитет, 1913 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнче вара вăхăтсăр вилсе каять.

Г. Тукай литературăра пĕтĕмпе те сакăр çул çеç ĕçленĕ. Апла пулин те, вăл сăвăсемпе юмахсем, калавсемпе очерксем, фельетонсемпе памфлетсем, критикăпа ăслăлăх статйисем чылай çырнă, шкулта вĕренмелли кĕнекесем те кăларнă. Унăн творчествинче тĕп вырăнта тăван халăха

ирĕке тата çутта кăларасси пулнă, вырăс тата ытти халăхсемпе туслă пурăнма чĕнни пысăк вырăн йышăннă.

Акă унăн «Каймастпăр» сăввинех илсе пăхар. Раççейри пĕрремĕш революци вăхăтĕнче революцирен хăраса ӳкнĕ тутар националисчĕсем халăха Турцие куçса кайма чĕннĕ. Вĕсене хирĕç çамрăк поэт 1907 çулта çулăмлă сăвă çырать, унта çапла ответ парать:

Россия пирĕншĕн анне вăл, вăл атте.
Эсир татаймăр пирĕн çутă ĕмĕте!
Каяс килет-и сирĕн Турцие! Унта
Вĕçтерĕр хăвăр çеç,
Туда пожалте, господа,—

тесе сăввине юриех вырăс сăмахĕсемпе пĕтерет. Поэт-патриот тутар халăхĕ вырăс халăхĕпе пĕрле малашне те туслă-тăванлă пурăнса хăйĕн телейне, савăнăçлă пурнăçне тупасса шанать.

1908 çулта Г. Тукай «Утă пасарĕ е çĕнĕ Касăкпуç» ятлă сатирăллă поэма-памфлет çырать. Унта вăл революцич-ченхи вăхăтра Хусанти «Утă пасарĕ» текен вырăн тутар муллисене, сутуçисене, националистсене пĕрлештерекен вырăн пулнине кăтартать, вĕсен йăли-йĕркине çунтара-çунтара илет. Çав çулах К. Иванов та «Хальхи самана» ятлă пысăк сăвă çырать, Г. Тукай пекех чăваш буржуазийĕпе кулаксене, тĕрлĕрен чиновниксене питĕ вирлĕн критиклесе илет.

Г. Тукайпа К. Иванова танлаштарса калана май, акă тата мĕн палăртса хăварас килет. Икĕ поэт пĕр вăхăтра пурăннă, пĕр ĕç туса пынă, анчах пĕр-пĕринпе курса калаçайман пулин те, пĕр чунлă, туслă тантăшсем пулни питĕ лайăх курăнать. 1911 çулта вĕсем иккĕшĕ те вырăсларан «Çултаlăк хушши» сăвва куçарса пичетленĕ: К. Иванов ăна — 1912 çулшăн тухнă букварьте, Г. Тукай — «Кунел жимешлэрĕ» (Кăмăл çимĕçĕсем) ятлă кĕнекере.

Иккĕшĕ те вĕсем Пушкина, Лермонтова, Кольцова, Некрасова юратнă, вĕсенчен вĕренсе пынă, сăввисене тăван чĕлхепе куçарма тăрăшнă. Г. Тукай та, К. Иванов та халăх халап-юмахĕсене, сăвви-юррисене нумай пухнă, тĕпченĕ, вĕсемпе хăйсен творчествинче усă курнă. Тутар поэчĕн «Шурале», «Шыв амăшĕ», «Яппун юмахĕ», «Качакапа сухă юмахĕ», «Вата çерçипе пуян хуçа» юмахĕсене, «Ылтăна хирĕç», «Харам пырсене» сăввисене; чăваш поэчĕн «Шуйттан чури» трагедийĕпе, «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» юмахĕсемпе танлаштарсан, вĕсен пултарулăх меслечĕ пĕр пек пулни яр-уççăн курăнать. К. Иванов геройсе-

сен ĕçĕ-хĕлĕ, шухăш-кăмăлĕпе пурнăç шăпи Г. Тукай геройĕсемпе çывăх тăраççĕ те, вĕсен авторĕсем те пĕр-пĕринпе туслă пурăннă пекех туйăнса каять.

Г. Тукай хăй вăхăтĕнче тутар халăхне вырăс халăхĕпе пĕрле пулма чĕннĕ терĕмĕр, вăл çамрăксене вырăс культурине, литературипе искусствине тимлесе вĕренме пилленĕ. Халăхсен хушшинчи туслăх пирки акă мĕн каланă вăл «Вырăс çĕрĕнче» ятлă сăввинче:

> Эпир те вырăс çĕрĕнче хăварнă йĕр,
> Кунçулĕнче эпир — таса тĕкĕр...
> Ялан-яланлăхах çулла-и е хĕлле
> Эпир ĕçлетпĕр аслă вырăспа пĕрле.
> Хаваслáх куççуль те пирĕн пĕр пекех,
> Çапла вăл пулнă, пулĕ ĕмĕр-ĕмĕрех...

Г. Тукай тутар литературинче пуринчен малтан Хусаин Ямашев большевик сăнарне лайăх кăтартса панă. Ямашевпа чăваш поэчĕ-революционерĕ Тайăр Тимкки туслă пулнă. Апла пулсан, вăл Г. Тукая та пĕлме пултарнă. Унăн Раççейри пĕрремĕш революци вăхăтĕнче çырнă сăввисем («Чаплă вилĕм юрри», «Шухăш», «Çĕнĕ çул», «Çăлăнăç» т. ыт. те) «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ. Анчах çулăм чĕреллĕ поэтсем ун чухне пĕр-пĕринпе тĕл пулайман: «Хыпар» хаçата хупсан, Тайăр Тимккине Нарым крайне ссылкăна янă.

Тукай произведенийĕсене пирĕн çĕршывра хăйĕн тăван чĕлхипе вуламан халăх çук та темелле. Вĕсене чăвашсем те çав тери килĕштереççĕ. Тутар поэчĕн «Поэт» тата «Фабрикăра» сăввисене Хумма Çеменĕ 1923 çултах куçарса пичетленĕ, çав çулах унăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен «Канаш» хаçатра статья та çапса кăларнă.

«Поэт» ятлă сăввинче Г. Тукай хăй этемлĕхе чун-чĕререн юратни çинчен калать, «пурнăçра мĕнле йывăрлăхсем пулсан та, эпĕ парăнас çук вĕсене, чĕрĕлĕх, вут-çулăмлă сăвăсем ватăлăха çĕнтерĕç» тенĕ. Çак сăвăпа паллашни çинчен Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай çапла аса илсе каланă: «Пултарулăх тени — ĕмĕр тăршшĕпе тӳлесе пымалли парăм, уншăн хама пĕтĕмпех пама та шел мар тесе ăнлантăм эпĕ». («Пин-пин чĕре», 1977, 196 с.)

Г. Тукай сăввисене чăваш поэчĕсем С. Шавли, И. Ивник, А. Эсхель вăрçă умĕнхи çулсенче чылай куçарчĕç. Ухсай Яккăвĕ 1947 çулта унăн илемлĕ юмахĕсене уйрăм кĕнекене кăларчĕ. 1961-мĕшпе 1985-мĕш çулсенче «Шурале» ятлă юмахсен кĕнеки тухрĕ. Унта ултă юмах кĕртнĕ. Вĕсене те Я. Ухсай куçарнă. Г. Тукай пултарулăхĕ çинчен пирĕн критиксемпе литературоведсем те сахал мар çырчĕç.

Чаплă поэтăн ячĕ — вилĕмсĕр. Тутар республикинче кăна мар, ытти республикăсемпе облаçсенче те ун ячĕпе хисепленекен колхозсем, совхозсем, клубсем, шкулсем, театрсем пур. Хусанта тата поэт çуралнă ялта унăн палăкĕсене лартнă.

Чăваш халăхĕ Г. Тукая мĕнле сума суса асăнни, хисеплени çинчен П. Хусанкай пĕр тĕслĕх илсе кăтартнăччĕ. «Автанран автанччен» тенĕ лирикăлла поэминче акă мĕнле çырнă вăл:

Унта, çак Ĕнчĕ хĕрринче,
Арча пек чыслă çĕн çуртра
Эртеллĕ ĕçĕн штабĕнче
Эп пултăм çакă вăхăтра.
Пăхатăп пĕр стени çине —
Куратăп Иванов сăнне.
Пăхатăп эпĕ теприне —
Тукай тухатчĕ куç умне.
Пĕр чунлă, туслă тантăшсем
Хальхи ял пуçĕсемпеле,
Авалхине çĕре чиксе,
Канаш тăваççĕ-мĕн пĕрле.

Тутарсен XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи литературин обществăпа политика пурнăçĕнче Г. Тукай чи паллă çынсенчен пĕри пулнă. Вăл хăйĕн пурнăçĕ тăршшĕпех халăхсен хушшинчи туслăхшăн кĕрешнĕ, чăн-чăн патриот, интернационалист пулнă. Вилĕмсĕрлĕхе кĕрсе юлнă унăн ячĕ.

*1986*

## ТУПМАЛЛИ


Аслă çĕнтерӳ çулĕпе . . . 3
Шурăмпуç çăлтăрĕ . . . 12
Туслăх тымарĕсем парка . . . 17
Халăхăн мухтавлă ывăлĕ . . . 33
Тăван çĕр сĕткенĕпе ӳснĕ поэзи . . . 53
Çулăмра туптаннă пултарулăх . . . 64
Нумай енлĕ талант . . . 79
Поэт вутпа кăвар пек ялкăшрĕ . . . 94
Чаплă ĕмĕр юрăçи . . . 100
Чапу сан сӳнес çук . . . 107
Пархатарлă кунçул . . . 111
Паллă драматург, сăвăç . . . 115
Поэт-воин—коммунист . . . 120
Пурнăçа юратса, пурнăçа мухтаса . . . 125
Писатель, художник . . . 130
Хисеплĕ учителе асăнса . . . 133
Қалавçă, сăвăç, тишкерӳçĕ . . . 138
Пултаруллă критик-литературовед . . . 141
Педагог, писатель . . . 145
Самрăк сăвăссене пулăшма . . . 148
Палхарсен паллă писателе . . . 151
Унăн ячĕ ĕмĕре . . . 155



**Николай Степанович Дедушкин**

**РАДУЯСЬ КРАСОТЕ ЖИЗНИ**

Статьи и очерки

*На чувашском языке*

Редактор *В. О. Максимов*
Художник *Н. С. Ананьев*
Художественный редактор *Г. С. Самсонова*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *М. Л. Кирьянова*

ИБ 2069

Сдано в набор 29.08.87. Подписано к печати 07.05.88. НТ 22336. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 8,4. Усл. кр.-отт. 8,61. Учетно-изд. л. 9,34. Тираж 1000 экз. Заказ № 3198. Изд. № 52. Цена 55 коп. Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

55 пус

Чăваш кĕнеке издательстви